С(Чув)
Д-64
6990-чув



Василий
Долгов

# ҪУРАЛНӐ ҪӖРШЫВРА

Национальная библиотека ЧР
4-006990

ЛИСТОК СРОКА ВОЗВРАТА

КНИГА ДОЛЖНА БЫТЬ ВОЗВРАЩЕНА НЕ ПОЗЖЕ УКАЗАННОГО ЗДЕСЬ СРОКА

Количество пред. выдач

6990 чув

Кур
с (Чу
Д 64

ВАСИЛИЙ ДОЛГОВ

# ÇУРАЛНĂ ÇĔРШЫВРА

КАЛАВСЕМ

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВĂ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар 1962

6990-чув.

ЧУВАШСКАЯ
РЕСПУБЛИКАНСКАЯ
БИБЛИОТЕКА
им. Горького

ПРОВЕРЕНО
2016 5 ОКТ. 2017

## ТĂВАН ÇĔРШЫВ

Хĕрелсе, шуралса çутă ир килет-и, колхоз каччи-хĕрĕсем, çĕнĕ юрă юрласа, чечек çырне утаççĕ-и, сарă ыраш хушшинче кĕлте çыхаççĕ-и, çурласене çĕклесе яла таврăнаççĕ-и...

Тăван çĕршыв, сана аса илетĕп,— сана асра тытатăп!

* * *

Вăрман урлă каçса, хĕвел çӳле тухать-и, вăштăр-вăштăр утă çинче: «Анне, анне!» тесе инке ачи макăрать-и, пĕт-пĕтĕлтĕк путене таçта-таçта авăтать-и, çӳлĕ-çӳлĕ тӳпере тăри вĕçет-и...

Тăван çĕршыв, сана аса илетĕп,— сана асра тытатăп!

* * *

Сарă çу пек сар хĕвел хĕртнĕçемĕн хĕртет-и, кăнтăр çитнĕ вăхăтра сухаçсем суха тăваççĕ-и, вĕсен ачи-пăчисем чĕр шыв ăсса пыраççĕ-и, çутă пĕве тĕпĕнчен ылтăн-кĕмĕл пулăсем сике-сике пăхаççĕ-и...

Тăван çĕршыв, сана аса илетĕп,— сана асра тытатăп!

* * *

Каçхи кӳлӗм вӑхӑчӗ иртсе-иртсе пырать-и, тӗттӗм вӑрман, сӗм вӑрман нӳрӗ пухать-и, хиртен-уйран кӗрлесе кӗтӳ килет-и, çамрӑк инке-пике, упӑшкине кӗтсе, лаççа яшка çакать-и...

Тӑван çӗршыв, сана аса илетӗп,— сана асра тытатӑп!

* * *

Ярӑм-ярӑм шур пӗлӗт каçа кӗтсе илет-и, пин-пин çӑлтӑр тӳпере çиçсе тӑрать-и, вӗсем патне çут уйӑх çӗр çӗрлеме пырать-и, каччӑ купӑс каласан, хурал йытти вӗрет-и...

Тӑван çӗршыв, сана аса илетӗп,— сана асра тытатӑп!

* * *

Шупашкарта ир-ирех савӑт сасси янрать-и, чӑвашӗ, вырӑсӗ, тутарӗ станок умне тӑрать-и, Атӑл шывӗ хумханса кӗмӗл тӗслӗн юхать-и, шурӑ-шурӑ пӑрахут шур акӑш пек иртет-и...

Тӑван çӗршыв, сана аса илетӗп,— сана асра тытатӑп!

*1942*

# ЯЛ КАЛАВĔСЕМ

## ТУРАСАРСЕМ

### 1.

Çĕмĕрлĕ станцине антăм та, хамăр ялсем пулсан, пĕрле кайма аванччĕ тесе, унталла-кунталла пăхкаласа, тăван ял еннелле каякан шоссепе утрăм.

Çанталăк калама çук шăрăх. Тӳпе тăп-тăрă. Пĕр пĕлĕт татăкĕ те çук. Хĕвел хĕртсе кăна тăрать. Шоссе çине тăкнă хăйăр вĕри кĕл пек. Ку çулпа çара уран кайсан, ура тупанĕ пиçнĕ какай пек пулса тăрĕ, тесе шухăшлатăн ирĕксĕрех.

— Кунта Н. ялĕнчен килнĕ çынсем çук-и?— ыйтрăм эпĕ пĕр лутра кĕлеткеллĕ вăтам çулхи чăвашран.

— Эпĕ хам янташсем пулатăп... Сирĕн ял витĕрех тухатпăр. Пĕрле кайăпăр. Лаша аван, хам пĕчченех...— лартса кайма хатĕр пулнине систерчĕ Янташ çынни.

— Хамăр ялсем çуках пулсан, пĕчченех те утăп. Манăн япала-качка çук. Çулĕ лайăх, инçе мар. Вăрмантан тухсан, пирĕн ял курăнать те,— терĕм эпĕ янташсене.

Ĕç тухмасть, лартса каясси пулмасть, терĕ пулас янташсем хăй ăшĕнче; вăл пĕр пӳрт умĕнче ларакан çатан урапа патĕнче пуçне ухласа тăракан лаша çинелле аллипе тĕллерĕ те:

— Çав сирĕн колхоз ăйăрĕ пулмалла. Паян ирех икĕ старик килнĕччĕ. Леспромхоз кантурне кĕрсе пăхăр. Вĕсем халĕ унта пулма пултараççĕ,— терĕ.

Çапла калаçса тăнă вăхăтра такам:

— Ăçта каятăн?— тесе кăшкăрчĕ мана уçса хунă чӳрече витĕр. Пăхрăм та хамăр ялти колхознике, Петр Ивановича (ялти пек каласан, Манах Петĕрккине) курах кайрăм. Эпĕ ăна урамранах сывлăх сунтăм.

Леспромхоз çуртĕнче халăх туллиех.

— Кам у?— ыйтрĕ алăк патĕнче ларакан çынсенчен пĕри.

Унччен те пулмарӗ — Петӗркке мучи патне Павӑл Тихонович (ялта чӗннӗ пек каласан, Турӑсӑр Упавӑл) пырса та тӑчӗ.

— Тӑхта... Киле пӗрле кайӑпӑр,— терӗҫ вӗсем иккӗш пӗр харӑс.

— Ҫавӑнпа кӗтӗм, сире шыраса килтӗм...— савӑнтӑм эпӗ, хамӑр ялти колхозниксене тӗл пулнӑшӑн хӗпӗртесе. Унтан ҫатан урапа патне кайса, чӗрӗ утӑ ҫине лартӑм.

...Ялан тенӗ пекех, кама та пулин кӗтсе ларатӑн пулсан, пуҫа мӗнле те пулин шухӑш пырса кӗрет. Павӑл мучи... Ялта ӑна эпӗ ҫураличченех: «Турӑсӑр Упавӑл» тесе чӗнме тытӑннӑ. Мӗнле майпа ӑна «Турӑсӑр» хушамат панӑ? Тӗлӗнмелле мар-и Павӑл Тихонович хушамачӗ?.. Петр Иванович хушамачӗ тӗлӗнмелле мар-и-мӗн тата?..

Тӗлӗнетӗп: пирӗн ялти чӑвашсем, хут ҫинче нумайӑшӗ Иванов та Павлов пулсан та, хушаматсем шухӑшласа кӑларма ӑста. «Чӑвашсем хушаматланаҫҫӗ!»— тенӗччӗ чӑвашсен пӗр ҫивӗч чӗлхеллӗ писателӗ, анчах вӑл чӑваш писателӗсен хушамачӗсем мӗнле пулни ҫинчен кулса кӑна ҫырнӑ...

Мӗнле-мӗнле хушамат ҫук-ши пирӗн ялта, мӗнле-мӗнле майпа пулман-ши вӗсем? Ҫав хушаматсем ҫинчен ӗнтӗ ҫырасчӗ кӑшт та пулин.

## 2.

Ҫӗмӗрлӗрен вӑхӑт каҫалана сулӑнаспа тухрӑмӑр.

— Хыпаланас мар, каҫчен Элӗке те ҫитме пулать,— терӗ станцӑра Павӑл мучи. Шӑрӑх. Ҫавӑнпа та эпир лашана вӑраххӑн уттарса пыратпӑр.

Ҫанталӑк уяр тӑрать пулсан та, хура вӑрман хӑйӗн уҫӑ сывлӑшне ҫухатман. Таҫтан, ватӑ юмансем айӗн, шурӑ уралла хурӑнсем хушшипе ерипен уҫӑ сывлӑш ҫаврӑнса килет. Сывлама та ҫӑмӑл пек туйӑнать.

Сывлӑш уҫӑлса пынӑ май сас та уҫӑ тухать. Эпир виҫҫӗн шӑкӑлтатса калаҫса пыратпӑр: стариксем ыйтаҫҫӗ, эпӗ мӗн пӗлнӗ таран каласа паратӑп. Вӗсен малтанхи сӑмахӗ хулари пурнӑҫ ҫинчен пулчӗ. Эпӗ, вӗсем хулари пурнӑҫпа интересленнине курa, хулара хам мӗн курниилтни ҫинчен каласа пама тытӑнтӑм. Ленинградри паха ҫуртсем, сарлака та илемлӗ урамсем, тӗрлӗ музейсем, палӑксем ҫинчен, Мускаври метрополитен, Ленин мавзо-

лейӗ, Кремль ҫинчен, Максим Горький ячӗпе хисепленекен культурӑпа кану паркӗ ҫинчен каласа тӗлӗнтертӗм...

— У ҫамрӑклах телейлӗ пулчӗ. Таҫта та ҫитсе курать у. Тем те пӗлет у...— калама тытӑнчӗ «вӑл» сӑмах вырӑнне яланах «у» калакан, ҫавӑнпа та «Павӑлран», «Упавӑл» пулнӑ мучи.

— Ҫапла вӗреннӗ ҫынсем хамӑр ялта пӗр ҫирӗм ҫын пулсан, институт лартсан та, преподавательсем ҫитмелле...— хутшӑнчӗ Петӗркке мучи те.

Лаша пирӗн тата ерипентерех утма пуҫларӗ. Шоссе ҫулӗ ҫип ҫапнӑ пек тӳрӗ выртать, шӗвӗрӗлсе пӗтнӗ пек, таҫта кайса ҫухалать.

Эпӗ, станци урамӗнче мучисене кӗтсе ларнӑ чух пуҫа ҫӗмӗрнӗ шухӑшсене астуса илнӗ май:

— Сирӗн хушаматӑрсем тӗлӗнмелле: пӗри Турӑсӑр, Павел Безбожный; тепри Манах, Петр Монахов,— терӗм.

— Эсӗ анчах мар... Пурте мана мӗншӗн Турӑсӑр тенине ялан ыйтаҫҫӗ. Ун ҫинчен пӗлес килет пулсан, каласа парам-ха, эппин, сана та...

Тытӑнчӗ Павӑл Тихонович «Турӑсӑр» тенӗ ят ӑҫтан пуҫланса кайни ҫинчен калама. Чӑнах та тӗлӗнмелле пулнӑ иккен унӑн ячӗ. Пӗтӗмпех тӗлӗнтерсе ячӗ Павӑл мучи ун ҫинчен каласа.

...Ҫулла. Паянхи пекех шӑрӑх кун. Павӑл Тихонович пӳртекӳнче ҫӑпата сапласа ларнӑ. Хӗрарӑмсем урамра, ҫӑка айӗнче, хур пулкки пек пухӑнса ларнӑ та, юрлаюрла, хӑшӗ тӗрӗ тӗрленӗ, хӑшӗ кӗпе ҫӗленӗ.

Ял пуҫӗнчен, Вӑрӑм ҫӳҫ Хӗлӗп урамӗ тӑрӑх, пӗр лав килнӗ. Лав ҫинче икӗ манах. Хӑйсем темскер тиенӗ. Куршак тейӗн — куршак мар, лапатка тейӗн — лапатка мар.

— Турӑш, иккунӑ кама кирлӗ, икку-нӑ-ӑ-ӑ...— кӑшкӑрнӑ пӗр манахӗ.

— Эй, инкесем-арӑмсем, сире турӑш-тавраш кирлӗ мар-и?— кӑшкӑрса ыйтнӑ тепри.

Юрласа ларакан хӗрарӑмсем тӗлне ҫитсен, лав чарӑннӑ. Хӗрарӑмсем ӗҫлеме пӑрахнӑ. Тӗррисене каскасем ҫине хунӑ. Йӗпписене пирсем ҫине чиксе, пӗрин хыҫҫӑн тепри лав патне утнӑ. Савӑк юрӑ сасси таҫта кайса ҫухалнӑ.

— Кӗтерин, сан илес пулать пӗр иккунне. Эсир анчах

уйрӑлса тухнӑ. Ҫӗнӗ пӳрте ҫӗнӗ иккун кирлӗ,— тенӗ хӗрарӑмсенчен пӗри.

Кӗтерин инке иккунӑ тиенӗ лав патне пынӑ та:

— Мӗн чул тӑрать?— тесе ыйтнӑ.

— Пӗр пӑт тырӑ...— тесе хунӑ пӗр манахӗ.

— Ҫав хӑма татӑкнех пӗр пӑт памалла-и?..

— Сана, кинӗм, ҫылӑх мар-ши ҫавӑн пек калама? Турӑшне кам хӑма татӑкӗ тетӗр?.. Ҫылӑх, ҫылӑх сана ҫавӑн пек сӑмахсемшӗн...— хӑратма тытӑннӑ Кӗтерин инкене иккӗмӗш манахӗ.

— Хаклӑ та, мӗнле илес ӑна?

— Мӗн хакли пур унта, хусамӑрах пӗлететӗр, турӑсӑр пурӑнма юрамасть.

— Юрамасть те-ха... анчах тырри ҫук-ҫке?..

— Пире ҫӑмарта та юрать. Икӗ теҫетке ҫӑмарталлах паратпӑр...— каланӑ манах, иккунӗсене пӗрерӗн-пӗрерӗн шӑналӑк айӗнчен кӑларса. Хӑй хура куҫне пӗрмай вылятнӑ. Тутисене ҫуланӑ. Сахӑр ирӗлнӗ пек ирӗлнӗ вӑл ҫамрӑк арӑм Кӗтерин умӗнче. Иккӗмӗш манахӗ пӗр пӗчӗкрех иккунӑ илнӗ те Кӗтерине чӑп-чӑп! чуптутарнӑ.

— Халӗ илесех пулать,— тенӗ хӑй сивӗ сасӑпа.

— Илмесен, тытать, ҫылӑх...— пулӑшнӑ ӑна тутисене пӗрмай ҫулаканӗ.

Кӗтерин, пӗчӗкренех турӑсенчен, хӗртсуртсенчен, киреметсенчен, йӗрӗхсенчен хӑраса ӳснӗскер, кӑвакарса, шуралса кайнӑ. Вӑл амӑшӗ каланӑ сӑмахсене аса илнӗ:

— Турра тӗкӗнме юрамасть, вӑл тытать, сурана ертет...— тенӗ ӑна ватӑ амӑшӗ. Кӗтерин хӑранӑ. Акӑ халӗ те ӑна темле хӑратакан шухӑшсем ҫатӑркка аллисемпе ярса илнӗ. Ку иккуна мӗнпе илес? Тырӑ ҫук. Ҫӑнӑх та пӑт ытларах кӑна юлнӑ. Ҫӗнӗ тырӑччен виҫӗ уйӑх пурӑнмалла. Ӗҫ ҫинче выҫӑ лараймӑн? Ҫӑмарта тата ӑҫтан пултӑр? Пӗтӗмпе те икӗ чӑхӑ кӑна. Пӗр пӗрчӗ сӗлӗ ҫисе курман вӗсем. Пур-ҫук ҫӑмартана Павӑл пухса пырать. Пухмӗччӗ, анчах ӑна куланайшӑн кастараҫҫӗ... Мӗншӗн пытӑм-ши ку манахсен лавӗ патне, мӗншӗн пырса ҫылӑха кӗтӗм-ши?..

Кӗтеринӗн пуҫӗ ҫаврӑна пуҫланӑ, куҫӗсене тӗтре карса илнӗ. Тӗттӗмленсе килнӗ. Кӗтерин йӗмеллипех йӗнӗ. Манахсем ӑна пӑхман, манахсем ӗҫленӗ,— мӗнле те пулин тырӑ, ҫӑмарта, укҫа пухса пултӑр вӗсене.

— Мӗн пулнӑ-ха кунта?— тесе Павӑл та урама сиксе тухнӑ.

Манахсем кула-кула каланӑ:

— Арӑмна иккун илсе пар...

— Ҫак иккунне юратать вӑл...

— Иккуна ытарайман пирки йӗрет...

«Ах-ах-ах!» ахӑлтатса кулса янӑ ҫавӑнта пырса тӑнӑ ял пуянӗн, Сантӑрккан, ывӑлӗсем: Петӗрпе Ваҫлийӗ тата Ванюкӗ. Чӑтайман, ухмах каҫӑр ывӑлӗ те кулнӑ. Анчах вӗсен мӗншӗн кулас мар? Вӗсен ҫил арманӗ пур, ик-виҫ кӗлетре пин пӑт тырӑ выртать! Вӗсен кӗтесри турӑшӗсем те хӑма тӑтӑкӗсенчен тунӑскерсем мар, ылтӑнласа, кӗмӗллесе пӗтернӗскерсем.

Манахсемпе пӗрле Сантӑркка ывӑлӗсем кулнине илтсен, Кӗтерин кӑна мар, Павӑл Тихонович хӑй те хӑраса кайнӑ. Сантӑркка килӗнчи сарлака иккунӑсем, сарлака куҫкӗскисем, манахсен лавӗ ҫинчи вӗт иккунӗсем пӗр ҫӗре пухӑнса пин тӗслӗ сасӑпа кулнӑ пек туйӑннӑ ӑна.

...Павӑл мучи татах та нумай каларӗ. Эпӗ унӑн сӑмахӗсене кӗскен кӑна ҫырса илтӗм. Юлашкинчен Павӑл Тихонович лач! сурчӗ те ҫак тӗлӗнмелле ӗҫ мӗнпе пӗтнине каласа пачӗ.

— Ну, мӗн тунӑ тетӗн ӗнтӗ?.. Арӑм хӑранипе чирлесе кайрӗ. Тарӑхнипе кӗтесри турӑшсене веҫех Эскетен шывнелле кӑларса ярӑнтартӑм. Сире ҫапла халӑха улталаса сутаҫҫӗ пулсан, манӑн пӳртре турӑш таврашӗ ан пултӑр, эпӗ турӑсӑрах та пурӑнма пӗлӗп, терӗм хама-хам...

— Турӑсӑрах пурӑнтӑн-и вара?— ыйтрӑм эпӗ.

— Турӑсӑрах пулмасӑр... Ҫавӑн пирки ӗнтӗ мана Турӑсӑр Упавӑл тесе чӗнме пуҫларӗҫ те. Ӗлӗк ҫиленеттӗм, халӗ хӗпӗртетӗп,— терӗ вӑл манӑн ыйтӑва хирӗҫ.

...Павӑл Тихонович хӑйӗн сӑмахне каласа пӗтерсен, Петр Иванович:

— Эпӗ, малтанхи ҫулсенче турӑсӑр пулман пулсан та, халӗ турӑсӑр кӑна мар, турӑсӑрсен кружокӗн членӗ. Анчах мӗншӗн турӑсӑра тухнине пӗлетӗр-и?— терӗ.

— Ӑҫтан пӗлес,— терӗм эпӗ.

— Пӗлместӗр пулсан, киле ҫитиччен пӗр ик-виҫ сӑмахпа каласа парам-ха, эппин.

— Кала-ха, кала!..— хаваслантӑмӑр эпир.

## 3.

Петӗркке мучи тӑлӑх-туратӑн ӳснӗ. Ҫамрӑк чухне темиҫе ҫул хушши кӗтӳ кӗтнӗ. Кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫленӗ. Турра кӗлтунӑ. Чиркӗве ытла та тӑтӑш ҫӳренӗ. Вылӑри

часовньари турра вахăтра «çураçтарнă». Пуясшăн пулнă — нимĕнле те пуйăман: пĕр вĕçĕ çыхăнса пынă вăхăтра тепĕр вĕçĕ сӳтĕлсе пынă, каярахпа вара сӳтĕлсе пыракан вĕçĕ кăна тăрса юлнă, вăл та пулин çĕрсе пĕтнĕ. Петĕркке ĕç шыранă, ĕç тупайман:— ĕç пулман. Настăрна * кайма хатĕрленсе пуръннă — каяйман, укçа пулман. Юлашкинчен, Вăрнарти мăнастирте выльăх-чĕрлĕх пăхакан, вутă-шанкă пухакан кирлĕ тенине илтсен, ачисемпе арăмне киле хăварса, Вăрнара, хĕрарăм мăнастирне, ĕçе кайса кĕнĕ. Унта вăл виçĕ çул хушши ĕçлесе пурăннă.

— Мăнастирте ĕçлесе пурăннă май, мана ялта «Манах Петĕркки» тесе чĕне пуçларĕç. Малтанах эпĕ те çиленеттĕм, анчах ялта пин çын, кашни пĕрер каласан та, пин калать — ăçтан çиленсе çитерен кашнинче?

— Çапла вара «Манах» ятне илтсе юлтăн-и?— ыйтрăм эпĕ.

— Юлтăм çав. Халĕ те Манах Петĕркки, теççĕ. Мăнастирте вара хам виличчен тĕлĕнсе пурăнмаллине куртăм...

Петĕркке мучи манашкăсем мĕнле алхасса пурăнни çинчен калама тытăнчĕ. Вăл каланă тăрăх, усал, намăс ĕçсемшĕн чăнах та çылăх пулмалла пулсан, çĕр çинче чи çылăхлă çынсем манашкăсем пулнă пулĕччĕç. Пĕр Машăпа Васса манашкăсен çылăхне кăна çĕр мĕнле йăтса тăнă-ши? Юрать,— çылăх тавраш çук. Этем чăнах та çылăха кĕме пултарать пулсан, эпĕ хам та вилсен «тамăка» кăна лекмелле,— тĕлĕне-тĕлĕне каларĕ Петĕркке старик.

— Ак кăçал пире Антон Хрисанч «Тĕклĕмирун» ятлă кĕнеке вуласа пачĕ-ха...

— Мĕнле кĕнеке?— ыйтрăм эпĕ, мĕнле кĕнеке çинчен каланине ăнланса илеймесĕр.

— «Тĕклĕмирун!»— тепĕр хут каларĕ вăл, кĕреçе пек сухалне хускатса.

Эпĕ чухласа илтĕм. Хамăр ялти учителĕн, манăн çывăх юлташăн, Антунăн, «Декамерон» ятлă кĕнеке пурччĕ. Çав кĕнекере тĕрлĕ аббатсен, манахсен, манашкăсен аскăнчăк ĕçĕсем çинчен сахал мар çырнă. Учитель унти новеллăсене стариксене, турăсăрсен кружокĕн членĕсене, вуласа панă-мĕн. Çавăнпа та Петĕркке мучи мăнастирте курнă ĕçсене «Декамерон» кĕнекере çырнă юмахсем пек,

* «На сторону» тенĕ сăмахран пулнă.

тет. Вăрнарти мăнастирте пулнă ĕçсем те юмахри пекех, анчах вĕсем чăн пулнă.

— Эсĕ çамрăк çын, вĕреннĕ юлташ. Сан умăнта пурне те калама мана намăс та...— терĕ Петр Иванович хăйĕн сăмахне вĕçлесе, темле, хĕрарăм пек вăтанса.

— Турă пулсан, çав манашкăсем çавăн пек ашкăннă пулĕччĕç-и?— тўсеймерĕ Павăл Тихонович та.

— Вăл, турă тени, нихçан та пулман,— татса хучĕ Петĕркке мучи юлашкинчен.

— Шуйттанĕ те пулман,— хушрăм эпĕ.

— Мĕн турри?.. Мĕн шуйттанĕ?.. пире улталаса, хăратса пурăннă çав. Çитĕ, малашне турăсемпе шуйттансене ĕненмесĕрех пурăнар.

— Тĕрĕс!— терĕм эпĕ, çав тери вată стариксем тĕн сĕрĕмĕнчен, халăха анкă-минкĕлентерекен тĕшмĕшрен хăтăлнăшăн савăнса.

* * *

...Сисмен те — шоссе пире сакăр çухрăм тăсăлса выртакан вăрман витĕр Турхан колхозĕн уйне илсе тухрĕ. Çырма урлă каçса пĕчĕк ту çине хăпарсан, хамăр ялăн йăмрисем курăна та пуçларĕç. Тепĕр вунă минутран вată йăмрасем айĕнче хурт вĕллисем пек пытанса ларакан пўртсемлĕ тăван яла çитсе те кĕтĕмĕр.

— Пĕлетĕн-и эпир мĕнлине?— ыйтрĕ уйрăлас умĕн Турăсăр Упавăл.

— Пĕлтĕм... Эсир ăслă та хăюллă стариксем, çавăнпа та — турра та, шуйттана та ĕненместĕр,— ответлерĕм эпĕ, пĕр аллăмпа Павăл мучи аллине, тепĕр аллăмпа Петĕркке мучи аллине чăмăртаса.

*1935*

## КАЛМАНТАЙСЕМ

> «— Всякие же монашки недобитые ходят, и вот ну болтать про нас,— женщин, старушек вооружать против».
>
> *М. Шолохов.* «Поднятая целина».

1.

1931 çул...

Прухвăрпа Укахви ывăлĕсем саланса пĕтнĕ. Йĕп пек çухалнă. Киле çыру та çырмаççĕ. Таçта вĕсем. Аçтине ялта пĕлекен те çук. Ашшĕпе амăшĕ те, пĕлмен пек пул-

са, ним те шарламаççĕ, килте те хуллен кăна калаçаççĕ. Прухвăр хăй те килте тăраймасть: вăрмана каять те уйăхра пĕрре çеç киле таврăнать.

— Мĕнле пĕтĕ-ши ку...— калама хатĕрленчĕ киле пĕчченех юлнă Укахви хăйне хăй. Анчах чарăнма тиврĕ. Мунча умĕнче ура сасси илтĕнчĕ. Укахвин калас сăмахĕ типĕ çăмах пек пырта çакланса ларчĕ. Укахви вăрăммăн сывласа ячĕ,— пырти сăмах тинех анса кайрĕ.

Мунча алăкĕ хуллен уçăлчĕ, çавăн пекех хуллен хупăнчĕ. Сивĕ сывлăш мунчан тĕттĕм тĕпелнелле васкарĕ. Акă темле çын кĕлетки те курăнса кайрĕ.

— Аçтисем пулатăр-ха, тăхлачă?— терĕ Укахви асăрханса, хĕрарăм алăк урлă хуллен каçса тăрсан. Укахви, ăшпа аптранă çын пек, варне икĕ аллипе тытса, хĕрарăм çине тимлесех пăхма тытăнчĕ, унпа калаçасшăн пулчĕ. Палламан хĕрарăм та Укахви кăмăлне часах сисрĕ пулмалла. Мĕншĕн тесен вăл Укахви пек хĕрарăмсене пĕрре мар курнă, вĕсен кăмăлне пĕлсе çитнĕ. Халĕ те акă хĕрарăм тӳрех мала иртсе тăчĕ. Хăй тĕлĕнмелле çĕтĕк тумланнă. Ура тупанĕнчен пуç тӳпине çитичченех — лăстăр-лăстăр çĕтĕк тумтир. Çурăм урлă икĕ хутаç çакнă. Пĕр хутаçĕ туллиех. Анинчен пиçнĕ çĕрулмисемпе çăкăр татăкĕсем курăнса тăраççĕ. Вĕсене çак ялтах пухнă ĕнтĕ, мĕншĕн тесен ку ялта вăл икĕ кун çӳренĕ, икĕ кун çӳресе тĕрлĕ çынна тĕл пулнă, тĕрлĕ çынпа калаçнă. Акă халĕ вăл Прухвăрăн «арканнă» килне пырса кĕчĕ. Прухвăр арăмĕ ыйтнине хирĕç вăл, телейсĕрленсе юлнă çын пек, сассине вăрахлатса:

— Қалмантайсем...— терĕ.

— Ун пек ял ятне илтнĕччĕ,— килĕшрĕ кил хуçи.

— Турă хушнипе çӳретпĕр те... Çавăнпа та, пире вăй çитнĕ таран пулăшма ыйтатпăр... Эй, çӳлти аттемĕр, çак çынсене ырă сунсам, вĕсене сывлăх парсам, пурлăхне сыхласам, çылăхĕсене каçарсам...

Кун хыççăн, хĕрарăм турă кĕтессине пăхса, темиçе хутчен сăхсăхса илчĕ. Сăхсăхса илчĕ те йĕме-макăрма пуçларĕ.

— Çак пурнăçа курма шутламанччĕ те çав...

— Çаплах çав, çаплах ара...— терĕ Укахвийĕ, таçтан ютран килнĕ хĕрарăма çемçе чĕлхепе ачашласа. Лешĕ, телейсĕр çын евĕрлĕскер, Укахви çине хурлăхлăн пăхма пăрахмарĕ: «çветтуй» тейĕн чăнах та «çветтуй» пекех тăрать. Укахви те çавах, вăл та «çветтуй» пекех тăрать...

Укахви аса илчĕ... Укахвие Кирук арăмĕ:

«Хамăр яла Қалмантайран тата тепĕр хĕрарăм килнĕ, пит те ăста чĕлхеллĕ хăй...»— тенĕччĕ. Ку çав хĕрарăм иккен. «Калаçмаллах унпала, калаçмаллах»,— шухăшларĕ Укахви, унтан Кирук арăмĕпе калаçнине пĕтĕмпех аса илсе:

— Иртсех лар, тăхлачă, иртсех лар, ырă çыннăм? Шăнтăр та пулĕ, ывăнтăр та пулĕ...— теме тытăнчĕ.

— Қăмăллă çын патĕнче ларам-ха, эппин...

— Лар, лар!.. Сирĕн пек çынсем пирĕн патран ларса канмасăр тухмаççĕ... Лар, тăхлачă, ларса кан!..

* * *

...Укахвипе «ыйткалакан» хĕрарăм нумайччен калаçса ларчĕç. Нумайччен Укахви хăйĕн чунне ыраттаракан ĕçсем çинченаларĕ, хăй юратман çынсем çинчен те каласа памасăр чăтаймарĕ.

— Ăнланатăп, ăнланатăп сана, ырă çыннăм,— терĕ хĕрарăм.— Пăхсах паллă, эсĕ мĕн калассине, пăхсах паллă... Çанталăкĕ те пăсăлса кайрĕ. Самани те... Çав колхоз тенине кам шутласа кăларчĕ-ши? Кам-ши? Унăн алли хăртăр, ури хуçăлтăр, пуçĕ...

Вĕсем татах та нумай калаçрĕç. Татах та «самана» сăмаха асăнчĕç. Юлашкинчен иккĕшĕ те пĕр вĕçе çитрĕç, пĕр чĕлхе тупрĕç...

Мĕншĕн-ха апла? Мĕншĕн икĕ çыннăн пĕр-чĕлхе? Ара, хăшпĕр чухне пĕр чĕлхе мар, çĕр чĕлхе те пĕр чĕлхе пулма пултарать, çав чĕлхе пĕр сăмах калать... Çавăн пекех мар-ши çак хĕрарăмсен чĕлхисем те...

— Тӳссе пулмасть...— терĕ хĕрарăм ун-кун пăхкаласа.

— Пулмастех...— терĕ Укахви шикленсе, сăмахсене шăппăн хускатса.

— Пулмастех!— терĕç унтан иккĕн пĕр харăс.

...Тухса каяс умĕн Укахви ыйтса çӳрекен хĕрарăма çур çăкăр пачĕ, çур çăкăрпа пĕрле тăвата кăвак хут укçа кăларса тыттарчĕ.

— Ме, тăхлачă, ме ил, ырă сунса паратăп...

— Спасипă сана, ырă çыннăм, спасипă, тура пулăштăр...

— Эпĕ каланисене ăнлантăн пулĕ ĕнтĕ...

— Ăнлантăм, ăнлантăм,— тет лешĕ темиçе хутчен.

— Çапла хуллен-хуллен çӳресе, пӳртрен-пӳрте çитсе

кала. Ху тата сыхланарах ҫӳре... Сыхлан... Сыхланмасан, халĕ юрамасть, саманӗ ҫавӑн пек. Ҫашни кӗтесре, тенӗ пек, комсомолец... Ҫашни пӳртре, тенӗ пек, колхозник...

— Ҫаламаллине калатӑпах ӗнтӗ... Уншӑн эсӗ ан хӑра. Мӗн тумаллине хамах пӗлетӗп. Эпӗ ӗнтӗ ытахальтен ҫӳреместӗп...

— Ҫапла, каламаллине, тӑхлачӑм, калах... Ху ҫуран ҫӳресен те сӑмаххусем утпа ҫӳреччӗр...

— Юрӗ.

Инҫетрен килнӗ хӗрарӑма Укахви ӑсатсах ячӗ. Унпа пӗрле вӑл картишне тухрӗ. Юлашкинчен татах, виҫҫӗмӗш хут, астутарчӗ:

— Мӗн каламаллине ан ман!— ку сӑмахсем татах та шӑппӑн тухрӗҫ.

Калмантай хӗрарӑмӗпе Укахви пӗр-пӗрне тахҫанах пӗлеҫҫӗ, тейӗн. Анчах вӗсем пӗр-пӗрне паян ҫеҫ мунчапӳртре курнӑ, паян ҫеҫ пӗр-пӗринпе паллашнӑ. Малтан вӗсем пӗр-пӗрне пӗлме те пултарайман: «ыйткалакан» хӗрарӑм, Вӑтам Атӑл таврашӗнчен, Калмантай * ятлӑ пуян ялтан килнӗ; Укахви — Кивӗ Лупашкасем, Прухвӑр кулак арӑмӗ. Пӑхма ытла та ют ҫынсем, анчах мӗнле-ха вӗсем часах паллашрӗҫ, мӗнле-ха вӗсем пӗр чӗлхе тупрӗҫ?..

* *
*

...Укахви, пӳрте каялла кӗрсен, тахҫанччен шухӑшласа ларчӗ. Ах, ҫав мӑнтарӑн шухӑшӗ! Таҫтан-таҫтан ҫаврӑнса килсе пуҫа кӑшӑллать, сарай хыҫӗнчи хӑмла путранки пек пуҫ тавра явӑнать. Анчах Укахвисен халӗ сарайсем те ҫук. Тӗпрен пуянччӗ, ӑратнере нихҫан та выҫӑ ларакан пулман. Карта тулли ҫапан ларнӑ, пӑхсан — витӗр курӑнман. Пуян та чаплӑ пулнӑ тӑвансем!.. Шыв пек, шыв пек юхӑнчӗ пурнӑҫ. Ах, мӗншӗн ҫапла-ши вӑл? Ах, мӗншӗн тытма ҫук-ши ӑна? Тавӑрасчӗ!.. Тавӑрасчӗ!..— капланаҫҫӗ пуҫри шухӑшсем.

---

* Патӑръел районӗнчи хӑшпӗр ялсенче «ыйткалакансене» калмантай, теҫҫӗ. Вӑл ят Калмантай ялӗнчен «ыйткалакансем» нумай килнипе пулнӑ пулас.

«Калмантай — название села (в б. Хвалынск. у., Саратов. г.). Пирӗн ял выранӗнче ӗлӗкех калмӑксен часанийӗ пулнӑ, ҫавӑнпа Калмантай, теҫҫӗ. Вӑл ял пуҫланни пит нумай вӑхӑт иртнӗ. Пирӗн халӗ пусӑсем алтнӑ чух ҫын шӑммисем тупаҫҫӗ. Пирӗн юхан шыва Калмантай, теҫҫӗ». (*Проф. Н. И. Ашмарин.* «Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки», VI вып., 42 стр.).

Шухăшсем çип пек çинçе. Шухăшсем çип çĕлен пек... Тахçан курни-илтни çуркуннехи ванчăк пăр пек килсе капланать. Анчах Укахвисен пурнăçĕ ванчăк пăр пек мар-ши?.. Çук, ванчăк пăр пек мар!.. Çук, çук, ванчăк пăрах!.. Пурнăç ванчăк... Ванчăк...

...Укахви пĕчĕк чӳрече умне пырса тăчĕ. Чăх куç пек чӳрече,— ним те нураймăн!.. Пурне те курмасан та юрĕ, хăшне-пĕрне шухăшласа илĕн... Каллех кашни пӳрте тенĕ пек кĕрсе тухакан ыйткалакансем — ак камсене аса илчĕ вăл. Ĕнер кăна кĕрсе тухнă старик те Калмантай çынни. Икĕ çамрăкрах ача та,— вĕсем 12—14 çулта пулмалла,—калмантайсемех пулас, ятне-шывне вăл ыйтмарĕ. Анчах кирлĕ-ши ыйтма? Вĕсен сăнĕ çак паянхи хĕрарăм евĕрлĕ.

«Пĕр çемье... Ыйтнă пулсан та юрамаллаччĕ»,— шухăшларĕ хăйĕн ăшĕнче Укахви.

«Ну, чир тата... Чир!.. пурин çинчен те калаççан сăмах та тухĕ»...— пӳлчĕ саспах хăйне хăй.

Кун хыççăн Укахви куçĕ умне старик, мăнаçланнă хĕрарăм, иккĕн пĕрле çӳрекен ачасен сăнĕсем икĕпитленсе, тăвата куçланса ретĕн-ретĕн тухса тăчĕç... Çук, тăват сăн кăна мар, ретре урăх сăнсем те, урăх хутаççем те пур...

Старике ĕнер хăй упăшкин кивĕ çитмине пачĕ. Икĕ çамрăк ачана сĕтел хушшине лартсах апат çитерчĕ. Чукун тĕпĕнчи юлашки яшкана пĕтĕмпех антарса пачĕ.

— Çийĕр, ачасем, çийĕр те эпĕ мĕн каланине тума тăрăшăр,— терĕ вăл çак хуралса, пыйтланса кайнă ачасене те. Вăл вĕсене укçа та пачĕ пăртак. Унтан ăсатсах ячĕ.

«Пĕтĕмпе 27 тенкĕ...»— шутлать халĕ Укахви хăйĕн ăшĕнче. Шутлать те упăшкине аса илет. Вăл укçашăн Прухвăр нимех те шарламĕ. Прухвăр хăй те:

«Çӳп-çаппа хамăршăн калаçтарма май пулсан, çӳп-çаппа та калаçтарас пулать», тенĕччĕ мар-и?— аса илчĕ Укахви...

Урамра юр вĕçет. Юр вĕççе шăтăк-путăка питĕрет. Акă Укахви куçĕ умне тĕтре тухать. Тĕтререн хура пăнчăсем çитĕнеççĕ. Хура пăнчăсем çынсем пулаççĕ, çынсем пулса утса каяççĕ...

Камсем?..

Мĕнле çынсем?..

Аса илет Укахви, аса илет иртнĕ кунсене.

Çав çулхине кĕркунне кăна мар, хĕлле те, çуркунне те, çулла та салтак юрри янăратчĕ. Аса илет пускилти Микуль юрланине. Микуль макăрса юрлатчĕ:

Чĕкеç чĕппи, ах, ачамсем!
Чĕкеç чĕппи, ах, ачамсем!
Эпĕ тухса, ай, кайсассăн,
Саланаççĕ пуль чĕппĕмсем.
Эп нимшĕн те кулянмастăп,
Эп нимшĕн те кулянмастăп,
Тăваттă-пиллĕк ачамăм пур.
Кам пăхĕ-ши тухса кайсан...

Мĕкĕте Хветĕрĕн те ывăлĕсем тухса кайрĕç. Вĕсем те куççуль тăкса юрларĕç:

Çăлтăр витĕр çул курнать,
Çăлтăр витĕр çул курнать.
Эпир каяс çул пуль çав,—
Каяс пулать, мĕн тăвас?..
Уйăх витĕр уй курнать,
Уйăх витĕр уй курнать.
Эпир тăрас уй пуль çав,—
Тăрас пулать, мĕн тăвас?..

Çапла вăйпитти çынсем вееçех салтака кайса пĕтнĕччĕ. Ялта уксах-суккăрсем, ватă-вĕтĕсем çеç тăрса юлнăччĕ. Прухвăр кăна кайманччĕ. Прухвăр мухтанса çӳретчĕ...

Ыйткалакансем тем чухлехчĕ ун чух. Хăшĕ салтакра аманнипе ĕçлеймен. Выçă çӳренĕ. Тертленнĕ. Теприсен арăмĕсемпе ачи-пăчисем тăлăха юлнă. Выçнă. Ял çине хутаç çакса тухнă. Ун пек çынсем нумайлансах пыратчĕç вăл çулсенче.

— Мĕншĕн эпир ыйткаласа çӳреместпĕр, мĕншĕн иĕннă эсир çӳретĕр?.. Ĕçлес пулать, ĕçлес пулать...— тесе кулатчĕ Укахви...

— Э-э-эх!.. Тутă çын выççине пĕлет-и вăл?.. Çын çинчи — йывăç çинче-çке вăл...— терĕ пĕри.

— Эсĕ апла-и?.. Вон кунтан!..— çиленсе кайрĕ Укахви... Хăй çав вăхăтрах, пĕр ывăлне чĕнсе илчĕ. Ыйткаласа çӳрекен çынна, уксахскерне, йытăпа вĕскĕртме хушрĕ. Сăнчăрта тунсăхласа тăнă Эскам ыйткалаканăн кивĕ шинельне йăлтах çурса тăкрĕ. Уринчен çыртрĕ. Леш, хăрах урине фронтра çухатнăскер, тата выçăпа касăлнăскер, часах лаç хыçĕнчи вĕлтренсем ăшне персе анчĕ...

Пĕррехинче Укахви ыйткаласа çӳрекен карчăка питрен вĕри шывпа саптарчĕ. Ыйткалаканĕ чĕлхесĕр хĕр-

арăм пулнă. Ним те калаймарĕ вăл. Питне сарăхса кайнă типшĕм аллипе хупларĕ те, тахçанччен вĕри куççуль юхтарса ларчĕ. Вĕри йӳçĕ куççулĕ унăн хуйхăпа пĕркеленсе пĕтнĕ пичĕ тăрăх шăрçаланса анчĕ. Чĕлхесĕр çын Укахвишĕн ытла та кулăшлăн туйăнчĕ, вăл унран ахăлтатсах кулчĕ. Çакăн çинчен Прухвăра каласан, вăл та арăмĕ пекех кулчĕ.

— Нивушлĕ чĕлхесĕр çынсем вĕри шывпа литрен сапсан та хирĕç ним те калаймаççĕ?.. Ытла та кулăшлаçке?.. Ха-ха-ха!..— кулчĕ Укахви упăшки умĕнче тата тепĕр хут. Хăй хура çĕлен пек авкаланса, кукăркаланса илчĕ.

...Укахви, сĕрсе те шуралман мунча урайĕ çине пăхса тăраканскер, каллех чӳрече витĕр урамалла пăхрĕ. Урамра Якку комсомолецпа ял Совет председателĕ, Хăмăш Петĕрĕ, пыраççĕ. Вĕсене курсан, Укахви урама тăрăхла пӳртне аса илчĕ. Чус витнĕ сарайсем куç умне тухса тăчĕç. Анчах... ăçта халĕ вĕсем? Ăçта Прухвăр? Ăçта икĕ ывăл — Петĕрпе Васли?..

— Кам сире вутта пăрахса çунтарĕ-ши?..— ылханчĕ вăл Яккупа Хăмăш Петĕрне. Хăй алăк патнелле хыттăн утса кайрĕ те тарăхнипе, çӳпĕ шăтăкĕнчи шăпăра илсе, ăна урай варнелле ярăнтарчĕ... Шăпăр нумайччен вyртрĕ, нумайччен ăна никам та пырса тытмарĕ.

## 2.

...Тăманлă сивĕ кун. Пăрсăмсаран хаяр çил касса тăрать. Тихăн Тихăнч патне пĕр лав кĕрсе кайрĕ.

— Айта, кирек те мĕнле çын пултăр, кĕрер!— терĕ çӳхе пальтоллă çын хăйĕн лавçине.

— Кĕрер, ăшăнмасан — май çук, ами!— терĕ ямшăк шăнса кайнипе ташласа тăракан хула çынни çине пăхса. Хула çынни шăнса туйми пулнă урисене кăшт тапăртатса çемçеткелерĕ те тӳрех пӳртелле васкарĕ.

— Пирĕн килес!..— пулчĕ унăн малтанхи сăмахĕ. («Чăвашсем çавăн пек калаççĕ вĕт»— шухăшласа илчĕ хăй).

— Килĕр!— терĕ кил хуçи ывăлĕ.

— Маларах иртсемĕр, пальтăра хывсах ăшăнăр...— хутшăнчĕ ватăла пуçланă ашшĕ. Хăй саплакан çăпатине сак айне пăрахрĕ те ура çине тăчĕ.

— Çăматтăра кăмака çине хывса хумастăр-и?— ыйтрĕ Тихăн арăмĕ, шăннă юлташ патнелле çывхарса.



ЧУВАШСКАЯ
РЕСПУБЛИКАНСКАЯ
БИБЛИОТЕКА

Лавҫă-та кĕрсе тăчĕ. Кил хуҫисем ăна та лайăх йышăнчĕҫ.

— Ай-яй! паян сивĕ-ҫке мĕне сисрĕ ку ҫанталăк? Тӳсме ҫук, ами. Сурсан сурчăк ӳкмест...— Пĕлтерчĕ лавҫă. Хăй алсине хыврĕ те сылтăм аллин шĕвĕр пӳрнине йăвалама пуҫларĕ.

— Темле усалланчĕ вăл ҫанталăк?— тĕлĕнчĕ Тихăн.

— Ан та кала...— терĕ ăна хирĕҫ тахăшĕ.

— Ҫав тери шăнтса пăрахрĕ — илтĕнчĕ лавҫă сасси.

Тихăн шăннă ҫынсене ăшăнма арăмне чей ларттарчĕ. Чей стаканĕсене лайăхрах ҫутарчĕ, ҫĕнĕ алшăллипе шăлма хушрĕ.

— Хула ҫынни, Патăръелне каяканскер... Тасарах пулма тăрăш...— терĕ Тихăн арăмне чăланта хăлхаран.

— Хула ҫынни пулсан, колхоз пирки тĕплĕрех ыйтса пĕлесчĕ...— каларĕ арăмĕ упăшкине, унăн сылтăм хăлхи патнелле ҫывхарса.— Элир ниҫта та тухса ҫӳреместпĕр, йăвари кайăк пек питĕрĕнсе ларатпăр, ҫавăнпа та ыйт-ха, ыйт... пĕл...

— Эсĕ чейне лайăхрах вĕрет. Тата ҫавăнта кăшт пыл пурччĕ... Ҫавна тупса кĕр-ха...

— Тупса кĕрес!..— тесе тухса кайрĕ арăмĕ.

Кăмака умĕнчи сăмавар кашлама та тытăнчĕ. Пĕчĕк шăтăк витĕр пăс сирпĕнме пуҫларĕ. Маччана ҫитичченех тăсăлса хăпарчĕ сăмавар ăшĕнче сиксе вĕрекен шывран тухакан вĕри пăс.

Пӳрт ăшăнсах кайрĕ.

Сĕтел хушшине Тихăн, хула ҫынни, унăн лавăҫĕ кĕрсе ларчĕҫ. Ывăлĕ алăк патнелле кайрĕ те кутник ҫине вырнаҫса ларчĕ. Кĕсйинчен табак хутаҫҫи кăларса чикаркка чĕркерĕ. Чикаркка малтан ҫатăртатса илчĕ.

— Ой, табак ăшне таҫтан тăвар лекнĕ?— терĕ ывăлĕ ăвварĕнчен те, сăмсинчен те кăвак тĕтĕм кăларса. Кăвак тĕтĕм ункăн-ункăн кăмака умнелле салана пуҫларĕ.

Сăмавар патне ларсан, ҫул ҫыннисем те ăшăнса кайрĕҫ. Хуларан Юхмана каякан ҫын чăматанĕнчен ҫур литр эрех туртса кăларчĕ. Хăй пĕр черкке ĕҫрĕ те (вăл урăх пачах та ĕҫмерĕ), эрех кĕленчине лавăҫне пачĕ, кил хуҫине те ĕҫтерме хушрĕ.

— Куна Канашра илтĕм... Шăннă ҫынна эрех ăшăтать, теҫҫĕ чăвашсем. Эсĕ те кăшт ăшăн-ха...— терĕ вăл, ăшшăн кулса.

— Вăл ăшăтманне кам ăшăтĕ ĕнтĕ, ами...— хĕпĕртерĕ ямшăк, хăйне эрех кĕленчине алăранах тыттарнăшăн савăнса.

— Вăл ĕçе пăсмĕ.— Сăмах хушрĕ кил хуçи те.

Карчăкĕ кăмака сакки çине кайса ларчĕ.

— Ĕçĕр, ĕçĕр!.. Ара, мĕн-ма чейне ĕçместĕр?— тет хăй, сĕтел хушшинче ларакансем çине пăхса.

— Ĕçĕр! Шыв шел мар... Пылне те илĕр. Акă чей кашăкĕ...— тет старикĕ те карчăкки хыççăн сĕтел хушшинче, чей ĕçме пăрахса, калаçса ларакан хула çыннипе лавăçа. Карчăк пĕрре упăшки çине, тепре хула çынни çине пăхать, хăй тем çинчен шухăшлать. Куçĕсем вăл тарăн шухăша кайни çинчен калаççĕ. Старик ăнланать. Карчăкĕ ăна колхоз пирки калаттарасшăн, хула çыннинчен ыйтса пĕлтересшĕн... Пĕлмеллех!—«Колхоз» сăмах ăшран тухма пĕлмест, вăл шалаллах, чĕре патнеллех кĕрсе пырать. Ăçта кай, унта: «Мĕншĕн колхоза кĕместĕр, хăçан кĕретĕр, заявлени çырса парас-и?»— теççĕ иртнĕ çулсенче колхоза кĕрсе вырнаçнă хресченсем.

Старик сăмахне пуçларĕ...

— Юлташ, эпир тĕттĕм çынсем ĕнтĕ... Ниçта та кайса çӳремен, яла та сахал тухатпăр, килтех чаваланса ларатпăр. Çавăнпа та, сирĕнтен пĕр-ик сăмах ыйтса пĕлес, тетĕп эпĕ,— терĕ вăл пĕрре хăранă, пĕрре именнĕ пек пулса.

— Мĕн? Ма пĕлес мар?.. Ыйтăр, ыйтăр!..— сăмах пачĕ леш, хăй кирек мĕн вăхăтра та пулăшма хатĕррине палăртса.

— Эпĕ колхоз çинчен...

— Эсир, чимĕр-ха, колхозра мар-и-мĕн?— тĕлĕнсе кайрĕ хула çынни, хăй старикпе карчăк çине пăхса илчĕ, унтан кутник çинче ларакан ывăлĕ çине пăхрĕ.

— Колхозра мар çав...— терĕ старик вăтанарах. Хăйĕн çамки çине пăтăр-пăтăр тар тухнă. Кăмака сакки çинче ларакан карчăк колхоз çинчен калаçма тапратнăшăн хĕпĕртерĕ. Вăл ура çине тăчĕ. Унтан хула çынни çывăхнерех урама тăрăхла сак çине пырса ларчĕ. Куçĕсем хăйĕн хула çынни çинчен пĕрре те аяккалла пăрăнасшăн мар. Кĕтет. «Тен, çак çын питех те ăслă та хаклă сăмах каласа хăварĕ? Каламаллах, калатех»!..— шухăшлать аллă-утмăл çула çитнĕ хĕрарăм.

— Чим-ха!— пӳлчĕ кĕленче тытса ларакан ямшăк.— Вăрăм сăмах пуçличчен тепрер черкке сыпар.

— Эсĕ ху сып-ха...

— Эпĕ сыпрăм ĕнтĕ...— Чăнах та, ямшăк алла кĕленче кĕрсенех: «Ку шăннă çынна чух-ха, ами»,— тесе черкке хыççăн черкке ÿпĕнтерчĕ.

Эрех кĕленчи,— черкке старикпе унăн ывăлĕ аллинчен ямшăк аллине тепре çаврăнсан,— пушанса та кайрĕ.

— Мĕншĕн-ха эсĕр колхозра мар?— ыйтрĕ хула çынни.

— Мĕншĕнне каласа парăп акă...

— Эпĕ тахçанах кĕресшĕн. Аннепе атте хăраççĕ, тĕрлĕ çын сăмахĕ хыççăн каяççĕ...— пÿлчĕ алăк патĕнче кутник çинче ларакан ывăлĕ.

— Пĕркун хам та кĕме шутларăм... Кĕрес патнех çитнĕччĕ... Анчах çав ыйткалакансем хăратса çитерчĕç ĕнтĕ. Кашни тенĕ пек колхоза кĕнипе асапланатпăр, теççĕ. Вилетпĕр, теççĕ. Колхозсем сирĕн патра çеç, пирĕн патра арканчĕç, теççĕ. Çапла çаптараççĕ çав ыйткалакансем сăмахсене.

— Мĕнле ыйткалакансем?..

— Саратăв хули таврашĕнчен килнĕ калмантайсем...

— Çак кунсенчех пĕр мăнаçланнă хĕрарăм кĕрсе тухрĕ,— калаçма тытăнчĕ карчăкĕ, ку вăхăтчен чĕнмесĕр итлесе ларнăскер.— Эсĕ ăçтисем пулатăн терĕм те, ăçтисене-мĕнне каламарĕ. Хам пĕр-пĕр калмантай пулĕ, терĕм ăшăмра. Анчах вăл хăй тĕллĕнех: «Эпĕ — колхозник, çавăнпа сĕтĕрĕнсе çÿретĕп... Колхоза ирĕксĕр кĕртсе пĕтерчĕç. Халĕ колхозниксем веçех хутаç çакса саланса пĕтрĕç,— тет.— Урăх колхоз тавраш тумастпăр ĕнтĕ, турă унтан хăтартăр,— тесе сăхсăхать çав арăм.— Вăн эсĕр колхозник мар та, сирĕн сĕтел çинче çăкăр та пур... Тăвар та... Выçă мар эсĕр,— тет.— Тăнлă-пуçлă çын вăл колхоза нихçан та ан кĕтĕр»,— тет. Тем те пĕр калать çав... Веçех, веçех хăратса пăрахрĕ вара. Тата ăçтан-ха вăл эпĕр колхозра маррине пĕлнĕ?.. Тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕп çавăнтан!..

Карчăк калаcа пĕтернĕ çĕре старик сăмах тапратрĕ.

— Нумаях пулмасть тата пĕр арçын çÿрерĕ, хĕрĕххĕрĕх пиллĕк çулта пулĕ хăй. Вăл та çавăн пекех калать. Пирĕн патра тырăсене шăлса илсе кайрĕç, пĕр пĕрчĕ хăвармарĕç... Колхозăнне чи малтан илсе кайрĕç, тет. Çуркунне вăрçă пулать, унта колхозниксене хăйсене илсе каяççĕ, колхоза кĕменнисене илмеççĕ, тет. Сирĕн патри колхозăн тыррине мĕнле илсе кайман-ха? Илсе кай-

ман пулсан, çак кунсенчех илсе каяççĕ, тет... Тата икĕ ача çӳрерĕç. Вĕсем те: эпĕр — колхозник ачисем, пирĕн аннепе атте выçса вилчĕç. Эпир те выçса вилетпĕр... Турă пулăр, пулăшăр пире, тесе çӳреççĕ...

— Çавăн пек çынсем пире хăратса пĕтерчĕç ĕнтĕ,— терĕ вăрăммăн сывласа ларакан карчăк.

— Қалмантайсене ĕненетĕр, пĕлекен çынсене итлеместĕр... Эсир хуçамăр та çавăн йышшискерсем,— вăрçса каларĕ ывăлĕ. Хăй çиленсе тахçанах сӳннĕ чикаркка тĕпне урайне пăрахрĕ те лачлаттарса сурчĕ.

— Эсĕ, Паттюк, чарăн-ха!— пӳлчĕ амăшĕ.

— Çав Паттюкăн турти ытла та кĕске вара. Ĕретлĕ калаçас чухне харкашать. Қолхоза кĕресси — турат касса пăрахасси мар... Унта ача вăййи пулмалла мар...— хăтăрса тăкрĕ ашшĕ ывăлне. Унтан хула çынни çине пăхса:— Қĕме кĕмеллех ĕнтĕ... Анчах кутăруçăн кĕнисем те каялла тухаççĕ, теççĕ те. Виçĕ кил каялла тухма заявлени панă-ха?.. Пирĕн тата тем тумалла ĕнтĕ? Те кĕрсен лайăх, те кĕмесен?.. Эсир, ырă çыннăм, каласа парăр, ăнлантарăр. Манăн пуç саланса кайрĕ...— терĕ старик.

Қалаçма чарăнчĕç: чăвашсем калашле, сăмах те пине çитрĕ. Пурте хула çынни çине шăтарас пек пăхаççĕ, вăл мĕн каласса кĕтеççĕ. Хула çынни çамка çинчи тарне сăмса тутрипе шăлса илчĕ те вăраххăн, ватă çын пек калама пуçларĕ:

— Да, хальхи ыйткалакансем хыççăн кайни çынна тĕрĕс çултан пăрса ярать...

— Тĕрĕс!— килĕшрĕ унпа кил хуçи ывăлĕ.

— Вĕсем — эпир колхозниксем, теççĕ пулсан, эсир вĕсене ан ĕненĕр. Вĕсем колхозниксем мар. Кулакла этемсем вĕсем. Унта ĕç çакăн пек пулнă: тырра халĕ çĕр мĕн чухлине шутласа илеççĕ, эсир ăна пĕлетĕр ĕнтĕ...

— Пĕлмесĕр! Ăна ăнлантарса пачĕç-ха,— çирĕплетрĕ старик хула çынни шухăшне. Вара вăл хăй патшалăха тырă вăхăтра парса татнине, хăйĕн ятне ял Советĕнче «Хĕрлĕ хăма» çине çырнине аса илчĕ.

— Ну, вăт, Вăтам Атăл таврашĕнче çĕр питĕ нумай. Çав ыйткалакансем — саботажниксем вĕсем, патшалăха тырă парасшăн мар пулса, çĕрĕсене пĕтĕмпех акман... Патшалăх тырă ыйта пуçласан, ялтан туха-туха тарнă çав саботажниксем. Колхозсем хăйсен çĕрĕсене акнă, хăйсене тивекен нормăна патшалăха парса татнă... Леш-

сем, кулакла элементсем, рабочисемпе Хĕрлĕ Çара выçă хăварасшăн пулнă...

— Кунта çӳрекеннисем те çавăн пек çынсем пулĕ ĕнтĕ?— ыйтрĕ старик, хула çыннине пӳлсе.

— Шăпах çавăн пек этемсем, ялтан тарнă кулаксем, кахалсем, саботажниксем. Пĕр сăмахпа каласан, ыйтса çӳрекенсем хушшинче халĕ чухăн çын çук... Вĕсем Совет влаçне курайман çынсем, ĕçрен таракансем... Çавăнпа вĕсем колхоз юхăмне хирĕç калаççĕ, колхозниксене кураймаççĕ... Хăйсем: эпир — колхозниксем, тесе суйса çӳреççĕ. Анчах кам вĕсене колхоза илтĕр?..

Ӳсĕрĕлсе кайнă ямшăк та, хула çынни сăмахĕсене итлесе ларнă хыççăн, тарăхса кайрĕ.

— Эпĕ хам та колхозра мар... Эпĕ унта, ами, кĕретĕпех... Анчах çав калмантайсене яла пĕрре те кĕртме кирлĕ мар... Теме вĕсене кĕртеççĕ? Пирĕн ялта та вĕсем тĕрлĕ агитацисем сарса çӳреççĕ... Те турă вутлă çумăр çутарать, те тĕнчене пĕтерет... Тем те пĕр калаççĕ... Вĕсене ял хушшине ямалла мар. Вăрăсем вĕсем. Пирĕн ялта çавсем шкул тума кĕрĕшрĕç. Шкул тунă вăхăтра яла çаратма пуçларĕç. Пĕр яш ачанне 350 тенкĕ тăракан купăс, тепĕр арăмăнне тенкĕсем вăрларĕç... Кĕрĕксем çухалчĕç... Хупнă чиркĕве кĕрсе 14 пин тенкĕлĕх япаласем вăрласа тухрĕç... Кайран шкулне те çунтарса ячĕç... Халăх мĕнле тăрăшрĕ, виç-тăват сехет хушшинче патшалăх укçи, халăх тарĕ кĕл пулса вĕçрĕ, ами. Вĕсем акăшмакăш усал этемсем!..

Кил хуçисем ямшăк сăмахне те пĕр сиктермесĕр тенĕ пек итлерĕç.

Ямшăк хыççăн хула çынни татах та каларĕ, татах та старикпе карчăка ăнлантарчĕ... Старикпе карчăк тĕлĕнсе хытсах кайрĕç: «Мĕнле ăслă вăл, мĕнле тĕрĕс калать. Эх, ăслă-çке хула çынни!.. Тепри каласан, ĕненес те çук, анчах ку суймасть, ку ăслă çын. Кам çуратнă-ши ăна? Амăшĕ мĕнле-ши? Мĕншĕн пирĕн Паттюк та çавăн пек мар-ши?»— нумайччен шухăшларĕ карчăк. Юлашкинчен: «Пирĕн Паттюк та тахçанах колхоза кĕрер! тесе каламанччĕ-и çак?.. Каларĕ!»— тесе вĕçлерĕ вăл хăйĕн шухăшĕсене.

— Мана карчăк чарса тăчĕ...— терĕ ним калама аптранă старик.

— Мĕнле карчăк чарчĕ! Эсĕ, Тихăн, ху та ĕнтĕ чарман мар!— пӳлчĕ карчăк старик сăмахне.

— Иксĕр те айăпла ĕнтĕ: атте кĕрес, тет,— анне чарать, анне кĕрес тет,— атте чарать... Йытти — кушакки ҫине, кушакки — йытти ҫине, тенĕ пек тухать...— хутшăнчĕ малтан ҫиленерех калаҫнă ывăлĕ.

— Пурте айăпсăр мар... Паттюк, эсĕ ху та теплĕн каламан... Пĕрмаях ҫиленнĕ пек пулса калаҫатăн... Патака тăруках хуҫма тăрăшатăн... Паллах, карчăкпа эпир йăнăшнă...— Ку сăмахсене каласан, старик каллех пĕрре карчăк ҫине, тепре хула ҫынни ҫине пăхса илчĕ.

— Апла, юлташ, кала-ха: колхоза халех кĕрес-и?— ыйтрĕ вăл тимлĕн те кăмăллăн.

— Кĕресех-и?— вăтанчĕ карчăк та.

— Мĕншĕн «кĕресех-и»?.. Паллах, эпĕр кĕретпĕр, колхозран аякра юлмастпăр!— терĕ ывăлĕ те, ашшĕпе амăшĕ ҫине пăхса.

— Да! Кĕрес пулать. Колхозсăр малалла кайма ҫук!.. Шухăшласа пăхăр, ыйткалакансене ан ĕненĕр!..

— Н-н-да!..— терĕ ямшăк.

Хула ҫынни, кил хуҫи ывăлĕ ҫинелле пăхрĕ те:

— Эсĕ, Паттюк, ҫамрăк юлташ, аҫупа аннӳне, вăтăсене, ан кӳрентер! Вĕсем тĕттĕм пулнин айăпĕ вĕсенче мар. Тепĕр енчен, тата сире, эсир колхоза ку вăхăтчен те кĕмен, тесе никам та айăпламĕ... Халĕ аҫупа аннӳ те хирĕҫ пулмĕҫ...— терĕ.

— Мĕншĕн?.. Мĕншĕн хирĕҫ пулас?..— терĕҫ старикпе карчăк. Вĕсем колхоза кĕме хирĕҫ марри чĕлхепе каланинчен кăна мар, ватăла пуҫланă пит-куҫĕсенчен те палăрчĕ.

Хăйсем вара иккĕш те пĕр харăс:

— Тав сире тĕрĕс сăмахшăн, тав!— терĕҫ хĕпĕртесе-савăнса.

— Тав сире!— терĕ карчăк татах. Юлашкинчен, хĕпĕртенипе сăмах пĕтсе ҫитнĕ пирки ыйту пачĕ:

— Эсĕ, ху, ăҫтисем пулатăн?.. Ман хамăн та тепĕр ывăл пурччĕ те... Граждăн вăрҫинче ҫамрăклах вилчĕ... Питĕ ăслăччĕ, шеремет, сан пекехчĕ... Эсĕ ăҫтисем-ха апла?..

— Эпĕ, кинемей, катарисем пулатăп, инҫетрисем... Вăрнар район ҫынни эпĕ... Хам Шупашкарта «Канаш» хаҫат редакцинче ĕҫлетĕп... Хаҫат кăларатпăр...

— Э-э-э... Ҫаплах ҫав, ҫаплах...

— Шупашкара таврăнсан, сирĕн ҫинчен хаҫат валли калав ҫырăп.

— Çаплах çав, çаплах... Çыр-ха... Манăн ят Хеврунь, ята асăнсан, пĕтĕм ял пĕлет... Ялта урăх Хеврунь çук... Эпĕ çеç. Колхозне кĕретпĕрех, кĕресех!..— карчăк хĕпĕртенипе йĕрсе ячĕ. Упăшки, арăмĕ йĕнине курсан, хăйĕн пурнăçне аса илчĕ. Вăл тăлăххăн ӳснĕ. Ĕлĕк тарçăра пурăннă. Яппун вăрçинче асапланнă. Çунса кайнă. Лашасăр, ĕнесĕр тăрса юлнă. Совет влаçĕ пуçланнăранпа çеç çын шутне кĕнĕ, хуçалăхне кăштах çирĕплетсе кулленхи выçлăхран хăтăлнă.

«Колхоз выçлăха пуçĕпех пĕтерĕ-и?»— шухăшларĕ вăл иртнĕ çулсенчи выçлăх мĕлкисене аса илсе.

...Хула çынни Патăръелне тухса кайсан, Паттюксем патне Якку пырса кĕчĕ. Колхоз çинчен тата сăмах пулчĕ. Старик, карчăк, ывăлĕ тата Якку сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕç. Вĕсен умĕнче шурă хут. Ăна хула çынни парса хăварчĕ. Ывăлĕ кăранташа сурчăкĕпе йĕпетейĕпете колхоза кĕме заявлени çырчĕ.

— Эсĕ, ывăлăм, лайăххрах çыр. Çынсем кулмалла ан пултăр,— терĕ амăшĕ ăшшăн.

— Халĕ ĕнтĕ çынсене култармăпăр, калмантайсем хыççăн каймăпăр,— каларĕ ывăлĕ пуçне çĕклемесĕр.

## 3.

Вăхăт каçала сулăннă. Çил, иртенпе йывăççене силленĕскер, таçта вăрман хыçне кайса пытаннă. Çулсем тăрăх çил ачисене ташлаттарса чупнă тăман çырмаçатрана кĕрсе çухалнă.

Хĕвел, хĕллехи сивĕ пĕлĕтсем хыçĕнчен ял çинелле пăхса, вăрăм урисемпе таçти ялсем хыçне пусса, инçете анса пырать.

Икĕ çын ларнă лав ялтан тухса кайсан пĕр ик сехетренех, Тихăнпа ывăлĕ колхоз правленине кайрĕç. Тихăн ку вăхăтчен колхоз правленине кĕрсе курманччĕ. Киймастчĕ унта вăл. Паллах, хăрасса хăраман та, анчах ăна темле ырă марччĕ, ытла та ырă марччĕ унта...

«Эсĕ Совет влаçĕ хăна пулăшнине мантăн-и?.. Эсĕ колхоз тăвасшăн мар, хăна çынсенчен уйăрса тăратасшăн... Пĕччен пурăнасшăн, сектăр сукмакĕпе каясшăн... Кай-ха, ăçта çитсе тухăн...»— тесе каласснăнах туйăнатчĕ ăна.

Тепĕр чухне: «Ма колхоза кĕместĕн?.. Хăçан кĕретĕн?..

Мĕн чарать? Лашуна хĕрхенетĕн-и-мĕн?..»— тесе ыйтасшăнах туйăнатчĕ.

«Паян апла ыйтсан, эпĕ те колхозник... Ĕненместĕр пулсан, акă пăхăр: заявлени çырса килтĕм... тесе калап-ха»,— шухăшлать Тихăн, нимрен вăтанмасăр, нимрен шикленмесĕр...

Паттюк та çавах. Паттюк, ашшĕпе пĕрле заявлени çырсан, тем пек хĕпĕртерĕ. Савăнмаллипех савăнчĕ.

«Эпир те... эпир те ĕнтĕ колхозник пулатпăр... Аттепе анне ку вăхăтчен вĕрене çулçи пек силленчĕç... Халĕ ĕнтĕ вĕсен те кăмăлĕ пĕтĕмпех çемçелчĕ... Телейсĕр çын пек çӳреттĕм, тем çитмест пек туйăнатчĕ»,— хĕпĕртет Паттюк ашшĕпе пĕрле.

Паттюк та колхоз правленине пĕрре вăтанмасăрах кĕчĕ. Колхоз правлени алăкне пĕрре шикленмесĕр, хăюллăн уçса кĕчĕ вăл. Хăюллăн уçса кĕчĕ те, хăюллăн сăмах пуçларĕ:

— Сывă чупаççĕ-и?

— Сывă! Килĕр... Тĕпеле иртĕр.

— Килетпĕр!.. Çĕнĕ колхозниксем!..— терĕç ашшĕпе ывăлĕ çирĕппĕн колхоз правленинче чĕлĕм туртса ларакан колхозниксене. Унтан ашшĕ, кĕрĕк кĕсйинчен заявленине кăларса, колхоз председателĕ умне кайса хучĕ.

— Ма ырлас мар çак Тихăн Тихăнча, ма ырлас мар?— пуçларĕ председатель.

Унтан колхозниксем пĕрин хыççăн тепри калаçма тытăнчĕç. Вĕсем хăшĕ чĕлĕмĕсене ĕмсе, хăшĕ табак хаяр пулнипе урайне шăл витĕр чăртлаттарса сурса калаçрĕç.

— Маттур çын вăл.

— Тихăн пеккисем тепĕр вунă кил кĕрсен, пирĕн колхоз тата селĕм пулмалла.

— Халĕ те начар мар...

— Начар мар та... Кĕркунне кĕнисем çирĕпех мар-ха...

— Агитаци хыççăн каяççĕ...

— Тихăн пеккисем ĕнтĕ пире кирлĕ те... Вăл чипер ятлă хресчен. Ялта ун пек çынсем сахал...

— Кĕтни ахалех пулмарĕ... Сан çине шансах тăтăмăр...— тытăнчĕ каллех колхоз председателĕ. Хăй хĕпĕртерĕ, хĕпĕртенипе пĕр аллипе старик аллине тытрĕ, теприпе ывăлĕ аллине тытрĕ, хытă чăмăртарĕ.

— Ыран ир правлени ларăвĕ. Кăнтăрла пуху... Иксĕр те пухăва килĕр...

Иккёшён те чунёсем саванса кайрёç.

— Килетпёр! — терё старик.

— Килетпёр! — çирёплетрё ывалё ашшё самахне.

* * *

Хёвел ёнтё йамрасем тарне çитсе ларна. Йамрасем çÿлёшёнче кана юлна. Варам урисемпе пёр-иккё ярса пуссанах каç пулмалла. Çил ёнтё вайсарланна. Анчах сивё ачисем çаплах уйсем, урамсем тарах чупаççё. Вармана кайна хресченсен самсисене варам чёрнисемпе чёпётеççё, сухалёсем çине пырса пас сараççё.

Таçта çуна натартатни илтёнет. Çал патёнче лаша тулхарса, ик халхине вылятса шыв ёçет. Тараса кашти чёриклетсе çёкленет. Сасси унан таçтах каять.

— Атьар-ха, Ухваниç патне кёрер. Вал тата мён шухашлать? — терё ашшё хайён ывалне.

— Килетех-и?..

— Килетех пулмалла. Варман турттарса çитерне... Чулпа хайар та турттарса пётерне... Аçта кайтар вал?..

— Хайпе калаçман эпё... Ывалёпе кана...

— Эпё те калаçман...

Ашшёпе ывалё Ухваниç патне кёрсе кайрёç.

...Ухваниç килтех. Ывалё те килтех. Арамё сётел çинчен апат пуçтарать.

— Çак Тихан ялан апат пуçтарса пётерсен килет, — терё Ухваниç, Тиханпа Паттюк пÿрте кёрсен.

— Паттюкё те ашшёнех хывна... — терё Ухваниç ывалё Хёлимун.

— Килтен тин çеç хырамсене питёрсе тухрамар... Спасипа...

— Спасипё-мёнё. Арам, паранка пётмен вёт? Лартса çитер-ха...

— Купаста та пур... Паян çеç катка пуçларамар... Çёнё купаста... — терё арамё те.

— Çук, пёрре те çиес килмест... Ма эсир ирёксёрех сёнетёр?.. Чанах та тин çеç çисе тухрамар...

Самах хыççан самах пуçланчё. Апат çитерме лартасси те самах айне пулчё.

Сётел çинче тавар килли. Тавар килли çине ывас витнё. Ывас çинче пёчёк лампа мач-мач çунса ларать.

Хёлимунпа Паттюк улаха тухса кайрёç.

— Вулав çуртёнче кёçёр хёрлё улах тавас, тет. Айта-ха, каяр, Паттюк! — чёнчё Хёлимун.

Тихӑнла Ухваниҫ нумай ӗҫсем ҫинчен калаҫрӗҫ. Нумай япаласем патне ҫитсе перӗнчӗҫ. Тихӑн хӑй колхоза кӗме заявлени ҫырса пани ҫинчен часах каламарӗ. Ухваниҫе майӗпе илсе пырас, терӗ, ун патне вӑл. Ларсан-ларсан, калаҫсан-калаҫсан:

— Колхоза хӑҫан кӗретпӗр-ха?— тесе ыйтрӗ.

— Хӑвӑр тата хӑҫан кӗретӗр?— хирӗҫ ыйту пачӗ Ухваниҫ те.

— Эпӗ кӗтӗм.

— Ну?..

— Чӑнах. Ыран пуху...

— Апла эппин...

— Ҫапла.

— Тем, ача, кӗресси пулмасть пулӗ... Ытти ҫӗрте колхозсен пурнӑҫӗ хӗсӗк, тет, — хутшӑнчӗ Ухваниҫ арӑмӗ.

— Кам калать?— ыйтрӗ Тихӑн.

— Камӗ-мӗнӗ камах мар та... Ӗнерсем пӗр ыйткалакан хӗрарӑм ҫӳрерӗ... Ҫав каласа тӗлӗнтерчӗ... Колхоза кӗнӗренпе тырӑ пулма пӑрахрӗ... Акнӑ тырӑ ҫӳлелле шӑтас вырӑнне аялалла шӑтать, тет. Вӑл колхоз антихрис ӗҫӗ пулнинчен килет... Пирӗн халӗ колхоза кӗме мар, турра кӗл тумалла, тет. Колхозсемпе асапланса выҫӑ юлтӑмӑр, ҫылӑха кӗтӗмӗр, тет...

— Эсӗ ӗнентӗн-и?..

— Ӗненесси-мӗнни... Аҫтан пурне те пӗлетӗн? Тахӑшӗ тӗрӗс?

— Ҫавӑн пек ҫав. Тахӑшӗ тӗрӗс?— терӗ Ухваниҫ те арӑмӗ хыҫҫӑн.

— Эй-й-й! Афанасий Михалч, ниушлӗ эсӗ те ҫав калмантайсене ӗненетӗн?.. Мана та вӗсем хӑратса пӑрахрӗҫ... Анчах эпӗ сана хамран ӑслӑ ҫын тесе шутлаттӑм...

Унтан Тихӑн хула ҫынни сӑмахӗсене пӗтӗмпех каласа пачӗ. Калмантайсем камсем пулни ҫинчен вӑй ҫитнӗ таран ӑнлантарчӗ. Вӗсене ӗненме кирлӗ мар, вӗсем суйса ҫӳрекен ҫынсем, калмантайсем, вӗсем — колхозниксем мар, терӗ вӑл. Ытти ыйтупа та вӑл нумай каларӗ.

Ухваниҫ пӗтӗмпех шухӑша кайрӗ. Чӑнах та, мӗнле-ха тырӑ кутӑн шӑтма пултартӑр? Ухваниҫ пӗчӗкренпе тырпул тӑвать, ҫӗр хурчӗ темелле ӗнтӗ, кунӗн-ҫӗрӗн ҫӗр ҫинчен, тырӑ ҫинчен шутланӑ, кана пӗлмесӗр чаваланнӑ,— тырӑ кутӑн шӑтнине пӗрре те курман! Йӗкел ӗнтӗ кутӑн лартсан, аптӑр пек папкине ҫӗр ӑшнелле тӑсса ярать, анчах вӑл та ҫаврӑнса ҫӳлеллех тухать. Тырӑ йӗкел мар,

тырра акна чух сапса яратăн та кайран, тем пулсан та, шăтса тухать. Миçе çул тырă акнă — яланах шăтать, нихçан та кутăн каймасть. Ну-и, шутласа кăларнă-çке калмантайĕ те, ну-и, шутласа кăларнă?..

Афанасий Михалч шухăшласа тĕлĕнсех кайрĕ. Анчах юлĕ-ши Ухваниç Тихăнран? Вăл мĕнтен начар, мĕнтен кая? Е вăл вăрман турттарса çитермен-и, чул турттарма, хăйăр турттарма кайман-и; е ялхуçалăх налукне, культсбора парса татман-и? Патшалăха тырă та кĕркуннех, йĕтем çинченех, панă. Ĕç çинче нихçан та халăхран юлман. Суха вăхăтра тунă, акма вăхăтра акнă. Утине вăхăтра çулнă, тыррине вăхăтра вырнă. Ку çеç те мар, вăл нумай çынсене мĕнле вăхăтра уя тырă акмаллине хăй каласа панă. Пур ĕç вăхăтне те вăл сăнанă, ир акнин уссине те туйнă. Кашни уйра мĕнле вырăнта мĕнле тырă пулнине пĕлнĕ. Ялан хăй ĕçленĕ, мĕн çуралнăранпах ун аллинчен уй-хир ĕçĕн хатĕрĕсем кайман. Уй тăпри çинче ӳснĕ, уй тăприпе аталаннă...

Нивушлĕ Ухваниç Тихăнран кая юлĕ? Ниушлĕ вăл Тихăн сăмахне итлесе, Тихăн çулĕпе каймĕ?

Ухваниç пуçĕ пĕтĕмпех шухăшсемпе тулса ларчĕ.

Тихăн киле каяс умĕн:

— Калмантайсем хыççăн кайсан хăна ху пĕтерĕн...— терĕ, хăй ыран колхозниксен пухăвĕ пулни çинчен тата тепĕр хут астутарчĕ.

— Шухăшлар-ха...— тесе юлчĕ Ухваниç, вăрăммăн хашлаттарса сывласа.

* * *

...Колхозниксен пухăвĕ тахçанах уçăлнă. Унта хăшпĕр единоличниксем те пынă. Вĕсене вырăн мала панă. Йĕри тавра пĕр вырăн юлмиччен колхозниксем ларса тухнă. Вырăн çитмен пирки хăшĕ урайне кăмака çумне сĕвĕнсе ларнă, теприсем тата алăк янаххи çине вырнаçнă.

Якку Козлов комсомолец доклад тăвать. Ун умĕнчех малти ретре колхоза кĕме заявлени панă çынсем ларaççĕ: Тихăн Соснин, Афанасий Ржанов, Иван Халява,— виççĕшĕ те ватă хресченсем, вĕсенчен инçе те мар Паттюкпа Хĕлимун лараççĕ. Хушăран иккĕшĕ пĕр-пĕринпе калаçса илеççĕ.

— Эсир заявленине кама çыртартăр?..

— Хамах çыртăм,— тет Паттюк.

— Сирӗнне те, пирӗнне те стена хаҫатне кӗртнӗ...
— Заявленисене-и?
— Тата, заявленисене ҫав.
— Ан калаҫӑр-ха, итлӗр!..— тет Тихӑн, хӑйӗн ывӑлӗ еннелле ҫаврӑнса. Унтан каллех вӑл Якку каланисене тимлесе итлеме тытӑнать.

Якку ҫак кунсенче пӗрре района ҫитсе килчӗ, колхоза кӗме заявлени панӑ, тата колхозран тухма заявлени панӑ хресченсем патӗнче темиҫе хут пулчӗ. Вӗсемпе вӑл чӗреренех калаҫрӗ. Паян та вӑл хӑйӗн пӗтӗм кӑмӑлӗпе, пӗтӗм чӗрипе калать:

— Никифоров Иван колхоза 1929-мӗш ҫулта кӗчӗ. Малтанах иккӗленнӗ, нумай шутланӑ... Анчах ӑнланса илнӗ. Хӑй куҫӗпе колхоз пӗртен-пӗр тӗрӗс ҫул пулнине курнӑ... Эсир пӗлетӗр, Никифоров Иванӑн 6 ятак, ӗҫлеме пултараканӗсем 3 ҫын ҫеҫ. Кӑҫал колхозра 465 ӗҫкунӗ туса 194 пӑт тырӑ илнӗ, 80 тенкӗ укҫа илнӗ. Халӗ вӗсен ыраш та, сӗлӗ те, вир те, пӑрҫа та тулӑх... Ку ҫеҫ те мар-ха, колхоза кӗнӗренпе вӑл ҫӗнӗ пӳрт лартрӗ. Ене илчӗ. Сурӑхсем те унӑн халӗ ҫителӗклӗ... Ӗлӗк вӑл начар тумланса ҫӳретчӗ. Никифоров Иван халӗ ҫӑматӑпа, сарӑ кӗрӗкпе ҫӳрет. Арӑмӗ те ҫӗнӗ кӗрӗксемпе, сӑхмансемпе ҫӳрет. Ывӑлӗ, Илле, ялта чи лайӑх каччӑ. Унӑн икӗ пустав пальто. Ҫӑм атӑ. Сӑран атӑ. Икӗ мӑшӑр чосӑнкӑ. Халӗ патшалӑха 10 пӑт тырӑ сутса 10 тиртен хура кӗрӗк тума пачӗ. Хаҫатсем илеҫҫӗ... Пит те аван пурӑнать Никифоров Иван. Ҫапла-и, юлташсем?..

— Ҫапла, ҫапла! Вӑл чӑнахах та лайӑх пурӑнать...
— Ӗлӗк ҫиме ҫӑкӑр ҫитереймен...
— Ҫапла...
— Халӗ вӑйланчӗ...
— Колхоза кӗмен пулсан, пулас ҫукчӗ,— тет хӑй, малти сак ҫинче лараканскер.

— Ну, халӗ тата... Тепӗр единоличнике илер. Акӑ Ефимов Виктор, вӑл хӑй те кунтах-ха...

— Кунтах...— терӗ тахӑшӗ. Ефимов Виктор хӑйӗн ятне асӑнсанах тарласа кайрӗ. Калӗ-ши Вехтӗр ҫинчен Якку, унӑн пурнӑҫӗ лайӑх, ун пек пурӑнма вӗренӗр тесе... Ҫук, ҫук, Вехтӗр хӑй те пӗлет, ун ҫинчен Иван ҫинчен каланӑ пек калас ҫук... Ҫавӑнпа та Ефимов Викторӑн ҫамка ҫине пӑтӑр-пӑтӑр тар пӗрчисем тухрӗҫ.

— Унӑн 7 ятак. Ӗҫлеме пултараканӗсем 5 ҫын. Темиҫе ҫул ӗнтӗ вӑл кив тырӑпа ҫӗн тырра ҫитеймерӗ. Кӑҫал

та çавах... Çиме çăкăр çитмен пирки пўртĕн виткине, хĕç-тимĕрне, пĕртен-пĕр кĕлетне сутрĕ... Кăçал та, ытти çулсенче те аш çисе курман. Çемйинче путлĕ тумтир пĕр-ре çук. Хĕрĕсем çарамас çўренĕ пек çўреççĕ... Çапла-и, юлташсем?..

— Çаплах ĕнтĕ...

— Хамăр куратпăр...

— Куç умĕнче...

Вехтĕр татах тарласа кайрĕ. Хăй те сисет: çурăм тă-рăх вĕри тар юхать, çийĕнчи кĕпи йĕпенсех пырать, пичĕ-сем ун пĕçерекен пулчĕç... Хĕрелчĕç...

— Ман шутпа, юлташсем, Вехтĕр пичче колхоза юрăхлă çын. Анчах тем шутлать вăл?..

— Кăшт калмантайсене итлет пулас?..

— Калмантайсем ун патĕнче те пулнă пулас?..

— Пулнă...

Вехтĕр аса илчĕ. Ун патĕнче пĕр калмантай ытла та нумай ларчĕ. Ытла та нумай каласрĕ вăл... «Пирĕн пат-ри колхозăн çĕрĕ путса анчĕ те çав вырăна кўлĕ пулса ларчĕ... Колхозсем çĕрсĕр тăрса юлчĕç... Тыррине пат-шалăх çаплах ыйтать»,— терĕ вăл. Кайран ун патне Миçукпа Якку пычĕç. Вăл калмантай сăмахĕсене Миçук-па Яккăва та каласа пачĕ. Вĕсем: «Ку суя сăмахсем, сана колхоза ан кĕтĕр тесе хăратнă»,— терĕç... «Такама ĕнен-мелле? Калмантай çынни ватă çын, сахал мар пурăнса курнă пулĕ; Миçукпа Якку — комсомолецсем кăна, ним те курман-ха вĕсем»,— шутларĕ ун чух Вехтĕр.

Халĕ Вехтĕре, хăй икĕ çул юппинче тăнă пек туйăнать. Вехтĕр умĕнче икĕ çул выртать. Хăшинпе каймалла?..

— Калмантайсем хыççăн кайсан, Вехтĕр пĕтет,— тет докладчик.

— Пĕтет,— тет тата такам кăмака патĕнче.

«Эппин, манăн пĕр çул анчах»,— шухăшлать Вехтĕр. Тарланипе çамка çинчи çўçĕсем те унăн йĕпене пуçланă. Ним калайман пирки аллисемпе çўçĕсене шăлса кăна ларать.

Якку Козлов хăйĕн докладне пĕтерес умĕн:

— Пирĕн тўрĕ кăмăллă единоличниксене манмалла мар. Акă паян виçĕ кил колхоза илетпĕр... Вĕсем паян колхоза кĕрсе тĕрĕс çул çине тухаççĕ,— терĕ. Унтан кăшт чарăнса тăчĕ те:

— Сывă пултăр колхоз çулĕ. Сывă пултăр парти!— тесе пĕтерчĕ сăмахне.

Нумайччен алă çупрĕç. Тихăнпа Ухваниç те нумайччен çупрĕç, чунтан хĕпĕртесе, уççăн сывласа, ĕçпе хытнă аллисемпе çупрĕç вĕсем.

...Пуху авторитетлă колхозниксене единоличниксем патне татах йыхравçăсем туса яма йышăнчĕ.

— Эпĕ Микулай хăта патне каятăп...

— Эпĕ Çимун патне...

— Мана Хветĕре парăр...

— Эпĕ — хама хирĕç лараканне...

— Эпĕ — хам çумрине...— илтĕнчĕç унтан та кунтан сасăсем.

— Комсомолецсене татах хĕрлĕ улах тутарас,— терĕ пĕр ватă колхозник, Тихăнран сылтăм енче лараканскер.

— Тĕрĕс!

— Тутармаллах...— тенине хирĕç Якку çавăнтах:

— Хĕрлĕ улах çак кунсенчех пулать... Ваттисем те пыма пултараççĕ,— тесе савăнтарчĕ.— Тĕрлĕ ыйтусем сӳтсе явас, тетпĕр.

...Иккĕмĕш ыйту çине куçрĕç. Колхоз председателĕ хăйĕн папки ăшĕнчен заявленисем кăларчĕ.

— Иккĕмĕш ыйту колхоза илесси — терĕ вăл, çĕнĕ колхозниксем çине пăхса.— Пĕтĕмпе виçĕ заявлени, виççĕшне те колхоз правленинче пăхса тухрăмăр...

— Вула.

— Пĕрремĕш — Тихăн Соснинăн...

Пĕтĕм пуху, малтанах каварланса килнĕ çынсем пек, шапăлтаттарса алă çупса ячĕ. Алă çуппи нумайччен сывлăша янратса тăчĕ.

— Иккĕмĕш — Афанасий Ржановăн...

Алă çупнă сасă каллех çĕкленсе кайрĕ.

— Виççĕмĕш — Халява Иванран...

Пуху каллех алă çупрĕ,— çапла виçĕ хутчен çупса, виçĕ хутчен сасă çĕкленчĕ. Виçĕ кил кăна, анчах колхозниксем çав тери хĕпĕртерĕç, çав тери хавасланчĕç... Якку хĕпĕртенипе лозунг каларĕ:

— Сывă пулччăр колхозниксем!— Сасă, пуху тăрăх кусса кайса, кашни колхознике, кашни итлекене хумхантарчĕ.

— Тăваттăмĕшĕ — манăн...— тачка сасă илтĕнчĕ.

— О-о-о! Кăрмăш Михалĕ те кĕрет...

— Качать! Качать!.. Урра çĕклес ăна!..

Унччен те пулмарĕ пилĕк-улт алă Михалана пырса

тытрĕ. Михала халăх çийĕн çĕкленсе кайрĕ. Çĕлĕкĕ сынсем урлă Тихăн хулпуççийĕ çине пырса ӳкрĕ.

— Вăйлăрах!.. Вăйлăрах!..— силлерĕ Михал çĕлĕкне Тихăн.

— Ур-ра!..

— Ур-ра!..

— Ур-ра!..

Михал кун пек пуласса кĕтменччĕ. Вăл колхозниксем çинчен урăхла шутлатчĕ. «Çав тери кăмăллă иккен вĕсем,— пухура та савăнма пĕлеççĕ, пухура та пĕр-пĕрин чĕрисене таçта çитиех çĕклеççĕ. Урăхла ăçтан пултăр ĕнтĕ, пĕрле ӳснĕ, пĕрле пĕр уйра суха туса çитĕннĕ»,— терĕ вăл хăй ăшĕнче.

— Тата тепĕр ыйту,— илтĕнчĕ председатель сасси.

— Мĕнле ыйту,— ыйтрĕç хăшĕсем.

— Кунта виçĕ заявлени колхозран тухма ыйтса панă...

Пуху, тĕлĕнсе, шавлама тытăнчĕ. Пĕрин хыççăн тепри ыйтма пуçларĕç.

— Кам?..

— Мĕнле этем?..

— Кама калмантайсем çавăрнă...

— Мĕншĕн тухаççĕ?..

— Мĕн çитмен?..

Председатель ответ пама ĕлкĕреймерĕ те, пĕр тăпка пуçлă хресчен çĕкленчĕ.

— Эпĕ-ĕ...— пуçларĕ вăл вăтанса.

— Мĕн эсĕ?

— Эпĕ хам мар... арăм...

— Мĕнле ху мар...

— Хамах, эппин... каялла илес тетĕп. Парăр...— Хăй пуçне кăтăрт-кăтăрт хыçрĕ те председатель еннелле сылтăм аллине тăсрĕ.

— Манне те пар...— ыйтрĕ тепри кĕтесрен.

— Уçăп тухмасть пулсан, эпĕ те тухмастăп...— терĕ пĕр çамрăкрах çын виççĕмĕш заявленине ыйтса.

Унтан виçĕ çын заявленийĕсене кĕсъесене чикрĕç те:

— Тухмастпăр! Калмантайсем хыççăн каймастпăр!— терĕç пĕр харăссăн.

*1932*

## МИРУН ÇИЛЛИ

...Мирун сасартăк арăслан пек хаяррăн та çилессĕн ура çине сиксе тăчĕ те пĕр типшĕм вĕшле евĕрлĕ хура çынна сулахай аллипе çĕтĕк пальто çухавинчен çавăрса тытрĕ,— унччен те пулмарĕ, Мирунăн хаяр сасси чĕлĕм тĕтĕмĕпе тулнă пӳлĕмри сывлăша чĕтретсе ячĕ.

— Пĕрре çапса вĕлерĕп... Ух, эсĕ, ирсĕр этем!— çиллине шăнарайми тарăхрĕ Мирун. Пичĕ-куçĕ юн пĕрĕхесле хĕрелсе кайрĕ. Сарлака çамки çине пăтăр-пăтăр тар пĕрчисем шăрçаланса тухрĕç.

— У-у-у!.. Эсĕ çавăн пек калатăн-и? Йытă кĕлетки, ăçтан кунта сĕтĕрĕнсе килтĕн? Пăхсах паллă, эсĕ — пирĕн тăшман...— терĕ те, Мирун сылтăм аллине чăмăртаса, мĕн вăй çитнĕ таран сĕтел çине кĕрĕслеттерсе çапрĕ. Сĕтел силленсе, тайкаланса илчĕ.

Çынсем Мирун патне иккĕн-виççĕн чупса пычĕç те:

— Эсĕ, Мирун, ача-и? Мĕн хăтланатăн?— тесе аллисенчен çирĕппĕн çавăрса тытрĕç.

— Вĕлерет вĕт çынна!— сăмах хушрĕ пĕри кĕтесре сăра стаканĕ çине ыйхăпа аптранăран кăнтăрлахи тăмана пек урмăш пăхса лараканскер.

— Тăванкасси пулне мар-и лектерчĕ вăл?— ыйтрĕ унпа юнашар лараканни. Анчах сăмахĕсем сĕтел патне çеç çапăнчĕç, кĕрмешекен çынсен хăлхине кĕмерĕç. Хĕрсе кайнă Мирун вĕсене пачах илтеймерĕ.

— Прохвост!— терĕ лăплана пуçланă Мирун юлашкинчен, çĕтĕк пальторан туртса татнă çухавана вĕшле çын çинелле ывăтса.

* * *

Хаяр сивĕ çил пек пулса иртрĕ ку. Хăш чухне çавăн пек çил кутсăр-пуççăр çаврăнса килет те пĕтĕм çӳп-çапа çӳлелле çĕклет, ватă йывăççен хăрăк турачĕсене хуçа-хуçа аяккалла перет... Анчах вăл кайран чарăнать. Вара пĕтĕм тĕнче йăвашланса илемленме тытăнать. Мирун тарăхăвĕ те çавăн пекех пулчĕ. Çилли иртсе кайсан, Мирун хăйĕн вырăнне чиперех пырса ларчĕ, хăйне пырса чарнă çынсене, Мулкачкасси колхозникĕсене, акă мĕн çинчен питех те вăраххăн тата ытла та ĕретлĕн каласа пачĕ:

— Хальхи пекех астăватăп...— пуçларĕ вăл хăйĕн сăмахне.— 1912-мĕш çул эпĕ уезда, Кăрмăш хулине, лава кайрăм. Хамăр ялти учитель, Николай Игнач, шкул вал-

ли кĕнекесем илме ячĕ. Ялтан тухса, пĕр вун-вунпилĕк çухрăм кайсанах, вĕтĕ çумăр çума пуçларĕ. Каламалла мар йĕпе-сапа пуçланса кайрĕ. Малтан та уяр çанталăк пулман та... Çумăр татăксăр çума тытăнсан, çул йăлтах пăсăлса пĕтрĕ. Çул çинче вырăнĕ-вырăнĕпе пылчăк пакăлчак таран. Хăвăрах пĕлетĕр: мĕнле пулать кĕркуннехи çанталăк пирĕн патăмăрта. Çитменнине тата, вăрманпа каймалла пулчĕ. Урапа, малтанах çирĕпех пулманскер, çĕмĕрĕлсе кайрĕ. Кĕпчексене темиçе çĕртен çĕмĕрт хуллипе çыхрăм... Пĕр кун каяс вырăнне икĕ кун ытла лăпсăртатма тиврĕ. Хамăн çимелли пĕтрĕ. Килте иксум вунă пус укçа пурччĕ. Урăх ĕнтĕ ун чухне манăн укçи пулман та... Ăна та хампа илмерĕм. Куланайшăн хуптĕрлесен, пĕр вăхăтлăха хăтăлкаласа юлма тăтăр, терĕм. Лава кайнăшăн учитель тенкĕ те тăват çитмĕл пама пулчĕ.

Мирун пуçне хыçкаларĕ те пĕр-ик хутчен кĕтесри вĕшле çын çине пăхса илчĕ. Унтан каллех ĕлĕкхи çинчен каласа кайрĕ:

— Ну-и, выçăхрăм, касăлсах çитрĕм. Вырăс ялĕсене кĕретĕп те килсерен тенĕ пек çăкăр ыйтса çӳретĕп. Хăшĕпĕрисем пĕрер-икшер татăк параççĕ, ăçтисем пулнине ыйтса пĕлеççĕ. Хам мĕнле нуша курса пурăнни çинчен каласа парсан, хĕрхенеççĕ, теприсем: «Василий Фаныч»,— тесе кулаççĕ. Халĕ, акă паян, хамран хам тĕлĕнетĕп: мĕнле эпĕ ун чухне упа çилли пек çиллĕме шăнарса тăма пултарнă-ши?

— Да, санăн çилĕ ытла та хаяр,— хутшăнчĕ пĕри.

— Н-н-да...— терĕ тепри, вăрăммăн сывласа.

Мирун тĕрлĕ кĕпе çухавине салтрĕ, унтан ватăлнă май пĕркеленме пуçланă ĕнси çинчи тарне чул пек хытса кайнă аллипе шăлса илчĕ.

— Çапах та, çитес çĕре çитрĕм-çитрĕмех,— терĕ вăл, пуçланă сăмахăн йĕрне çухатмасăр.— Кĕнекесене лав çине тиесе пĕтерсе, çыхса лартсан, пĕр çын,— кайран ăна шкулсен инспекторĕ, терĕç,— эсĕ, юлташ, йӳнĕпех килнĕ, тесе, мана тата икĕ вăтăр пилĕк пус хушса пачĕ. Шутларăм-шутларăм, ним те шутласа кăлараймарăм.— Тархнипе, пĕрре ăша пусармалăх, кайса ĕçем-ха, терĕм. Трактир еннелле тухса утрăм. Çитсе кĕтĕм. Çынсем ытла нумаях та мар. Икĕ полицейский пур. Унта-кунта шăршлакаласа çӳрекенскерсем пулас. Пĕр пулштух эрех илтĕм те, ĕçкелесе ларатăп... Унччен те пулмарĕ — темскер ĕнсерен, ак çак вырăнтан, çатăр-р-р! çыртрĕ. Шар-

тах сиксе ӳкрӗм. Ӗнсе ҫинелле алла ятӑм. Хыпаласа, мӗн ҫыртрӗ-ши, тесе,— ҫав темскере шыратӑп. Нумай шырама тивмерӗ, ӗнсе ҫинче тем пысӑкӑш хӑнкӑла алла кӗрех кайрӗ. Ахаль те тарӑхнӑ та тата тарӑхса кайрӑм. Аш пӗтӗмпех капланса ҫитрӗ. Тӳсеймерӗм пулас, мӗн вӑй ҫитнӗ таран, ак хальхи пек, кӑшкӑрса яра патӑм:

— Э-э-э!.. Эсӗ те халӑх юнӗпе пурӑнатӑн-и?!— терӗм. Вӗлерме те ӗлкӗреймерӗм — полицейскисем мана кашкӑрсем пек сырса илчӗҫ.

— Бунтовщик вӑл, ҫыхас ӑна!— кӑшкӑрчӗ пӗри. Ҫав вӑхӑтрах тепри ман ҫине тӳрех уртӑнчӗ. Хайӗнчен эрехпе ыхра шӑрши перет кӑна. Кӑшкӑраканӗ хӑлха чиккинчен ик-виҫ хут ҫапса илме те ӗлкӗрчӗ. Хам та ӑна янах шӑмминчен тыттартӑм. Янахӗ таҫталла ывтӑнса кайнӑ пекех туйӑнчӗ... Ҫапла вара, кӑшкӑра-кӑшкӑра, ҫапа-ҫапа мана тытса тухса кайрӗҫ...

Мулкачкассисем шалтах тӗлӗнсе ларчӗҫ. Аллисемпе пӗҫҫисем ҫине шарт! ҫапаҫҫӗ кӑна.

Вӗшле евӗрлӗ ҫын, юнашар сӗтел хушшинче куҫӗсене улма пек вылятса, кӗҫ-вӗҫ тухса тарас пек ларать. Хайне вилнӗ ҫын сӑнӗ ҫапнӑ темелле. Мирунран кайса ӳкес пекех хӑранипе, вӑл пӗтӗмпех кӑвакарса, шуралса кайнӑ,— темле пӑхсан та, ҫын сӑнарӗ тупма ҫук. «Кӗл чӗппи» теҫҫӗ ун пек ҫынсене чӑвашсем,— ҫапла, юнашар сӗтел хушшинче ҫын мар!— каснӑ-лартнӑ «кӗл чӗппи» ларать.

— Вара мана, бунтовщик тесе, виҫ хутчен сута ҫитерчӗҫ. Юлашки сучӗ Чӗмпӗр хулинче пулчӗ...

Мирун кун пек сӑмахсене каласан, вӑрӑммӑн та хуйхӑллӑн сывласа илчӗ, юлашкинчен вара:

— Эх!— тесе, ача пек ӗсӗклесе йӗрсе ячӗ. Мулкачкассисем те хурланса ларчӗҫ, йӗрес пек пулчӗҫ.

— Эх!— терӗ тепӗр хут Мирун.— Пӳрт тулли ача чирлӗ арӑмпа киле юлчӗ. Хама тасаранах, ним айӑпсӑрах, виҫӗ ҫуллӑха тӗрмене хупса лартрӗҫ. Виҫӗ ҫул тӗрме — вӑл тем тӗрлӗ мӑшкӑл, тем тӗрлӗ нуша... Унтан империализм вӑрҫи пуҫланчӗ. Мана ирӗке кӑларчӗҫ, анчах манӑн ирӗк тамӑк хуранӗ пулчӗ: тӳрех мана вӑрҫа илсе кайрӗҫ. Вӑрҫӑра ҫур сывлӑха ҫухатрӑм. Революци пуҫлансан, хыпса ҫунса киле ҫитрӗм — арӑм выҫӑпа аптраса вилнӗ, ачасем хутаҫ ҫакса тӗнче тӑрӑх саланса пӗтнӗ...

— Н-н-да!— татах тӗлӗнчӗҫ мулкачкассисем.

— Вӑл пур!— каллех кӑшкӑрчӗ Мирун вӗшле евӗрлӗ

çын çине аллипе тĕллесе,— пĕр-пĕр раскулачить тунă элемент пуль ĕнтĕ... Ман умра çĕлен пек сивĕ сăннине кăларса: «Ĕлĕк пурнăç аванччĕ... Пурте пурччĕ... халĕ...»— тесе, лăпăртатса ларать. Хамăр власть çине наркăмăш хăснăнах туйăнчĕ, чĕрем çурăлса каяс пек ыратрĕ, ăна мăка çĕçĕпе касрĕç-и, тен?.. Ну-и ыратрĕ, ну-и ыратрĕ!

...Çакă ĕнтĕ Мирун çиллин сăлтавĕ пулнă, çакăнтан ĕнтĕ унăн хаяр çилли çулăмланса кăварланса тухнă.

Мирун халĕ те чăтаймарĕ, каллех вăл, çиленсе, хĕрӳленсе çитрĕ. Каллех унăн пичĕ-куçĕ хĕрелсе кайрĕ. Каллех тимĕр пек аллисем чăмăртанчĕç.

— У-у-у!.. Эсĕ, çĕрĕк кăпшанкă!— çĕкленчĕ те Мирун, пĕтĕм вăйне пухса, тепĕр хут хаяррăн, вĕшле евĕрлĕ çын çинелле аллипе хăмсарчĕ. Вĕшле тӳсеймерĕ: чĕмсĕрленнĕскер, кĕç-вĕç ӳкес пек, кулăшла лăпчăнса, ватă çĕлен евĕр хуллен-хуллен шуса, столовăйран тухрĕ те урамсем урлă каçса, вăрман еннелле кайса çухалчĕ. Юнашар сĕтел айĕнче çĕтĕк пальто çухавийĕ кăна выртса юлчĕ.

...Ирсĕр этем Çĕмĕрлĕ урамĕсем урлă хашкаса чупнине курсан, тӳпери уйăх та, хăйĕн хаклă çутине хĕрхенсе, хулăн пĕлĕт хыçнелле кĕрсе пытанчĕ. Тен, çавăнпах та пулĕ — тĕнче маччине ала пек шăтăкласа пĕтернĕ çăлтăрсенчен хăшĕ-пĕрисем, хăйсен çунса тăракан кĕлеткисенчен вутлă чул катса илсе, аялалла печĕç. Шурă чечексемпе витĕннĕ çĕмĕртсем хушшинче юрлакан шăпчăк та çак самантра хăйĕн касхи илемлĕ юррине пăрахрĕ. Пĕр ухмах тăмана çеç, тискер сассипе тĕттĕм ăшне путнă шăплăха хускатса, вокзал çурчĕ çумне пырса ларчĕ.

* * *

Вăхăт çурçĕр еннелле сулăннă. Столовăйĕнчен Мирун, мулкачкассисем — виçĕ колхозник — пĕрле юлташла шăкăлтатса калаçса тухрĕç. Пурте сыпкаланă, анчах нихăшĕ те ӳсĕр мар,— хĕрĕнкĕ кăна.

— Такки эпĕ çав çын кам иккенне пĕлеймерĕм,— сăмахне çаварчĕ Мирун.

— Эсĕ илтеймерĕн иккен?— астутарчĕ халĕ çеç пырса пĕрлешнĕ юлташсенчен пĕри.

— Мĕн?— ыйтрĕ Мирун.

— Вăл — Тăванкасси кулакĕ, тет.

— Çавă, çавă...— терĕç ыттисем те харăссăн.

— Вăл тарса çӳрет. Кăнтăрла вăрманта пурăнать пулас, каçпа станцине те тухкалать курăнать.

— Ах, мур илесшĕ, мĕнле вăл çӳçĕсене кастарнă, сухалĕсене хыртарнă, палламалла мар — çăхан пек пулса юлнă,— тĕлĕнчĕ Мирун.

— Тĕлĕнмелли çук, хăй те вăл чăнах та çăхан ăратти...

— Да, çăхан ăратти... Мана вăл ӳсĕр, терĕ, пулмалла. Анчах эпĕ хамăр саккуна, Совет влаçне варалама памастăпах...— терĕ Мирун юлашкинчен.

Калаçса пыракан çынсем мăн урама тухнă çĕре таçта, катара, шоссе аяккинче, хастар хуралçă хăйĕн шăхличĕпе хаяррăн шăхăртрĕ. Икĕ милиционер, маттур лашасем çине утланнăскерсем, хуралçă патне çил пек вĕçтерсе çитрĕç.

— Хайхискерне тытмарĕç-ши?— тăрса итлерĕ Мирун.

*Ленинград, 1935*

## ТАВАН ВĔЛЛЕ

1932 çул...

Çырма-çатраллă вырăнта сарăлса ларакан Пурунтук ялĕнчен тухсан, тап-такăр та тӳп-тӳрĕ çулпа пĕр километра яхăн кайсан,— хура вăрман пуçланать.

Вăхăт ĕç çинелле сулăннă. Кунсем кăвăрч пек, вĕсенчен çу пăчăртанса тухать, тейĕн.

Уççăн сывласа ларакан вăрман витĕр, симĕс курăк пусса илнĕ çулпа пыратăп. Ывăннă урасем курăк çинче канаççĕ. Хам тăр пĕччен, нихçан курман вăрман витĕр тухатăп; вăл те пĕчĕккĕ, те тем пекех пысăк,— ун çинчен ним те пĕлме çук. Пĕр аллăмра — çăмăл пальто, анчах ăна та пăрахас килет, ăна та виç-тăват кун тăхăнман ĕнтĕ, тепринче — портфель.

Çӳлте пĕлĕт тăп-тăрă. Шăнкăр-шăнкăр уяр. Сарă хĕвел саркаланса ылтăн пайăркисемпе пĕтĕм çĕре çупăрлать. Пăхатăн та, пĕрре те ĕнер кăна иртен илсе каçчен çумăр çĕр питне лӳшкетнĕ пек туйăнмасть,— çĕр халĕ пиçнĕ çăкăр пек çемçе те вĕри.

Вăрман çеç ĕнерхи çумăр лăмне çухатмасть. Хĕвелпе аптраман, çумăрпа тăранайман вата юмансем çӳлелле кармашса, хăрăк тураттисемпе хĕвел çинелле тĕллесе лараççĕ. Аялти турачĕсем çинче тĕрлĕ-тĕрлĕ кайăксем сиксе çӳреççĕ, хăйсен вĕçĕмсĕр илемлĕ юррисене янра-

таççĕ. Тӳпере шывсăр аптранă шаланкă: «вĕлтĕрен, вĕлтĕрен!»— тесе, таçталла макăрса вĕçет. Урăх сас-чĕв çук кунта.

Кăтра çӳçлĕ шурă хурăнсемпе кĕмĕл тумлă ăвăс йывăççисем кукша пуçлă юмансем çывăхĕнче ачашланаççĕ, вĕтĕ-вĕтĕ шĕшкĕ тĕмĕсем ретĕн-ретĕн çул çине чупса тухнă пек курăнаççĕ. Çулăн икĕ аяккинче хунав юмансем чăлтă-чăлтă пăхса тăраççĕ.

Васкамасăр утатăп, хушăран симĕс пĕркенчĕклĕ шĕшкĕсенчен пĕрер çулçă татса илсе чĕркелесе пăрахатăп.

Хунав юмансем айĕн хыçалалла пăхрăм та пĕр ватă чăваш хĕрарăмне курах кайрăм. Çӳçĕсем унăн кăвакарнă. Пичĕ пĕркеленнĕ, туяпа. Васкаса утать.

— Сана хăваласа çитес тесе, çурăм çине тар кăлартăм. Çав çутă тӳмеллĕ портфель йăтнă çынпа пĕрле каям-ха,— терĕм... Пĕччен хăратăп...— тет хăй васкаса.

— Камран?— терĕм эпĕ.

— Кам пулĕ кунта...— терĕ вăл хирĕç, анчах темшĕн калас сăмахне вĕçлемерĕ...

— Манран хăрамастăн-и? Эпĕ сирĕн ялсем мар-çке, ют çын пулатăп. Эсĕ мана нихçан та курман...

— Çук. Портфеллĕ çынтан хăрамастăп. Эсĕ те ГПУ-ха, те райкомски, çавăнпа сана, ютри çын пулсан та, хамăр çынах, тесе шутлатăп...

Карчăк кутамккине тӳрлетрĕ те тем çинчен кăшт шутларĕ; унтан хăй камран хăрани, камсем уншăн сивĕ, тискер çынсем пулни çинчен вăраххăн калама тытăнчĕ.

— Сирĕн пек çынсенчен ма хăрас-ха? Эсир власть çыннисем вĕт, хальхи власть — пирĕн власть, эпир хамăр власть çыннисенчен хăрамастпăр ĕнтĕ. Çак пурнăçа эпир влаçран хăраса тăвас пулсан, пирĕн нимле колхоз та тухмĕччĕ. Колхоз ĕçĕ питĕ хăюллă ĕç пек туйăнать... Вăл хăюлăха пире хамăра сыхлакан власть панă пулĕ тетĕп. Йăнăшатăп пулсан, эсĕ тӳрлет...

— Йăнăшмастăн, кинемей.

— Йăнăшмастăп пулсан, татах калам-ха, эппин. Ĕлĕк пирĕн тăрăхри власть хамăрăн пулман... Яла мĕнле те пулсан кантур çынни пырса кĕрсенех, эпир, тĕттĕм хĕрарăмсем, сурăхсем пек карр!— тараттăмăр, хăранипе таçтах кайса пытанаттăмăр. Вĕсем те власть çыннисемех пулнă вĕт, эсĕ те власть çынниех пулĕ, тетĕп. Ĕлĕкхисенчен çул çинче те хăранă, килте те хăранă... Мĕншĕн

тесен, ун чухнехи власть пирĕн пулман. Халь ĕнтĕ йăлтах урăх.

— Тĕрĕс калатăн, кинемей, тĕрĕс,— тетĕп эпĕ, алăри шĕшкĕ çулçисене вылятса. Хам вăтă карчăк çав тери ăслă калаçнинчен тĕлĕнетĕп.

— Акă, хура вăрман, вăл мана темшĕн шиклентерет,— тет карчăк, вăтă юмансем çинелле кăтартса,— хура вăрман, анчах сапта пĕрле чух хăрамастăп. Калам, васка, эпĕ урăххисенчен хăратăп, колхоза хирĕç пыраканнисенчен шикленетĕп. Эпĕ кулаксем çинчен каласшăн, ывăлăм. Пирĕн ялтисенчен хăшĕ-пĕрисем раскулачить тунă хыççăн вăрманалла тарчĕç, таркăнта çӳреççĕ, çынсем вĕсене çак вăрмантах кураççĕ. Пĕрне иртнĕ эрнере тытса Элĕке илсе кайрĕç-ха. Комсомолецсем тытрĕç, каçхине, выртмана кайсан, лашасем патне тухнă. Вăрă ĕçĕпе пурăнаççĕ, мур илесшĕсем, колхоз лашисене çавăтма шутланă. Урăх эпĕ никамран та хăрамастăп,— терĕ те вăл, каллех, йывăр кутамккине тӳрлетсе, хăвăртрах утма тытăнчĕ.

Сăмах пуçласан, сăмах хыççăн сăмах пулать. Паллашса каятăн вара.

— Эсĕ апла Çĕмĕрлĕ районĕсем, вăрман çынни,— тет кинемей.— Пирĕн унта хĕрача пурăнать, «Хĕрлĕ Октябрьте»,— вăрман колхозĕнче вăл... Тен, шăллăм, эсĕ ăна паллатăн та пулĕ. Ăна таçта та палласçĕ. Ударницăна тухнă вăл... хăй шатрарах питлĕ хĕр, Катя ятлăскер...

— Паллатăп, палламасăр,— терĕм эпĕ, хам Катьăна палламастăп пулсан та.

Çакăн хыççăн карчăк «Хĕрлĕ Октябре» акатуй курма кайни çинчен хавасланса каласа пачĕ.

— Ун пек туй эпĕ нихçан та курман, 68 çула çитнĕ пулсан та, илтмен те, курман та... Питĕ аван турĕç,— тесе пĕтерчĕ вăл хăйĕн сăмахне.

— Эсĕ апла, кинемей, нумай пурнăç курнă çын-çке... Тĕнчере 68 çул пурăнатăн, манран виçĕ хут нумай пурăннă...

— Вăтă... вăтă...— терĕ ман кинемей, вăтă çын йĕркипе,— тахçанах ача-пăчаллă пултăм, ывăлсене авлантарса, хĕрсене качча парса пĕтертĕм... Килте халь старикпе иксĕмĕрех кăштăртатса пурăнатпăр...

Унтан сăмах хăй ăссĕнех колхоз çинчен тапранчĕ.

— Колхоза тахçанах кĕтĕмĕр,— терĕ вăл уççăн та тӳррĕн,— ара, хальхи саманара тăнлă-пуçлă çын колхоза кĕмесĕр юлма пултарать-и? Эпĕ, ватă пулсан та, çапла шутлатăп...

— Çавăн пек,— тетĕп эпĕ, унпа килĕшсе,— çавăн пек, кинемей, ĕç хресченĕсен пурин те колхоза кĕмелле, колхозра пурăнмалла.

Ман сăмахсем ун кăмăлне кайрĕç пулмалла. Кинемей тата та хавхаланарах калаçма пуçларĕ. Вăл мана хăйĕн вăрăм пурнăçĕ çинчен каласа пачĕ. Унăн пурнăçĕ ытла та нушаллă пулнă, вăл темиçе çул хушши ашшĕпе пĕрле кĕтӳ кĕтнĕ, хăй каланă тăрăх, эпĕ вăл тарçăра çӳренине, выçăллă-тутăллă пурăннине пĕлтĕм. Киввине, иртнĕ пурнăça аса илнĕ май:

— Сатту халь шăнмастпăр, выçмастпăр...— тет вăл çирĕппĕн.

Анлă уя тухрăмăр. Ыраш шăркана ларнă. Кунта çанталăк татах та уяр пек. Кассăн-кассăн çил вĕрет те ыраш шăрки шăрши кĕрет.

— Кăçал кĕр мăнтăр пулать... Арăмсем те шатах хĕрача çуратрĕç, шĕшкĕсен те мăйăрсем нумай, юмансен йĕкелĕсем сахал вара,— тырă пулнă çул яланах çапла. Колхозсем, ывăлăм, татах çирĕпленĕç...— тет те ман кинемей, питне саппунĕпе шăлса илет.— Стариксем çуракине те лайăх иртчерчĕç-ха. Сĕлĕсем те аван хăпараççĕ. Çумăрĕ те вăхăтра пулчĕ. Аптрас çук кăçал. Эпĕ ĕнтĕ ватă та, колхоз пурнăçне лайăх астивеймен те-ха. Анчах лайăххах пурăнса, лайăххах астивесчĕ... Вилес марччĕ-ха.

Кинемей ку сăмахсене хĕпĕртесе калать. Эпĕ те ватă çын каланине савăнса итлетĕп. Вĕсем хăйсемех: «Ваттисен сăмахĕсене çĕлĕке хул хушшине хурса итлеме хушнă» теççĕ вĕт. Ваттисен ăслă сăмахĕсене итлес килет, пĕлес килет вĕсем мĕн каланине. Акă, пĕтĕм уйри ыраш та ăна итлет, чечекленсе, мухтав юрри юрласа итлет. Юсаса такăрлатнă çулăн ик айккинче шăрчăксем хăйсен кĕслине хĕпĕртесе янратаççĕ. Çӳлти тăри хăйĕн юррине шăрантарать. Инçе те мар, вар пуçĕнче, путене такмран пытанса авăтать. Карăшĕ те авăтать. Лере тата çул юсама тухнă комсомолецсем çĕнĕ пурнăç юррине янратаççĕ. Вĕсем пурнăç карти патне çамрăклах çитнĕ, паян хаваслăн та паттăррăн такăр çулсем тăваççĕ, шывсем урлă кĕперсем хываççĕ. Юррисем çĕнĕ те паха.

— Ёлёк эпир ҫаван пек юрлайман. Пирёншён ҫамраклах та пулман. Хёсёнсе-тёкёнсе пуранна. Хальхи ҫамраксен ма луранас мар. Эпир паян пуранас-и, ыран вилес-и?— тенё пек тёккеленсе пуранна. Ҫавсене аса илсен, колхоза тата та ытларах юратас килет. Чёре пекех вал. Ҫывах...

Юлашки самахсене кинемей пётём камалёпе каларё. Чёререн илсе ёҫпе хытна ываҫ тупанё ҫине каларса хуна самахсем пек туйанчёҫ вёсем. Сара хёвел ҫутинче унан асла самахёсем ылтан пек куранса йалтартатса илчёҫ те, каллех 68 ҫул пёр чаранмасар тапакан чёрене кёрсе вырнаҫрёҫ,— ҫакан пек туйанчёҫ те куранчёҫ мана кинемей самахёсем.

Кинемей шухашёсене ман татах пёлес килет. Ҫаванпа эпё пёр ҫёнё кёпер урла каҫса, сурах кётёвё витёр тавайккине хапарса ҫитсен, карчакран ыйтрам:

— Эсё, кинемей, мана власть ҫинчен, колхоз ҫинчен калатан,— терём эпё хуллен, ана ҫилентересрен асарханса.

— Вара?— терё вал, эпё мён каласса пёлмесёр.

— Ват, самахран, калапар, ыранах власть пире «халь ёнтё колхозсем туса ҫитё, колхозсене салатса ярсан та юрать, эсир хать колхозрах юлар, хать колхозран тухар», тесе калать, тейёпёр. Мён таван-ши эсё, кинемей, самахран, ҫаван пек япала пулсан?

Кинемей шутласа тамарё. Унан самахё часах тупанчё.

— Пулма пултарайман япала...

— Вал ҫапли ҫаплах та-ха, эпё самахран ҫеҫ калатап...

— Совет влаҫё ун пек тумасть... Ҫук, ҫук, тумастех! Колхозсене вал кирлёшён тума хушать. Эпё, хам старикампа, мён пулсан та, колхозрах юлатап, тем парсан та колхозран тухмастап. Колхозсар пирён мёнле пурапас?— юлашки самахне калана чух вал хайён сассине вайлатрё.

— Ёлёк мёнле пуранна?

— Ёлёкхипе мён калаҫатан. Ун чухне анланмасар пуранна, халь анланса пуранатпар. Правительство халаха суймастех, тес килет. Малтан эпё хам та колхоза кёресшён марччё. Халь вал шухаш пуҫра ҫук, таҫта кайса кёнё. Кам колхозра мар, ҫава — анланса пуранмасть, тес килет манан. Колхоз вал — таван вёлле. Малашне

унсăр пурăнма çук ĕнтĕ, ывăлăм. Эпир — пыл хурчĕсем, пыл хурчĕсене вĕлле кирлех.

— Çапла, кинемей, тĕрĕсрен те тĕрĕс калатăн: чăнах та, колхоз ĕç хресченĕсемшĕн тăван вĕллепе пĕрех. Пыл хурчĕсен пурнăçĕ те хайсен колхозĕ пулмасан, çавăн пекех.

Çул юппине çитрĕмĕр. Ман кинемейрен, ăслă карчăкран, колхозницăран, ăнланса пурăнакан ватă чăваш хĕрарăмĕнчен уйрăлмалла.

— Эсĕ Элĕке каятăн апла, эпĕ Самушкинсем, Тоторох карчăкĕ пулатăп, ĕçкунĕсен кĕнеки çине Тодорова Праски, тесе çыраççĕ. Çăмарта çиме кĕр, сĕт те пур, кăштах сăра та пур. Ачисем манăн та, сан пекех, вĕреннĕ çынсем. Кĕçĕнни Шупашкарти пединститутра вĕренет. Вĕсем вĕреннĕ май, хам та вулама, çырма вĕрентĕм-ха.

— Халĕ, кĕрейместĕп, кинемей. Каçчен Элĕке çитмелле. Райкома васкатăп. Сывă пул! Ху сăмахна ан ман: колхоз — вăл тăван вĕлле! Хăвăр çирĕп пулсан, вĕлле те çирĕп пулĕ.

— Çук, çук манмастăп, манас мар!— пулчĕ унăн татăклă сăмахĕ.

* * *

...Элĕкре икĕ кун пурăннă хыççăн эпĕ тăван яла çитрĕм.

— Мĕн чухлĕ улшăннă вăл, мĕн чухлĕ малалла кайнă,— халь вăл çĕнĕ пурнăçпа, çĕнĕ ĕмĕтпе пурăнать,— тет Тимухха та.

Ман тăван ялăн та паттăр колхоз пур. Вăл малтан «Илькушар» ятлă пулнă. (Ку ята Митта поэт партарнă). Халĕ Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз. Вăл колхоза 420 хуçалăх кĕрсе вырнаçнă: вырнаçнă та пĕр чăмăр пулнă. Ӳсет, тĕрекленет.

— Тăватçĕр çирĕм чăмăртан пĕр чăмăр, анчах пысăк та вăйлă чăмăр,— тет утарта ĕçлекен Тимухха старик.

— Çирĕп чăмăра аркатма хĕн,— тетĕп эпĕ те ăна хирĕç.

Эпир иккĕн колхоз утарĕ умĕнчи чечекленнĕ çăкасен сулхăнĕнче ларатпăр. Тĕрлĕ тĕслĕ, илемлĕ чечексем хушшинче сарă вĕллесем курăнаççĕ. Пыл хурчĕсем ĕçлеççĕ: пĕрисем çăка чечекĕсем çинчен, теприсем ытти темиçе тĕслĕ, ырă шăршăллă чечексем çинчен пыл ĕçсе, урисене

чечексен тусанĕсене сырса килеççĕ, теприсем тата вĕллесенчен тухса хĕвеллĕ ирĕке васкаççĕ. Пăхатăн та ирĕксĕрех:

— Вĕсем кашни техник, кашни инженер, вĕсем хăйсен çепĕç алли-урисемпе çын тăвайми карассем туса, вĕсен шăтăкĕсене атомăн-атомăн пухнă тутлă пыл тултарса питĕреççĕ,— тесе калатăн. Чăн та, вĕсем ытла ăстах мар инженера сăмса тăрăх та пăхтарма пултараççĕ, анчах вĕсем хăйсен ĕç-хĕлне техниксемпе инженерсем пек тавçăрса илсе тăваймаççĕ, тенĕ вĕт-ха Карл Маркс,— тетĕп хам ăшăмра.

Тимухха утара кĕрсе кайрĕ. Вăл хуртсене пăхса хуртсемпе калаçса çӳрет.

— Ĕçлетĕр?.. Ĕçлĕр, ĕçлĕр! Ĕçлемесĕр кам пурăнать. О, ĕçлемесĕр пурăнма çук,— ырлать вăл пыл хурчĕсене. Ман пуçа шухăшсем ыталаса илчĕç. Пурунтукпа Самушкин патĕнчи вăрман аса килчĕ. Утмăл сакăр çулхи кинемейĕн ăслă сăмахĕсем те аса килчĕç.

— Кинемей колхоза «тăван вĕлле» терĕ, акă, ĕнтĕ пăхăр-ха, пăхăр халĕ, ăна колхозпа танлаштарăр,— тетĕп, хам ăшăмра.

— Пыл хурчĕсем ĕççĕр пурăнаймаççĕ, вĕсен пурнăçĕ — пĕтĕмпех ĕç,— тет Тимухха та.— Вĕсем, колхозниксем пекех, ĕçлеменнисене хăйсен ретĕнче тытмаççĕ. Харам пырсемшĕн вĕллере вырăн çук, ĕçлекеннисем çеç вĕллери карассенчи лакăмсенчен пыл ĕçме тивĕçлĕ.

«Пыл хурчĕсем, усăсăр сăрăсене, харам пырсене, хăваласа кăларсан, вĕллере пĕр çемье пек пурăнаççĕ. Кун пек вĕлле — пĕр çемье, ăна ырă колхозпа танлаштарни те тĕрĕс, унта хăйсен ĕçченĕсем, хăйсен ударникĕсем пур; вĕлле пыл хурчĕсемшĕн тăван кил-çурт пулсан, колхоз та ĕçчен колхозниксемшĕн — тăван вĕлле... Паллах, пирĕн хуртсем пулмалла мар, колхозниксем хуртсенчен пин хут, миллион хут малта, вĕçĕмсĕр малта вĕсем. Анчах вĕсен те хуртсем пекех ĕçе юратмалла»,— шухăшлатăп каллех.

Вĕлле хурчĕсем чечек çинчен чечек çине вĕçеççĕ, яра куна ĕçлеççĕ; колхозниксем те çавах, хĕвелпе тăрса хĕвелпе кĕреççĕ, ырми-канми ĕçлесе лайăх та пуян пурнăç тăвасшăн кĕрешеççĕ, ăнланса пурăнаççĕ.

Пыл хурчĕсем ĕçлеççĕ. Пĕри ĕçрен килет, тепри ĕçе каять. Вĕсен вĕлле умĕнче хуралçăсем те пур, сăпсасемпе сăрăсем пыл вăрлама пырсан, чикме сăннисем те

çивĕч. Вĕсен килĕ хăмаран тунă арча кăна, анчах уншăн кашни çапăçса вилме хатĕр, мĕншĕн тесен вăл — тăван вĕлле!

*Хутар, 1933*

## ЙĔРСЕМ

Хĕвел тухман. Кĕлли бригади тахçанах ĕнтĕ ура çинче. Колхоз уйне çитни те сисĕнмерĕ. Лаптăк çине акнă урпа хăрасах кайрĕ. Ун тавра колхозниксем кăткăсем пек тăчĕç. Кĕшĕлтеттереççĕ кăна. Урпи пулса çитнĕ. Ĕнерех бригада канашлăвĕнче:

— Урпана ыран ирех вырас... Нумай япала мар... Машинăсене ытти уя ярас...— терĕç.

Кĕлли, ял вĕçнелле çитсен, колхозниксене каларĕ:

— Мĕн пулсан та çав урпана паян кăнтăрлана ямастпăр...

— Ямастпăр!..— терĕç иккĕн-виççĕн.

— Вăл урпа пĕрре сывламалăх кăна...— хушса хучĕ тепри уççăн.

— Пĕтеретпĕр... Эпир тытсан та пĕтермесен!— терĕ каллех Кĕлли, хăйĕн юлташĕсем çине хавасланса пăхса. Хаваслăх пуринче те вĕрет. Ĕç патĕнче вăл çĕкленнĕçемĕн çĕкленет.

Урпана ăмăртса выраççĕ. Каярах юлнисенчен кулса илеççĕ:

— Эй, Раман — турăран хăраман*, сан пилĕк çине куршанкă ларнă пек...

— Ларнă, авă ларнă...— тет Майрук та, каччăран кулса. Майрук сăмахĕсене илтсен, Лаша Раманĕ пĕтĕмпех хĕрелсе каять.

— Хĕр хĕретет...— теççĕ татах кулса. Хайхи Раман ирĕксĕрех халăх хыççăн тапаланать.

— Сире эпĕ куршанкă кăтартăп,— тет хăй Майрукран вăтанса, сăмсине туртса.— Эсир хăçан та пулин Раман халăхран юлнине курни?

— Курман, курман!— теççĕ темиçен. Хăйсем урпана сывлама та памаççĕ. Хыçалта кĕлте тĕмисем купаланса пыраççĕ. Пилĕкпе аптранă Раман та бригадăран çакланса пырать. Аçтан юлан?— кунта ўркенме çук, колхоз уйĕнче ўркенекенсенчен, кахалсенчен кулаççĕ. Колхоз уйĕ, колхоз хĕрĕ ун пек çынсене чăннипех те хĕретет.

---

* Кулса каланă сăмахсем.

«Кам ĕçлет, çав çиет... Ку Рамана та куршанкă чирĕнчен сыватĕ...»—тесе кулнă пек юрлать путени те таçта. Акă тата хушăран такам ачи макăрать. Вăрман хыçĕнчен хĕвел кармашса тухать. Ылтăн çутисем таçтах саланаççĕ. Хушăран ăшă çил выляса килет. Урпа выракансен пичĕсем ачашшăн кăтăкланаççĕ.

Ана çинче ĕç хĕрсе кăна пырать. Колхозниксем пуçĕсене те çĕклемеççĕ. Тарлаччен выраççĕ. Кĕлли çамки çинче тар пĕрчисем шăрçаланнă. Хăй, çӳçсем ан кансĕрлеччĕр тесе, пуçне йытпыршипе* çыхнă.

Хĕвел тӳпенелле çĕкленсен, Кĕлли:

— Привал!— терĕ.

— Привал!— терĕ «куршанкă чирлĕ» Раман та. Колхозниксем пĕрер кĕлте илчĕç те канма ларчĕç. Каннă вăхăтра:

— Çак Хура уйри çĕр,— терĕ пĕри,— ытла та паха-çке...

— Паха çав... Çавăнпа та вăл уя ĕлĕк Хыт Карук çавăрса илнĕ...

— Пĕтĕмпе 170 гектар пулас.

200 ытла... Унăн Улхаш патĕнче тата 400 гектар вăрман пулнă... Шуйттан пекех усал пулнă вăл Карук... Этем пулман вăл... Эсир вăл вăхăта астăваймастăр та. Улпута ун чух сухаласа, акса, вырса, çапса параттăмăр. Карук пек этемсем пире ĕмĕр-ĕмĕрĕпе хăратса, асаплантарса пурăннă... Старостăсемпе старшинасем, улпутсемпе кулаксем тата ыттисем те пире куланайшăн, хырçăшăн пайтах асаплантарнă. Тискер выçлăх пире çава пек каснă, нуша кăшланă, чир-чĕр ĕмнĕ... Сивĕ хĕл, тӳсмелле мар шăрăх, çăмăр асаплантарнă... Выльăх çулпа пырать... Вăл хăйне ăçта хăваланине те пĕлмест. Пире выльăх вырăннех шутланă. Революци хыççăн тин пирĕн асап пĕтрĕ. Совет влаçĕ çеç пире телей пачĕ.

Кĕлли сăмахĕсем колхозниксен чĕрисем патнех пырса ларчĕç. Вĕсен сарлака çурăмĕсем тăрăх юн сăркăлтатса чупма тытăнчĕ.

— Привал пĕтрĕ!— тенĕ хыççăн, хуркайăксем пек карталанса, вĕсем каллех урпана сырса илчĕç.

* * *

Пĕве. Кĕмĕл пек шыв. Йĕри-тавра пилĕк таран тулă. Тулă пучахĕсем ăшшăн силленсе лараççĕ. Хура уй вар-

* Курăк ячĕ.

ринче путене саванса аватать. Пĕве хĕрринче чечексемпе витĕннĕ шырлан. Тулă пучахĕсем урлă ача пуçĕсем куранса кайрĕç. Çÿçĕсем хĕвелпе шап-шурă пулнă. Пиçен тăрри пек.

Лап-лап-лап ура сасси илтĕнчĕ. Унччен те пулмарĕ, шыва виçĕ ача пырса та чăмрĕç. Пĕвери кайăк кăвакалĕсем, çунатсене харăссăн çапса, пĕлĕт çине çĕкленчĕç.

— У-у-у-ух!.. Ах-ха-ха!..— шавласа, кулса, ачасем пĕве урлă ишсе каçма тытăнчĕç. Пĕри шыв çинче вырттакан хăмана ярса илчĕ. Иккĕшĕ, ăмăртса ишсе, пĕвен тепĕр енне каçрĕç те çерем çине тухса тăсăлса выртрĕç.

— Пăх-ха ман çурăма... Бронза пек... Мĕнле çирĕп... Мана чир-чĕр тивмĕ ĕнтĕ кăçал...— тет Михей.

— А ман тата мĕнле? Куратна тата кăкăра, а?..— хирĕçлет Михее Петька. Хăй çерем çинчен çĕкленсе кăкăрне çапса кăтартать. Тимук та шывран шампăлтаттарса тухрĕ.

— Ан сирпĕт!..

— Çурăму йĕпенесрен хăратни-мĕн?

Хĕвел хĕртнĕçемĕн хĕртет. Ачасем, хĕвелпе пиççе сарăхнă ÿчĕсемпе мухтаннă хыççăн, хĕртĕнме пуçларĕç. Пурте сылтăм айăккисене çÿлелле туса выртрĕç. Петька çул çинче калама пуçланă сăмахне вĕçлеме тытăнчĕ...

— Çав Хыт Карук тенĕскер пит пуян пулнă, тет. Авă унта, Сементи варĕнче, пысăк тĕмеске пур. Çав тĕмеске çинче Карук çурчĕсем ларнă... Унăн хĕрĕх кĕсре тата хĕрĕх кин пулнă, тет. Пĕр каçĕнче Карукăн хĕрĕх кĕсри хăмланă, тет, хĕрĕх кинĕ ача çуратнă, тет. Вара Карук: ман пĕтес кун çитрĕ, тесе каланă, тет... Чăнах та çав кайран пĕтнĕ...

— Ун çинчен кĕнекере çырни пур-и?— тесе ыйтрĕ Тимук.

— Улпут пулнă пулĕ вăл?— тесе хучĕ Михей те.

— Улпут çав... Эсир улпутсем çинчен кĕнекесенче вуланă вĕт... Темле писательччĕ-ха вăл улпут тарçисем хресченсене саламатпа хĕнени çинчен çырнăччĕ. Хресчене пĕрре çапнă, тет... иккĕ... вуннă... çирĕм... аллă çапнă, тет... хресчен кăшкăрать, тет... Çĕр хут çапсан та кăшкăрнă, тет, анчах çĕр те пĕрре çапсан — хресчен лаштах вилсе кайнă, тет.

— Мĕншĕн çĕр хут çапнипех чарăнман-ши хăть?

— Çавах вăл вилетчĕ,— терĕ Петька.— Ну вăт, Карук тенĕскер те çавăн пек хĕсĕрлесе пурăнакан улпут

пулнă. Анлантăр-и?— терĕ вăл сулахай айăкки çинчен хырăм çине çаврăнса.

— Анлантăмăр,— терĕç иккĕшĕ.

Куç пек тулли пĕве шăпах. Çыран хĕрринче тулă пучахĕсем савăнса лараççĕ. Пĕве пуçĕнчи хăмăшсем хуллен-хуллен хăшăлтатса темле юрă кĕвĕлеççĕ. Вĕсен кĕвви Хура уйран илтĕнекен юрă сассипе пĕрлешсе каять. Кĕлли бригади урпа вырса пĕтернĕ те, хаваслăн юрă янратса килет:

Тырă пиçсе çитнĕ чух та
Килес килмест уй-хиртен, уй-хиртен.
Килес килмест уй-хиртен;
Ĕçсем лайăх пынă чух та
Каяс килмест, ай, ĕç панчен,
Ĕçсем лайăх пынă чух
Каяс килмест,
Каяс килмест ĕç панчен...

* * *

Пĕтĕм бригада пĕве хĕррине çитрĕ. Хăшĕсем çул çинчех кĕписене хывнă. Хĕрарăмсем шырлан тăрăх пĕве кукринелле кайрĕç те курăнми пулчĕç. Пĕве колхозниксене хавассăн шыва чĕнчĕ. Кăнтăр тӳпинчи хĕвел те хăйĕн нихçан пĕтме пĕлмен ăшшипе хĕрхенмесĕр хĕртме тытăнчĕ. Пĕве пичĕ кулса хумханса çеç тăрать. Колхозниксем хăшĕ пĕвене урлă, хăшĕ пĕвене тăрăх ишеççĕ... Йăслаççĕ... Шавлаççĕ...

— Шыва та бригадипех кĕреççĕ-çке,— тесе иртеççĕ Хура уй çулĕпе пыракан çынсем.

Раман пĕве хĕрне тухрĕ те урпа вырнă чух тусанланнă пит-куçне çума тытăнчĕ. Çав вăхăтрах ун патне Кĕлли ишсе çитрĕ.

— Эсĕ çăрттанпа пĕрех ишетĕн...

— Ишмесĕр... Ахаль мар эпĕ тĕнчере 70 çул пурăнатăп. Атăл çинче бурлакра 12 çул çӳренĕ... Сахал мар ишнĕ.

Кĕлли çак сăмахсене каласан, Хура уй çинелле пăхса илчĕ. Унтан ыран-виçмине вырмалли тулă çине пăхрĕ. Унăн ăшĕ çунма тытăнчĕ.

— Паян пĕр ĕçне пуçтартăмăр,— терĕ хăй Рамана.

— Шывра та...— пуçларĕ Раман. Пĕтĕмпех калаймарĕ. Шухăшĕсене хайĕн ăшĕнче кăна вĕçлерĕ. «Кунта ĕç çинчен калаçмасан та юрĕччĕ»,— тесе каласшăн пулчĕ вăл.

— Тулă та шăлтăрка пуçларĕ...— терĕ каллех Кĕлли. Раманшăн ку сăмахсем уммалут* пек йӳçĕ пулчĕç. Унăн умне колхоз тулли тухрĕ. Колхозниксем... ударниксем ретĕн-ретĕн тăчĕç. Унтан икĕ куçĕ умне ĕç нормисем пырса ункăланчĕç. Пилĕкĕ ыратса, касса илчĕ... Колхозниксем шыва урисемпе çапса ишни «куршанкă ларнă» тенĕ пек туйăнчĕ.

— Эх,— терĕ Раман чунĕ тăвăрланнипе. Ним тăваймарĕ те пĕве варнелле чăмрĕ.

— Аптранă кăвакал кутăн чăмрĕ,— тесе юлчĕ Кĕлли.

— Турăран хăраман, ĕçрен хăракан Раман чăмрĕ,— терĕç çерем çинче выртакан ачасем те. Виççĕн харăс кулса ячĕç. Унтан пурте Раман тухмалли çĕре чăмрĕç.

Унччен те пулмарĕ, Михей кахал Раман çине утланса тухрĕ. Петькăпа Тимук та Раман кĕлетки çине пырса çакăнчĕç.

Колхозниксем пĕрин хыççăн тепри çырана тухма тытăнчĕç. Вĕсемпе пĕрлех çамрăк ачасем йывăр шăмшаклă Рамана турткаласа тухрĕç.

Кĕпесем тăхăнаççĕ. Пурте тап-таса. Кĕлли хăйĕн бригадинче паттăр пек. Аллисем тĕлĕнмелле патмар. Çурăмĕ çинче темскер йĕрĕсем.

— Мучи, кала-ха, санăн ку мĕн йĕрĕсем?— ыйтрĕ Михей. Пурте Кĕлли çурăмĕ çинелле пăха пуçларĕç. Кĕлли нумайччен ним шарламасăр тăчĕ. Юлашкинчен, вăраммăн сывласа, калама тапратрĕ:

— Асăнас килмест чуна ыраттаракан япала çинчен... Тен, сире, çамрăксене, калас-и?..

— Кала!.. Кала!..

— Ну, эппин, калам. Малтан пăхăр лайăхрах...

Михей аллипех тытса пăхрĕ. Старик çурăмĕ çăпата йĕрĕсем пек, пăчкăпа сăтăрнă пек... Йĕрсем урлă-пирлĕ выртаççĕ.

— Ну вăт...— пуçларĕ Кĕлли, хăйĕн хулĕсене тимĕр пек ал тупанĕсемпе шăлса.

— Эсир пĕлместĕр,— терĕ вăл малалла,— ĕлĕкхи самана мĕн тĕслĕ пулнине... Вăл юн тĕслĕ пулнă. Шкулта кĕнекесем вулатăр. Анчах кĕнекесем çинче пурте çук тесен те юрать. Ман çурăм çинче мĕн пур тетĕр пулсан, калам сире: вăл кĕнеке çинче çырăнман йĕрсем. Вĕсене Карук хуçасен самани саламатпа, юнпа çырнă...

* Курăк ячĕ.

Çамрăксем старик сăмахне итленĕ çĕрте Карук улпутăн хĕрĕх кĕсрипе хĕрĕх кинне аса илчĕç. Вĕсен куçне чĕнрен явнă тăхлан вĕçлĕ саламат курăнчĕ.

Ун пек саламата вĕсем чи малтан Шупашкарти музейра курнă. Халĕ аса илчĕç.

— Вĕсене эпĕ Карук патĕнче 20 çул пурăнса туянтăм. Карук пирĕншĕн эсрел пек этем, сĕлĕх, эрешмен пулса... Тарăхаттăмăр. Йĕреттĕмĕр... Тарăхнипе унăн Сементи варринчи кил-çуртне çунтарса ятăмăр.

— Эсĕ, мучи, хĕрĕх кĕсрипе хĕрĕх кинĕ çинчен калаха тата...—пӳлчĕ Петька.

— Вăл юмах... Ĕç апла пулман... Хăйне Упа çырми ялĕнчи хресченсем сенĕксемпе чиксе пăрахрĕç. Унтанпа хĕрĕх çула яхăн иртрĕ ĕнтĕ.

— Мĕнле хăтăлтăр?

— Эпĕ Атăл çине ĕçлеме тартăм... Унта каллех ман пыршă-пакартана кумрĕç... Карук çĕрне, Хура уя, 17-мĕш çул çеç улпут ăраттисенчен тара илсе пурăнакан кулаксенчен туртса илтĕмĕр.

— Халĕ пирĕнте...— терĕ пĕри.

— Пирĕнте, колхозра...— терĕç теприсем.

Старик кĕписене тăхăнчĕ. Пурте кайма хыпаланчĕç. Кĕлли хăйĕн сăмахне çул çинче пĕтерчĕ.

— Вилсен те ĕлĕкхи самана кирлĕ мар...

*1933*

## МĔСКĔН СТАРИК

Микулай пиччепе Савин юлташ садра тĕл пулчĕç те хăйăр сапса якатнă сукмак тăрăх, шап-шурă чечек çурнă улмуççисем хушшипе, тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексемпе витĕннĕ çерем çинелле ерипен утса кайрĕç; вĕсем, тем çинчен питех те тимлĕн калаçса, симĕс тĕм умне, канса ларма тунă тенкел çине, пырса ларчĕç.

— Эпĕ сан патна, Николай Петрович, лешин çинчен, ирхи кайăк çинчен калама килтĕм. Ну вăт, ыйтса тĕпченĕ хыççăн акă мĕн курăнчĕ: эсĕ шăпах çав эпир ширанă çăхана çаклатнă.

— Пулать иккен этем тени, пăхма хай — хĕтĕ-хĕтĕ старик кăна ĕнтĕ, сухал ăшне путнă хăрăк этем,— терĕ тĕлĕнсе Микулай пичче.

— Сухал ăшне путнă, тетĕн? Анчах унăн нимĕнле сухал та çук вĕт, пăхма çеç мăн сухаллă старик, чăннипе, вăл пĕтĕмпе те вăтăр çулта çеç.

Çак сăмахсене илтсен, Микулай пичче питĕ тарăхса кайрĕ: пĕрре шуралчĕ, тепре хĕрелчĕ.

— Ăна, шуйттан кĕвентине, ма тытса ĕнселемерĕм пĕрре,— терĕ вăл.

Паян ир çинче мĕн пулнисене Микулай пичче тепĕр хут аса илчĕ.

Николай Петрович, колхоз садĕнче ĕçлекен мичуринец, иртнĕ каç садрах çĕр каçнă. Улмуççи чечекĕсене тăм лекесрен çĕрĕпех тĕтĕрнĕ. Ир çинче тин Микулай пичче хуралçăсен пӳртне канма кĕнĕ. Пĕр-ик сехет тĕлĕрсе иличчен хĕвелтухăçĕ хĕрелсе те килнĕ. Инçетри вăрман хыçĕнчен хĕвел саркаланса тухнă. Çак вăхăтра Микулай пичче тăрса сада пăхса çаврăнма кайнă. Унта тĕлĕнмелле япала курнă.

Шырлан тăрăх пĕр кĕлетке йăраланса пырать. Вăл пĕрре çын пек туйăнать, тепре кантăр çинчи мĕлке евĕр пулса каять.

«Кам пулма пултарать ку?»—тĕлĕннĕ Микулай пичче. Пăхнă-пăхнă, аран уйăрса илнĕ: çак мĕлке — калама çук ватă старик иккен, хуллен уткалать, хушăран ӳсĕркелесе илет. Аллинче хăрăк патак. Çийĕ-пуçĕ лăстăр-лăстăр çĕтĕк. Шурă сухалĕ кăвапа таран (ун пек сухаллă çынсене пирĕн таврара «кĕреçе сухал» теççĕ).

«Мĕнле старик çак вăхăтра çӳретĕр?» шутланă Микулай пичче.

Палламан çын, пĕшкĕнкелесе, хуллен-хуллен утса пынă. Николай Петровича вăл курмăш пулнă, ахăртнех, çынпа тĕл пуласси çинчен шухăшламан пулмалла вăл... «Кунта хресченсем пурăнаççĕ, вĕсем хушшинчен тухасси вăл — сурăх кĕтĕвĕ витĕр тухнипе пĕрех...» тенĕ ĕнтĕ çак этем.

— Эсир ăçта каятăр?.. Ăçтисем?— ыйтнă сад ăсти сухалран.

— Çавăнталла,— застава еннелле кăтартнă старик.—Унта манăн ывăл пурăнать.

— Ывăлу тетĕн?— ыйтнă Микулай пичче.

— Ывăлăм çав, ывăлăм...

— Айтăр, илсе каям ывăлăр патне, эпĕ ăна пĕлетĕп, тӳрĕ çулпа кайăпăр...

— Каяр-ха, эппин, каяр-ха,— эхлетсе пынă ватă старик.

«Савин юлташăн ашшĕ ăçтан çавăн пек пултăр? Мĕншĕн вăл пĕччен çĕтсе çӳретĕр?»— шухăшласа илнĕ

Микулай пичче. Вара вăл мăн сухаллă старике хуралçăсен çурчĕ патнелле ертсе кайнă. Çурт умне çитсен: «Эсĕ кунта кăштах ларса кан-ха. Эпĕ ăшăрах тумтир тăхăнса тухам»,— тенĕ те, хăй пÿрте кĕрсе, хăвăртрах, хуралçăсене вăратнă.

— Ют çын... Заставăна каясшăн...—шăппăн пĕлтернĕ вăл канакан хуралçăсене. Лешсем вăрт-варт сиксе тăнă та пăшалĕсене илнĕ. Тухнă-тухманах, хайхи янавар пек пăхса ларакан старике хупăрласа илнĕ. Вĕсемпе пĕрле Микулай пичче те хăйĕн пĕчĕк пăшалне илсе тухнă. Виççĕмĕш хуралçă та çывхарса çитнĕ.

— Çĕкле аллуна!— тенĕ Николай Петрович, халтăркка старик çине пăшалĕпе тĕллесе.

— Эх, ырă çыннăмсем, шăллăмсем, эсир мана ватă пулин те, такам вырăнне хуратăр пулмалла,— тенĕ лешĕ çемçе те йăпăлкка чĕлхепе,— хăвăрах куратăр ĕнтĕ, эпĕ питех те мĕскĕн çын. Турă çырлахтăр, ун пек кун пек хăтланма...—эхлете-эхлете сăхсăхнă «мĕскĕн» старик. Пăхма хăй çав тери йăвашшăн, айваннăн курăннă. Çумăр айне пулнă кăркка пек тайкаланнă.

Хуралçăсем старике ухтарнă, анчах нимĕн те тупайман: унăн ни пăшал таврашĕ, ни документсем, ни укçатенкĕ пулман,— пĕр сăмахпа каласан, хăрăк патаксăр пуçне унăн нимĕн те пулман.

— Куратăр-и!— тенĕ вăл каллех эхлетсе,— нимĕн те çук-çке. Ара ман пек чухăн çыннăн мĕн пултăр? Чăн та, эпĕ хамăн ывăлăма тахçантанпах курман, вăл çитĕнсе ар пулнă ĕнтĕ. Тен, мана паллаймĕ те. Пысăк вырăнта ĕçлет. Ун патне пырсан, хăвăр йăнăшнине эсир уççăнах курăр ак. Эй, атте турă, ÿкĕте кĕртсем çакăн пек йăнăш тăвакан çынсене...

Çапла тĕркешсе тăнă вăхăтра хуралçăсенчен пĕри лаша кÿлсе килме те ĕлкĕрнĕ.

— Ларăр, сирĕн утма вăй та çук пулĕ, ватă çынна шеллес пулать,— тенĕ вăл.

Сăхсăхса тăракан старике ирĕксĕрех урапа çине лартнă та застава начальникĕ патне вĕçтерсе кайнă.

Акă мĕнле пулса иртнĕ ĕç. Çакăн çинчен Микулай пичче Савин юлташа ирех каласа панă. Унтанпа темиçе сехет иртнĕ. Халĕ Савин юлташ çак ĕç мĕнле пĕтни çинчен каласа пама Николай Петрович патне ятарласах килчĕ. Акă вĕсем шап-шурă çеçкеллĕ тĕм патĕнче ашшĕпе ывăлĕ пек калаçса лараççĕ.

Хĕвел кăнтăрларан иртсе каçалла сулăнсан тин, вĕсен сăмахĕ пĕтрĕ.

— Пирĕн колхозниксем,— терĕ юлашкинчен Савин юлташ,— çав «старик» пек начар тумланмаççĕ. Чăнах та, çак «мĕскĕн çынна», вăл чикĕ урлă каçас умĕн, хуçисем вĕрентнĕ: «Совет Союзĕнче пурте çĕтĕк-çатăк тумтирсем тăхăнса çӳреççĕ, лайăх тумтир тăхăнса кайсан, сана тӳрех палласа тытма пултараççĕ, тепĕр енчен тата, унти хресченсемпе рабочисем мăн сухаллă, унта авалхи йăлапа пурăнаççĕ: мунча кĕмеççĕ, сухалсене хырмаççĕ...»— тенĕ çав çыннăн пуян хуçисем. Анчах çав государствăн разведки йăнăшнă, эсир çав шпиона часах палласа илтĕр...

*1939*

## ПРИЗЫВ КУНĔСЕМ

Мускавран çитрĕ шурă хут,
Совет маршалĕ хăй ал пуснă *.
Пире сыхă пулма чĕнеç,
Хĕрлĕ Çара тăма чĕнеç.

*(Призывниксен юрринчен)*

1.

— Эй, кĕтнĕ кун çитрĕ,— терĕ Хĕрлĕ Çара кайма хатĕрленекен Якур, ял Совечĕн председателĕ çар комиссине чĕнекен повестка пырса парсан.

— Савăнтăн-и?

— Эй, савăнмасăр... Хĕрлĕ Çар — вăл патша çарĕ мар-иç...

— Илмесĕрех ан хĕпĕрте-ха. Унта каяс текенсем эсĕ çеç мар вĕт.

— Тĕрĕс, анчах мана илмеллех. Эпĕ нимрен те начар мар. Кĕлеткем манăн тĕреклĕ. Сывлăх çирĕп, ман пекки кам пур ялта?.. Чунăм тахçанах Хĕрлĕ Çарта.

— Илмесен вара?..— сăмахне пĕтермесĕр хирĕçлерĕ председатель.

— Ан кул... Мана тăван аннех Хĕрлĕ Çара пиллесе хăварнă. Мана илмеллех, урăхла пулма та пултараймасть,— татах хавасланчĕ Якур.

— Ну, илсен, пĕрре ял тĕлĕнмелле ăсатăпăр...

---

* Ку калава 1936 çулта çырнă. Ун чухне пирĕн çара Хĕрлĕ Çар тенĕ.

— Асатăр... Çапах та шел, аннем çук. Ĕлĕк тăшмансен сăмахĕпе хытнă чĕри халĕ çемçелĕччĕ унăн... Савăнĕччĕ вăл эпĕ Хĕрлĕ Çара кайнăшăн.

Якур хăйĕн амăшĕ çинчен мĕншĕн çапла каланине тӳрех ăнланма çук. Председатель çеç çакна лайăх ăнланчĕ. Мĕншĕн тесен, Якур халĕ председательте ĕçлекен Кирука хăйĕн амăшĕ ĕлĕк ялти куштансене мĕн тери тарăхни çинчен пĕрре кăна мар каласа панă. Якур мар, Кирук та ăна манаймасть.

## 2.

...Якур çакна лайăх астăвать. 1921 çул. Выçлăх. Ниçта пĕр тĕпренчĕк çăкăр тупса çиме çук. Çитменнине тата, яла темле чир çитсе кĕчĕ. Якурсем пĕтĕм йышĕпех чирлесе ӳкрĕç. Якурăн амăшĕ нимле майпа та сывалаймарĕ. Ыттисем чĕрĕлсен те вăл нумай выртрĕ. Пĕррехинче чирлĕ амăшĕ Якура хăй патне чĕнсе илчĕ те:

— Санăн, ывăлăм, çара каймаллах... Хĕрлĕ салтак пулмаллах санăн, ывăлăм...— терĕ, хыткан та вăйсăр аллисене типшĕм кăкăрĕ çине аран-аран çĕклесе хурса.

— Пулăп, аннем. Анчах халĕ эсĕ манпа калаçса хална ан пĕтер-ха,— терĕ саккăра пуснă ывăлĕ, вырăнтан тăрайми чирлĕ амăшне хĕрхенсе.

— Ывăлăм, апла каласа ан хурлантар-ха. Манăн калаçмалăх вăйăм пур . Халĕ, Якур, хамăр самана... Ленин — ĕçхалăхĕшĕн тăрăшаканскер... хамăр кĕпĕрнеренех, Чĕмпĕртенех, тет... Пирĕн пеккисен пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшать вăл...

— Анне, вăйна ан пĕтерсем...

— Калаçас килет, ывăлăм... Çитĕнсен хĕрлĕ салтак пулăн. Уншăн хĕпĕртетĕп... Ара, Митрахвансем чут çисе яратчĕç пире... Ах, эсĕ Хĕрлĕ Çара кайнă чух манăн сывах пуласчĕ, савăнса ăсатасчĕ сана,— йĕрсе ячĕ Якурăн амăшĕ. Якур та, урайĕнче çĕтĕк сăхмансем çинче выртакан амăшĕ умне чĕркуçленсе ларнăскер, ĕсĕклеме тытăнчĕ.

Ун чухне пӳртре никам та пулман, нимле сас-чĕв те илтĕнмен,— шăпах пулнă. Таçта, кăмака хыçĕнче, çурăкра, пĕр шăрчăк çеç вăхăтран-вăхăта чĕриклетнĕ. Кил-йышĕн ытти çынĕсем чиртен чĕрĕлкеленĕ те, уя пур-çук тыррине пуçтарма тухса кайнă. Пӳртре Якурпа амăшĕ ыталанса йĕнĕ.

— Эпӗ, ывӑлӑм, эсӗ Хӗрлӗ Ҫара кайнине кураяс ҫук, чӗреме ҫемҫетеес ҫук...—тенӗ те амӑшӗ шӑпланса выртнӑ. Ҫамрӑк Якур ним пӗлмесӗр ларнӑ. Выртсан-выртсан, амӑшӗ выҫӑпа, чирпе путса ларнӑ куҫӗсене хуллен уҫнӑ та ывӑлне тепӗр хут хӑй патнерех чӗнсе илнӗ. Вара вӑйсӑр сасӑпа вӑраххӑн:

— Ывӑлӑм...— тенӗ.

— Мӗн?— чӗннӗ те Якур тата та хытӑрах йӗрсе янӑ.

— Чӳречене чашӑкпа...

— Мӗн?..

— Тӑрӑ шыв ларт...

— Ма?..

— Чунӑм... ҫӑванса кайтӑр... Тата пуҫ айӗнчен ҫытара ил. Вӑл тӗк ҫытар...— тенӗ вӑйсӑрланса ҫитнӗ амӑшӗ.

Якур аса илнӗ: чун, этем вилнӗ чухне, ҫӑванса тухса кайсан, ҫылӑх пӗтет.. Тӗкрен тунӑ ҫытар ҫинче вилсен — ҫылӑх нумайланать, тетчӗҫ стариксемпе карчӑксем. Унӑн амӑшӗ те ҫавнах каланӑ. Ҫак сӑмахсем тӗрӗс-и, тӗрӗс мар-и?— паллах, Якур пӗлмен, унӑн шутласа-тӑма вӑхӑчӗ те пулман. Ҫитменнине тата, ҫамрӑк ача пӗлме те пултарайман. Вӑл амӑшӗ мӗн-мӗн каланине тунӑ.

Якур, пӳртре чылайччен чупкаласа ҫӳресен, амӑшӗ патне пынӑ та, пӗчӗк аллисемпе амӑшӗ пуҫӗ айӗнчен тӗк ҫытара туртса кӑларнӑ.

— Кӑлартӑн-и?..

— Кӑлартӑм...

— Шыв лартрӑн-и?

— Лартрӑм...

— Ну, ывӑлӑм... Митрахвансене маххӑ ан пар...

— Вӑйна ан пӗтер-ха, анне...

— Ывӑлӑм, Хӗрлӗ Ҫара каях... Ленин... хамӑр ҫынах, тет...—тенӗ вӑхӑтра Якур амӑшӗ, ҫӑварне, вӗҫеймен ҫерҫи чӗппи пек, кап-кап карнӑ та, вилсе те кайнӑ.

...Ҫамрӑк ача, тӑлӑх Якур, нумайччен йӗнӗ. Ҫитӗнерехпе амӑшӗн сӑн-сӑпатне те мана пуҫланӑ, анчах амӑшӗ Хӗрлӗ Ҫара каях тенине вӑл манман. Ҫамрӑк чӗре амӑшӗн юлашки сӑмахӗсене кӑҫалччене усранӑ.

## 3.

Якур ашшӗ, Хрисан, йывӑр ӗҫпе тертленсе пуранӑскер,— чирлӗ ҫын пулнӑ. Ҫавӑнпа та, патша вӑхӑтӗнче вӑл шурӑ билетпа салтакран юлнӑ. Тӗнче вӑрҫи пуҫлан-

сан, пěр çултанах çурçансăр пулса ларнă вăл. Çав май вара Якур ашшě салтак службинчен пачах юлнă.

Ялти куштансем, кулаксем «шурă билета» кун кăтартман. Килне пырсах мăшкăлланă, кулнă, хěненě.

— Хрисан табак шывě ĕçсе службăран юлчě,— тесе ят сарнă вěсем ун çинчен.

— Салтак арăмěсем валли юлать,— сўпěлтетсе çўренě хуттăр хуçи, ял пуянě Митрахван.

— Шурă билет чěппи...— мăшкăлласа чěннě ялти «ыр çын» ывăлěсем Хрисан ачисене.

...Пěрре, хěвел аннă вăхăтра, Хрисанăн аслă ывăлě, Хветěр, кěтěве хирěç кайнă. Икě сурăхне тупнă та, килелле хăваласа утнă. Лупашкари * куштан, кăрмасунла Давид («Патша» тесе чěннě ăна ялта) Тěпсěр кўлěрен пулă тытса таврăннă. Давид «патша» Хěветěре курсан, урампа чип-чипер утса пыракан ачана, йěпе сěрекепе шаплаттарма тытăннă. Пěрмай урараи çапнă. Ултă çулхи Хěветěр кашни çапмассерен çěре пере-пере аннă. Вăйран кайнă ача. Юлашкинчен темле шалча çине çитсе тăраннă та хăрах куçне шăтарнă.

Кун хыççăн Митрахван ывăлěсем, салтакран пěри кача пўрнине, тепри вăта пўрнине татса килнěскерсем, Хрисан çемйине хěсěрлеме татах та тепěр сăлтав тупнă.

— Ывăлин куçне хăех тěртсе шăтарчě... Çитěнсен салтакран юлтăр тесе шăтарчě...— ахăрнă Митрахванăн пěрер пўрнесěр ывăлěсем.

Чухăн Хрисан, ним тăвайман пирки, староста патне кайса пăхнă.

— Вěсем — ятлă çынсем, вěсен права пысăк. Эсě мěн? Шурă билет кăна. Санне пыршуна та кумма пултараççě Митрахван Иванч ывăлěсем,— тенě мăн сухалла староста ахăрса-кулса.

Якурпа Хветěр ашшě-амăшěн пěтěм ăш-чикě кўренсе, тулса çитнě. Çемçе чěреллě амăшě кунěн-çěрěн йěнě. Ним тума та май çукран турра кěлтума тытăннă.

...Фронтра унта та кунта тупă йěтрисем ахлатса çурăлнă. Ěç халăх юнě çырма пулса юхнă. Çынсем çěршерěн, пиншерěн кăткăсем пек тăкăнса вилнě. Салтак шинельне тăхăннăскерсем, хăшě аллине, хăшě урине таçти ют хирте çухатса хăварнă.

Хветěрпе Якур, вěсен ашшěпе амăшě фронтри çав тери хăрушă ěçсене курнипе мар, унăн йывăрлăхě таç-

* Ялăн пěр пайне Лупашка тенě.

тан·катаран пырса тивнипе кӳреннӗ, вӗсене тата ялти ӗҫсемех, ялти вӑрҫах, кӳрентерсе ҫитернӗ. Вӗсем фронтри ӗҫсене тавҫӑрса илеймен, тарӑхнипе — ывӑлне, вӑл ҫитӗнсенех, салтака парасси ҫинчен калаҫнӑ.

— Эпир телейсӗр, телейсӗрӗн кун ҫук...— тенӗ вӗсем. Телей турӑран ыйтнӑ. Турӑ ҫине шаннӑ.—Турӑ ҫиленнӗ пулсан, кӗлтусан — ҫырлахӗ, турӑ вӑл Митрахван мар, староста мар,— тенӗ вӗсем.

Пӗрре, Хрисан вӑрмана кайсан, Якур амӑшӗ сӗтел ҫине пӑтӑ пӗҫерсе лартсах турӑран ҫылӑхсене каҫарма ыйтнӑ.

— Каҫарсам, атте турӑ, турӑ амӑшӗ, атте турӑ ывӑлӗ... Ывӑлӑма салтака юрӑхлӑ тусам...— тархасланӑ Хрисан арӑмӗ.

— Салтака илтер мана, турӑ мучи...— ыйтнӑ турӑран пӗчӗк Якур та.

Нумайччен кӗлтусан, амӑшӗпе ывӑлӗ сӗтел хушшине кӗрсе ларнӑ. Сӗтел ҫинче пӗр пуҫламан ҫӑкӑр тата пӑсланса ларакан пӑтӑ пулнӑ. Пӑтти ҫинче ҫерҫи пуҫӗ пек сар ҫу катӑкӗ ирӗлсе тӑнӑ.

Якур амӑшӗ ҫӑкӑр пуҫланӑ та, ҫӑкӑр сӑмси ҫине малтанхи кашӑк пӑтти хурса, ывӑлне панӑ.

— Вӑйлӑ пул,— тенӗ вӑл.

— Митрахвансене пӗтерме-и?..— ыйтнӑ Якур.

— Салтака кайма,— тенӗ амӑшӗ.

## 4.

Якур кунӗн-ҫӗрӗн кӗтнӗ вӑхӑт, комиссине каймалли кун, ҫитрӗ-ҫитрех. Кунӗ пулчӗ кӗрхи ҫанталӑка кура мар,— илемлӗ те ӑшӑ кун пулчӗ. Хӗвел ирех савӑнса, темле сар кайӑк пек саркаланса тухрӗ. Кӗрхи янкӑр таса сывлӑш пӗтӗмпех ӑшӑнса кайрӗ.

Комиссине каймалли яшсем ирех тӑчӗҫ, ирех тӑчӗҫ те ял Совет канцелярийӗ умне пухӑнчӗҫ.

— Юлташсем, пурте пӗрле каятпӑр,— илтӗнчӗ Якурӑн сасси, яшӑсем пухӑнса ҫитсен.

— Пӗрле, пӗрле...— хаваслӑнчӗҫ ҫамрӑксем урамра.

— Тӑватӑ лавпа каятпӑр... Эсӗ, Тиҫук, купӑсна илме ан ман...

— Юрать,— килӗшрӗ купӑсҫӑ, кӑҫал ҫара каймалли Тимофей Петров.

— Ак тата мӗн, юлташсем, халӗ килӗрсене кайса

лайăхрах апатланăр, пит-куçăрсене çăвăр, лайăхрах тумланăр. Комисси умне кетмертерех тăрăр.

— Яснă! Хамăр ял ятне çухатас çук,— хавасланчĕ купăссă.

— Пирĕн çинчен сар хĕрсем куçĕсене ан илччĕр,— хутшăнчĕ Мĕтри.

— Паллах,— терĕ те пĕчĕк Куçма юрласа ячĕ.

> Ĕлĕк яла култарманне
> Халь тин яла култарас çук...

Куçмана яланхи пекех Мĕтри хайĕн мăн сассипе юрласа пулăшрĕ. Павăл шăхăрса юрларĕ.

Ирхи сасăсем таçталлах кайрĕç, таçталлах кайса, кĕр сăнĕ çапнă вăрман хĕрринче илтĕнчĕç:

> Аслати авăтать, çиçĕм çиçет.
> Тупă сасси таçта илтĕнет.
> Границăра хура пĕлĕтсем—
> Сыхă тăрăр, паттăр йĕкĕтсем.
> . . . . . . . . . .

5.

...Призыв пункчĕ. Тап-таса пӳлĕмсене уяври пек илемлетнĕ. Стенасем çинче йĕри-тавра — картинсем, портретсем, картăсем. Симĕс пустав витнĕ сĕтелсем çинче — хаçат-журналсем, вырăсла, чăвашла кĕнекесем. Кунта кĕтсе, анасласа лармалла мар,— вула, вĕрен. Ыйтса пĕлес килет пулсан,— ыйт, пĕл. Выляс килет пулсан,— юнашар пӳлĕме кăна кĕр. Унта тата мĕн-мĕн çук-ши? Бильярд, шахмăт, шашка, домино,— выля, савăнăçлă кан. Пăхатăн та тĕлĕнетĕн: мĕнле патшалăхра, хăш саманара салтак ачисене çавăн пек кĕтсе илнĕши? Çук, ниçта та кĕтсе илмен, ниçта та ун пекки пулман. Çавăнпа та пирĕн хальхи çамрăксем Хĕрлĕ Çара савăнсах, хĕпĕртесе каяççĕ.

Призывниксем выляççĕ, кулаççĕ.

— Мат!— тет Мĕтри.

— Ак сана мат!— пырса лартать Павăл шахмат лашине.

— Мимо!— илтĕнет тата теприн сасси.

— Эпир ак çапла,— хупса хурать Куçма домино вуниккĕпе витĕннĕ вĕçне.

— Акă çакăн пек выляççĕ,— тесе кустарса кĕртет Якур тӳп-тӳрĕ те яка кийпа икĕ чăмăра харăс сетка ăшне.

— Куратăр-и, саккăра çитрĕ...

— Саккăр-тăк, çĕнĕрен вылятпăр,— каллех выляма ыйтать Якура хирĕç вылякан çамрăк, Тукас ачи Арасланов...

...Тепĕр пӳлĕмĕнче явка сĕтелĕ. Призывниксем повесткăсене, кирлĕ документсене кăтартаççĕ те малти пӳлĕме кĕрсе каяççĕ.

Кунта врачсем.

Куç тухтăрĕ призывниксене пуринчен нумай тытать.

— Çук манăн трахом!

— Çуккине хамах куратăп,— çаплах тĕплĕн пăхать, тĕплĕн тĕпчет «глазник», мĕншĕн тесен, куç вăйсăр çын ăçтан-ха пирĕн çара юрăхлă пултăр?

Призывниксем, куçĕсене пăхтарнă хыççăн невропатолог, хирург патне пыраççĕ. Кашнин сывлăхне «ывăç тупанĕ çине хурса пăхнă пек» пăхсан çеç, призывниксем военком патне пыраççĕ. Вара кăмăллă калаçу пуçланать.

— Петров юлташ, пытармасăр кала-ха: санăн çав мăйри çĕвĕк кăшт та пулин кансĕрлет-и?— ыйтать военком.

— Командир юлташ, пĕрре те суймастăп: манăн ним те ыратмасть. Çĕвĕк çинчен эпĕ тахçанах ĕнтĕ манса кайнă,— хĕрсе кайса калать çара илмесрен хăраса ӳкнĕ Тиçук.

— Тĕрĕс калать Петров юлташ,— илтĕнет хирург сасси.

— Ан хуйхăр, паянтан эсĕ красноармеец,— савăнтарать военком.

Петров хыççăн пĕчĕк Куçма кĕрет.

— Пур енчен те юрăхлă, анчах çӳлĕшĕ çитмест. 151 сантиметр кăна... тет тухтăр.

— Мана çар службисăр хăратмасть, командир юлташ. Ан хăварăр, илĕр мана. Эпĕ допризывниксене вĕрентнĕ чухне вĕренӳ ударникĕ, снайпер пек перекен стрелок пултăм... Ытах, çитĕнсе çитеймен пулсан, çарта çитĕнĕп...— тархаслать Куçма.

Комисси членĕсем калаçса илеççĕ. Паллах, Малов Куçма пĕчĕкрех, виçе çитмест, икĕ сантиметр лутра. Çапах та ăна çара илеççĕ.

Якура юлашкинчен çеç чĕнчĕç.

— О, Егор Белобилетов,— сиксе тăчĕ военком, хĕлле допризывниксене çар ĕçне вĕрентнĕ чух отличник пулнă Белобилетов юлташа курсан.

— Эпĕ, командир юлташ!

— Мĕнле унăн сывлăхĕ?— ыйтрĕ военком тухтăртан.

— Чĕри мотор пек, ӳпкисем вĕркĕч пек... Пурте ҫителĕклĕ,— пулчĕ ответ.

— Апла-тăк, юрăхлă,— пăчăртарĕ военком Якурăн, темиҫе ҫул Хĕрлĕ Ҫаршăн ҫуннă хастар ҫамрăкăн, аллине.

— Кĕтнĕ кун тинех ҫитрĕ!— Тем пек хĕпĕртерĕ, тем пек савăнчĕ Якур, ҫăлтăр пек йăлкăшса ҫунса, ҫиҫсе.

— Акă хайхи, аннӳ калана пекех пулса тăчĕ,— терĕ военком, Якур кăҫал хĕлле каласа панине астуса илсе. Военком ҫавăн чух унăн калавне пĕр сăмах сиктермесĕр итлерĕ, тĕлĕне-тĕлĕне ыйтусем пачĕ. Юлашкинчен вара ҫак тĕслĕхсене допризывниксен пуххинче туна докладра илсе кăтартрĕ. Ҫав тĕслĕхĕн класлă пĕлтерĕшĕ калама ҫук пысăк, терĕ вăл. Якур амăшĕ тĕттĕм ҫын пулнă, турра ĕненнĕ, анчах класс сисĕмне тем хулăнăш тĕттĕмлĕх те, тĕн те, турă ячĕ те хуплайман. Вăл ҫĕнĕ саманан пĕтĕм тĕнчене, пусмăрти мĕнпур халăхсене ҫул тупма ҫутă паракан Хĕвелне курнă; вăл, ĕлĕк ҫăкăрсăр, тĕттĕмре ларнăскер, халĕ ăна курнă. Ҫавăнпа та, вăл вилнĕ чух та Ленин тесе вилнĕ, ҫакă унăн юлашки сăмахĕ пулнă.

...Урамра, призыв пункчĕ умĕнче,— ҫамрăксен сасси. Паян Хĕрлĕ Ҫар ретне тăнă яшсем, маттур йĕкĕтсем, кĕр тумĕпе тумланнă кăтра хурăнсем айне пухăннă. Вĕсем патне сарă хĕрсем пынă. Купăс ҫемми ирĕлет кăна. Каччăсемпе хĕрсем ҫамрăк кĕрешĕвҫĕсен ҫĕнĕ юррисене, купăс кĕввипе савăнса юрлаҫҫĕ.

Янравлă сасăсем, таҫтах вĕҫе-вĕҫе каяҫҫĕ, ял-ял урлă, уй-уй урлă илтĕнеҫҫĕ:

Ҫут кӳлĕри тăр шыва
Ирхи сывлăм ҫитес ҫук.
Пирĕн аслă ҫĕршыва
Нимле тăшман ҫĕнес ҫук.

Йĕплĕ-йĕплĕ пиҫене
Татса тăкăр тĕппипех!
Асар-писер тăшмана
Пĕтерĕпĕр пуҫĕпех!

*Хутар, 1936*

## ÇĔЛЕН

1.

...Сунарта çав тери ĕшенсе çӳренĕ хыççăн пĕр-пĕр уçланкăна тухсан, сунарçăн кăмăлĕ епле савăнса çемçелсе кайнине сунарта пулман çынсем пĕлмеççĕ те пулĕ. Ешĕл çерем çине ларсан, лăштăрах ывăннă урасем канма тытăнаççĕ. Ларатăн, ларатăн... пĕрре те тăрас килмест. Йĕри-тавра илем. Симĕс ту пек вăрман. Инçе те мар вĕтĕ-вĕтĕ шĕшкĕлĕх. Çаран. Пĕчĕк шыв. Шыв хĕррипе хура хурлăхан. Çырантан çӳлерех, тункатасем хушшинче, шăмат кĕпçи, тĕмĕн-тĕмĕн вĕлтрен, шăлан йывăççи, хăмла çырли. Çырлисем пиççе çитнĕ. Пăнтă-пăнтă мăнтăр...

Эпĕ пĕрре, сунарта çӳренĕ чухне, çавăн пек уçланкăна тухрăм та лутра çăка айне канма лартăм. Вăрман сывлăшĕ шерпет пек. Сывлама çăмăл та уçă. Қаçала сулăннă хĕвел çӳлĕ юмансем хыçнелле пытанасшăн. Ларма çав тери канлĕ. Çывăрма... Çывăрма тата канлĕрех пулмалла. Пĕрре çывăрса кайсан, сăпкари ача пек, ăшă та тутлă ыйхăпа çывăрмалла, тĕлĕк те курас çук...

«Анчах çывăракан сунарçă — сунарçă-ши вăл? Çук, вăл — сунарçă мар, ыйхă чăпти кăна. Пуринчен ытла халĕ, чĕрĕ те сывă, сисĕмлĕ пулмалла чухне, ун пек сунарçă ним тĕшне те тăмасть. Вăл пăшалне те, хăйĕн пуçне те çухатма пултарать».

Çакăн пек шухăшсем мана вăрман хӳттинче, тĕрлĕ-тĕрлĕ кайăксен пин-пин сасăллă юррисемпе ачашланса ларнă вăхăтра, çывăрма памарĕç: канăç çук, шухăш хыççăн шухăш, вĕçĕмсĕр шухăш... Вăл шухăшсем мана аттен тахçанхи калавне аса илтерчĕç.

2.

Уçланкă вĕçĕнче, эпĕ ларнă çĕртен инçех те мар, ĕлĕк Шăршлă Хĕлĕп утарĕ пулнă. Çав утара пĕр упа вĕреннĕ, каççерен тухма пуçланă. Хăш чухне ик-виç вĕлле çĕмĕрсе, пылĕсене юхтарса, ĕçсе кайнă. Çавăн çинчен ман атте те илтнĕ (пĕлессĕр килет пулсан, калам: вăл — ватă сунарçă).

— Атя упана,— тенĕ вăл хăйĕн тусне, сунарçă Петĕре.

— Атя!— килĕшнĕ лешĕ.

Вара пĕрре, çу пуçламăшĕнче, сĕм тĕттĕм каç, çаксем вăрмана кайнă та иккĕшĕ те йывăç тăрне хăпарса ларнă. Кĕтсен-кĕтсен, чăнах та, хайхи упа мĕшĕлтетсе те çитнĕ. Утарти вĕллесене йăвантара та пуçланă. Пыл хурчĕсем тĕттĕмре сĕрленĕ, нăйкăша-нăйкăша макăрнă.

— Кĕр-р-р-рĕс!— персе янă ватă сунарçă упа валли юриех пӳрне вĕçĕ пек тăхлан пульăпа авăрланă пăшалне. Каçхи сас калама çук вăйлă янăранă. Çурăлса кайнă пекех туйăннă сĕм вăрман. Çитменнине тата, упи урнă пек çухăрса янă: унăн хăрах ури çеç аманнă-мĕн.

Петĕр, эх, мĕскĕн Петĕр!.. Упана кĕтсе ларнă çĕртех çывăрса кайнă. Юлташĕ персе ярсан, çак çамрăк сунарçă пăшалĕ-мĕнĕпех йывăç çинчен татăлса аннă. Упа умнех ӳкнĕ. (Эсир пĕлмелле ĕнтĕ: аманнă упа калама çук усал, тискер). Упа тӳрех Петĕр çине сиксе ларнă, çамрăк «сунарçăн» пуç купташкине çапса аркатнă.

Чăнах та, Петĕр тăманаран та тăмана пулнă-мĕн, анчах тăмана каç çывăрмасть. Вăл Петĕр пек мар: кăнтăрла та пытанса çывăрать. Петĕр йышши этемсем вара упа умне йăванса ансан та, йывăр ыйхăран вăранаймаççĕ: вăхăтсăр ыйхă вăл — кахал апачĕ!— çакна ĕнтĕ эпир лайăх пĕлетпĕр.

...Паян эпĕ те нумай шухăшларăм. Шухăшсемпе таçтах çитрĕм.

— Çук, кĕлеткене йывăрлантарса ларас мар! Капла ларсан, çывăрса та кайăн!..— тесе сиксе тăтăм та малалла утрăм. Унччен те пулмарĕ — эпĕ тайăнса ларнă вырăн урлă, çăка çумĕпе, калама çук пысăк хура çĕлен чашкăрса кайрĕ. Çӳç-пуç вирелле тăчĕ.

«У-у-у, тискер чĕрчун, эпĕ çывăрнă пулсан, эсĕ манне, кăкăрăма шăтарса, чĕрем витĕр тухса кайнă пулăттăн»,— çӳçенсе илтĕм эпĕ.

## 3.

Акă хайхи утар. Халь вăл ялти куштан утарĕ мар,— колхоз утарĕ. Пуян утар: виççĕр утмăл вĕлле, чаплă омшанник, селĕм пӳрт. Йĕри-тавра лутра çăкалăх, пăт-пат хурăн, хĕрлĕ çӳçе... Илемлĕ вĕллесем хушшинче вăрман чечекĕсем темиçе тĕслĕн курăнса лараççĕ. Вĕсем çинче пыл хурчĕсем урлă-пирлĕ вĕçсе çӳреççĕ.

Акă эпĕ утар пӳртне çитсе кĕтĕм.

— Ха-а-а... кĕтмен сунарçă, килех, килех!— хавасланса йышăнчĕ мана утар хуçи уксах Микулай, пĕчĕк-

ренпех хурт-хăмăрпа тăрмашакан хресчен. Халĕ те вăл юратнă ĕçне пăрахмасть: колхоза кĕнĕренпех утарта ĕçлет. Тивĕç те! Мĕншĕн тесен вăл унăн чи юратнă ĕçĕ, чи лайăх пĕлекен ĕçĕ: ыйт — вăл сана хурт-хăмăр пурнăçĕ çинчен, вĕсен хăйне евĕр йăли çинчен тепĕр профессортан та аван ăнлантарса парать. Унăн чапĕ районĕпех сарăлнă. «Хурт ăсти Николай Петрович Чамушкин» тесен, ăна хамăр таврари ялсенче кашниех пĕлет. Николай Петрович хăй вара питех те ăшă кăмăллă, вашават çын.

— Кăçал пыл нумай илетпĕр. Куратăн-и, çăкасем мĕнле чечекленеççĕ?— тет Николай Петрович, утар таврашĕнчи çăкасем çинелле кăтартса.

— Вăйлă çурăлнă,— тетĕп эпĕ те.

Калаçнă хушăрах Микулай мучи утар умне тухрĕ те чейник илсе кĕчĕ. Сĕтел çине чей чашкисем пырса лартрĕ. Турилккесем çинче çăкăр, пыл.

Чейник пăсланса кăна ларать. Çав вăхăтрах:

— Телей, Чамушкин юлташ!— тенĕ сасă илтĕнсе кайрĕ уçăлнă алăк витĕр.

— Телейлĕ, чей тĕлнех пултăн эсĕ, Железнов юлташ,— хушрĕ çак сасса хирĕç Николай Петрович.

«Телейлĕ» сынĕ манашкал сунарçă, Тимĕр Кĕркурийĕ, иккен. Вăл нумаях пулмасть Хĕрлĕ Çартан таврăннă çамрăк. Çӳреме те çар тумтирĕпех çӳрет-ха. Пăшалĕ калама çук хӳхĕм, хăй вара снайпер пек,— пит те маттур перет: кайăк кăвакалĕсене вĕçсе пынă çĕртех персе ӳкерет.

— Ну, чей ĕçĕр, килĕр, юлташсем!— чĕнчĕ Николай Петрович.

Эпир, вăрман тăрăх çунса çӳренĕскерсем, пăшалсене стена çумне çакрăмăр та, пĕр сăмах чĕнмесĕрех, сĕтел хушшине кĕрсе лартăмăр. (Калама мансах кайнă Чамушкин юлташ çав вăхăтрах тата сунарçă та).

— Çăка кăчки чейĕ, пылĕ пĕлтĕрхи пыл, çăка пылех, шывĕ, паллах, вăрман шывĕ, уçă шыв...— хăналать пире утарçă.—Шăрăх чухне чей ĕçни аван вăл, атьсемĕр,— тет вăл стакансем çине çăра чей тултарса,—уçăлтарсах ярать...

— Да-а-а,— килĕшет Кĕркури, тарланă çамкине пиг тутрипе шăла-шăла.

— Хуртсем пирĕн мирлĕ пурăнаççĕ, кунта инçех мар тата тепĕр утар пур, Саватерсен утарĕ. Ни вĕсен хурчĕ-

сем вăрра килмеççĕ, ни пирĕн хуртсем вĕсем патне каймаççĕ. Вĕсем те ăс-тăнланса çитрĕç пулмалла...—калама тытăнчĕ пирĕн хурт ăсти хăйĕн юратнă ĕçĕ çинчен.

— Апат нумай,— хутшăнчĕ Кĕркури.

— Паллах, нумай, çапах та ĕлĕк хуртсен çав йăла пурччĕ.

Чей ĕçсе ларнă çĕрте ман хăлхана темĕнле шари-и-и! кăшкăрнă сасă кĕрех кайрĕ.

— Чим-ха, чим! Қамсем йăслаççĕ?— ыйтрăм эпĕ сасартăк.

— Виç-тăват ача çырлана килнĕччĕ. Çавсем пулĕ,— терĕ утарçă, эпĕ тĕлĕнсе ыйтнине хирĕç. Унччен те пулмарĕ, пĕр арçын ачапа виçĕ хĕрача, пурте шкул çулĕнчискерсем, чупса та çитрĕç. Хăйсем хăраса ӳкнĕ. Сăмах та чĕнеймеççĕ.

— Ĕç-лен, ĕç-лен...— сывласа илеймесĕр калать хурлăхан пек хура куçлă хĕрача.

Эпĕ ăнлантăм. Вĕсем çав эпĕ курнă çĕленех курнá пулмалла. Хура çĕлен вĕсен çулĕ çине те шуса çитнĕ. Вĕлермелле ăна!

— Аçта?— ыйтрăмăр эпир.

— Тунката çинче чăшлатса выртать,— терĕç çырла пĕрнисем йăтнă ачасем.

— Айтăр, кайса вĕлерер!— хавхалантарчĕ Железнов юлташ,— сĕтел хушшинчен сиксе тăрса.

— Айтăр!

## 4.

Ачасенчен пĕри, арçын ача, Ким ятлăскер, пире çăл патнелле çӳлĕ курăксем хушшипе пыракан сукмакпа илсе кайрĕ. Çăл патĕнчи пĕчĕк кĕпер тĕлне çитсен, вăл шăмат кĕпçинчен тунă шăхличĕпе ĕшне еннелле тĕллерĕ те:

— Ав лере, инçе те мар, куратăр-и, хăмла çырли аврисем хушшинче юман тункатисем, çавăнта, сарлака тунката çинче выртать,— терĕ.

— Куратпăр, куратпăр,— терĕ Кĕркури пуриншĕн те. Унтан пирĕн çинелле пăхса:—Эпир ăна тунката çинчен антармастпăр, пурте харăс перетпĕр те ала пек тăватпăр.— терĕ тăшмана йĕрленĕ чухнехи пек шăппăн.

Виççĕн виçĕ пăшалпа, кашни пеме хатĕр пулса, хăяхлă та хăмăшлă йĕпе çырма урлă вĕтĕ хупах пусса

илнĕ ĕшне еннелле утрăмăр. Инçе те мар, çырма пуçĕнче, хырпа чăрăш вăрманĕ. Яштака каччă пек чăрăшсемпе çӳлĕ йăрăс хырсем хушшинче кăтра пусла шурă хурăнсем тĕлĕрсе лараççĕ. Авăссем те пур. Вĕсен кĕмĕл тенкĕ пек çулçисем хуллен-хуллен алă çупмалла выляççĕ.

Йĕри-тавра сарă, шурă, кăвак чечексем, хăмла çырли аврисем, вĕсем çинче — пиçсе çитнĕ, пуç пӳрне вĕçĕ пек, çырласем. «Пĕрерĕн-пĕрерĕн татса хурасчĕ вĕсене хурăн пĕрнене, ах, паха-мĕн, ах, хитре-мĕн çырлисем... Татасчĕ те çиесчĕ вĕсене!» — шухăшлатăн ирĕксĕрех.

Пĕлĕтре шаланкăсем макăрса вĕçеççĕ. Анса ларма хатĕрленнĕ хĕвел ылтăн урисемпе вăрман хыçне, таçти инçетри çĕршыв çине, ярса пуснă та, куç хĕссе хăйĕн тулăх çутине вăрман çинелле сапса тăрать, ылтăн вир акать, тейĕн...

Чечексемпе çырласем çинчен куç каймасть, — илем, илем... Мĕнле хитре кĕтес!..

Анчах... пирĕн урасем айĕнчи хăрăк туратсем шăтăрт-шатăрт хуçăлчĕç те çатма пек юман тĕпĕ çинче канса выртакан хура çĕлен йăшаланма та пуçларĕ, пуçне çӳлелле çĕклерĕ...

Мĕнле тискер, сивĕ чĕрчун, хура юн, ирсĕр çĕленкалта!

Акă вăл пуçне тата та çӳлерех çĕклерĕ, çĕклерĕ те, çăварне карса, наркăмăш тултарнă сăннине кăларчĕ. Пăнтă-пăнтă, пиçсе çитнĕ çырласемпе сап-сарă та кăн-кăвак чечексем хушшипе авкаланса, пуçне çавăркаласа йĕритавралла сĕмсĕррĕн пăхать.

«Шикленмелле... Çав тери илемлĕ вырăнта çав тери пысăк хăрушлăх: ан ирĕлсе кай, юлташăм, чуна шĕветсе яракан, чĕрене, кăмăла ачашласа çупăрлакан илемпе киленсе, ан сывăр, — сывăракан тăманашăн, йывăр шăмшакшăн хайхи Петр «сунарçă» пек ыйхă чăптишĕн, пĕр сисĕмсĕр этемшĕн инçе те мар, акă, пирĕн умрах — вилĕм!» — çитрĕç те çапрĕç пуçа вĕри шухăшсем.

— Хатĕр-и? — пăшăлтатрĕ пирĕн хĕрлĕ командир, Железнов юлташ.

— Хатĕр!..

— Пуçĕнчен... Пĕрре, иккĕ, виççĕ...

«Виççĕ» тесен, виçĕ пăшал сасси, вăрмана кисретсе, таçта çитиех кĕрлесе кайрĕ. Хура çĕлен пуçне тепĕр хут çĕклеме те ĕлкĕреймерĕ. Тинех пĕтрĕ унăн хашлатса

выртасси,— çав кирлĕ ăна хура çĕлене, çав кирлĕ çĕр çинчи пĕтĕм ирсĕр çĕлен йăхне!..

Николай Петрович юман тункати патне пынă-пымасăр кăшкăрса:

— Ку вара, атьсемĕр, чăн-чăн йăйăр çĕлен! Кун пеккисене ăçта курнă — çавăнтах вĕлермелле!— терĕ ялан хинчен те çирĕп сасăпа.

...Çакăн пек йăйăр çĕлен пĕррехинче пирĕн кӳршĕ арăмне, Кулюк инкене, утă çулма кайсан, сисмен çĕртен пырса сăхнăччĕ. Кулюк инке тин çеç çулса пăрахнă утă çинче виçĕ уйăхри ачине кăкăр ĕмĕртсе ларнă. Ачи, ачашшăн йăпанса, амăшĕн кăкрине ĕмнĕ; амăшĕ, унăн пиçсе çитнĕ çырла пек пичĕ çине пăхса, çывăртăр-ха ку тесе, çемçен лăпканă. Сисмен те!— сĕмсĕр те ирсĕр çĕлен, курăк хушшипе пытанса, йăпшăнса пынă, ача амăшне, кăкăртан сăхма ĕлкĕрнĕ. Ача амăшĕ шыçăнса кайнă, ачи — унăн ăшне пăсăк сĕт лекнĕ пирки варвиттие ернĕ. Сăхнă!— çавăн пек ĕнтĕ çĕленĕн йăли, çавăн пек çĕлен-калтасен законĕ...

— Фашист пек çĕлен!— хыттăнах каларĕ Железнов юлташ.

— Çапла!

— Ахаль мар ĕнтĕ ĕççыннисем фашиста Schlange, çĕлен * теççĕ.

— Тĕрĕс, Николай Петрович, ирсĕр шленгесене пĕтермелле!— терĕмĕр эпир пурте пĕрле, çак хура та ирсĕр çĕлене тĕп тунăшăн чĕререн савăнса.

## 5.

...Çак ĕç пулнăранпа тăватă çул иртрĕ. Унтанпа эпĕ Чамушкин юлташа, хурт ăстине, курманпа пĕрех. 1941 çул Германи фашизмĕ пирĕн Тăван çĕршыв çине ултавлăн тапăнса кĕнĕ кунсенче эпĕ, Çĕмĕрлĕрен таврăннă май, тăван кĕтесе — хамăр колхоз утарне кĕтĕм. Николай Петрович каллех мана хăналама тытăнчĕ. Пирĕн хушăра сăмах хыççăн сăмах пуçланса кайрĕ. 1937 çулта виçĕ пăшалпа персе ирсĕр çĕлене вĕлернине аса илтĕмĕр.

— Фашист пек çĕлен...— терĕм эпĕ, Тимĕр Кĕркури сăмахĕсене астутарса.

---

* Çĕлен, die Schlange сăмах чăвашпа нимĕç тата ыт. халăхçен чĕлхисене хунсен чĕлхинчен кĕнĕ пулмалла.

— Чим-ха, эсĕ пĕлетĕн-и, Железнов юлташа «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденне панă... Чаплă командир вăл... Железнов ертсе пыракан рота виçĕ кун хушши фашистсен тылĕнче çапăçнă. Вĕсен штабне аркатнă, икĕ взводне пĕтерсе тăкнă. Виçĕ гитлеровеца Железнов юлташ хăй персе пăрахнă. Кашнинчех чĕререн тивретнĕ...—калама тытăнчĕ Чамушкин. Унтан вара, пăсланса ларакан чейникрен стакансем çине чей тултарчĕ те:

— Железнов хамăр колхоза çыру та ячĕ-ха,— тесе мана темĕнле хаçат тыттарчĕ. Вăл çырăва районти хаçатра пичетлесе кăларнă-мĕн.

«...Эпĕ,— тесе çырать паттăр командир,— «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденне илме тивĕçлĕ пултăм. Тав тăванăмсене, ял-йышсене, халăха, Тăван çĕршыва, партие,— эсир мана пăхса ӳстертĕр.

Тăван çĕршыв, анне, эпир санăн ывăл-хĕрӳсем, çĕнĕ пурнăç çыннисем, яланах кар тăрса, пĕр çын пек пулса, сана хӳтĕлĕпĕр!

Анне, сан ывăл-хĕрӳ çине ирсĕр çĕлен шăвăнса пырать пулсан, вăл, санăн ывăл-хĕрне сăхас тесе, наркăмăшлă сăннине кăларать пулсан,— эсĕ çав çĕлен çине пĕтĕм хаярлăхпа тухса, çил пек ыткăнăн.

Анне, сан патна çав çĕлен шуса пырать пулсан, вăл сана сăхасшăн пулсан, юратнă ывăлусем Юман-паттăр пек, Тимĕр-паттăр пек, Ту-паттăр пек кĕрешĕç, çĕлен пуçне çапса аркатĕç, кĕлеткине касса-ваклĕç, çунтарĕç те кĕл туса вĕçтерĕç!..

Тĕп пултăр фашизм — ирсĕр çĕлен-калта!»

*Ильинка-Шупашкар, 1937—41*

# ВĂРÇĂ КАЛАВĔСЕМ

## ТАВАН ÇĔРШЫВ ЮРРИ

### I.

...Çутă уйăх, хуллен-хуллен пулин те, малаллах, малаллах шăвать. Салтаксем канаççĕ...

Çурхи юр çине симĕс чăрăш тураттисем сарнă. Гаврил Волгин та çакăнтах выртать. Вăл, тĕлĕрсе илес тесе выртнă çĕртех, çутă уйăха курсан çухатрĕ: те сывăрса кайрĕ, те сывăраймарĕ,— хăй те пĕлмест. Анчах унăн хăлхине тĕлĕнмелле сасă çитсе кĕчĕ те, вăл хăйĕн ывăнса çитнĕ кусĕсене лайăхрах уçса пăхрĕ, тимлĕрех итлеме тытăнчĕ. Кăштах вăхăт иртсен, Волгин тавсăрса илчĕ: вăрманта такам янраттарса купăс калать. Унăн сасси таçтах, таçтах каять. Урăх вара ним сасси те илтĕнмест. Вăхăтлăха тунă хӳшĕсемпе палаткăсенче салтаксем сывăраççĕ. Яштака чăрăшсем хушшинче часовой каллĕ-маллĕ утса çӳрет, сыхă та чĕрĕ куçĕсемпе, хăлхипе вăрман шăплăхне сăнать, итлет...

Уйăх ĕнтĕ кăштах аяккалла сулăннă. Ака вăл вăрман уçланки витĕр лайăхрах курăнма пуçларĕ: Гаврил, амăшĕ чĕннĕ пек каласан, Кавruk, сутă уйăх сине пăхса, тутлăн тĕлĕрсе выртнă чухне амăшĕн юмахне аса илчĕ. Çав хĕр тахçан-авал пурăннă, тет, пĕррехинче шыв ăсма кайнă, тет те, шыв кĕвенти, чĕресси-мĕнĕпех, унăн черчен хулпуççийĕ çинче шăнса ларнă, тет. Халĕ çав пике-хĕр уйăх çинче пурăнать, тет.

Уйăх çинчи хĕрĕн яштак пĕвĕ Дина кĕлетки пек... Каснă-лартнă Дина. Çав хĕр кам-ши вăл? Дина марши?..— Çакăн пек шухăшсем пырса кĕреççĕ тĕлĕрсе выртакан Кавруk пуçне.

Купăс сасси пĕрре вăйсăрланать, тепре йывăссем айĕн кассăн-кассăн янраса килет те вăйлăрах, вăйлăрах илтĕнме тытăнать. Унăн сасси канса выртакан салтаксене ачашлать, тĕлĕнмелле кĕвĕсем каласа парать. Чăн

та, вăрманта, кĕç ак çапăçăва каяс умĕн, чăрăш тураттисем çинче канмашкăн, тăван амăшĕн сăмахĕсене аса илме, купăс сассине итле-итле тĕлĕрме çурхи каç питех те лайăх иккен...

Мĕн чухлĕ нумайрах тĕлĕрсе выртатăн — купăс сасси çавăн чухлĕ илемлĕрех илтĕнет. Унăн тăван кĕвви чун-чĕрене ыталать те кăмăла пырса тивет. Тĕлĕнмелле купăсçă Атăл юррине калать пулас...

Меж крутых бережков
Волга-речка течет,
А по ней, по волнам,
Легка лодка плывет...

Купăс мар — ку юрра хĕр-пике, савнă хĕр, варли юрлать пулас. Çук, купăсçă купăсне çеç калать, юррине хитре сасăллă чĕвĕл кайăк чĕкеç е чепчем юрлать. Атăл юррине шăрантарать вăл...

Атăл сынни, хăйĕн хушамачĕпе такама та анлă Атăла аса илтерекен юлташ, каллех тĕлĕрет те тĕлĕк курать.

Каврук Шупашкарта хресчен çурчĕ тĕлĕнче тăрать пек. Унăн умĕнче Атăл-атте чăплă юханшыв сарăлса выртать. Ниçта та мар, шăпах тăван хула тĕлĕнче вăл, пирĕн Атăл, анлă та тарăн, пуринчен те илемлĕ, пуринчен те паха. Атăлăн чи илемлĕ вырăнĕ — Шупашкар тĕлĕнче теттĕмĕр эпир те ача чухне. Анчах халĕ Атăл тăрăх каятпăр та çакна куратпăр: Атăл пур çĕрте те хитре, атте-анне пек çывăх...

Атăл çиййĕ тăп-тăрă, тӳлек, мăн кăмăллă хĕр пичĕ пек. Хутран-ситрен çеç унта-кунта ылтăн пулă сиксе илет. Пулă чăмнă хыççăн пĕчĕк хумсем унккăн-унккăн чупса каяççĕ, унтан вара таçта çитсе çухалаççĕ.

Атăл пичĕ тĕкĕр пек. Çамрăк уйăх çӳлтен пăхать те сăнне курать. Хайхи шыв ăсан хĕр шыва кĕрет. Инçе те мар Атăл тăрăх пĕр пĕччен кимĕ майĕпен ярăнса пырать. Пĕчченçĕ кимĕç купăс калать. Шыва кĕрен хĕр-пике, хăйĕн сарă кăтра çӳçне ылтăн турапа вăраххăн та çепĕççĕн тураса, купăс кĕввипе юрă юрлать.

Ах, хитре-çке хĕрупраç юрри! Чĕкеç сасси пек унăн сасси!.. Савăк юрра Атăл вăрманĕ итлет — алне çупать, ташне ташлать. Пытанса, чупса килекен çил ачи сар хĕрĕн юррине инçе-инçе ăсатать. Атăл урлă, тинĕс урлă вĕçтерет.

Унта каллех вăрман.

Çав вăрманта ват карчăкпа ват старик пурăнать, тет. Вĕсем ылтăн шăллă, кĕмĕл шăллă, тет. Юрă юрлан хĕр çавсен хĕрĕ, тет, кимĕ çинчи йĕкĕт-купăсçă хĕрĕн варли, чун савни, тет...

Кам юрлать-ши ку юрра? Мĕн ятлă-ши хĕрĕпе каччи, ик çамрăк?..

Купăс сасси хуллен-хуллен çывхарса килет, пит-куçа ăшă çил пек ачашлать. Илемлĕ те савăк сасă чĕрене, чуна çĕклет, хытнă кăмăла çемçетет, хавшаккине çунатлантарать, çĕклет, юрлама чĕнет...

Кимĕ шăвать, купăс сасси ытарма çук хитре.

Он ко бережку плыл,
Лодку вмиг привязал,
Сам на берег взошел,
Соловьем просвистал.

* * *

...Хӳшĕре шăпах. Тимĕр кăмакара хурăн вутти çунса пĕтнĕ, кĕл пулса выртнă. Хӳшĕри ăшă тахçанах çутçанталăка тухса кайнă. Кĕç-вĕç анса ларас уйăх вăрман хыçне çитнĕ те салтаксем çине ачашшăн пăхса тăрать. Çурхи каç сивви: «Тăрас пулать!»— тесенех пирĕн салтаксем пурте вăранса кайрĕç.

Ытти хӳшĕсенчи красноармеецсем те ура çинче ĕнтĕ. Вĕсем, уçланкăсене тухса, пит-куçĕсене юрпа çурĕç те тепĕр сехетрен, уйăх анса тĕттĕмленсен, вăрман витĕр, хăйсем хывнă çулпа, малалла, çапăçу кĕрлесе тăнă çĕре, ушкăнăн-ушкăнăн, умлăн-хыçлăн тухса кайрĕç.

Тĕлĕкри пек шăп вăрман, Совет çĕрĕ çинчи шурă юр пирĕн салтаксене малалла çул параççĕ.

## 2.

Çапăçăва каякан батальон, Волынь ялĕ патĕнчен тытăнса, Вишерка юхан шывĕ тăрăх утрĕ. Çуркунне, çывхарсах, çывхарсах килет пулин те, шыв çинче пăр çирĕп-ха. Пăр, йĕтем пек, тап-таса, анчах шатрарах, утмашкăн чух çеç.

Çыран тăрăх вăрман. Çӳлĕ чăрăшсем ретĕн-ретĕн карталанса тăраççĕ, турачĕсене хуллен-хуллен силлесе, пирĕн салтаксене ăсатаççĕ. Малаллах, малаллах кайса пыраççĕ вăрçа тухнă маттур йĕкĕтсем.

Волгинпа юнашар Иван Затулывитер утса пырать. Украина ҫынни, вăтам пÿлле салтак тем ҫинчен шухăшлать пулас: мĕн вырăнтан тапраннăранпах пĕр сăмах та шарламасть. Анчах та Иван мĕн шухăшланине пĕлме йывăрах мар. Вăл ĕнер те, паян ирхине юрпа пит ҫунă чухне те хăйĕн тăванĕсене ятран аса илчĕ, асран каймн Днепр юханшывĕ ҫинчен пĕр ҫаврăм юрă юрларĕ.

Враг напал на нас, мы с Днепра ушли.
Смертный бой гремел, как гроза.
Ой, Днепро, Днепро, ты течешь вдали,
И волна твоя, как слеза.

Халĕ те вăл хуллен, хăй ҫеҫ илтмелле юрласа пырать:

Из твоих стремнин ворог воду пьет.
Захлебнется он той водой.
Славный час настал — мы идем вперед.
И увидимся вновь с тобой.

Иванăн амăшĕпе чун савниййĕ нимĕҫ тыткăнĕнче. Нимĕҫ фашисчĕсен тыткăнĕ — чи усал, чи ирсĕр, чи намăс тыткăн пулнине Иван пĕлет. Ҫамрăк ҫын унта лексен — часах ватăлать, вăхăтсăр вилет...

Украина ҫынни Иван Алексеевич Затулывитер паян та тăван ялĕ, тăван уй-хирĕ ҫинчен шухăшлать.

«Украина — пуян ҫĕршыв; тимĕр-тăмăр, хура тăпра, ылтăн ыраш,— хăҫан сана ирĕке кăларăпăр-ши, хăҫан ҫав ирсĕр тăшмана, ҫичĕ юта, нимĕҫ ҫăткăнĕсене ҫĕршывран хăваласа ярăпăр-ши?..» — ҫакăн пек Иванăн яланхи шухăшĕсем.

Каврук пуҫĕнче те ҫакнашкал шухăшсемех. Халĕ пурин те — Иванăн, Каврукăн тата ыттисен те пĕр шухăш ҫеҫ пулма пултарать. Тăшман пирĕн ҫĕр ҫине килчĕ пулсан — пăшал тыт та тăшмана хирĕҫ тух. Тăшман вăйлă, анчах пирĕн халăх йышлă ҫеҫ мар, вăл паттăр та, вăйлă та, хаяр та; тăшман сăхă, ҫăткăн, анчах пирĕн халăх та, ăшă кăмăллă пулин те, ҫиленме пĕлет, ҫĕнтерме пĕлет. Тăшман пирĕн ҫула картлать, анчах пирĕн ҫул ҫутă, вăл ҫутта никам та хуплаймĕ... Хальхи вăрҫă тамăк пек, ҫапах та эпир хăраса тăмăпăр: ҫĕнтерӳ пирĕн енче пулĕ!..

...Шухăшсем вĕҫленчĕҫ те, Каврук хăйĕн юлташне, Ивана, аллинчен тытса:

— Фашистсене хирĕç çапăçнă чух эпĕ вилсен, эсĕ, тусăм, Иванăм, манăн савнă хĕрĕм патне çыру çыр...— терĕ.

Затулывитер хаярланса кайрĕ те:

— Ун пек ан кала!— татса хучĕ Каврукăн шухăшне. Çакăн хыççăн Каврук нимĕн те шарламарĕ.

— Эпĕ, Иван Затулывитер, вилĕм çинчен шухăшламастăп.

— Эпĕ те, Гаврил Волгин, шухăшламастăп, эпĕ Дина çинчен çеç каласшăн пултăм...

— Пĕлес тетĕн пулсан, хам шухăша каллех калам: Ивансен, Гаврилсен пурăнмалла тĕнчере. Пурнăç тумалла, пурнăçа сыхламалла, кăкăрпа хӳтĕлемелле!..

— Затулывитерсем пулмалла!— килĕшрĕ Каврук.

— Эккей!— терĕ Иванĕ.

### 3.

...Кăштах кайсан, Иван уçă сасăпа, анчах хуллен те вăрахăн Украина халăхĕн юррине юрлама пуçларĕ..

Реве та стогне Днипр широкий,
Сердитый витер завива...

— Сердитый витер...— терĕ вăл пĕр çаврăм юрă юрланă хыççăн. Унтан вара хăйĕн хушамачĕ мĕне пĕлтерни çинчен калама тытăнчĕ.

— Эсир,— терĕ Иван,— Затулывитер пирĕн чĕлхере мĕне пĕлтернине пĕлес тетĕр пулсан, эппин, каласа парам. Затулывитер — çиле картла, сивĕ çилрен хӳтĕле... тенине пĕлтерет. Сана сивĕ пулсан, эпĕ хамăн кĕлеткемпе хӳтĕлĕп, сана вара ăшă пулĕ, кăкăру та, чуну та, чĕрӳ те ăшăнĕ... тенине пĕлтерет вăл. Эсир те, тусăмăрсем, эпĕ те пĕр-пĕрне пăрахмăпăр. Эпĕ шанса кайсан, эсир мана ăшăтăр, сивĕ çил тĕлне тăрса кĕлеткĕрсемпе картлăр... Эпĕ те çавăн пекех тăвăп. Çавăнпа та, хамăр çине шанса, пĕр-пĕрин вăйне ĕненер...

Каврукпа Ваган Гургенидзе хумханчĕç, çывăх юлташĕн ырă кăмăлтан та ăшă, мамăкран та çемçе сăмахĕсене илтнипе вĕсен чĕрисем эрленчĕç... Çак вăхăтра Иван хăйĕн савнă юррине каллех хуллен-хуллен, кăшт çеç илтĕнмелле сасăпа юрларĕ те кĕтмен çĕртенех:

— Çав купăса кам каларĕ?— тесе ыйтрĕ хăйĕн юлташĕсенчен.

— Мĕнле купăса? — ыйтăва хирĕç ыйту пачĕ Гургенидзе. Каврук вара ку чухне нимĕн те чĕнмерĕ.

— Купăс каласа Украина юррине çĕр хута шăрантараканскер кам пулчĕ ара? — ыйтрĕ каллех Затулывитер.

— Мĕнле?.. Украинă юррине теместĕн-и çак, — хирĕçлерĕ каллех Гургенидзе.

— Ну эпĕ юратакан юрра... Реве та стогне Днипр широкой... — ăнлантарчĕ Иван, çурри юрласа, çурри каласа.

— Вăл Украина юрри мар, урăх çемĕ — грузинсен юррине, шăпах эпĕ юратакан «Сулико» юрра кĕвĕлесе каларĕ, — пӳлчĕ Ивана унăн юлташĕ Ваган Гургенидзе.

— Эпĕ хам илтрĕм. — Сассине хăпартрĕ Иван.

— Эпĕ те хам илтрĕм. — Парăнмарĕ Ваган.

Украинецпа грузин пĕр-пĕринпе тавлашса пынине итленĕ хыççăн Каврук тĕлĕнсех кайрĕ. «Мĕнле-ха апла? Кам тĕрĕс калать? Хăшĕ мĕнле юрă илтнĕ?» — шухăшларĕ вăл.

Чăваш Атăл юррине аса илчĕ. Унăн умне тăван Атăл тухса тăчĕ. Хумханчĕ, шавларĕ... Кĕмĕл хумĕсемпе пĕрпĕччен кимме силлерĕ...

— Эсир, — терĕ Каврук, — ун чухне иксĕр те çывăрса кайнă. Çавăнпа та купăс кĕввине тĕрĕс илтеймен.

— Мĕнле илтеймен? — тапăнчĕç Иванпа Ваган чăваша.

Унтан вара вĕсем виççĕн виçĕ тĕрлĕ каларĕç.

— Грузин юрри, — терĕ пĕри.

— Украина юрри, — терĕ тепри.

— Атăл юрри, — терĕ чăвашĕ.

4.

«Сулико» юрра Каврук та чун-чĕререн юратать. Çак юррăн кĕввине илтсен е ун çинчен калаçма тытăнсан, яланах хăйĕн юратнă хĕрне аса илет. Ун пек чухне вара унăн куçĕ умне грузин хĕрĕ Дина тухса тăрать.

Çав ăшă кăмăлпа тулнă, илемлĕ юрра Каврук пирвайхи хут Геленджик хулинче илтнĕ. Çамрăк артистка Дина Н. юрларĕ ăна ун чухне — çуллахи каç. Каврук грузин хĕрĕпе паллашма тăрăшрĕ. Кун пек чухне майĕ часах килет: сăлтав хыççăн сăлтав тупăнчĕ те, вăл хĕрпе паллашрĕ. Çав инçетри хулара, Хура тинĕс хĕрринче,

вӗсем пӗр-пӗрне юратса пӑрахрӗҫ, пер-пӗрне чечек пек илемлӗн, ӑшшӑн курӑнчӗҫ...

Грузин хӗрӗ чӑвашла пӗлмест, вырӑсла та аран кӑна перкелешет, чӑваш каччи грузинла пачах пӗлмест, анчах та ҫамрӑксен чӗрисем пӗр-пӗрне часах ӑнланчӗҫ. Вӗсен пулас юрату ҫинчен калакан куҫӗсем ӑшӑ сӑмахсем тупрӗҫ, хумлӑ тинӗс хӗрринче шурӑ пысӑк чулсем ҫинче каҫ кӳлӗм ларнӑ чухне вӗсем калаҫма вӗренчӗҫ, пӗр-пӗрне ӑнланакан пулчӗҫ...

Каврук халӗ фронтра, Ленинград ҫывӑхӗнче. Дина инҫетре-инҫетре, хӗвеллӗ Грузи ҫӗршывӗнче. Каврукӑн ҫунатлӑ ӗмӗчӗ — Дина сӑнарӗ. Хӗр яланах Каврук ҫине пӑхать. Каврук ӑна хӑйӗн шухӑшӗсемпе курать. Акӑ вӑл, чакӑр куҫлӑ, хура кӑтра ҫӳҫлӗ хӗр — панулми, ҫырла... Пӗвӗ унӑн яштака. Сасси вара... Уҫӑ та илемлӗ сасси ҫамрӑк каччӑн чӗрине сивӗ каҫхине те ачашласа ӑшӑтать, юрату ӑшшипе ыталаса ҫемҫетет. Ӑшӑ ҫил, кӑнтӑр ҫилӗ вӗрет пек, тусем хушшипе йӑпшӑнса килет пек. Ҫил вӗрнӗ, вӗҫтернӗҫемӗн грузин хӗрӗн ӳка пек кӑтра ҫӳҫӗсем ҫырла пек пичӗ ҫине ункӑн-ункӑн усӑнса анаҫҫӗ, хӗрӗн ҫепӗҫ аллисем вӗсене йӗркелеҫҫӗ.

Пӗрре курӑнать, тепре ҫухалать Дина сӑнарӗ. Анчах Каврукӑн шухӑшӗ ҫухалмасть. Ҫӗнтерӳ урлӑ выртать Дина патне каймалли ҫул. Новгород витӗр, Псков, Таллин, Рига, Вильнюс витӗр каяс пулать ун патне. Дина патне каяс пулсан, Берлинра пулас пулать...

Тен, Дина халӗ «Сулико» юрра хӑйӗн чӗвӗл сассипе тӑван ҫӗршывӗнче юрлать, тен, вӑл та Каврук ҫинчен шухӑшлать, ӑна ҫипрен ҫинҫе шухӑшсемпе курать, ҫамрӑк чӗрипе туять...

— Грузин юррине каларӗ купӑсҫӑ, — тесе утать Ваган. Хӑй хуллен-хуллен «Сулико» юрра юрлать.

Шухӑша кайнӑ Каврукпа Иван нимӗн те шарламаҫҫӗ.

— Эсӗ, Каврук, епле-ха ху юратнӑ хӗрӗн юррине те уйӑрса илеймерӗн? — ыйтать Ваган, кӑштах кулса.

— Чӑнах та, — хутшӑнать Иван, — тӗлӗнмелле санран Каврук. Мӗнле-ха эсӗ апла пӗлеймерӗн, уйӑрса илеймерӗн? Мӗнле-ха?..

...Вӑрман хӗррине ҫитсен: «Привал!» тени илтӗнсе кайрӗ.

— Эсӗ, Новиков юлташ, паян ирхине купӑсупа мӗн-

ле çемĕ каларăн çак?— ыйтрĕ Затулывитер пĕр çамрăк та лутра красноармеецран.

— Тăван çĕршыв юррине,— терĕ Новиков Затулывитере хирĕç.

Çакна илтсен, Каврукăн шухăшĕ, çипрен те çинçескер, татăлчĕ, вăхăтлăха Дина та çухалчĕ. Каврук чăтаймасăр ыйтрĕ:

— Атăл юрри çеммине каламарăн-и?
— Çук.
— Днепр юррине тата?
— Ана та каламан.
— Сулико юрра?
— Ана та каламан.

Новиков кăштах шухăшларĕ те:

— Çĕршыв юррине вара висĕ хутчен каларăм, чарăна-чарăна каларăм,— терĕ.

— Чăнах-и?

— Чăнах пулмасăр, чĕнах. Çав юрă каçпа уйăх çутинче питех те лайăх тухать, çав тери кăмăллăн илтĕнет,— терĕ Новиков малалла.

— Ну, эппин, купăс туп та тепре кала!— хушрĕ Ваган.

— Кала, çĕршыв юррине кала!— терĕç Каврукпа Иван.

Купăсçă Новиков красноармеец, Мускав сывăхĕнчи вырăс, ытти юлташĕсем патне малалла чупса кайрĕ те тĕттĕмлĕхре çухалчĕ. Тепĕр самантран хайхи купăс сасси илтĕнчĕ.

Батальон командирĕ Чистяков, çамрăк капитан, çакăн хыççăн купăссă патне пычĕ.

Новиков купăса шăрантарать. Ун патĕнче Иван, Каврук, Ваган. Ытти салтаксем те пухăнчĕç.

— Айтăр пĕрре çĕр çĕмĕрттерсе юрлар!— терĕ тутар çынни Тимиргалин старшина.

— Айтăр-— хутшăнчĕ Шухман писарь.

— Айтăр! Айтăр!— терĕ вырăсла калаçакан Амерханов — çивĕч каччă, казах. Юрлас текенсемпе Барауля белорус та килĕшрĕ.

Çакăн хыççăн вара вăрман хĕрринче, тарăн çырмара, тĕттĕмлĕхре, çĕршыв юрри янăрарĕ. Паттăр сасăсем, çĕр çĕмĕрсе, вăрман тăрăх вĕçрĕç. Вырăсĕ вырăсла

юрларĕ, тутарĕ, казахĕ, пушкăрчĕ, белорусĕ хăйсен чĕлхипе юрларĕç. Иван Затулывитер — украинла. Ваган Гурганидзе — грузинла, Қаврук чăвашла юрларĕ.

Широка страна моя родная,
Много в ней лесов, полей и рек.
Я другой такой страны не знаю,
Где так вольно дышит человек.

*Март, 1943*

## ТĔЛĔНМЕЛЛЕ ВИНТОВКА

1.

Пĕрре, хĕллехи ăшă кун, Волхов фронтĕнче чухне, манăн Рушиново ялĕн çулĕпе вăрман витĕр каймалла пулчĕ. Вăрманти çул тăвать еннелле кайнă çĕре çитрĕм те пĕр салтака тĕл пултăм. Ниçталла кайма пĕлмен пирки вăл иртен-çӳренсене кĕтсе тăрать-мĕн. Эпĕ салтакпа танлашрăм, ун çине тимлĕн пăхма тытăнтăм. Лутрарах çын вăл. Пичĕ сарлака, сăнĕ тĕксĕм, тăнлавĕсем мăкăрăлса тухса тăраççĕ. «Ку е тутар, е чăваш»,— тесе шухăшларăм эпĕ.

— Командир юлташ,— терĕ салтак вырăсла, тытăнчăклăрах тухакан сассипе,— манăн Н-ски полка каймалла. Эсир мана çул кăтартса ямăр-ши?

«Ку çын тутар пулĕ...» шухăшларăм каллех: сăмахсене вăл тутарларах çавăрса калаçать.

— Кăтартса парасса парăп та... анчах эсĕ кам пулатăн?

— Эпĕ — Терентьев салтак.

«Терентьев»— тесен, эпĕ иккĕленмесĕрех:

— Эсĕ чăваш мар-и?— тесе ыйтрăм малтанлăха вырăсла.

— Чăваш,— пĕлтерчĕ Терентьев, тутарларах акцентпа.

Эпир иксĕмĕр те тăван чĕлхепе калаçма тытăнтăмăр. Терентьев, Никифор Антонович, хĕрĕх çулта. Вăл пушкăрт хушшинчи чăваш ялĕнче çуралса ӳснĕ. Унăн чĕлхинче чăвашла, пушкăртла сăмахсем пĕрлешсе кайнă. Çавăнпа та вăл пирĕн пек мар, кăшт урăхларах калаçать.

Эпĕ хам та Н-ски полка каятăп та... çула май, иккĕн пĕрле утрăмăр. Манăн юлташ пулчĕ вăл. Вăрман çулĕ çинче эпир иксĕмĕрех пултăмăр.

Пирӗн умра хӗллехи яка ҫул тӳп-тӳрӗ куранса выртать. Йӗри-таврa чӑрӑш вӑрманӗ. Ҫил ҫук. Хӗл хӗллекен кайӑк-кӗшӗк — кӑсӑясемпе уйӑпсем тата темӗнле ытти кайӑксем, турат ҫинчен турат ҫине сиксе, хайсен ҫепӗҫ чӗлхипе чӗвӗлтетеҫҫӗ. Пӗр-пӗринпе тем калаҫаҫҫӗ. Пирӗн сасса илтсен, кӑштах хӑраҫҫӗ те фашистсем ҫунтарса янӑ ял еннелле, уҫланкӑ урлӑ, пӗрин хыҫҫӑн тепри вӗҫеҫҫӗ.

Ҫапла, пӗрле утнӑ май, Терентьев салтак мана хӑй пурнӑҫӗ ҫинчен каласа, хӑй вӑрҫа мӗнле килни ҫинчен пӗлтерчӗ. Юлашкинчен:

— Сире тата тепӗр истори каласа парам-ха,— терӗ вӑл, тем ҫинчен аса илсе.—Ку ӗҫ 1919-мӗш ҫулта пулса иртнӗччӗ...

Никифор Антонович каласа панӑ «историе» эпӗ, хамӑр ҫӗр пӳрте таврӑнсанах, васкаса хут ҫине ҫырса хутӑм, асӑнмалӑх юлтӑр, терӗм.

...«Ҫип ҫинҫе ҫӗртен татӑлать», тенӗ ӗлӗк ваттисем. Ҫинҫе ҫип пекех пулнӑ Терентьевсен пурнӑҫӗ те. Ҫамрӑк Микихвер тӑлӑха юлнӑ. Кӑшт ҫитӗнсен вара, шӑпах граждан вӑрҫи вӑхӑтӗнче, Урал ятлӑ пысӑк ялта кӗтӳ пӑхма кӗрӗшнӗ.

Пӗррехинче, август уйӑхӗн юлашки кунӗсенче, ӑшӑ та илемлӗ кун, Микихверӗн кӗтӗвӗнчи сурӑх-такасем курӑк ҫисе тӑраннӑ та вӑрман хӗрринче лӑпкӑн канса выртнӑ. Микихвер те юман каска ҫине канма ларнӑ. Ҫамрӑк ача вут-шанкӑ пухса хунӑ, кӗл ҫинче паранкӑ пӗҫернӗ...

Ҫав вӑхӑтра ӗнтӗ кӗтӳҫӗ ик юланута курах каять. Сиккипе чуптарса пыраҫҫӗ вӗсем Микихвер патнелле. Иккӗшӗ те ҫамрӑк, маттур йӗкӗтсем. Пӗри — пӑшалпа, тепри хӗҫпе. Сумкӑсем пур хӑйсен. Сумкисенче туллиех граната.

— Ҫамрӑк тус!— тет пӗри йӑсӑрланса выртакан вучах патне ҫитсенех.—Эсӗ кам пулатӑн?

— Эпӗ — кӗтӳҫӗ. Антун чӑваш ачи — Микихвер, чухӑн ҫын...

— Ну, эппин, эсӗ — пирӗн тус. Анчах эпир камне пӗлетӗн-и?— ыйтать хайхискер каллех.

— Пӗлетӗп.

— Ну, кала — камсем?

— Хӗрлисем.

— Мӗнле пӗлтӗн?

— Çăлтăртан палларăм. Пĕлетĕп, эсир хĕрлисемех.. Эпĕ те хĕрли...

— Вот што?— кулса тĕлĕнет ут çинчи йĕкĕт.

— Пĕлетĕп.

— Ну, эппин, шуррисем ăçтине пĕлетĕн-и?

— Пĕлетĕп.

Кун хыççăн икĕ каччă хăйсен урхамахĕсем çинчен ялт сиксе анаççĕ те нумайччен Микихверпе лараççĕ, тăвансем пек калаçаççĕ. Шуррисем ăçтине тĕпĕ-йĕрĕпе ыйтса пĕлеççĕ. Вĕри кĕл çинче кĕрпекленсе пиçнĕ паранкăпа хăналать вĕсене çамрăк кĕтӳçĕ.

— Пăшална кăтарт-ха!— ыйтать Микихвер пĕринчен.— Çитĕнсен, сирĕн пата шуррисене хĕнеме пыратăп.

— Эсĕ çитĕнсе çитнĕ çĕре шуррисем пулмаççĕ. Эпир вĕсене часах ак тĕп тăватпăр,— ăнлантарать Микихвере хĕрлĕ салтак. Унтан вăл хăйĕн винтовкине кăтартма тытăнать.—Хитре мар-и!— тет хăй.

— Хитре!— тĕлĕнет çамрăк кĕтӳçĕ.

Антун ывăлĕ вĕсен пăшалне тытсах пăхать, хĕвелпе кушăркаса кайнă аллисемпе шăлса ачашлать. Пăшал кĕпçине хăйĕн çивĕч куçĕсемпе виçсе:

— Çитĕнсе çитсен,— тет вăл,— эпĕ те сирĕн пек тумтир тăхăнатăп, хĕрлĕ салтак пулатăп...

Пăшал вулли çинчи картсене курать те уй ачи, пулас салтак, вĕсене уйрăмăн-уйрăмăн шутласа, питĕ тĕлĕнсе ыйтать:

— Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă, пиллĕк, улттă, çиччĕ, саккăр, тăххăр. Ку картсене мĕншĕн тунă? Мĕн паллисем вĕсем?

— Тепĕр шургвардееца пĕтерсен, вунă карт пулать,— ăнлантарать ачана пăшал хуçи.

— Вунпĕр пĕтерсен?

— Вунпĕр карт пулать.

— Апла-тăк,-ăнлантăм, ăнлантăм... Эпĕ те çавăн пек тăвăп. Шуррисене вĕлерĕп — пăшал вулли çине картсем картăп...

Çаксем вара Микихвере, асăнмалăх тесе, вĕр-çĕнĕ шлем парса хăвараççĕ. Кĕтӳçĕ шлема çав тери савăнса, хĕпĕртесе илет. Ăна ку вăхăтчен никам та çавнашкал парне паман-çке, никам та çын вырăнне хурса хаваслантарман. Халĕ кусем, ăна малтанхи хут çеç курнă пулин те, хĕрлĕ çăлтăрлă шлем парса хăвараççĕ. «Лайăх çынсем, пăхсах, ырă çынсем»,— тет хăй ăшĕнче Миких-

вер. Ҫапла, лайӑх ҫынсем вӗсем! Анчах вӗсен вӑхӑт ҫук. Ҫавӑнпа та юланутҫӑсем лашисене ҫавӑраҫҫӗ те каялла, вӑрман витӗр, ҫил пек вӗҫтереҫҫӗ. Вӗсем хыҫҫӑн йывӑҫсем ҫинчен сарӑ ҫулҫӑсем ӳксе, вӗҫсе ҫеҫ юлаҫҫӗ...

Ҫав икӗ йӗкӗт Чапаев отрядӗнчен килнӗ-мӗн. Разведчиксем пулнӑ вӗсем. Разведчик пӑшалӗ тап-таса, хитре... Пулас салтак Никифор Терентьев унӑн номерне те шухӑшӗпе ӑнкарса юлнӑ. «Виҫҫӗ, виҫҫӗ, пӗрре, унтан ҫиччӗ» шутланӑ вӑл. Ҫак цифрӑсене пӗр ҫӗре хушнӑ та, вунтӑваттӑ пулса тӑнӑ. «14-мӗш номерлӗ винтовка» тенӗ Микихвер, анчах винтовкӑн чӑн-чӑн номерне калама пӗлмен. Пине ҫити шутлама пултарайман вӑл, вӗренмен... Анчах ҫав цифра унӑн пуҫӗнче, таҫта шухӑш тӗпӗнче, пытанса юлнӑ-юлнах...

Юланутҫӑсем тахҫанах вӑрман хыҫне пытаннӑ, тахҫанах хӑйсен юлташӗсем патне ҫитнӗ, шуррисем ҫинчен хӑйсен командирне каласа панӑ.

Хӑйне панӑ хаклӑ парнешӗн кӗтӳҫӗ нумайччен савӑннӑ. Ҫак кӗрхи ӑшӑ кун ӑна ытла та телейлӗн туйӑннӑ. Йӑваш ҫил ӑшшӑн вӗрнӗ. Йывӑҫ тӑррисем те урӑхла хумханнӑ пек, хӗпӗртесе-савӑнса, хулен-хуллен юрланӑ пек туйӑннӑ. Ҫӳл тӳпери чӑлт шурӑ пӗлӗтсем калама ҫук илемлӗн курӑннӑ. Пӗрре кӑпӑкланса шуралса ҫитӗннӗ вӗсем, тепре, ҫу пек ирӗлсе, ҫавӑнтах сухалнӑ. Ку вӑхӑтчен ҫӗтӗк-ҫатӑк тумтирпе ҫӳренӗ Микихверпе пӗрле ҫак вырӑнти уй-хир, вӑрман, ҫырма-ҫатра, унта пухӑнса тӑракан, юхакан, шӑнкӑртатакан шыв-шур савӑннӑ, шыв хӗрринче ирӗн-каҫӑн пӑшӑлтатса ларакан хӑях-хӑмӑш савӑннӑ, ҫӳлӗ йывӑҫсем ҫинчен вӗлтӗр-вӗлтӗр вӗҫсе ӳкекен ылтӑн-кӗмӗл ҫулҫӑсем савӑннӑ — пурте, пурте савӑнса хӗпӗртенӗ, пурте хӑйсен ҫеммипе, хӑйсен йӗркипе савӑннӑ, ҫын илтмелле мар сасӑпа хуллен-хуллен юрланӑ, сӗрленӗ... Ҫавӑн пек вӑл ҫут тӗнчен вӑрттӑн шавӗ, ҫавӑн пек унӑн пире ачашлакан кӑмӑлӗ, чӗрене кӗрсе чуна пырса тивекен ҫинҫерен те ҫинҫе хӗлӗхӗ... Эпир ӑна хамӑр туйӑмсемпе сисетпӗр, вӑхӑтлӑха пурне те манатпӑр, таврари илемлӗхе парӑнса, ҫут тӗнчен йӑвашлӑхне пула ачашшӑн савӑнса тӗлӗнетпӗр... Ҫил вӑштӑр-вӑштӑр вӗрет-и, хурт-хӑмӑр сасси, инҫетре кайӑк юрри илтӗнет-и, пурте, пурте чуна пырса тивет, савӑнтарать.

...Никифор Терентьев хӑйӗн ача чухнехи пурнӑҫӗ ҫинчен, уйрӑмах кӗтӳ пӑхнӑ ҫӗрте пулнӑ «истори» ҫинчен

каласа пачӗ те хӑйӗн винтовкине хулпуççийӗ çинчен вӗçертсе, унӑн номерне кӑтартрӗ.

— 3326-мӗш номер. Цифрисене пӗр çӗре хушсан, вунтӑваттӑ пулать. Тӗлӗнмелле винтовка,— терӗ вӑл тахçанхи пек, ача чухнехи пек савӑнса,— унтан пӑртакçӑ сассине хӑпартрӗ те:—Ку винтовкӑпа ӗлӗк шуррисене аркатнӑ, халӗ вӑл мана пулӑшать, эп унпа нимӗçсене шаккатӑп. Вӑт, капитан юлташ, мӗнле пӑшал ман алӑра!— терӗ.

— Тӗлӗнмелле винтовка!—терӗм эпӗ те, салтакпа пӗрлех чун-чӗререн хавхаланса.

## 2.

Виç-тӑват уйӑхран мана пӗр полкри тутар, чӑваш салтакӗсем хушшинче калаçу ирттерме хушрӗç. Рота командирӗ патне пытӑм та хам мӗн ӗçпе килни çинчен пӗлтертӗм.

— Ун пирки мана штабран паçӑрах пӗлтерчӗç. Сире кӗтетӗп. Эпӗ тутарсемпе чӑвашсене пухрӑм. Пӗтӗмпе тӑватӑ çын,— терӗ те командир, Марченко капитан, çав салтаксем патне çул кӑтартса ячӗ.

Вӗсем пӗр тарӑн лапамра, пӗчӗк хӑвасем хушшинче, лараççӗ. Эпӗ пырса çитнӗ вӑхӑтра пӗр салтакӗ винтовкӑпа тӑрмашатчӗ.

— Чун пек пӑшал, тӗлӗнмелле винтовка,— тет вӑл, винтовкине çавӑркаласа.

«Тӗлӗнмелле винтовка» тенине илтсен, эпӗ чӑваш салтакне Терентьева, Никифор Антоновича. аса илтӗм. «Кунта мар-ши?»— шухӑшларӑм ӑшӑмра. Мана курсан, салтаксем пурте ура çине хӑвӑрт тӑчӗç те, аллисене тӑнлав тӗлне тытса, саламларӗç. Эпӗ те вӗсене сывлӑх сунтӑм.

— Ларӑр!—сӑмах хушрӑм вырӑсла. Унтан винтовка тытнӑ салтак патне пырса:— Ну, юлташ, кӑтарт-ха, тӗлӗнмелле винтовкуна,— терӗм.

Эпӗ тӑван чӗлхепе калаçнине илтсен, салтаксенчен иккӗшӗ пӗр харӑссӑн:

— Капитан юлташ, эсир чӑваш иккен!—тесе тӗлӗнчӗç.

— Чӑваш!—терӗ пӗри. Ку хайхи Терентьев, хӗлле вӑрман çулӗ çинче тӗл пулнӑ салтак, пулчӗ.

— Эпӗ чӑвашла тугар, Канаш енчисем,— пӗлтерчӗ Терентьевпа юнашар лараканни.—Ятӑм-хушаматӑм: Ибергенов Юзкей.

Чӑвашла тутар хӑйӗн юлташӗсем ҫине пӑхрӗ те:

— Кусем пурте тап-таса чӑвашсем, ман ҫывӑх туссем! — тесе паллаштарма тытӑнчӗ.—Ку — Терентьев, ку — Прокопьев, лешӗ — Владимиров, Урал чӑвашӗ, Саратов чӑвашӗ, Чӑвашри чӑваш...

— Терентьев юлташа эпӗ тахҫанах пӗлетӗп,— тесе, пурне те алӑ парса тухрӑм.

Паллашнӑ хыҫҫӑн вӗсене фронтсенчи лару-тӑру ҫинчен, хамӑр ҫӗршыври пурнӑҫ мӗнле пыни ҫинчен, тӗрлӗ тӗслӗхсемпе усӑ курса, тӑван чӗлхепе каласа патӑм. Юлашкинчен, Терентьев винтовки ҫине куҫрӑм, ӑна тем пек ырларӑм... Чаплӑ пӑшал! Анчах пирӗн халь тата та лайӑхрах, ҫӗнӗ те вӑйлӑрах пӑшалсем нумай, терӗм. Совет ҫар техники мӗн тери пысӑк, чӑннипех улӑпла утӑмсем туни ҫинчен каларӑм.

Тӳррипе каласа-тӑк, эпӗ пӗлместӗп: Терентьев юлташ 1919-мӗш ҫулта чӑнахах та ҫак хӑй аллинчи винтовкӑна курнӑ-ши?.. Ҫапах та Терентьев чӗререн, чунтан ӗненет. «Ҫак винтовках», тет, «урӑххи пулма пултараймасть», тесе ӗнентерет. Анчах вӑл ҫав винтовка номерне мар, номерти цифрӑсен суммине — вунтӑватта ҫеҫ лайӑх астӑвать...

Вӑт, пӑхӑр та курӑр, юлташсем!

Хӑй винтовки ҫинчен каланине илтсен, Терентьев сӑмах хушмасӑр чӑтаймарӗ.

— Ҫак винтовка пулман пулсан,— терӗ вӑл,— эпӗ, иптешсем, тахҫанах ҫӗр айӗнче ҫӗрсе выртнӑ пулӑттӑм. Винтовка — хаяр пӑшал, вӑл — сан тусу, тетчӗ пире командир. Вырӑс винтовки пек тӗл перекен пӑшал тӗнчере урӑх ҫук, тетчӗ вӑл пире. Чӑн сӑмах ку, эпӗ те ҫавнах калатӑп, иптешсем!

Терентьев кӑшт чарӑнчӗ те:

— Эсир — капитан юлташ, март уйӑхӗнче Волхов ҫинчи сапӑҫура пулнӑ пулӗ?— ыйтрӗ вӑл манран.

— Пулнӑ,— терӗм эпӗ.

— Ну, эппин, эсир мана часах ӑнланма тивӗҫ.

Терентьев юлташ хӑйӗн винтовки ҫине ӑшшӑн пӑхса илчӗ. Унтан каллех сӑмах хушрӗ:

— Иптешсем, ку винтовкӑн номерӗ 3326. Эпӗ ӑна халӗ кӑна мар, тӗлӗкре те, вилсен те манас ҫук,— терӗ вӑл ерипен.

— Ну, сват, мĕншĕнне эсĕ çаплах каламарăн-ха,— хутшăнчĕ Саратов чăвашĕ Владимиров.

— Чăнах та, кала хăвăртрах,— килĕшрĕ унпа Прокопьев.

— Каласам ара!..— терĕ Ибергенов.

— Ну, Терентьев юлташ, кала, эппин,— сĕнтĕм эпĕ те.

* * *

...Инçе те мар авалхи хула — чаплă Новгород. Ун çумĕнче Кирилл монастирĕ. Хулара та, çав монастирте те — нимĕçсем. Вĕсем кунта 1941-мĕш çулта август уйăхĕнче килнĕ те, мур илесшĕсем, ӳте сăхса кĕнĕ сăвăс пек, пирĕн çĕре чаваласа, кĕрсе вырнаçнă, авалхи монастир стенисем айне çĕр пӳртсем, дзотсем туса тултарнă, пулеметсем лартнă.

1943 çулхи çуркунне çак вырăнта пысăк çапăçу пуçланса кайрĕ. Тăшманпа пирĕн хушăра — Волхов юхан шывĕ. Пирĕн задача — тăшмана Новгородран хăваласа кăларса, хулана илесси... Çав хаяр çапăçура Терентьев та пулнă. Йывăр вăхăт килсе тухнă та,— шыв тулса ларнă воронкăра иртен пуçласа каçчен выртнă вăл. Чăтма çук шăннă салтак, анчах ăçта каяс: йĕри-тавра фашистсем, пуçа çĕклесенех — пуля шăхăрать.

Сыран хĕрринче пысăк дзот. Çав дзотран нимĕç пулеметчикĕсем пĕр вĕçĕмсĕр вут сирпĕтеççĕ.

Катаран-катаран каç пулса килсен, тĕнчене тĕттĕм чаршав хупласан, Гитлер салтакĕсем вăрçă хирне выçă кашкăрсем пек тухаççĕ. Вилесене ухтараççĕ, аманнисене вĕлереççĕ, чĕррисемпе çапăçаççĕ.

Волхов çыранĕнче, тĕрĕсрех каласан, Волховец юхса кĕрекен çĕрте, Терентьев çав картинăна курса, сăнаса выртнă. Вут сирпĕтекен дзотри фрицсем, каç пулса çитсен, çапăçу хирне вăрра тухнă, выçă йĕкехӳре пек сиккелесе, хăра-хăра унта-кунта вăркăнса çӳренĕ. Вилесене çаратакансен, мародерсен, кĕтĕвĕ йышлансах пынă.

...Шăнса, ĕнтĕркесе кайнă чăваш салтакĕ Терентьев, темиçе кун хушши куç хупман пулин те, сыхă пулнă, винтовкине аллинчен вĕçертмен.

— Вилсен те винтовкăна алăра тытса вилем!— тенĕ вăл, фашистсем çине çилĕллĕн пăхса.

Инçе те мар — Волховец шывĕ. Вырăнĕ-вырăнĕпе çурхи пăр çĕмĕрĕлнĕ, тупă йĕтрисем пыра-пыра ӳкнипе

арканса кайнă. Халĕ тата пăр çине тан тапса шыв тухнă.

Шăнкăр-шăнкăр шăнкăртатса мар, васка-васка юхать çурхи шыв. Сарăлсах, тулсах пырать вăл, пуян та тулăх çур шывĕ.

Тăшмансем шыв урлă каçма шут тытнă, хăмасĕм сĕтĕре-сĕтĕре пырса, пăр татăлса кайнă çĕре каçă хунă. Терентьев çакна курсах выртнă, пăшалĕпе тĕлленĕ. Тăсланкă ариец каçă çине кĕнĕ,— Терентьев персенех, çав фашист шыва кутăн-пуçăн персе аннă, унтан тепри каçма тăнă — вăл та татăлса аннă, виççĕмĕшĕ те çавах... унтан тăваттăмĕшĕпе пиллĕкмĕшĕ... Вĕсем ĕнтĕ, аманнăскерсем, пăрлă шывра ише-ише шăмпăлтатнă та, юлашкинчен, йыгă чĕлхи пек чĕлхепе —«Майн готт»— тесе хăрушшăн кăшкăрса, Волховеца путнă...

— Пĕтсен те тăшмансене вĕлерсе пĕтем,— тесе пенĕ ун чухне хăюллă салтак Никифор Терентьев. Çапла вăл, пуля хыççăн пуля вĕçтерсе, фашистсене шыва чăмтарнă. Унтан салтак хăй виксе тăнă та, çав шыв урлă тепĕр çĕртен каçса, тăшман пулеметне çырма хĕррине туртса пынă. Монастирти нимĕçсем ăна курнă, пеме тытăннă. Совет воинĕн аллинчи пăшал — туртса илнĕ нимĕç пулемечĕ — нимĕçсене хăйсенех çунтарнă, ăшаланă... Анчах персен-персен патронсем пĕтсе çитнĕ. Терентьев вара тăшман пулеметне шыва пăрахнă.

«Сан хуçу шывра,— тенĕ вăл хăй ăшĕнче,— пулеметсăр вăрçма ăна йывăр пулĕ...»

Чĕмсĕр метал шыва путсан, совет воинĕн чĕри лăпланнă, анчах курайманлăхĕ сирĕлмен. Вăл, вут-хĕмĕн çунса, ялкăшса, малаллах чĕннĕ: «Пĕр фашист пĕтет — çĕнтерӳ çывхарать, иккĕ пĕтет — çĕнтерӳ тата та çывăхрах пулать... Фашист чĕрĕ юлсан,— вăл ман çĕршыва пусмăрлас шухăша пăрахмĕ. Хĕвелтухăç çинчен шухăшлĕ. Çавăнпа нимĕç захватчикне персе антар, тĕп ту!»— тенĕ вăл.

Çапла, чĕрери курайманлăхĕпе хĕмленсе çапăçнă Никифор Терентьев.

Тăрсан-тăрсан, инçетри хуласемпе ялсем хыçĕнчен, сĕм вăрмансем урлă, çурхи кăвак тĕтресене ылтăн пайăркисемпе майĕпен çутатса, ăшшине никамшăн та хĕрхенмен вут хĕвел, капмаррăн çĕкленсе, саркаланса, хĕмленсе тухнă.

— Тусăм, чунăм!..— тесе пăхнă паттăр салтак хăйĕн пăшалĕ çине. Винтовка номерне ирхи хĕвел çутинче курсан, вăл хăйĕн тусне вуникĕ хутчен тытса чуптунă.

* * *

...Никифор Терентьев хӑйӗн сӑмахне пӗтерчӗ те винтовка вулли ҫинчи картсене шутлама тытӑнчӗ:

— Пӗрре, иккӗ...

Ҫирӗм ҫичче ҫитрӗ карт шучӗ.

— Кашни карт пӗр фашист вилӗмне пӗлтерет. Вунтӑваттӑшне ӗлӗкех картнӑ. Вӗсене ҫав 1919-мӗш ҫулта мана шлем парса хӑварнӑ разведчиксем картнӑ пулӗ, тетӗп. Вӗсенчен курса эпӗ те картма тытӑнтӑм.., Вунвиҫӗ карт касрӑм. Вунвиҫӗ карт...

Вӑрман хӗрринче, ҫӗр пӳртсем хушшинче, шӑхличӗ сасси илтӗнсе кайрӗ. Ку шӑхличӗ салтаксене каҫхи вӗренӗве чӗнчӗ-мӗн: калаҫура пулнӑ салтаксем тумланчӗҫ те, вӗренӗве кайма тесе, ытти юлташӗсемпе пӗрле пӗр ҫӗре, ҫӳлӗ чӑрӑшсем айне, ротипех пухӑнчӗҫ.

Тӗтреленсе, тӗттӗмленсе Волхов тӑрӑхӗнче каҫ ҫывхарчӗ. Пӗтӗм ҫырана пин-пин шӑрчӑк сырса илчӗ. Вӗсен пӗр кӗвӗллӗ, пӗр майлӑ сасси йӑлӑхтарать.

Чӑтлӑх вӑрман витӗр эпӗ хамӑр ҫӗр пӳртсем патне таврӑнтӑм. «Пурте Терентьев пек ҫапӑҫсан — вӑрҫӑ миҫе куна пырӗ-ши?» — ыйтрӑм эпӗ ҫавӑн чух хамран хам.

...Никифор Антонович Терентьев пек хастар совет салтакӗсем асӑмран халӗ те каймаҫҫӗ. Яланах, иртнӗ кунсем ҫинчен шухӑшласан, эпӗ ҫав паттӑрсене аса илетӗп. Ун чухне вара совет патриочӗсен паха ӗҫӗсем каллех ман ума тухса тӑраҫҫӗ, ҫав паттӑр салтаксем малаллах, малаллах утаҫҫӗ.

*Волхов ҫыранӗ, 1943*

## ЛӐПКӐ ҪЫН

— Няма сержант ҫинчен ҫакна калас пулать, — терӗ Васильев лейтенант, — вӑл ытла та лӑпкӑ ҫын. Килте чухне шӑши те вӗлерсе курман, тет, чӑх е автан пусас пулсан вара, кӳршӗсене чӗнеттӗм, хам пытанса ларattӑм, тет... Эккей, пулать кам!..

Лейтенант кӗсйинчен хаҫат татӑкӗ кӑларса пирус чӗркерӗ, унтан ӑна чӗртсе ячӗ те:

— Анчах та эпӗ шанатӑп ун ҫине, вӑрҫӑра тӑшмана кун памасть вӑл, — тесе пӗтерчӗ хӑйӗн сӑмахне.

... Ку сержанта эпӗ те, вулаканӑм, лайӑх пӗлетӗп. Чӑваш вӑл. Пӗрре ҫеҫ мар курса калаҫрӑм эпӗ унпа. Чан-

нипех те лăпкă çын иккен Няма. Чăвашсем пурте кунĕ темĕпĕр. Апла калани йăнăш пулĕччĕ: чăвашсем хушшинче те тĕрлĕ çын пур — кунни, хаярри пур, усалли, ырри пур, хыт çын та пур. Хăюллисем вара темĕн чухлех!..

Няма сержант, хăйсен ялĕнчи çынсем пек каласан: Няма Поликарпĕ — Тутар республикинче çуралса ӳснĕ çын. Вăл пĕр вăтăр çулта пулĕ. Лутра, анчах тапчам, вăйпитти арçын вăл. Алли-ури çирĕп, хресчен ĕçĕнче пиçсе хытнă. Килте арăмĕ, икĕ ачи пур, тет. Сăнĕ вара темле кăмăллă, ырă сăн. Куçĕсем питех те çивĕч. Вĕсем таçтине те кураççĕ. Няма юлташ чăвашла, тутарла, вырăсла лайăх пĕлет, анчах кирек хăш чĕлхепе калаçнă чухне те темшĕн именсе калаçать; хĕр пек вăтанать вăл, вăтаннипе хĕрелсе каять. Çамки çине пăтăр-пăтăр тар пĕрчи персе тухать...

Каллех калам: инçетрине курать вăл хăйĕн хĕсĕкрех куçĕпе, унăн куçĕсем витĕр кураççĕ, вĕсене вăл таçта çеçенхирте çивĕчлетнĕ, тейĕн.

— Вон фашист!— терĕ вăл, пĕррехинче симĕс хăва çине кăтартса. Эпĕ пăхрăм-пăхрăм,— аран-аран куртăм хăва хушшине пытаннă, аллине пăшал тытнă тăшмана. Ула-чăла, симĕс плащпа пĕркеннĕ фашист çыран хĕрринче, хăвасем хушшинче, пирĕн еннелле бинокльпе пăхса тăрать. Тăшманпа пирĕн хушăмăрта тулли те тарăн Волховваскаса юхать. Унăн таса шывĕ: «Часрах, часрах ирсĕр фашист тĕлĕнчен иртсе каяс!» — тет пулĕ. Тĕрлĕ пулăсем чăмпăлт сикеççĕ те шыва май ярăнса каяççĕ. Каçала сулăннă сар хĕвелĕн ылтăн çути шыв тĕпне çитет те çухалать.

— Шыва пăхăр-ха, капитан юлташ,— тет Няма, халĕ çеç пĕр пула сиксе илнĕ тĕле кăтартса,— фриц мĕлки хăйĕнчен виçĕ хут вăрăм. Пысăклатакан тĕкĕр витĕр пăхнă пек...

Симĕс куръксене сирсе пăхатăп та хăрушла тăсланкă нимĕç мĕлкине курах каятăп: майĕпен хумханса юхакан шывра унăн мĕлки çĕлен пек авкаланать. Чăн-чăн Schlange! — аса илетĕп эпĕ нимĕç сăмахне.

— Ну халĕ эпĕ прицел лартам-ха,— систерет мана сержант,— эсир хăть фашист çине пăхăр, хăть мĕлки çине пăхăр...

Няма хăйĕн пулемĕчĕ патне майлăн тăсăлса выртрĕ. Часах вара: тăр-р-р-т! турĕ пулемёт кĕпçинчен кĕскен пени. Тăрнаккай та курпун ариец, тусан вĕçтерсе, пăлтăр-

пăлтăр йаванса анчĕ, шыв хĕрринех çитсе выртрĕ. Пĕр кĕтӳ шапа, нимĕçрен хăраса, шыва сикрĕ.

— Маттур перетĕн!— ырларăм эпĕ.

— Çирĕммĕш фашист пулчĕ ку,— пĕлтерчĕ мана пулемётчик.

Çак ĕç 1943 çулхине, август уйăхĕнче, пулса иртрĕ. Унтанпа эпĕ Няма юлташа фронтра темиçе хут та тĕл пултăм. Кирек ăçта та вăл хăйне типтерлĕ тытать: стройра-и, кану вăхăтĕнче-и, коммунистсен пухăвĕнче те, мунча кĕме кайсан та, марша·тухсан та унăн ури-алли, тумĕ тирпейлĕ, сăнарĕ — совет воин сăнарĕ; кăмăлĕ çемçе — хĕр-пике кăмăлĕ пек... Анчах чунĕ хаяр, тимĕр пек çирĕп.

* * *

1944 çулхи хĕлле, январь уйăхĕнче, Волховпа Ленинград фрончĕсенче вăйлă çапăçу пуçланса кайрĕ. Оборонăра тăрса тунсăхланă совет салтакĕсем, тăшмана аркатса тăкас тесе, малалла арасланса пек ыткăнчĕç.

Шăпах наступлени пуçланнă кун, январĕн 14-мĕшĕнче, тарăн траншейăра эпĕ Няма сержанта тĕл пултăм. Нимех те калаçаймарăмăр: пĕр-пĕри мĕнле пурăнни çинчен, килтен çыру илнипе илменни çинчен ыйтса пĕлтĕмĕр те уйрăлтăмăр.

— Ну, ыран Новгородра тĕл пулăпăр,— терĕм эпĕ сывпуллашса.

— Новгородра!— килĕшрĕ сержант.

Анчах эпĕ те, Няма та Новгородра çийĕнчех пулаймарăмăр: çак хулашăн 4—5 кун çапăçма тиврĕ. Няма сержант çапăçура аманнă пирки госпитале тухса кайнă.

Ирсĕр тăшмана хирĕç калама çук паттăр çапăçнă вăл. Няма юлташăн, чăваш сержанчĕн, хастар паттăрлăхĕ çинчен кĕскен те пулин, вулаканăм, сана каласа парам

...«Мысовая» ятлă çута (высотана) нимĕçсем икĕ çул хушши тытса тăчĕç, арлансем пек чаваласа, шăтарса пĕтерчĕç. Темиçе йĕрке траншея, чултан тунă дзотсем, окопсем, стрелок ячейкисем, мина лартса тухнă вырăнсем, темиçешер ретĕн карнă йĕплĕ пралуксем, такăнтаракан пралук çыххисем,— çакăн пек пулнă нимĕçсен обороии. Кăнтăрла вилĕ вырăн пек туйăнатчĕ «Мысовая»; каçпа, тĕттĕмленсен, чĕрĕлетчĕ, пуля пĕрхĕнсе тăратчĕ. Ракета хыççăн ракета вĕçтеретчĕç унти гитлеровецсем...

Тăшман туса тултарнă укрепленисене çĕмĕрмелле.

«Мысовая» çута майор Кальсин батальонĕн çавăрса илмелле пулнă. Çак çута илмесĕр, унтан вара Хутынь ялне çавăрса илмесĕр Новгород патне пыма май пулман. Тăшман оборонине каса-каса такса, вакласа, аркатса çеç ватă хула патне пыма пулнă.

Вуншар та çĕршер тупă, миномĕт пĕр сехет çурă вĕçĕмсĕр, аслати евĕр хаяррăн, çĕр çĕмĕрсе кĕрлесе тăнă хыççăн атакăна çĕкленнĕ пирĕн воинсем. Шăпах çак вăхăтра нимĕçсен виçĕ пулемĕчĕ чарăнмасăр шатăртаттарса пеме тытăннă. Вĕсемпе пĕрлех тата темле майпа малти ретре тытăнса юлнă «колдун» пеме пуçланă («колдун» тесе пирĕн боецсем нимĕçсен 37 миллиметрлă калибрлă туппине калатчĕç).

Пулемĕтчиксем иккĕн, Нямăпа Зеленов, чăвашпа вырăс, тарăн юр çийĕн малалла ашса кайса, вырăнтан вырăна куçса çӳресе, нимĕç пулемĕтчикĕсене хирĕç пуля сирпĕтнĕ. «Максим» лента хыççăн лента пушатнă.

— Акă сире кучченеç!— кăшкăрнă пĕр пулемĕтчикĕ хаяррăн.

— Так и надо фашистским шакалам!— савăнса каланă тепри.

Кĕçех тăшманăн пĕр пулемĕчĕ чыхăнса ларнă.

— Халĕ теприне, теприне!..— тесе чупнă икĕ харсăр пулемĕтчик хăйсен юлташĕсемпе. Вĕсем вĕриленсе, хĕрсе çитнĕ пулемĕта пĕчĕк хăва хушшине хăвăрт туртса пынă. Пĕр самантра ăна çĕнĕ вырăна вырнаçтарса лартнă. Кăштах вăхăт иртсен, тăшманăн тата тепĕр пулемĕчĕ путланнă.

— Аван!— хĕпĕртесе савăннă пулеметчик Поликарп.

— Что?— ыйтнă вырăс Зеленов чăваш сăмахне ăнланмасăр.

— Якши, тетĕп! Якши!— ответленĕ Няма, хĕрсе кайнăран, тутарпа чăваш сăмахĕсене кăштах пăтраштарса.

— Что?..— каллех ăнланман вырăс.

— Аван, якши, хорошо!.. тетĕп....

— Понимаю, аван, якши!.. То есть хорошо!

Тăшманăн виççĕмĕш пулемĕчĕ патне пехотинецсем вăрттăн упаленсе пынă та гранатăсем пăрахса ăна фашисчĕ-мĕнĕпех аркатса тăкнă. Чĕррĕн тытăнса юлнă фашистсем, хӳрисене хĕстерсе, ун-кун пăхкаласа, тарма тытăннă. Виçĕ пулемĕт патĕнче тăшмансем, юн хăсса, урлă-пирлĕ тăсăлса выртнă.

— Йытта — йытă вилĕмĕ,— тесе утнă малалла совет воинĕсем-патриотсем.

* * *

Хутынь — пысăк ял мар. Анчах унта çапах та катмар çуртсем пур. «Мысовая» çут çинчен чĕррĕн тарма ĕлкернĕ нимĕçсем, Кальсин майор батальонĕ хĕссе пынипе, Хутынь ялĕ патнелле тарса, унти чул çуртсене кĕрсе ларнă. Каллех хирĕç тăма тытăннă вĕсем. Пĕр чул çуртран тăшман пулемĕчĕ вĕçĕмсĕр персе тăнă. Çав пулемĕта пĕтермесен, нихăш енчен те пырса кĕме çук Хутынь ялне.

— Çак кунсене эпĕ хальхи пекех астăватăп,— терĕ Васильев лейтенант, ăна тепре курсан.

Васильев каланинчен çавăн чухнехи çапăçу манăн куç умне уççăн тухса тăчĕ.

...Пирĕн салтаксем юр ăшĕнче выртаççĕ. Вĕсен хастар ретĕнче — паттăр пулемĕтчик Поликарп Няма. Тимлĕн сăнаса пăхать вăл тăшман пулемĕтчикĕ персе ларакан çурт еннелле. Çав чул çуртра Гитлер йĕкехӳрисем темиçе амбразура тунă. Халĕ кашни амбразурăран пуля пĕрхĕнсе тăрать. Анчах пĕр харăс пĕрхĕнмест: хăш енчен пыма тытăнатăн — çав енчен перет нимĕç пулемĕчĕ.

— Ку çуртра ик-виç пулемĕт пулас,— шухăшлать сержант. Унтан вăл каллех хăйне хăй калать:— Тăшман пулемĕтчикĕсене пĕтерсен, пулемĕтсем хăйсем тĕллĕн переймĕç...

Çакăн хыççăн совет пулемĕтчикĕ хăйĕн «максимне» лайăхрах вырнаçтарса лартать те:

— Ну, Зеленов юлташ, фашистсене ăшалар!— тет çирĕп сасăпа.

— Елки-палки!— тесе сурать те Зеленов, хăйĕн тусĕпе килĕшсе, тăшман çине пуля хыççăн пуля ăсатма тытăнать.

Совет пулисем шăхăра-шăхăра ыткăнаççĕ, тĕттĕм амбразурăна вĕçсе кĕреççĕ. Акă ĕнтĕ чул çуртра çĕленкалтасем çухрашма, йынăшма тытăнчĕç. Тăшман пулемĕчĕ çапах та чарăнмарĕ: хытăран та хытăрах пеме пуçларĕ. Нямана тепĕр пулемĕтчик, Стаценко ефрейтор, Украина çынни, пулăшрĕ. Сулахай флангра вĕçĕмсĕр такăртаттарса юрлаттарчĕ вăл хăйĕн пулемĕтне. Çав вăхăтрах хыçран, вĕтĕ-вĕтĕ çирĕксем хушшинче, «колдун» кĕрĕслеттерме тытăнчĕ. Паттăрсем часах ăнланчĕç. «Колдуна» хамăр артиллеристсем çавăрса илнĕ-мĕн, ăна вĕсем йĕркеленĕ те тăшман еннелле пеме çавăрса лартнă. Чăнах та маттур переççĕ иккен совет артиллерисчĕсем!

Тарăн юр çийĕн, чупнă çĕрте чупса, утнă çĕрте утса,

упаленсе кайнă пулеметчик Няма. Ун хыççăн сивĕ юр вĕçсе, тĕтĕм пек йăсăрланса çеç юлнă...

Кăштах вăхăт иртсен урам тăрăх, чул çуртран,— пирĕн еннелле мар,— нимĕçсем еннелле пульăсем шăхăрма тытăнчĕç. Траншейăсенчи фашистсем пуçĕсене çĕклеймеççĕ.

— Хамăр пулемĕт!— кăшкăрчĕ совет воинĕ савăнса.

— «Максим»! Хамăрăн!— хутшăнчĕ иккĕмĕшĕ.

— Сассинченех паллă!..— çирĕплетрĕ виççĕмĕшĕ.

Чул çурта кĕрсе вырнаçнă чăваш сержанчĕ хăйĕн пулемĕтне çирĕплетсе лартнă. Унăн халĕ темиçе пулемĕт. Анчах чи лайăххи — «максим».

Тарăхса çитнĕ чăваш ĕнтĕ вилĕ ариецсен ирсĕр кĕлеткисене чўрече витĕр урамалла ывăтать.

— Çав кирлĕ вĕсене! Çав кирлĕ!..— катаран кăшкăрать Няма тусĕ, пулеметчик Стаценко. Хăй, лачкам шыва ўкнĕскер, монастир енне тĕллесе перет. Унта нимĕçсем кĕпĕрленсе пыраççĕ-мĕн. Няма та вĕсене ăшалама тытăнать. Совет пулисем пырса вăраннипе фашист хыççăн фашист персе анать.

Икĕ гитлеровец чул çурт еннелле гранатăсем йăтса чупаççĕ. Çав вăхăтрах иккĕшĕ те кутăн-пуçăн çаврăнса ўкеççĕ.

— Маншăн пулсан икĕ эсэсовец мар, вĕсен икĕ роти те нипочем... Эпĕ пулемĕтчик вĕт!..— шухăшлать харсăр сержант. Ку пўлĕмре вăл хăй хуçа. Анчах юнашар пўлĕмре, ытти юнашар çуртсенче, Хутынь ялĕнче, монастирте, Новгородра тăшман пуçпулса тăрать-ха. Тăшмана çапса аркатмалла, тĕп тумалла.

— Русс, ставайсь!— илтĕнет кўршĕ пўлĕмрен çĕтĕк сасă.

— Сана, çĕр çăтмана, ак сдавайся тетерем эпĕ. Эпĕ — русс шăллĕ çеç, эпĕ — чăваш,— тет те пулемĕтчик пўрнипе гашетка çине пусать. Унтан каллех:— Эпĕ — чăваш. Русс килтĕр-ха, вăл килсен, хура юн, эсрел, шăммуна та çĕклеймĕн...— тесе черет хыççăн черет ярать... Пысăк пўлĕмĕн сулахайри стени, хулăн чус хăмаран тунăскер, ала пек шăтăкланса пĕтет.

— Тăшман, пĕл!.. Эпĕ — чăваш сынни. Чăваш ачи санăн пуçна çапса лапчăтать, пыршу-пакартуна кумать...

Фашистсем, кашкăрла ўлесе, вилес йытăлла нăйкăшса, пĕр кĕтессе пухăнаççĕ.

— Поликарп, эпĕ кунта!..— тет чўрече умĕнче Стаценко.

— Эпĕ те...— кăшкăрать Зеленов.

Унччен те пулмарĕ çĕлен йăвине ик-виç граната чӳрече витĕр вĕçет. Ахлатса, çĕр тĕпретсе çурăлса кайрĕç тăшман пуçĕ çине ӳкнĕ гранатăсем.

— Хорошо!— терĕ Зеленов çамка çинчи тарне шăлса.

— Гарно!— илтĕнчĕ Стаценко сасси.

— Аван, маттур!— савăнчĕ Няма.

* * *

Мĕн тĕттĕм пуличченех ял патне пĕр нимĕç те пырайман. Çавăн пекех тата вĕсем ялтан та тухайман. Пулемĕтчиксем вĕçĕмсĕр кастарса тăнă фашистсене,— пуç çĕклеме паман, чыхăнтарнă, путлантарнă.

...Инçетре-инçетре хĕвел анса ларнă хыççăн, Волхов вăрманĕ сивĕ тĕтре ăшне путсан, Кальсин воинĕсем Хутынь ялне утса мар, упаленсе, хырăмпа шуса кĕчĕç,— вăхăт çитсен вара сиксе тăчĕç те тăшман çине вут кайăксем пек пырса тапăнчĕç.

Няма, Зеленов, Стаценко пулемĕтчиксем кĕтсе илнĕ вĕсене. Çак хаяр çапăçура ĕнтĕ Няма аманнă. Тăшман пули кăкăртан кĕрсе хулпуççирен тухнă. Анчах та командир хушнине тумасăр вырăнтан кайман паттăр пулемĕтчик Няма.

Мĕнле тӳснĕ-ши вăл çав тери пысăк сурана?

...Волхов çыранĕсенчен 150—200 километр малалла кайсан, сивĕ хĕл иртсе çур килсен, пĕр ырă, хĕвеллĕ, ăшă кун, Васильев лейтенанта эпĕ тата тепĕр хут тĕл пултăм. Тӳрех «лăпкă çын» çинчен ыйтса пĕлме тытăнтăм эпĕ.

— Халĕ вăл госпитальте,— терĕ Васильев юлташ. Унтан вăл тĕлĕне-тĕлĕне каларĕ:—Вăт йăваш, лăпкă çын, те, эс ăна. Тĕлĕнмелле çапăçрĕ чăваш çынни, Няма сержант. Хăй аманнă. Çапах та хамăр подразделени яла пырса кĕричченех çапăçрĕ вăл. Медсанбата çуранах кайрĕ, лав çине те лармарĕ. «Йывăр аманнисем ларччăр. Эпĕ утма пултаратăп, манăн урасем çирĕп. Малалла каяс пулсан, эпĕ Берлина çитме те пултаратăп»,— терĕ Няма.

Лейтенант хăйĕн салтакĕсем çине ăшшăн пăхса илчĕ те:

— Çыннăн паттăрлăхĕ хăш чухне сăнран пачах та курăнмасть. Совет çыннин тăшманшăн йăваш кăмăл çук! Хаярлăх, хаярлăх, хаярлăх!— терĕ юлашкинчен.

Эпĕ лейтенант сăмахĕпе килĕшрĕм: чăваш сержанче çавăн пек пысăк хаярлăхпа çапăçнăшăн эпĕ пĕтĕм чунăмпа хĕпĕртерĕм.

Чăнах та, мĕн тери савăк хамăр çынсен паттăр ĕçĕ çинчен илтме. Ывăлĕ ырă ĕç тусан, паттăра тухсан, унăн ашшĕ-амăшĕ хĕпĕртет. Пурте çавах: савнă каччăшăн савнă хĕрĕ хĕпĕртет, ашшĕшĕн ачи-пăчи хĕпĕртет. Паттăрсемшĕн халăх хĕпĕртет.

Çĕнтерӳшĕн хĕпĕртет пирĕн халăх!

*Новгород, 1944*

## СНАЙПЕР

Фронтра эпĕ пĕр лейтенантпа паллашрăм. Унăн ячĕ-хушамачĕ: Григорьев Федор Павлович. Сăмах хыççăн сăмах тупăнчĕ: калаçнăран калаçса кайрăмăр. Нумай пулать чăваша курманччĕ, нумай пулать чăвашла калаçманччĕ. Чăвашпа чăваш чăвашла калаçать: эпир иксĕмĕр те — чăвашсем. Эпир иксĕмĕр те — вăрçăра, пĕр фронтра.

Пĕр-пĕрне ăçтисем пулнине каласа патăмăр.

— Эпĕ Нарспипе Сетнер çĕршывĕнчи чăваш, Слакпуç çынни,— каласа парать чăваш ывăлĕ Федор Григорьевич.

* * *

...Федор Павлович вăрçăччен шофер пулса ĕçленĕ. Халĕ вăл хастар командир, пирĕн паллă снайпер. Хĕрĕх пĕр кун хушшинче çак снайпер аллă тăватă фашиста леш тĕнчене ăсатнă. Унăн вĕренекенĕсем: тутар Ахмедзянов 30 фашистăн пуçне çапса салатнă, украинец Квитко—10, вырăс Ветчинкин — 9. Çĕр те виçĕ фашиста вĕри пуля хыптарнă вĕсем.

— Паллă снайпер,— теççĕ кунта Григорьев юлташ çинчен.

* * *

...Унăн ĕçĕ акă мĕнле пуçланса кайнă. Иртнĕ çул, июнь уйăхĕн пуçламăшĕнче, Федор Григорьевич ирхине ирех тухнă та снайперсен постне йышăннă. Çак кунхине малтанхи фашиста персе вĕлернĕ вăл.

Нимĕçсем траншея чавнă. Пушă пучах катаранах курăнать тенĕ пек,— пĕр тăрнаккай вată ариец курăнах кайнă. Пĕрре çĕкленнĕ, пĕрре пĕшкĕннĕ. Лайăх сăнанă ăна Григорьев. Акă тепре çĕкленнĕ çак фашист, анчах

пешкёнме ёлкёреймен... Шăпах çак самантра ёнтё тёл перекен пăшал пули нимёçе хăлха чиккинчен пырса вăркăннă. Ытти фрицсем вара, вăрăсем пек, ун-кун пăхса илнё те, çёр чавма пăрахса, хăйсен шăтăкёсене кёрсе пытаннă. Каснă-лартнă арлансем!

Çакăн чухне ёнтё пуçланса кайнă Григорьев юлташăн снайперла ёçё. Нимёç вăрă-хурахёсене хаяррăн тавăрнă вăл,— пирён Тăван çёршыва ирсёррён тапăннăшăн, унăн илемлё хулисене, улмуççиллё ялёсене çунтарнăшăн, шкулёсене, музейёсене, чиркёвёсене лапăртанăшăн, унта кёре-кёре усал шăршă сарнăшăн тавăрнă, вată асаттесене, кинемейсене, тăван маçака, мамака вёлернёшён, тин çеç кайăк чёппи пек чёвёлтетме вёреннё ачасене вута тытса пăрахнăшăн тавăрнă, инкесене, колхоз хёрёсене, сар каччăсен савниййёсене намăслантарнăшăн тавăрнă.

* * *

— Кашни снайперён,— тет Григорьев юлташ,— хăйён мелёсем пур. Тăшмана улталама пёлес пулать.

Чăнах та, Григорьев снайпер тăшмана хирёç мёнле кёрешет-ха? Мёнле-ха унăн снайперла перес мелёсем? Вăл мёнле «сунарçă-ха»?

Халё тăшман салтакёсем пирён пăшалăн вăйне сиссе çитрёç, хăйсен ёнсисем çинче тӳссе курчёç,— вёсем пирён снайперсенчен питех те хăраççё, çавăнпа та пытанса, упаленсе çӳреççё... Çапах та, çапах та снайперсем вёсене тупаççё, персе тивертеççё, вёлереççё.

Кашни снайпёрён, Григорьев калашле, мел, ăслай пур. Снайпер шаблон тăрăх мар, хăй сăнаса пёлнё майсемпе усă курать.

...Калăпăр, ытарма çук лайăх çанталăк тăрать. Хёллехи кунсем усă та янкар. Катаран-катаран кармашса сарă хёвел тухать. Унăн ылтăн çутипе шурă юр çинче пин-пин мерчен çиçсе тăрать. Çул çинчи хура пăнчă, пёчёккё пулин те, инçетренех курăнать. Сас-чёв таçтанах илтёнет. Çакăн пек кунсенче Григорьев снайпер «ухутана» ир çинче ирех тухать.

...Волхов вăрманёсем хысёнчен кăвак шуçăм кăваккăн кăвакарса килет. Çăлтăрсем тӳпере тин çеç сӳнме тытăнаççё. Вăрçă шавё пёрре шăпланать, пёрре ахăрса илет. Хушăран автоматсен типё сасси шатăртатма тытăнать. Таçти уçланкăран е «Тăваткал» раçаран тупă перет. Малтан çути курăнать, унтан сасси илтёнет. Çёр пӳртсем хушшине минăсем ехлетсе ӳкеççё.

Вĕлтрен пек çил вĕрсе илсен, пит-куç шăнать те пĕçерет. Тар шăрши кассăн-кассăн килет. Қапăр вăрманăн чăрăшĕсем çинчен шурă юр пĕрчĕн-пĕрчĕн тăкăнать. Қăтра хурăнсем, çирĕксем, вĕтĕ-вĕтĕ çӳçесем, юрпа пĕркенсе ларнă хырсемпе чăрăшсем, лутра уртăшсем, вĕçкĕн ăвăссем хăйсен сăнарне палăртма пуçлаççĕ. Шăнса пăрланнă шурлăхсенчи хăмăш-хăяхсем, хăшăл-хăшăл хăшăлтатса, хăйсен юррине юрлаççĕ.

Çак вăхăтра Григорьев снайпер хăйĕн постне çитнĕ ĕнтĕ. Акă пĕр сехет иртет, иккĕ те иртет,— снайпер çаплах унта пытанса выртать. Ун çинче шап-шурă халат. Юр та шурă, вăл та шурă. Çĕлĕкĕ те, кĕрĕкĕ те, çăматти те курăнмасть. Винтовки те шурă, ăна шурă пирпе чĕркенĕ.

Снайпер шăнать те, кӳтет те,— çапах та вырăнтан тапранмасть.

Акă хĕвелтухăçĕ хĕрелме тытăнать, кас тĕттемĕ саланса, çухалса пĕтет...

— Вырăс салтакĕсем çывăраççĕ пулĕ-ха, халĕ снайпер вăхăчĕ мар, тесе шухăшлаççĕ тăшман салтакĕсем,— тет Федор Павлович,— эпир вара «ухутара» фашистсене пĕрин хыççăн теприне шаккатпăр...

Çак «сунарçă», фрицсем вырăнне мулкачсем тытнă пулсан, вĕсене — пĕрне сылтăм енне, теприне сулахай енне, виççĕмĕшне çурăм хыçне çакса килнĕ пулĕччĕ. Анчах та вăл вăрман кайăкĕсене мар, ик ураллă тискер кайăксене пере-пере ӳкерет.

Çав тискер кайăксен ячĕ: фашист. Вĕлер фашиста!— тет Çĕршыв.

...Тул çутăлса çитсен вара, хăш чухне икĕ нимĕç, тепĕр чухне виçĕ нимĕç персе ӳкернĕ хыççăн, Григорьев снайпер хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле каялла таврăнать.

* * *

Хĕллехи кун питех кĕске, пĕр командир сăмахĕпе калас-тăк, пĕрре лайăхраххăн кăшкăрса илмелĕх те çук. Хĕвел аран-аран тухать те часах каçалла сулăнать. Анчах фронтра кас та, ир те — вăрçă; кăнтăрла та, ир те, çĕрле те — пăшал, тупă сасси.

Акă хĕллехи кас пуçланать. Ни çутă, ни тĕттĕм. Çак вăхăтра пирĕн «сунарçăсем» каллех «ухутара». Каллех сивĕпе ĕнтĕркенĕ нимĕç салтакĕсене шаккаççĕ вĕсем.

Кас çывхарса çитсен, Григорьев лейтенант таврăнать.

Çĕр пӳртре вара снайпер хăйĕн кунĕ çиичен майĕпен каласа парать.

— Фашистсене шырама пĕлес пулать. Халĕ вĕсем арланла пурăнаççĕ, çĕр чавса, çĕр айне пытанаççĕ...

— Çапах та тупатпăр вĕсене,— хутшăнать Ахмедзянов.

— Паян акă лейтенант юлташ пилĕк ариеца виçшер метр çĕр пачĕ,— пĕлтерет Григорьевăн юлташĕ.

...Паянхи ир çĕтĕк-çатăк гитлеровецсем траншея тăрăх пĕрене йăтса пынă. Малараxра çара вулăллă йывăç ларнă: вăл — пирĕн снайпĕрĕн ориентирĕ. Çак йывăç тĕлĕнче малта пыракан фашиста снайпер пули çитсе вăраннă та. Тепĕр фашисчĕ, мĕн пулнине тӳрех ăнланаймасăр, пĕренине те пăрахайман. Снайперăн ăна валли те пуля хатĕр!

— Ме сана, ирсĕре, вĕри çăмах!— тенĕ те Григорьев пăшалне персе янă. Нимĕç патне совет пули часах шăхăрса çитнĕ. Нимĕç тайкаланса, кутăн-пуçăн йăванса ӳкнĕ, вилсе выртнă. Ун çине пĕрени персе аннă.

Вĕсем патне чанккама ефрейтор чупса çитнĕ. Снайпер хĕпĕртесе:

— Манăн сана валли те кучченеç пур! Ме!...— тенĕ те вăраххăн винтовка курокне пуснă. Икĕ йытă çине виççĕмĕшĕ чикеленсе ӳкнĕ. Вĕсем патне тăваттăмĕшĕ, хăйĕн юлташĕсене пулăшас тесе, пĕшкĕне-пĕшкĕне чупса çитнĕ.

Çакăн хыççăн вара тăшман çиленсе çитнĕ те пулемётпа, миномётпа, тупăпа пеме тытăннă...

— Анчах та,— тет Григорьев çак вăхăта аса илсе,— манăн «ухута» кунпах пĕтмерĕ-ха. Эпĕ малтан пытанса лартăм, тарăхакан тăшман шăплансан, каллех тепĕр вырăнта снайпер ячейкине йышăнтăм. Мана нимĕç пулемётчикĕ сыхланă-мĕн. Пульăсем шăхăра-шăхăра вĕçеççĕ. Каялла кайма çук. Тĕллерĕм те пулемётчик çине персе ятăм. Тивертеймерĕм. Нимĕç тата та хытăрах пеме тытăнчĕ. Тепĕр хут петĕм. Ах, мур илесшĕ, каллех тивретеймерĕм. Нимĕç фашисчĕ вĕçĕмсĕр персе тăрать. Виççĕмĕш хут персе ятăм. Тинех фашист йăванса анчĕ, унăн пулемĕчĕ тинех шăпланчĕ...

— Ку миçемĕшĕ?— ыйтрĕ Ахмедзянов.

— Паянхисене çеç шутлас-тăк — пиллĕкмĕш фашист!

— Пĕтĕмпе миçе?— интересленчĕ Ветчинкин.

— 54.

* * *

Çакăн пек çапăçать чăваш ывăлĕ Федор Павлович Григорьев. Нимĕç оккупанчĕсене маххă памасть. Хисеплĕ воин вăл, хисеплĕ командир, паллă та чыслă снайпер.

— Эпир,— тет лейтенант Григорьев,— кунта совет халăхĕн пулас кун-çулĕшĕн кĕрешетпĕр. Вырăс, тутар, пушкăрт, чăваш тата ытти халăхсен ирĕклĕ пурнăçне сыхлатпăр, аттесем çуралса çитĕннĕ, ватăлнă çĕршыва́н телейĕшĕн, ачасем, пирĕн çамрăк çеçкесем, ӳссе çитéнес çутă кунсемшĕн пĕтĕм вăя хурса çапăçатпăр!

*Волхов фрончĕ, 1943*

## РАДИСТКАСЕМ

Волхов тăрăхĕ. Тарăн шырлан хĕрри. Хăйăрлă çĕре чавса землянка тунă. Унта командным пункт вырнаçнă. Çак çĕр пӳртре çӳлтен шыв тумлать, аялтан шыв сăрхăнса тухать, стенисем йĕпе. Сывлăш йывăр та нӳрĕ. Ларсан-ларсан пуç çаврăнса каять, куç хуралса килет...

Тăвăр унта. Çапах та вуникĕ çын таран ĕçлеççĕ, тăрмашаççĕ. Вĕсем хушшинче: полковник, унăн адъютанчĕ, штаб начальникĕ, телефонистсем, радисткăсем, хаçат корреспонденчĕ. Ларма вырăн тупнă юлташсем лараççĕ, тупайманнисем — ура çинчех тăраççĕ, ура çинчех сыва́рса каяççĕ, тĕлĕк кураççĕ.

Полковник карттă çинчен пуçне илмесĕр ларать...

Çӳлте, çĕр çинче, тупă снарядĕсем улаççĕ. Хăшĕсем сывăхрах ӳксе çурăлаççĕ те — çĕр пӳрте маччаран йĕпе тăпра татăла-татăла ӳкет. Чăх куçĕ пек пĕчĕк лампа сĕтел çинче вырăнтан вырăна сиксе, ташласа тăрать. Хăлхасем хупланса лараççĕ, куç курми пулать.

— Виçĕ талăк иртрĕ ĕнтĕ... Çаплах çук,— тет çамрăк та илемлĕ лейтенант, çыхăну ротин командирĕ.

— Ма килмест? Мĕн пулчĕ-ши?— теççĕ радисткăсем, вăрăммăн сывласа.

— Аçта çухалчĕ-ха вăл?— ыйтать хаçат корреспонденчĕ, сарăрах çӳçлĕ, кăвак куçлă, вăрăм кĕлеткеллĕ, кăшт курпунтарах капитан.

— Кĕçĕр тепĕр хут шырар,— тет полковник яланхи пекех ерипен те вăраххăн.

* * *

...Çапăçу хаяррăн пынă çĕре вăл виçĕмкун кайнă-мĕн. «Командна́й пунктпа радио тăрăх çыхăну тытăр»— çакăн пек приказ панă полковник çав радисткăна.

Акă вăрçă хирĕ. Инçе те мар — тăшман. Снарядсем пĕрерĕн, икшерĕн, виçшерĕн, вуннăн-вуниккĕн уласа та шăхăрса вĕçеççĕ, умлăн-хыçлăн е пĕр харăссăн шартлатса та ухлатса çурăлаççĕ те, çĕр питне вистесе, çурхи шыв-шура çӳлелле сирпĕтеççĕ. Çавăнтах тата минăсем ӳксе хăрăплатаççĕ. Пулеметсем урлăн-пирлĕн, хирĕçлĕн переççĕ. Пуля хыççăн пуля шăхăрса ыткăнать. Вутлă çумăр çăвать.

Таçтан инçетрен пысăк снаряд килсе ӳкрĕ те, тăватă радист ларнă таврашра çурхи юр, пылчăк, йĕпе тăпра, лупашкара кӳлленсе тăракан пăтранчăк шыв çӳлелле, юпа пек çĕкленчĕ. Снаряд катăкĕсем, сĕмсĕррĕн шăхăрса, йĕри-тавра вĕçрĕç. Рацине йĕпе тăпра хупласа хучĕ. Унăн çинçе сасси таçта çухалчĕ...

Радистка аяккалла ывтăнса кайрĕ, пĕр самант хушши ăнсăр пулса выртрĕ. Анчах ăçта ытти радистсем? Ăçта Виктор Царан? Ăçта-ши Шулинпа Данченко?..

Эй, атьсемĕр, вăрçă шавĕ арçури пек ахăрать. Ракетăсем, каçхи тĕттĕме çурса, çӳлелле пĕрхĕнеççĕ те вăрçăн тĕксĕм хирне яр çутатса яраççĕ. Вара вăрçă сăнĕ курăнать: унта та кунта — лаша виллисем, çĕмрĕк машинасемпе тупăсем. Çыран хĕрринче ура ярса пусма çук вилĕ фашистсем выртаççĕ. Улпут пулас тесе, çĕр туртса илме килнĕ вĕсем,— çĕр тупнă халĕ — метр çурă çĕр... Фашист вилли çинче вĕлтрен шăттăр та, çĕлен шăхăртăр!.. Германипе Италире-и, Испанире-и,— вăл пур çĕрте те çавăн пекех пĕттĕр фашизм, тĕп пултăр!..

Çак шухăш, çиçĕм пек, çиççе илет совет салтакĕн пуçĕнче.

Ракетăсем вĕçсе-çиççе тăнă вăхăтра хула стени çине мĕлкĕ ӳкет. Тăшман виллисем хушшипе вырăс салтакĕ хăйĕн винтовки çине тайăнса утать. Фашистпа çапăçнă çак паттăр этем!

— Шулин!.. Царан...— ятран асăнса шырать салтак, Лукка Данченко, хăйĕн юлташĕсене. Унтан тăпра çине ларать те:— Эпĕ амантăм, юлташсем, эпĕ пĕччен юлнă. Ан пăрахăр, пулăшăр мана. .— тет вăл, мĕн пулнине пĕлеймесĕр.

«Тен, вěсем те...» пуçěнче вăранать тепěр шухăш. Унтан Лукка хăйěн урисем айне пăхать те тăпра çинче кăшт çеç курăнса выртакан шинель аркине курах каять.

Аманнă Лукка Данченко çурхи тăпрана икě аллипе чавалама тытăнать. Тăпра айěнче тăнне çухатнă Шулин выртать-мěн.

— Пулăшас юлташа...

...Тăрсан-тăрсан, икě воин, Шулинпа Данченко, вырăспа украинец, юн юхтарса, вăхăчě-вăхăчěпе тăнран кайса, унтан каллех тăна кěрсе, пěр-пěрне утма пулăшса, тайкаланса малалла пыраççě. Хăйсем, аран-аран çăвар уçса, хушăран пěр-пěринпе калаçса илеççě.

— Вилчěç пулě...

— Камсем?

— Верукпа Виктор...

* * *

Тăшман бомби çěклентернě сывлăш хумě радисткăна аяккалла ывăтса ярсан тепěр вунă минутран совет салтакě Виктор Царан хăй пěчченех иккенне сисрě. Ури тӳсме çук пěçерет, шěл-кăвар пек, вут ăшне чикнě пек...

— Ах, пěçерет-çке...— йывăррăн сывласа, тăнран кайса калать Царан. Пěçерекен ури ăна ытла та çăмăл пек туйăнать: пěрре тăрсан, таçта çити чупса каймалла пек çăмăл...

— Кам унта?— илтěнет инçетре те мар пěр сасă.

Йěпе тăпра айěнчен тухса, тăн илнě Верук хăйěн юлташне, Виктор Царана, сассинченех уйăрчě. Аманнăскер, Виктор йынăшать те ахлатать, анчах сисмест, туймасть вăл хăйěн суранне. Унăн урисем, çурхи шывпа йěпеннěскерсем, каçпа тем пек шăнатчěç. Халě сылтăм ури тӳсмелле мар пěçерет. Викторăн пěтěм шухăшě ун çинче.

— Эх, пěçерет-çке...— тет каллех чěп-чěр юн пулнă Виктор.

— Витя, эсě аманнă-çке.

— Ура пěçерет, мěншěн-ши, Верук?

Викторăн урине пысăк осколок тивсе татнă-мěн, анчах ăна вăл пěлмест. Вут пек, кăвар пек туйăнать таталнă ура.

Верук бинт туртса кăларать те:

— Ан хăра, Витя, иртсе каять,— тесе васкаса çыхма тытăнать.

— Пěçерет-çке...

— Лайăх çыхрăм, иртсе каять...

— Раци ăçта?.. Рацие майлаштар...

...Хěрлě, симěс çутă пыракан ракетăсем пěлěтелле вăркăнса хăпараççě те каллех аялалла чăмаççě. Волхов шурлăхне ӳксе сӳнеççě.

Юманлăх аяккинче «катюша» çěр çěмěрсе, аçа-çиçěм çаптарса кěрлесен — ӳсěр фашистсем, вěсен пăшалěсем, туписем, вěсем таврана сарнă усал-тěсел, пěтěм ăпăр-тапăр... тусан пулса вěçрě.

Раци йăтса пыракан Верук, çак сасса илтсен, пěрре пěшкěнчě, пěрре чупма хăтланчě, унтан:

— Катюша!— терě те савăнса кайрě. Çав самантра каллех тăшман снарячě çурăлчě. Хěр ӳкрě те тăнне çухатрě.

— Роза, Роза! сана Фиалка ыйтать, Фиалка ыйтать...— чěнчěç Верука çыран хěрринчи çěр пӳртри радисткăсем: «Роза» ку хутра нимěн те шарламарě.

«Розăна», пирěн Верука, тус-юлташěсем çухатрěç.

* * *

...Нумай пулчě-и, сахал-и (çапăçу хаяррăн пынă чухне камшăн мěнле, вăхăт иртни сисěнет те, сисěнмест те),— инçетри сăрт-тусем хыçěнчен хěрелсе сарăлса, вут-çулăм тăкса, мăнаçлăн шуса, çурхи хěвел тухрě, хěр еннелле пăхса илчě, уйсем урлă, вăрмансем витěр ăшшине ячě, çурхи сивěпе шăнса кӳтнě радисткăн пит-куçне уçрě, ăшăтрě, лăпкарě, çутă пěрчисемпе ачашларě, кăтăкларě, хуллен-хуллен пăшăлтатса, çурхи шыв сассипе шăнкăртатса: «Тăрсам, тăрсам, ырă хěрěм, пикеçěм, çамрăк чун!»— терě.

— Каримова юлташ, Верук радистка вилчě пулмалла,— терěç ěнерех пирěн воинсем.

Çак хыпар вара çунатланса вěçрě, ут утланса чупрě, часах çěр пӳрте — командăн пункта çитрě. Шутласа тăма, калаçса илме вăхăт çук пулин те, Верукăн юлташěсем, радисткăсем, пěр-ик сăмах калаçса илчěç те тусне аса илсе хурланчěç, кулянма тытăнчěç... Макăрас пек пулчěç... Мěншěн тесен вěсен çывăх юлташě, унăн ăшă кăмăлě, чěререн тухмасть, ырă сăнарě куçран каймасть.

— Верук вилнě...

Тěрěс-ши ку хыпар? Верук, Верук, ăçта-ха эс? Роза, Роза, ма чěнместěн эс?.. Виçěмкун çеç эсě, хаклă тусăм, хăвăн тусусемпе пěрлеччě, виçěмкун çес эсě кулаттăн, чăваш юррисене юрлаттăн, «Нарспи» сыпăкěсене пăхма-

сăр калаттăн, тăванусенчен, савнă тусăнтан çыру кĕтеттĕн!..

— Вăрçă хирĕнчен хам вĕреннĕ хулапа, Ленинградпа, калаçатăп,— тесе калаттăн та рацие майлаштараттăн.

...Çӳлте çаплах тăри юрлать. Юрри вара, юрри — çĕнĕ юрă, çурхи юрă!.. «Уйра тăри юрласан, килет уйăн илемĕ...»

Уйра çил вĕрет. Хулăн юр ирĕлет те, çулсем çинче, çырма-çатрасенче шыв пухăнать. Çурхи шыв шăнкăртатса, шăхăрса малалла чупать, Волхова çитет. Тарăн шыв, тулса, чӳхенсе, авкаланса выртать.

* * *

...Тăрсан-тăрсан, фронтра каç пулса çитсен, çĕр пӳртĕн ансăр та лутра алăкне такамăн çăмăл алли йăвашшăн шаккарĕ.

— Кĕрĕр!— илтĕнчĕ полковник сасси. «Кам-ши ку?»— шухăшларĕ вăл. Ыттисен пуçне те çавăн пек шухăшах пырса кĕчĕ: «Кам-ши?»

Хăма алăк уçăлса кайрĕ те, пĕр лутра хĕр кĕрсе тăчĕ. Ăна курсан, пурте пĕр харăс, тен, пĕр сывлăшпа сывласа:

— Сывă-и? Сывă-и?— терĕç. Унтан вара унăн хĕр-юлташĕсем ăна ыталаса илчĕç, чуптума тытăнчĕç. Тусĕсене курсан, халĕ çеç килнĕ хĕрĕн куçĕсем, хĕпĕртенипе, хăйсем тĕллĕнех шывланчĕç,— анчах вăл ни йĕреймерĕ, ни кулаймарĕ...

— Çиес килет-и, Верук?— ыйтаççĕ хĕрсем, пĕринчен тепри хитрескерсем.

— Яшка симестĕн-и?— тет Зина.

— Вир пăтти те пур,— тесе сĕнет тутар хĕрĕ Галерам.

— Чей сивĕнмен...— хыпаланать грузин хĕрĕ Тамара.

Ывăнса çитнĕ, виçĕ талăк хушши чăлăм куç хупман, пĕр тĕпренчĕк çăкăр çимен Верук пĕр-ик кашăк яшка сыпрĕ, унтан вир пăтти астивсе пăхрĕ. Тӳсеймерĕ вăл: çаврăнтах тĕлĕрме пусларĕ, ывăнса йывăрланнă пуçне тайса, юлташĕсен аллинчех, пăрчăкан чĕппи пек сывласа, пĕчĕк ача пек сывăрса кайрĕ.

Верукăн ыйхи пылтан та тутлă. Вăл тĕлĕк курать те ачашшăн кулса илет.

Ырă тĕлĕк курать радистка.

...Сад пахчи. Пахчи тулли улмуççи. Улмуççи синче çулçи сахал,— турат йăтайми шурă чечек. Кашни турат çинче шурă куккук.

Верук шурăран та шурă кĕпе тăхăннă. Юр пек шурă тутăрне вĕçтерсе, шурă чечексене хумхантарать. Туратсем çинчен шурă куккуксем çӳлелле вĕçеççĕ те шурă пĕлĕт пулаççĕ.

— Шур-шур, шур аппа...— илтĕнет юрă сасси. Ку юрра Верукăн йăмăкĕсем юрлаççĕ-мĕн, чăвашла юрлаççĕ...

Вĕсемпе пĕрлех Верукпа Зина, Тамара. Вĕсем те шурă тутăрсем вĕçтерсе, шурă чечексем хушшинче юрă юрласа пыраççĕ.

* * *

Çапăçура ыванса килнĕ пĕчĕк хĕр, радистка Верук Каримова, комсомолка, халĕ канать, тутлă та ăшă ыйхăпа çывăрать, шухăшĕпе çĕршыв тăрăх вĕçет. Унăн тĕлĕкĕ — таса, шап-шурă, чечек пек хитре, мирлĕ çынсен ырă шухăшĕ пек.

— Кăштах кансан, эсир мана вăратăр. Манăн рацие юсамалла...— тет вăл вăрана-вăрана. Ыйхи хăйĕн çăмăл та мар, йывăр та мар,— шăпчăк ыйхи пек...

Тепĕр куннех Верук каллех юлташĕсемпе пĕрле шывшур урлă, юр-пăр тăрăх рацине йătса кайрĕ.

Пирĕн салтаксем вăрçă хирĕнче хĕрсе çапăçаççĕ. Вĕсемпе пĕрле — лутра хĕр. Вăл снаряд лакăмне кĕрсе ларнă. Урисем каллех чĕркуççи таран пăрлă шывра. Тумтирĕ йĕпенсе пĕтнĕ. Сивĕ... Сивĕ...

— Ĕçсем мĕнле? — ыйтать радио тăрăх полковник, хушамачĕ вырăнне номер йышăннăскер.

— Лайăх, юлташ 18-мĕш. Пирĕннисем хула стенисем патне çитрĕç,— пĕлтерет Верук. Унтан вара, рацине йăтса, вут-çулăм витĕр малалла чупать, çĕнĕ вырăн йышăнать.

Умра каллех лакăм. Унта каллех шыв. Полковник каллех ыйтать:

— Ĕçсем мĕнле?

— Лайăх.

— Малалла!— кăшкăраççĕ совет воинĕсем. Ывăнна пĕлмен Верук вĕсемпе пĕрле лакăмран лакама пырса ларать. Радисткăн хура çĕмĕрт куçĕсем вут пек çунаççĕ. Унăн хура ука пек çӳçĕсем арпашăнса кайнă. Пит çăмартийĕсем панулми пек хĕрелнĕ, куç харшисем тар тĕтĕмĕпе хуралнă.

— Малалла!— илтет вăл полковник приказне.

— Малалла каятпăр!— тесе пĕлтерет вăл полковнике.

— Малалла!

* * *

— Малалла!— лайăх приказ, лайăх хыпар.

Кун пек приказа, кун пек хыпара пире Зинасем, Веруксем, Тамарăсем, Галерамсем пĕлтерсе тăчĕç. Ана вĕсем пире Новгород, Псков, Таллин, Рига патĕнче пĕлтерчĕç, ăна вĕсем Варшава, Бреслау, Берлин патĕнче те пĕлтерчĕç. Эпир вара малаллах, малалла, кайса пытăмăр.

Хырăмпа шунă чухне те, упаленнĕ, утнă, чупнă чухне те пĕр сăмахчĕ:

— Малалла!

*Польша, 1944—1945.*

## ТАРКАН

### Халап

1.

— Анне килтех, аннен чĕри — çемçе чĕре. Хăй ывăлне вăл ир те, каç та кĕтет. Тăван ывăлне вăл хăваласа ямĕ, хĕрхенĕ, ачашлĕ...— тесе, хăйне-хăй пĕчĕк ача пек йапатса, амăш çурчĕ патне утса пычĕ Никодим.

Ача чухнехи савăк вăхăтсене аса илчĕ вăл. Ун чухне кунĕ-кунĕпе вылятчĕ Никодим хăйĕн пиччĕшĕсемпе, кӳршĕ ачисемпе. Хырăм выçнине те сисместчĕ: ача-пăчашăн вăйă нимрен те хаклă мар-и. Никодим амăшĕ апат пĕçеретчĕ те, хĕвел ватă йăмрасем тĕлне çитсен, яри уçнă чӳрече витĕр:

— Атьсемĕр, яшка пиçрĕ! Ванюк, Якрав, Никодим, апат çиме килĕр!— тесе чĕнетчĕ.

Никодим тепĕр чухне пиччĕшĕсенчен юлса вылятчĕ,— ытараймастчĕ вăл йĕпе хăйăртан тунă пӳртсене, тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексем лартса тултарнă сад-пахчисем çине пăхатчĕ те:

— Кăвак чечекки пуринчен те хитре. Ку чечек пирĕн пахчара ӳсет,— тесе чечексене тыта-тыта чуптăватчĕ.

Амăшĕ вара кĕçĕн ывăлне кĕтсе илеймесĕр каллех чĕнетчĕ, иккĕмĕш хут, виççĕмĕш хут кăшкăратчĕ:

— Никодим, хăвăртрах кил!— тетчĕ.

Иртнĕ кунсене аса илсе, Никодим пĕтĕм чĕрепе, кăмăлпа савăнчĕ. Хăйĕн ăшĕнче вăл: «Аннем, эсĕ хăвăн тăван ывăлна кĕтетĕн, кĕтетĕн, кĕтсе илейместĕн. Эпĕ

килтĕм, килтĕм, хамах килтĕм...»— терĕ. Çак сăмахсене вăл хăйĕн амăшне юратса каларĕ. Чăнах та, тăван амăшне юратман çын пур-ши çут тĕнчере? Кам хăйĕн амăшне ача чухне çеç мар, çитĕнсе çитсен те, мăнаçлансан та, ватăлсан та ырă сăмахпа асăнмасть-ши? Анне сĕчĕ пире пурнăç панă, аннемĕр аллинче эпир кун-çулăмăра пуçланă. Анне, анне, санран хакли кам пур-ши тĕнчере!..

Никодим, ватă амăшĕ çинчен шухăшласа утса, хăй çуралса ӳснĕ пӳрт патне пырса тăчĕ. «Халĕ те аннем:— Никодим, ывăлăм, хăвăртрах кил!— тесе кĕтет мар-ши?»— ыйтрĕ вăл хăйĕнчен хăй килхушши алăкĕн хăлăпне тытса. Шак-шак-шак!— шаккарĕ вăл хăма алăка.

Шăпчăкăн пек çăмăл ыйхăллă амăшĕ часах вăранчĕ.

— Кам унта?

— Эпĕ, эпĕ... Çитрĕм, аннем, çитрĕм!— хĕпĕртесе сас пачĕ Никодим.— Эпĕ, санăн кĕçĕн ывăлу, Никодим...

— Никодим?!— тĕлĕнсе ыйтрĕ амăшĕ.

— Никодим пулмасăр, кам пултăр. Çав-çке, çав!— савăнчĕ ывăлĕ.

— Пиччусем тата ăçта?

— Вăрçăра вилчĕç...

— Тăшмана тавăртăн-и вĕсемшĕн?

— Ăна мĕнле тавăрас? Вăйлă вăл, патне те пыма çук. Хам та аран-аран хăтăлтăм. Шыв урлă каçса, вăрман витĕр тартăм...— амăшĕнчен хăраса пăшăл-пăшăл сасăпа пăшăлтатрĕ Никодим.

— Эсĕ тăшманран тарма-и-и...— çулăмланса, çунса кăшкăрса ячĕ амăшĕ.— Эсĕ, эппин, тарнă. Тарса килтĕн пулсан, манăн пĕр сăмах çеç: мĕнле киле пĕлтĕн — çапла кая пĕл!

Никодим тайкаланса илчĕ. Амăшĕн сăмахĕ ывăлĕ умĕнче çиçĕм пек çиçрĕ, чĕрене пырса тиврĕ, кăвар пек пĕçерчĕ.

Никодим хумханса, хăраса кайрĕ. Ура айĕнчи çĕр шуса кайнă пек, çухалнă пек туйăнчĕ... Таçта, çич çер нимине такам аслати пек вăйлă аллипе тĕксе ячĕ-и, тен, Никодима. Кĕрхи тĕттĕм каç пин хут тĕттĕмленчĕ, куçран йĕппе чиксен те курăнми пулчĕ...

Вилсе выртас пек тĕлĕнчĕ Никодим: тăван амăшĕ, тăван амăшĕ йышăнмарĕ ăна, çирĕм ик çулти вăйпитти ар-ывăла киле кĕртмерĕ, хăваласа кăларчĕ.

Ăçта каяс ĕнтĕ халĕ Никодимăн, ăçта каяс?..

## 2.

— Укçине! Укçине!..— пăшăлтатма тытăнчĕç Никодимăн чĕтрекен тутисем. Çулсăр-мĕнсĕр, картасем урлă, вĕлтренсем витĕр, тункатасенчен такăна-такăна, хăмла путранкисемпе çыхланса ӳксе утрĕ вăл каялла, Укçине патне.

Қаçхи тĕттĕм витĕр йăлтăр хăй çути курăнать. Çав пӳртре ĕнтĕ Укçине пурăнать, Никодимăн чун савниййĕ çĕнтерӳ кунне кĕтсе кунĕн-çĕрĕн ĕçлет.

«Эх, Укçине патне çитсен ывăннă ал-ура лăштах канĕ. Эпĕ савăнăп, çу пек ирĕлĕп... Юрату ăшшипе çунатланăп...»— хăйпе хăй калаçса, утнă çĕрте утса, чупнă çĕрте чупса, вĕçнĕ çĕрте вĕçсе çитнĕ Никодим хăй юратнă хĕр пурăнакан пӳрт патне.

Çутă та аслă пӳрт умĕнче ватă çăка. Унăн сарă çулçисем çĕре тăкăннă та çĕр çине сапса янă кĕмĕл тенкĕсем пек выртаççĕ. Никодим, хуллен-хуллен утса пырса, çăка айĕнчи сарлака сак çине пырса ларчĕ.

Вăрçăччен Укçине каçсерен тухатчĕ çăка айне. Ватă çăка айĕнче ирччен ларатчĕç икĕ чĕре, хĕрпе каччă. Пахчара шăпчăк юрлатчĕ. Хутран-ситрен ыраш уйĕнчен йăваш çил хумĕ варкăшса килетчĕ, Никодим питне кăтăклатчĕ.

«Мĕн калĕ-ши, чун савни, Укçине?»— шухăшласа ларать Никодим каçхи тĕттĕмре тăр пĕччен.

Йĕри-тавра шăпах. Ниçта та пĕр сас-чĕв илтĕнмест. Никодимăн хăлхине юрă сасси пырса кĕчĕ. Пӳртре, чĕре çав тери хытă туртакан пӳртре, Укçине хуллен-хуллен юрлать-мĕн. Сасси унăн кĕмĕл тенкĕ сасси пек. Эх, савăк-çке хĕр юррине итлеме. «Ку мĕнле юрă-ши?»—сывлама пăрахса итлет Никодим. Юррăн пуçламăшне илтеймерĕ пулсан та, юлашки сăмахĕсене илтрĕ вăл.

...Манăн савни хĕç пултăр,
Хĕç пултăр та вут пултăр,
Тăшман пуçне кастартăр,
Кастартăр та çунтартăр...

Укçине юрри Никодима пырса çапрĕ, питрен касрĕ. Никодим хĕрелчĕ те кăвакарчĕ, тарларĕ, халсăрланса кайрĕ. «Укçине те анне пекех-ши, унăн чĕри те хытнăши?..» тесе турткалашрĕ вăл пӳрт умĕнче. Унтан вара хăех сăмах тупрĕ: «Хытнă, хытнă...»

Никодим ни вилĕ, ни чĕрĕ кĕлеткине çĕклерĕ те вăйсăр чунне пусарса, тайкаланса хыçал касалла утрĕ.

## 3.

Хыҫал касра Никодимăн ача чухнехи тусĕ Петр Каратаев пурăнать. Петĕр вăрҫăран аманса килнѐ те икѐ туяпа аран-аран утса ҫӳрет. Вăрҫăра вăл пурнăҫне те хĕрхенмен: тăшмана хирĕҫ ҫĕр ҫĕмĕрсе ҫапăҫнă.

Пĕрре ирхине, ҫапăҫу хĕрсе кайнă вăхăтра, пирĕн командира ҫичĕ фашист тапăннă. Петĕр ҫакна курнă та фашистсем ҫине араслан пек ыткăннă. Паттăр салтак малтан чи тĕреклĕ нимĕҫе пăшал вуллипе ҫапса антарнă. Приклад пуҫранах тивнĕ. Фашистăн пыйтлă пуҫĕнчен пуҫ мими кăпăк пек сирпĕнсе тухнă. Тепĕр фашисчĕ ҫакна курсан, урнă сысна пек, пыршă-пакарта татăлас пек кашкăрса янă:

— Русс, сдавайсь!..

Каратаев хăраса ӳкмен: кăшкăрса чупакан нимĕҫĕн ҫăварне пăшалпа тĕлленĕ те пĕррех! кĕрĕслеттернĕ. Виҫĕ чалăш инҫĕшне ывтăнса кайнă фашист.

Икĕ фашистне командир пистолетпа персе ӳкернѐ. Виҫҫĕшне вара тыткăна илнĕ.

Ку ҫапăҫура сержант Каратаев хăй те аманнă. Фашист пули Петĕрĕн чĕркуҫҫине ҫĕмĕрсе тухнă.

Волхов ҫыранĕнче, Теремец ялĕнче, пулчĕ ку ҫапăҫу. Унтанпа ĕнтĕ сакăр уйăх иртнĕ. Каратаева, госпитальтен сывалса тухсан, виҫĕ уйăхлăха киле янă.

Петĕр кĕҫĕр килтех. Канать пулас вăл пӳртре. Паллах ĕнтĕ, кĕтмен тусне кĕҫĕр курасса вăл шанман.

— Ну кĕрес-ши е кĕрес мар-ши?— иккĕленчĕ Никодим. Пĕр самант хушши куҫне хупса тăчĕ те хăюлланса хăйне хăй каларĕ: «Ма кĕрес мар! Петĕр манăн авалхи тус-ҫке. Туслăх нимĕнрен те хаклă темеҫҫĕ-и ҫак...»

Вăрҫăчченхи туслăх ҫине шанса кĕрсе кайрĕ Никодим.

— Петĕр, савнă тусăм, эпĕ сан патна пĕр-ик кунла́ха ҫеҫ...— Калама тытăнчĕ Никодим васкаса.

— Эсĕ ăҫтан килтĕн? Мĕн тума килтĕн? — тĕрĕслеме тытăнчĕ Петĕр.

— Эпĕ... Эпĕ... анчах...— каласшăн пулчĕ таркăн. Авкаланчĕ, чĕтрерĕ, тарларĕл. Ним чĕнейми пулса тăчĕ, патак пек хытса кайрĕ.

— Эсĕ те-и?..— селĕппĕн пăкăлтатрĕ юлашкинчен.

Петĕр, вăрçă хăрушлăхне тӳссе курнăскер, тăван ҫĕр-шывшăн юн тăкнăскер, Никодима ăнланчĕ. «Эпĕ вăрҫăра чăтаймарăм, хăрушă унта, питĕ хăраса ӳкрĕм, анчах эпĕ ҫапах та тăшман патне каймарăм, тусăм патне кил-

тĕм...»— тесе каласшăн пулчĕ Никодим. Анчах шухăшланă шухăшне вăл калаймарĕ.

— Тăшман патне каймарăн, çапах та тăшман пулса килтĕн,— хаяррăн кăшкăрса ячĕ Петĕр. Вăл хăйĕн туйине çиллессĕн ярса илчĕ. Вĕриленсе, çулăмланса кайрĕ, çĕкленсе килнĕ çиллине шăнараймасăр пĕррех тăхăнтартрĕ тăшмана сулăмлă туйипе. Никодим алăка пырса çапăнчĕ. Пÿрт алăкĕ уçăлса кайрĕ. Чысне çухатнă этем, таркăн Никодим упаленсе, йăванса, хырăмпа шуса, тĕттĕмелле кайса çухалчĕ.

— Эсрел!— сура-сура ятлаçрĕ Петĕр пÿрт алăкне хупса.— Тăхта-ха, аçу аллине лексен, хăтăлаймăн, тăшман вилĕмĕпе вилĕн!..

*1942*

## ПУРНĂÇПА ВИЛĔМ

### Халап

### 1.

Ытла та илемлĕ-çке пин саслă, кĕрлевлĕ, çутă, таса та ырă çуркунне! Саркаланса хăпарнă сар хĕвел кăмăллăн пăхать. Шурă юр ирĕлсе шыв пулса юхать, шăнкăр-шăнкăр шăнкăртатса çырма-çатрана васкать. Юханшывсем, кÿлĕсем тĕпсĕр те вĕçсĕр тинĕс евĕр сарăлса каяççĕ, инçетрен-инçетрен куранса выртаççĕ. Хĕлĕ-хĕлĕпе çывăрнă хура вăрман, çуркунне вăйне пăхăнса, папка хыççăн папка кăларать, çулçă сарать, чечеке ларать, янкăс тум тумланать. Çурхи илем хушшинче тĕрлĕ-терлĕ кайăк чĕвĕлтетме пуçлать, чечек шăрши çĕкленсе пĕтĕм тĕнче тăрăх сарăлса каять...

Мĕн тери паха тата çав çуркуннен çутă ирĕ! Ăна эсĕ тахçанах кĕтетĕн. Тĕттĕм хуллен-хуллен сирĕлсен, пăхатăн та кăшт çеç палăракан шурăмпуçне куратăн, çутă ире чĕрепе, чунпа туятăн. Вăл кăваккăн кăвакарса, майĕпен çывхарса килет. Катаран-катаран, калăпăр: Мускав хыçĕнчен,— ирхи хĕвелĕн ылтăн кăшăлĕ курăнма пуçлать, кăштах вăхăт иртсен, вара çурхи хĕвел çулăм тăкса, çÿлелле улăхать. Вăрманти, уй-хирти, шурлăхри кайăк-кĕшĕк, хурт-хăмăр сĕрлесе, юрласа тутлă ыйхăран вăранать. Шăваканни шăвать, утаканни утать, вĕçекенни вĕçет. Пурăнма васкать... Тĕнче кĕсли ĕнерĕнсех пырать, юрă-кĕвĕ сасси вăйланнăçемĕн вăйланать...

Кам-ха, кам саванса юрламӗ ҫак самантра? Ҫуркунне туйӑмӗпе ҫӗкленнӗ ҫутҫанталӑк савӑк юрӑ пуҫлать, унӑн ҫутӑ ирӗнчен туртӑм илнӗ чӗрчун унпа пӗрлех юрлать. Ывӑнма пӗлмен чӗресен хӗлӗхӗсем пурнӑҫ сывлӑшӗпе хуллен-хуллен варкӑшса, сисӗнми хумханса, чун ҫеҫ илтмелле кӗвӗ калаҫҫӗ, ҫурхи ирӗн ҫутинче ӗмӗт пухаҫҫӗ...

Шав шавлать тӗнче пурнӑҫӗ, ирхи ҫутӑ тулсах пырать. Ҫав шавра, атьсемӗр, пуринчен те уҫҫӑн этем сасси, унӑн юрри илтӗнет. Юрӑ ӑсти вӑл, пурнӑҫ патши, тӗнче хуҫи вӑл, чӑннипех те:

Ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере
Вӑйли ҫук та этемрен.

• • •

... Тӑватӑ ҫуркунне irттертӗмӗр эпир фронтра. Анчах ҫут тӗнче законӗ таҫта та пӗрре: кунпа кун улшӑнать, каҫ тӗттӗмӗ сирӗлет те, ҫутӑ ир килет; шартлама сивӗсем иртсен, шавлӑ ҫуркуннене пула ҫут тӗнче ҫӗнӗ утӑм, ҫӗнӗ ӗмӗт пуҫлать: кашни йывӑҫ ҫинчех пурнӑҫ папки куҫне уҫать, ҫӗр пичӗ ҫине тӗрлӗ курӑк шӑтса тулать, сывлӑшра пыл хурчӗ, лӗпӗш вӗҫме тытӑнать, хӗрпе каччӑ чӗринче юрату ҫӗкленет, пурнӑҫ таппи вӑйланать...

... Фронтри ҫуркуннесем час-часах аса килеҫҫӗ. Ҫапӑҫусем пӗрин хыҫҫӑн тепри кун умне тухаҫҫӗ. Умра — окоп, темиҫе каҫ чӑлӑм куҫ хупман совет салтакӗсем, ҫур туртӑмне пула, чӗрчун ҫӗкленнине сиссе, пурнӑҫ ҫинчен калаҫаҫҫӗ.

— Этемӗн,— тет пӗри,— пуринчен ытла ҫуркунне вилес килмест. Мӗншӗн тесен ҫурхи кунсенче мана темшӗн эпӗ тин ҫеҫ ҫуралнӑн туйӑнать.

— Ман шутпа,— ӑнлантарать тепри,— ҫуркунне яланах пурнӑҫ ҫӗнтерет.

Салтаксем пӗлӗт ҫинелле пӑхса илеҫҫӗ. Ҫурхи тӗнче маччи тӑп-тӑрӑ, сӑпка ачи кӑмӑлӗ пек, ырӑ та таса. Тутлӑ сывлӑш ҫавар туллин ӳпкене кӗрет. Уя илем кӳрекен тӑрисем ҫӳле-ҫӳле ҫӗкленеҫҫӗ те куҫран ҫухалаҫҫӗ. Шӑнкӑрав саслӑ юрри хӑлхаран тухма пӗлмест.

... Пӗррехинче, шӑпах ҫавӑн пек савӑк кун, ҫурхи ир сарӑлса, тулса, хитреленсе ҫитсен, тӑшман тупписем аслати пек кӗрлесе кайрӗҫ. Снарядсем ӳлесе, ахӑрса, кулса килсе ӳкрӗҫ.

Тĕнче кашти хуçăлчĕ-и, тен? Вăхăтлăха ним курăнми пулчĕ. Хаяр çапăçу пуçланса, çĕкленсе кайрĕ. Çĕр чĕтренме тытăнчĕ.

— Иванов! Николай Иванов!— ыйтрĕ пĕри тĕттĕмре.

— Ах... ах!.. Пулăшăр-ха!..— йынăшса сас пачĕ тепри.

Тăри юрри таçта кайса çухалчĕ. Вĕтĕ-вĕтĕ хурăнсем тайкаланса, сиксе илчĕç. Турачĕсене снаряд катăкĕçем каса-каса ывăтрĕç. Ĕнер çеç ретĕн-ретĕн, умлăн-хыçлăн шăтса тухнă çинçе курăксем, паян çеç куçĕсене уçса, хĕвел çине пăхса илнĕ кăвак чечексем йĕпе тăпрапа витĕнсе çĕр айне пулчĕç.

## 2.

Ахлатса, йынăшса сасă панăскер, вăл — пирĕн салтак, пирĕн çын... Аманнă... Шурă чечексем хушшине ӳкнĕ... Чечекĕсем палламалла мар пулнă: хуçалса пĕтнĕ, таптаннă, хĕп-хĕрлĕ... Салтакăн пуçĕ çаврăнса кайнă, куçĕ хуралса килнĕ, тĕттĕмленнĕ,— ирхи çутă, унăн çурхи илемĕ таçта кайса çухалнă. Умри çĕмĕрт тĕмĕ çакна курсан тӳсеймен: çил варкăшса килсен, чечекне пĕрчĕн-пĕрчĕн вĕçтернĕ, эрленсе-хурланса йĕрсе янă...

Çанталăк улшăннă: хура вăрман хыçĕнчен кăвак пĕлĕт çĕклемĕн-çĕклемĕн ту пек йăтăнса тухнă; сулхăн мĕлкисем, ялсем урлă чупса каçса, вăрçă хирне çитнĕ. Çурхи хĕвел пĕлĕт хыçне пытансан, хулăн пĕлĕтсен сулхăнĕпе пĕркенсе, çав аманнă салтак патне ӳтсĕр-тирсĕр Вилĕм, тутине пĕрсе, сарăхнă шăлĕсене качăртаттарса, типĕ шăммисене шăлтăртаттарса çитнĕ; вăйран кайнă салтакăн пуçĕ вĕçне кукленсе ларнă.

— Йтле ĕнтĕ, салтак!.. Эпĕ тахçанах сан хыççăн йĕрлесе çӳретĕп. Тинех ĕнтĕ лекрĕн манăн аллăма! Тин-н-ех!.. Халĕ хăтăлаймăн!..— тет Вилĕм, хăрăк-марăк шăлĕсемпе шакăртаттарса.

Çурхи чĕрĕлĕх çилĕпе пĕрле инçетрен-инçетрен, хĕвелтухăçĕнчен, хумăн-хумăн варкăшса ăшă çил килет. Çил ачисем сулхăн пĕлĕтсене хăваласа яраççĕ те, хĕвелĕн вут пек пĕрчисем каллех салтака тупаççĕ, ăна питрен кăтăклаççĕ, ачашласа лăпкаççĕ, шухăшĕсене хускатса яраççĕ, вăратаççĕ.

— Чуниллирен хăрамастăп!— тет салтак.

— Хăрамас-с-с-тăп тетĕн?— çиленсе юнать Вилĕм.

Салтакĕ те парăнмасть, вăй-халне пухса, сăмах хыççăн сăмах калать, хирĕç таварать:

— Пĕрре кăна мар сана эпĕ тĕл пултăм, куçран пăхрăм. Пĕлместĕн пулсан — пĕл!.. Эпĕ совет çынни! Санран хăрана пулсан, çак тискер вăрçа та тухман пулăттăм. Пĕлех эппин, пĕл: ку вăрçăра Пурнăçпа Вилĕм кĕрешет!..

— Тĕрĕс калать салтак! Тĕрĕс! — çирĕппĕн илтĕнет уçă сасă.

Хĕвелтухăç çилĕ вĕрсех тăрать. Лĕпĕш евĕрлĕ шурă чечексем куçĕсене вăраххăн уçса салтак еннелле пуçĕсене таяççĕ.

— Кам ку?..— кăшкăрса ыйтать Вилĕм сĕмсĕр сассипе.

— Пурнăç! — тет патвар та уçă сасă.— Эпĕ салтакшăн! — тет вăл.— Ан хапсăн салтака, ирсĕр вăй, эсрел, ан хапсăн, сирĕл эсĕ ун патĕнчен!

Пĕтĕм вăйĕпе çапса ячĕ Пурнăç. Таçтах кайса ӳкрĕ Чунилли, ӳкрĕ те çĕр хуçăк пулса выртрĕ, анчах хăрăк шăммисем пĕр самант хушшинче пуханчĕç те сыпăнса ларчĕç. Вилĕм каллех çĕкленчĕ те, кукăр-макăр туйи çине уртăнса, уксахласа, тепĕр хут салтак патне сĕтĕрĕнсе пычĕ, катăлса, çурăлса пĕтнĕ пушă шăммисене шăкăртаттарса, пĕшкĕнсе каллех пуç вĕçне ларчĕ.

— Ну, кутăн салтак, кала! Вилес умĕн мĕн ыйтас тетĕн?

— Эпĕ вилесшĕн мар. Вилместĕп! Манпа пĕрле эсĕ мар — Пурнăç. Эпĕ пурăнатăп!

— Эсĕ мар-р-р тетĕн?

— Çук, эсĕ мар!

— Çапах та хăвăртрах кала. Мĕн ыйтас тетĕн?

— Эпĕ Тăван çĕршыва çитсе курасшăн...

— Ытла та пысăк-çке ĕмĕтӳ. Каллех чĕрĕлесшĕн иккен!

Пурнăç татах çĕкленчĕ, каллех пĕтĕм вăйпа çавăрса çапрĕ сăхă куçлă Вилĕме. Тусан та кĕл пулса, пăрах пулса вĕçрĕç унăн шăмми-шаккисем...

Тӳпере ăшă та çемçе сасăпа тăри юрласа ячĕ. Кĕмешке пек кĕвве салтак та илтрĕ, хумханса, савăнса тăнларĕ. Шухăшпа çунатланса, ĕмĕтпе чĕрĕлсе салтак тăван ялне çитрĕ. Унта вăл нумайранпа пулман, ашшĕ-амăшне курман,— халĕ ĕнтĕ салтак вĕсене тĕл пулать.

Вунçичĕ çулта чухне Николай Иванов хурăн лартнă. Çамрăк хурăн çавăнтанпа пайтах ӳснĕ-мĕн, мĕнле тумланнă вăл кăçал! Яш каччă пек! Унпа юнашар лутра улмуççи, чечек çурса, шурă пĕркенчĕк пĕркенсе ларнă: мĕн чухлĕ панулми пулĕ кĕркунне,— йăтайĕç-ши вĕсене тура-

чёсем? Тенкĕ çакнă хĕр пек! Колхоз уйĕ симĕс пуставпа витĕнсе выртнă: лаптăм-лаптăм ырашĕ, тулли, урпи, сĕлли, хĕмленсе ӳсет,— мĕн-мĕн çук-ши унта! Сарлака-сарлака улăхра çаран, пĕвере хур-кăвакал, вите-картара путек-сурăх,— вĕсем пурте колхозăн.

Ял пуçĕнче шкул çурчĕ. Кермен пек курăнса ларать. Шкул ачисем вăрмана кайнă. Çулçă, чечек пухаççĕ вĕсем, кашни туратшăн савăнаççĕ, лĕпĕшсем хыççăн чупаççĕ. Хăшĕсем ватă çăкасем айĕнче карталанса чакăлтилле выляççĕ, мечкĕ персе, мечкĕ хыççăн ӳке-ӳке чупаççĕ.

Тăван çĕршывне, халăхне чĕрепе туйса, салтак сăмах калать:

— Хамăр енчи ялсем, хуласем, уйсем, хурăнсем! Çулсемпе сукмаксем! Юханшывсем, çăлкуçсем! Тăван халăх! Эпĕ сирĕншĕн, колхозшăн, унăн пĕвишĕн, ял варĕнчи çăлĕшĕн, çирĕклĕ çырмишĕн, унта чĕпĕ кăларакан пăрчăканшăн, путене юрришĕн, карăш чĕппишĕн çĕкленсе, тăшмана хирĕç кайрăм,— тет совет воине, çурхи илем çине шанчăклăн пăхса.

— Салтак, манран хăтăлаймăн! Ыйт часрах тата мĕн кирлĕ!— илтĕнчĕ каллех Вилĕм сасси.

— Вилсен те эпĕ çапăçса вилесшĕн!— илтĕнчĕ паттăр салтак сасси.

— Кампа?

— Тăшманпа çапăçасшăн! Тăван çĕршыва çичĕ ют килсе пуссан, эпĕ тупăкран çĕкленĕп, тепĕр хут алла пăшал тытăп, вăрçă хирне тухăп. Тăван çĕршыв мана манмĕ, вăл чĕнсен, эпĕ чĕрĕлĕп,— каллех тăрăп...

Салтак сăмахне Пурнăç илтрĕ те:

— Эпĕ сана вăй парăп! Салтак, салтак, çĕклен халех!— терĕ.

— Çĕкленĕп, çĕкленĕп! Тăрăп!

Хĕремесленсе, сарă кăтра çӳçĕсене вĕçтерсе, Пурнăç хаяррăн ыткăнчĕ Вилĕм çине. Вилĕмĕ хирĕç тăчĕ, чикмек пек сикрĕ... Нихçан та, ниçта та, никам та курман-илтмен вăрçă пуçланчĕ. Тӳпери хĕвел вут пек çунса тăчĕ: çут тĕнчене ăшăтса, чĕрчунсене савăнтарса, хулăн пĕлĕтсене сирсе, тăпра çине тăкăннă юна типĕтсе, Пурнăçа, унăн çурхи туртăмне, ирхи ĕмĕтне çĕнĕ вăй пачĕ.

— Эпĕ сывă! Вăйăм пур-ха! Сывă пултăр Пурнăç!— каллех илтĕнчĕ Тăван çĕршывшăн çапăçакан салтакăн сасси.— Эпĕ çĕршыв чĕрипе, сывлăмĕпе сывлатăп: вилĕмрен хăрамастăп, мĕншĕн тесен эпĕ — совет çынни!

Паттăр салтак патне çуркунне шăпчăкĕ вĕçсе килчĕ,

çĕмĕрт çине ларчĕ те унăн çеçкисене хăйĕн çепĕç сассипе хумхатса чи паха, чи хаклă юррине ирхи сасăпа юрларĕ.

Кĕсле каласа, юрă-сăвă шăрантарса, шерпет пек сывлăш сарса, çурхи кун сарăлать. Малта, юхан шыв хĕрринче, çĕр çĕмĕрсе вăрçă кĕрлет. Унта Пурнăçпа Вилĕм çапăçать. Вăрçă шавне итле-итле совет салтакĕ — аманнă гвардеец:

— Эпĕ чĕрĕ! Çĕршывăм паттăр!— тет.

*Австри, Вена хули, 1945*

## ПЕЧĔК КАЛАВСЕМ

### Ленинград çĕрĕ

...Йĕри-тавра Ленинград çĕрĕ, Тăван çĕршыв. Умра — ĕлĕк-авал чапа тухнă Волхов юханшывĕ, унăн икĕ аяккинче — авалхи хула Новгород. Юханшыв тăрăх вăрмансем, унта-кунта ял вырăнĕсем, хăрăк йăмрасемпе хурăнсем. Тăван çĕршывăн хирĕнче тăри хыççăн тăри юрласа вĕçет. Вĕсем кунта та чăваш уйĕнчи пекех вĕçеççĕ, тăван сасăпа тăван кĕвĕсем юрлаççĕ: пĕр вăхăтрах вырăсшăн — вырăсла, чăвашшăн — чăвашла, тутаршăн— тутарла, çармăсшăн — çармăсла юрлаççĕ, тейĕн...

Эй, юрлăрах, тăрисем, юрлăрах! Сирĕнпе эпир те юрлар! Пирĕн юрă хĕвел патне çиттĕр. Ăна Тăван çĕршыв итлетĕр, ăна илтсен кашни савăнтăр, кашни пирĕнпе юрлатăр. Хĕрпе каччă чĕри, арăмĕпе упăшки чĕри, вĕсен ачисен чĕри пĕр туртăмпа, пĕр тапăмпа таптăр.

Анчах çак уйра халĕ хаяр вăрçă кĕрлет. Вăл ир те, каç та чарăнмасть.

...Совет воинĕ, тăшмана хăваласа, унăн пуçне каса-каса. хăйĕн ялĕ çинчен, хули çинчен шухăшлать:

«Эй, Тăван çĕршыв, анне, ватă Русь! Эсĕ кунĕ чухне кунĕ, анчах санăн хаярланма та, çунатланса, хĕмленсе, вут тăкса çапăсма та вăю пур.

Эй, Тăван çĕршыв, Совет çĕрĕ-вăрмане! Санăн ывăлухĕрӳсем тăшманпа çапăçса ӳкеççĕ, ăнсăр пулса выртаççĕ. саншăн чĕрĕлеççĕ те çунатланса, ăмăрткайăк пек вĕçеççĕ.

Тăван çĕршыв! Эсĕ — пурнăç çăлкуçĕ: ĕçре, ĕçкĕ-çикĕре, кĕрешӳре эпир сана аса илетпĕр те пирĕн чун-чĕрене. ал-урана вăй кĕрет.

Юлташ! Санăн ăшу çунать-и, чĕрӳ вăркать-и, ыйху вĕçет-и, вăй-халу пĕтет-и, кăмăлу хуçăлать-и?.. Çакăн

чухне эсĕ хамăр аннене, хамăрăн пысăк та чаплă килĕмĕре — Тăван çĕршыва аса ил! Кам ашшĕ-амăшĕпе пĕрле, кам хăйĕн пурнăçне амăшĕн сĕчĕпе пуçлать — вăл çитĕнет, паттăр пулать. Кам Тăван çĕршывпа, унăн ĕмĕчĕпе пурăнать — вăл çухалмасть, ниçта та пĕтмест: шывра та путмасть, вутра та çунмасть».

... Йĕри-тавра Ленинград çĕрĕ, Тăван çĕршыв.

## Хăюллă сержант

Январь уйăхĕ. Шартлама сивĕ кун. Кăнтăр енче хĕвел кăшт çĕкленнĕ те хăйĕн ылтăн çутине инçетри уçлăхран пирĕн пата яма тăрăшать. Анчах унăн ăшши çук, хĕллехи сивĕ кунсенче пирĕн патăмăра сахал çитет, сывлăшра, тĕтрере сăрхăнса юлать.

— Сивĕ ĕнтĕ 33 градус таран,— теççĕ. Пирĕн вара, çак сивве пăхмасăрах, инçе çула лашасемпе каймалла.

Акă ĕнтĕ эпир çул çинче. Пирĕн батальон пĕр пысăк юхан шыв тăрăх пăр çийĕн хăйĕн палăртнă маршручĕпе пырать. Лавсем çине тĕрлĕ хатĕрсем, апат-çимĕç тиенĕ. Батальон хыçĕнче утсем валли утă-сĕлĕ тиенĕ лавсем пыраççĕ.

Пĕтĕм тавралăха сивĕ тĕтре карса илнĕ. Нимĕн те курăнмасть. Юхан шыв çыранĕсем, унти вĕтĕ хăвасем, ялсем, çулсем куçран пытанса тăраççĕ.

Пĕр красноармеец ман пата юланутпа вĕçтерсе пырать те:

— Политрук юлташ, Козлов красноармеецăн лашисем иккĕшĕ те шыва путрĕç...— тесе пĕлтерет.

Эпĕ хамăн утăма хăвăрт çавăратăп та каялла, Козлов патне, сиккипе чуптаратăп.

Эпир çитнĕ çĕре Козлова пулăшма тата виçĕ юлташ пына.

— Хăрамалли çук!— тет Украина çынни Кириенко.

— Ачам, ку лашасене халех ăшă витене илсе каяс пулать... — вĕрентсе калать тутар Сапаргали.

— Айтăр, яла кайса ăшăтар! Айтăр!— тет сержант Швалов.

Сержант тăрăх шăпăртатса шыв юхать. Тумламсем çавăнтах шăнса пăр пулаççĕ. Шинелĕ, çăматти хуп пек.

Çул çинче хайхи икĕ лаша чĕтресе, пăс кăларса тăрать. Иккĕшĕ те йĕп-йĕпе.

— Сержант юлташ, лашасене илĕр те Сапаргалипе пĕрле халех яла вĕçтерĕр. Вĕсене ăшă вите тупса витене тăратăр. Шăлса типĕтĕр, апашлăр. Сĕлĕ, утă парăр,— çисе ăшăнччăр,— тетĕп.

— Юрать!— теççĕ те икĕ юлташ, лашасене илсе, юхан шыв çыранĕнче курăнми пытанса ларакан ялалла чуптараççĕ.

... Ку ĕç малтан мĕнле пулса иртнине каласа парам. Козлов красноармеецăн лашисем çулран кăшт аяккалла пăраннă-мĕн. Пăраннă-пăранманах пăр çĕмĕрĕлсе кайнă та лава кӳлнĕ лашасем иккĕшĕ те пĕр самантра шыва путнă. Сав хушăрах çак вырăна сержант Швалов чупса çитнĕ. Вăл, çар лашисене çăлас тесе, тӳрех тумтирнемĕнне хывмасăрах, пăрлă шыва кĕрсе кайнă. Çапла вара, шартлама сивĕ кун, питех те сивĕ шывра, хăюллă сержант икĕ лашана тăварнă, çакăн хыççăн лашасем çăмăллăнах шывран сиксе тухнă.

Ялта лашасене типĕтсе ăшăтсан, тепĕр талăкран Козлов салтак пире чиперех хуса çитрĕ.

Çак ĕç Швалов сержантăн хастар хăюлăхĕ çинчен калать. Эпир ун пек хăюллă юлташсене Хĕрлĕ Çар ретĕнче кашни кунах куратпăр.

*Кĕçĕн Вишера, 1942*

## Виçĕ паттăр

Простые люди русские
 Стоят у стен седых,
И щели дзотов узкие
 Закрыты грудью их.

*Н. Тихонов.*

Вĕçĕ-хĕррисĕр Волхов вăрманĕ. Симĕс-симĕс чăрăшсем айĕнче, унта та кунта, çĕр пӳртсем пытанса лараççĕ. Вĕсенчен пĕринче Иван Герасименко пурăннă. Салтаксем, Герасименко выртса тăнă кĕтесе, унăн вырăнне, çак юлташăн ятне ăшă сăмахпа асăнса, типтерлĕ пăхса усраççĕ,— ăна, çак вырăна, халлĕхе йышăнмаççĕ.

— Иван вырăнĕ, Иван килмелле... — теççĕ вĕсем.

Ирсерен е каçсерен, тĕрĕслӳ вăхăтĕнче, старшина унăн ятне те асăнать.

Стена çинче геройăн портречĕ çакăнса тăрать. Украина çынни, Украина халăхĕн чаплă ывăлĕ,— пит тулли кăмăл, куçĕсем чĕрĕ, инçе-инçе пăхаççĕ...

— Акă вăл, пирĕн ĕмĕр манми тусăмăр, Иван, кунтах вăл,— теççĕ унăн юлташĕсем, паттăр сăнĕ çине кăтартса.

...Çак вăрмантах тата тепĕр çĕр пўрт ларать. Унта Александр Красиловпа Леонтий Черемнов пурăннă. Вĕсем — Иван Герасименко тусĕсем. Кунта та çакăн пек хисеплĕх, чыслăх...

Красиловпа Черемнов — Çĕпĕр çыннисем, пĕр вырăнта ўснĕ туссем, сунарçăсем. Александрпа Леонтий Хĕрлĕ Çара та пĕрле килнĕ, пĕрле пурăннă, вĕреннĕ, кĕрешнĕ... Колхозра, шахтăра ĕçленĕ. Шахтĕрсем çарта иккĕшĕ те паллă пулемĕтчик пулса тăнă. Кĕрхи йĕпе-сапара та, хĕллехи шартлама сивĕре те ĕçленĕ вĕсен пулемĕчĕ, фашистсене хĕртнĕ, пере-пере антарнă...

— Хăш чухне, савăннипе, юрласа яратчĕç пирĕн туссем, Александрпа Леонтий,— асăнаççĕ икĕ паттăра вĕсен юлташĕсем.

Халĕ ĕнтĕ çак виçĕ тус, виçĕ паттăр çук.

Çав юлташсем,— Герасименко, Красилов, Черемнов,— тĕлĕнмелле çапăçса пуçĕсене хунă. Вĕсем хăйсен вилĕмĕпе теприсен вилĕмне çĕнтерсе, чĕррисен пурнăçне çăлса хăварнă. Хисеплер, асăнар çак паттăрсен вилĕмсĕр ячĕсене!

* * *

Каçхине, вăрман тĕттĕмленсе çитсен, кĕçĕн лейтенант Поленский, чи хăюллă, чи хавтăр юлташсене чĕнсе илсе, разведка задачи çинчен каласа панă. Вĕсем çеç, çак юлташсем çеç, ку чухне çак йывăр задачăна пурнăçлама пултарнине вăл лайăх пĕлнĕ.

Тепĕр çур сехетрен вара çирĕм воин пĕр лапăмалла, шур юр çийĕн упаленсе вăрттăн шуса пынă. Пĕлĕтре пин-пин çăлтăр çунса ялкăшса тăнă. Ура айĕнче çемçе юр йăлтăр-йăлтăр çиçнĕ.

Инçе те мар Новгород хули — авалхи хула.

Вырăс çĕрĕ, вăрманĕ, вырăс хĕлĕ ыталанă пирĕн паттăрсене, хавхалантарнă, вăй панă...

Вĕсем хушшинче, паллах, Герасименко, Красилов, Черемнов юлташсем — Ленин партийĕн чаплă ывăлĕсем, чи малти вырăнта пулнă. Вĕсем яланхи пекех шиксĕр утнă.

— Эсир, юлташсем, малти дозор пулатăр,— тенĕ вĕсене командир Поленский. Хăюллă дозор вара малалла

кайнӑ, утмалла ҫӗрте утнӑ, шумалла ҫӗрте хырӑмпа шунӑ.

Ҫак вӑхӑтра ӗнтӗ малта икӗ мӗлке курӑнса кайнӑ. Иккӗшӗ те ют. Камсем? Паллах, фашистсем. Герасименко гранатине малтанах хатӗрлесе пынӑ, халӗ вӑл ӑна пӗр самант хушшинче фашистсем ҫине вӑркӑнтарнӑ,— ыйхӑланӑ, сивӗпе ӗнтӗркенӗ ариецсем ҫӗр татӑк пулса выртнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вара нимӗҫсем дзотсенчен вӗҫӗмсӗр пеме тытӑннӑ. Пирӗн разведчиксем те вӗсене хирӗҫ хаяррӑн пеме пуҫланӑ.

Ҫапӑҫу хӗрсех пынӑ. Калама ҫук хаярланнӑ...

Герасименко аманнӑ. Ҫумӑр пек тӑкӑнакан пульӑсем айӗн ун патне Степан Дубина санитар васкаса чупса пынӑ, бинт туртса кӑларнӑ та Герасименко юлташӑн сури ранне ҫыхма тытӑннӑ.

— Кирлӗ мар!— тенӗ ҫапӑҫура хӗрсе кайнӑ Герасименко ҫирӗп сасӑпа. Анчах Дубина чи малтанхи хут хӑйӗн командирне итлемен: унӑн суранне хӑвӑрт ҫыхса лартнӑ, палкаса тухакан вӗри юна юхма чарнӑ.

— Каялла таврӑн!— приказ панӑ взвод командирӗ Поленский. Герасименко та хӑйӗн командирне итлемен: вӑл малалла кайнӑ, дзот хыҫҫӑн дзот путлантарса, совет воинӗсен ушкӑнӗ валли ҫул уҫнӑ.

... Шӑпах ҫак вӑхӑтра тӑшманӑн тата виҫӗ дзочӗ ӗҫлеме тытӑннӑ,— ку таранччен вӗсем паллӑ пулман, хӑйсем пуррине систермен. Виҫӗ дзотран пӑр ҫунӑ пек пуля вӗҫнӗ, вилӗм юрри юрланӑ. Разведчиксем вут ӑшне лекнӗ. Паттӑрсен пурнӑҫӗ хӗсӗнсе ҫитнӗ. «Эх. пурнӑҫ, санран хакли мӗн пур-ши?»— пырса кӗнӗ кашнин пуҫне юлашки шухӑш.

— Тӑван ҫӗршывшӑн!— кӑшкӑрса янӑ харсӑр Герасименко.

— Тӑван партишӗн!— тенӗ те пӗтӗм вӑйпа чупнӑ Красиловпа Черемнов.

Акӑ виҫӗ дзот умрах, акӑ пулеметсем... Пульӑсем шӑхӑраҫҫӗ, пин-пин пуля... Анчах та Герасименко, Красилов, Черемнов юлташсем улӑп пек паттӑррӑн чупса пырса, хӑйсен кӗлеткисемпе, ҫамрӑк кӑкӑрӗсемпе усал вилӗм шӑтӑкӗсене хупласа лартнӑ. Виҫӗ дзотӑн амбразурӑсем питӗрӗннӗ: фашистсен пулемечӗсем паттӑрсен кӑкӑрӗсене ала пек шӑтарса пӗтернӗ, тӑхлан юнпа ҫӑвӑннӑ. Паттӑрсен кӑкӑрӗсем ҫаплах вилӗм шӑтӑкӗсене хупласа тӑнӑ...

... Герасименко, Красилов, Черемнов юлташсен хăюлăхне пула пирĕн разведчиксем çитес çĕре çитнĕ, тăвас ĕçе тунă, пĕлес тенине пĕлнĕ, 8 дзот аркатнă, 55 фашистăн пуçне çапса лапчăтнă. Çапла вара юмахри пек паттăрсен чаплă вилĕмĕ совет çарĕсен çĕнĕ утăмĕсем валли çул уçнă. Вăл çул такăр мар — тумхахлă, анчах чаплă, хисеплĕ çул. Такăр мар! Такăр мар-тăк,— такăрлар!

* * *

... Эй, тăван çыруçăсем, çĕршыври чаплă юрăçăсем! Эсир çак совет çĕршывĕн паттăр ывăлĕсем çинчен, Иван Герасименко, Александр Красилов, Леонтий Черемнов çинчен юрăсем хурăр, хĕвелпе тан тăрса сăрнайсем калăр! Сирĕн чаплă саввăрсене пĕтĕм халăх вулатăр, кĕрнеклĕ юррăрсене юрлатăр, тăван çĕршыв савăнса итлетĕр!.. Сирĕн юррăрсен кĕввисем Атăл урлă, тинĕс урлă, вĕçчĕр, вĕсене Герасименко, Красилов, Черемнов юлташсем тăван çĕршывăн таса тăпри витĕр илтчĕр!

*Март, 1942 ç.*

## Юлашки сывлам

Волхов тăрăхĕ аçа-çиçĕмĕн кĕрлерĕ те шăпланчĕ. Таргаев коммунист ўкрĕ, туйми пулчĕ. Пуçĕнче, таçта, ăс мимин пĕрчинче, юлашки шухăш хĕсĕнсе юлчĕ... Йăлкăшрĕ...

Тавралăха сăрса илнĕ ирхи сивĕ пăс çуталса кайрĕ. Ылтăн юпасем евĕр пулса тăчĕ. Юписем салтаксен йĕрки пек курăнчĕç. Вĕсем хыçĕнчен хĕвел çĕкленсе тухрĕ те вилĕмпе кĕрешекен воинăн пичĕ çине хурланса пăхрĕ.

«Вăрансам, вăран!..»— тесшĕн пулчĕ хĕвел.

Салтак улăп-паттăр пек çĕкленчĕ те пĕтĕм фронт илтмелле кăшкăрчĕ:

— Атьсемĕр, малалла!..

Таргаев каллех ўкрĕ. Çĕр пăсĕ, хĕвелтен хăраса, çĕклемĕн-çĕклемĕн Волхов тăрăх шуса, ирĕлсе пĕтрĕ. Ирхи «кăвак хуппи» уçăлчĕ те хупăнчĕ. Таргаевăн шухăшĕ татах хĕлхем пек вĕçрĕ, тути-çăварĕ уçăлчĕ:

— Малалла!..

Пирĕннисем ялав йăтса, ирхи сывлăша янратса каллех тăшман çине ыткăнчĕç. Аманнисем те юлмарĕç. Аллисем хуçăлса пăшал тытайми пулнисем кăшкăрса чупрĕç. Урисем татăлса утайми пулнисем выртнă çĕртех

«урра» кăшкăрчĕç. Пурте, пурте сыввисене пулăшрĕç, хавхалантарчĕç. Таргаев коммунист та, чунне парса, юлташĕсенчен уйрăлса, юлашки хут Çĕршывшăн кăшкăрчĕ:

— Малалла!..

*6.III.42*

## Анчар

Çуркунне...

Эпир вăрçакан фронтра каçсерен вĕтĕ çумăр çăвать, вăрмансем, ялсем, уй-хирсем çине кăвак тĕтре пырса витĕнет, хăш чухне вара ирхине катаран-катаран сарă хĕвел пăхать те юр татах та васкаса ирĕлме тытăнать. Йăшнăçемĕн йăшса пырать.

Çак çурхи кунсенче, шурăмпуç килнĕ чухне, сар çу пек сар хĕвел чăмăртанса тухнă вăхăтра, Волхов вăрманĕсенче, çĕр пӳртре, эпир, тин кăна ывăнса килнине пăхмасăрах, вырăссен чаплă писателĕсемпе поэчĕсем çинчен сăмах ваклама пуçларăмăр. Тунсăхланă чунăмăрсене килентерсе, савăнса калаçатпăр...

Нимĕç фашисчĕсем пирĕн культурăна пĕтерме, тĕп тума килни çинчен сăмах хускатсан, пурте тарăхса каятпăр. Аллăмăрсем хăйсем тĕллĕнех пистолетсене тытса чăмăртаççĕ.

— Фашистсем,— терĕ манăн фронтри çывăх юлташăм, Д-н политрук,— пирĕн ял çине бомбăсем пăрахма тытăнчĕç. Çынсем пӳрт-çуртсенчен тухса блиндажсене кĕрсе пытанчĕç. Манăн килĕм çунать. Эпĕ хамăн япаласенчен нимĕн те илеймерĕм. Пĕтĕмпе те пĕр япала çеç илсе тухрăм...

— Мĕн?— ыйтрăмăр эпир темиçен.

Политрук, пĕр сăмах шарламасăр, шинельне илчĕ те кĕсйинчен пĕр пĕчĕк кĕнеке туртса кăларчĕ. Сăвă кĕнеки! Пушкин сăввисем!..

— Итлĕр!— терĕ те вăл, тӳрех А. С. Пушкинăн «Анчар» ятлă сăввине вулама тытăнчĕ, хуллен-хуллен пуçларĕ те янравлă сассине майĕпен хăпартса ячĕ.

Наркăмăш шывĕ юхтарса ларакан йывăç çинчен çырнă ку сăвăра. Анчар — вăл наркăмăш йывăççи...

> А царь тем ядом напитал
> Свои послушливые стрелы,
> И с ними гибель разослал
> К соседям в дальние пределы,—

вĕçлерĕ политрук аслă поэтăн чаплă сăввине.

Чĕрем манăн хăвăртрах сиксе илчĕ, туйăмсем ăса пырса çапрĕç. Çавăнтах тăван чĕлхен вăйĕ мана калаттарчĕ:

Наркăмăшлă ухă йĕпписене
Персе тăрать вăл кŷршĕ çĕршывсене...

... Унччен те пулмарĕ, урса кайнă фашистсем пирĕн еннелле мина хыççăн мина пăрахма тытăнчĕç, вĕçĕмсĕр те йĕркесĕр пеме пуçларĕç.

— Хирĕç тавăрас вĕсене! Тавăрас!— илтĕнчĕ сăвă вулакан политрук сасси.

Пирĕн хĕрлĕ воинсем вара, вут пек хĕрсе, харсăрланса, фашистсене хирĕç тухрĕç...

Шăнкăртатса, шăхăрса çур иртет. Анчах йĕри-тавра вăрçă кĕрлесе тăрать...

Вулаканăм, ырă юлташăм, эсĕ тахçанах «Анчар» сăвва вуланă пулĕ. Эпĕ те ăна çамрăкрах чухне вуланăччĕ. Халĕ, вăл сăвва тепĕр хут тимлесе итленĕ, ăшăмра чăвашла куçарнă хыççăн, манăн пуçăма çĕнĕ шухăшсем пырса кĕчĕç:

— Мĕн пек çав анчар?
— Кам пек ирсĕр çав патша?
— Гитлĕр пек, Гитлĕр пек!..

*Апрель, 1942*

## Вăрманти юрă

Волхов юханшывĕн тăрăхĕ. Хĕвел анса ларас вăхăт. Çурхи нŷрĕ вăрманта тата вăйлă сисĕнет. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе йăваш çил вĕрсе илет.

Симĕс тумĕпе мухтанса ларакан чăрăшсемпе хырсем пĕр вырăна хупласах илнĕ. Вĕсем хушшинче питех те хŷтĕ, тŷлек...

Политрукпа старшина çакăнта ĕнтĕ грузовик пырса лартнă. Грузовика çурри таран пытарса тăракан чăрăш тураттисем хыçĕнчен тухса, çамрăк артистка, Нина Петрова, эпир юратакан юрра купăс çеммипе юрласа парать.

... И кто его знает,
Чего он моргает...

Купăс çеммипе çамрăк артисткăн юрри сасси салтаксен хăлхисене йăвашшăн пырса кĕрет. Ачашлать, кăмăлĕсене килентерет. Артисткăн мамăк пек çемçе, юр пек таса, çил пек çăмăл сассине çурхи вăрман та савăнса

итлет. Тин çеç çулçă кăларма тытăннă шурă-шурă хурăнсем çамрăк хĕрĕн юррине хуллен-хуллен тайăнса тимлеççĕ. Симĕс чатăрпа витĕнсе ларнă хыр-чăрăшсем, ургăш йывăççисем, пĕтĕм йĕпписене тăратса, пĕлĕтелле пăхса итлеççĕ.

Инçе те мар, уçланкă çумĕн, ăмăртса, тавлашса, çичĕ çырма юхать, кĕмĕл сасăпа çич юрă юрласа, пирен хитре пикепе ăмăртать.

Анчах çак кĕмĕл сас Нинăн сассине çитеймест, çитеймест вăл Нинăн уçă кăмăлне... Çичĕ çырма шывĕн сасси кĕмĕл пулсан, çамрăк хĕрĕн сасси ылтăн, çӳçĕсем унăн пурçăн-ука, куçĕсем — кĕмĕшке шăрçа, пичĕ — çырлапанулми...

Эх, хитре-çке, эх паха-çке унăн юрри!

Çак вăхăтра, атьсемĕр, таçта çӳлте, тӳпере, пĕлĕт татăкĕсем хушшинче, «Юнкерс — 88» кĕрлерĕ, кĕмсĕртетрĕ, унтан симĕс вăрман çинелле çăхан пек ярăнчĕ...

Пирĕн Нина (кăшт хăрарĕ пулсан та) çухалса каймарĕ, пăртак çеç сассине улăштарчĕ те (ку чухне унăн сасси татах та илемлĕн илтĕнчĕ):

И кто его знает,
Чего он летает,—

тесе юрласа ячĕ. Нинăпа пĕрле çĕр сас юрларĕ, чăрăш вăрманĕ ал çупрĕ, вĕтĕ-вĕтĕ хурăнсем, ăвăссем ташласа тăнă пек туйăнчĕç.

Çар çыннисем хăраса тăмарĕç: пĕр самантра, пĕр харăс пăшалсене çĕклерĕç те çăхан çине тĕллерĕç. Вĕçĕмсĕр янрарĕç пăшалсем, такăртатса юрларĕç пулемĕтсем.

Вилĕм кайăкĕ пĕлĕтре тайкаланчĕ, сулланчĕ, хура тĕтĕмĕн мăкăрланса, хăрăм пулса, кутăн-пуçăн çаврăнайрĕ, унтан чăмса анчĕ мур çăви патнелле,— кĕреслетрĕ те ваккăн-ваккăн вакланса, çĕр татăк пулса кĕрсе выртрĕ çăва тĕпне!..

* * *

— Чего он летает... — çак юрă халĕ те манăн хăлхара, çамрăк пике халĕ те куç умĕнче.

Эх, хитре мĕн вăрманти юрă! Ни шăпчăк мар, ни чепчем мар пирĕн Нина,— çапах та, çапах та хитре унăн юрри!..

*Май, 1942*

## Шăпчăк сасси

Пĕррехинче, çуркуннехи ăшă каçхине, хĕвел анса пытаннă вăхăтра, нимĕçсем, урнă кашкăрсем пек уласа, пирĕн çинелле вут-хĕм сирпĕтме тытăнчĕç.

Тупă-пăшал сасси пĕр вĕçĕмсĕр кĕрлесе тăрать. Пулеметсем такăртатса пуля тăкаççĕ. Минăсем сĕмсĕррĕн шăхăрса килеççĕ те пирĕн патрах, хыçра е умра, ухлатса çурăлаççĕ...

Анчах эпир те хăраканнисем мар: арăслан пек чăрсăрланса, тигр пек хаярланса-хавтăрланса, çапăçма тытăнтăмăр.

Пăшалсем, тупăсем, миномĕтсем çĕр чĕтретсе-çĕмĕрсе тăшман çине тимĕр-тăмăр, вут-хурçă тăкаççĕ. Çакна пула вăрман пин урапаллă аслати пек хаяррăн кĕрлесе тăрать, пин-пин саслăн янăрать, улать, шав шавлать,— тĕнче кашти хуçăлнă пек туйăнать.

Акă тата пирĕн «катюша» пĕрре çеç, пĕр ăстрăм кăна хăйĕн юррине юрласа илчĕ,— кĕл пулса веçрĕç фашистсем!..

Çакăн хыççăн пĕр самантлăха пирĕннисем те, тăшмансем те — никам чармасăрах, хăйсем тĕллĕнех шăпланчĕç, тĕнчере пĕр чун та çук пек туйăнса кайрĕ...

Эх, атьсемĕр, шăпах çак самантра инçе те мар, пирĕн умрах, халĕ çеç вăрçă хаяррăн кĕрленĕ вырăнта, темĕнле майпа тытăнса юлнă пĕр çеçкеллĕ лутра çĕмĕрт çинче шăпчăк сасси, шăпчăк юрри илтĕнсе кайрĕ.

Кĕмĕл саслă, ылтăн саслă шăпчăк, юрла, юрла юрруна, шăрантар!..

Вăрçăра хытнă чун-чĕреллĕ юлташсем тем пек тĕлĕнчĕç. Чăтаймарăмăр, эпир те юрă юрласа ятăмăр:

Эх, бей, винтовка,
Метко, ловко,
Беспощадно по врагу!
Я тебе, моя винтовка,
Острой саблей помогу!

*Май, 1942*

## Каçхи мĕлке

Çутă каç. Кун пек каççем çурçĕр тăрăхĕнче, Ленинград çывăхĕнче çеç пулаççĕ. Хĕвел анать. Çаплах çутă. Каç те пулать, те пулмасть,— сисместĕн. Тĕнче çапах та тĕлĕрсе илет, çутă ирe кĕтет.

Пĕррехинче, çакăн пек каçхине, пирĕн фронтăн пĕр пĕчĕк участокĕнче тĕлĕнмелле ĕç пулса иртрĕ.

Ку каçхи пек шăплăх нихçан та пулман, темелле. Пĕрре те фронтри пек мар. Таçта çирĕклĕхре шăпчăк юрлать. Хушăран вăштăр-вăштăр çил вĕрсе илет. Волхов шывĕ тăрăх вĕтĕ-вĕтĕ хумсем чупса каяççĕ. Пĕчĕкçĕ пулăсем чăмпăлтатса илеççĕ.

Селимгалеев çыран хĕрринче, вĕтлĕхре пытанса ларать. Куç пек тулли шыв çине пăхса тĕлĕнет. Анлă Атăла, хăйĕн тăван ялне — Тутар çĕршывне аса илет. Инçеинçе вĕсем! Питех те инçе унăн улмуççиллĕ колхозĕ...

— Совет çĕршывĕ сарлака. Тăван çĕршыва тăшмансенчен çăлса хăварас тетĕн пулсан, эсĕ ăна кунта, фронтра, сыхла, хастар кĕреш!— терĕ пĕррехинче политрук.

Акă Тăван çĕршыв!

Киревсĕр тăшман, пирĕн çĕршыва пайăн-пайăн çурса тăкас тесе, унăн пĕр пайĕ çине ирсĕр урине килсе пуснă.

Умра юхан шыв. Акă темскер тӳлек шыва хумхатрĕ. Пулă мар,— такам, вăйлăрах та вăйлăрах ишрĕ. Тăрсантăрсан, çырма хĕрринчи çӳçесене темскер хускатрĕ. Инçе те мар хура мĕлке йăпшăнса тухрĕ.

— Чарăн! Кам килет?— кăшкăрчĕ постра таракан Селимгалеев.

Хура мĕлке, пулă пек, ним те шарламасть. Хăй утать те утать.

— Аллусене çĕкле!— хаяррăн кăшкăрать каллех часовой.

— Эпĕ... эпĕ... эпĕ Мускав çынни. Эпĕ сире, ырă тусăм, тытса чуптăваттăм,— çепĕççĕн те «кăмăллан» юптарать каçхи мĕлке.

«Ырă çын мар ку»,— шухăшласа илет часовой. Шăпах çак самантра ун патне Безбородов ефрейтор чупса çитет. Вĕсем «Мускав çыннипе» нумаях калаçса тăмаççĕ, тытаççĕ те кирлĕ вырăна ăсатаççĕ.

«Кам вăл? Мĕн шырать? Мĕн кирлĕ ăна? Мĕншĕн çĕр хута шыв урлă ишсе каçать? Çитменнине тата, тăшмансенчен...»— ыйтать часовой хăйĕнчен хăй.

«Анчах пире улталаймăн!»— тет вăл çав вăхăтрах.

Çапла, çапла! Пирĕн воинсене халĕ улталаймăн: вĕсем хаярланчĕç, çивĕчленчĕç!

Такăна-такăна утакан мĕлке курăнми пулчĕ. Ăна Безбородов штаба илсе çитерчĕ ĕнтĕ.

...Тепĕр ик-виçĕ кунран полк комиссарĕ Савинов

юлташ полкри красноармеецсене, командирсене тата политработниксене:

— «Мускав ҫынни»— фашистсем янă шпион. Мускава кайма документсем туса килнĕ,— терĕ.

Ҫакăн хыҫҫăн Селимгалеева пирĕн пĕтĕм часть пĕлекен пулчĕ. Вăл хăйĕн кашни юлташне тенĕпе перех ҫав каҫхи мĕлке ҫинчен тепрер хут тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пачĕ.

*Май, 1942*

## Ҫĕмĕрт ҫеҫки

... Чăнкăрах ҫыранлă пысăк та тарăн шырлан. Чăваш ҫынни тӳрех хăйĕн ҫĕршывне аса илет: ун пек ҫырмаҫатрасем, шырлансем Чăваш ҫĕршывĕнче те час-часах тĕл пулаҫҫĕ. Шырланăн тарăн тĕпĕнче шăнкăртатса вăрман шывĕ кĕмĕл саслăн юхать. Волхов юханшывĕ патне ҫитсе, унăн талкăшĕпе пĕрлешет те пысăк хумсем хушшинче ҫухалса каять.

Йĕри-тавра вĕтĕ вăрман. Ҫĕмĕрт, ҫĕмĕрт! Вĕҫĕмсĕр ҫĕмĕрт йывăҫҫи,— турат тулли паха ҫеҫке, шурă-шурă чечек ҫыххи.

Ҫакăн чухлĕ ҫĕмĕрт йывăҫҫи, ҫĕмĕрт ҫеҫки эпĕ нихҫан та, ниҫта та курман. Ҫĕмĕрт чечекĕн ырă шăрши пĕтĕм таврана сарăлнă. Вăрман сывлăшĕ шерпет пек: уҫă та тутлă.

Ҫĕмĕрт ҫеҫки куҫран каймасть. Чечеке ларнă ҫĕмĕрт хушшинче Тăван юрă аса килет:

Ҫĕмĕрт ҫеҫки ҫурăлсан та,<br>Ҫĕмĕрт ҫеҫки ҫурăлсан —<br>Тухас килмест вăрмантан.

Анчах та ҫак кĕтес тăван юрăран, хам ҫуралнă ҫĕршывран питех те катара... Чăн та, инҫетре-инҫетре Хутар сали — тăван сăпка, инҫетре инҫетре пирĕн хула — ватă Шупашкар. Ҫапах та ку кĕтес те пирĕн ҫĕршывăмăрах, шурă ҫĕмĕрт ҫеҫки те, улăхри чечексем те пирен ҫĕршыври чечексемех, тутлă та паха. Вĕсем куҫ пек, чере пек,— ҫак чечексем ҫывăхран та ҫывăх...

Йĕри-тавра Тăван ҫĕршыв — Совет Союзĕ.

— Тен, шăпах ҫакăнта Тăван ҫĕршывшăн, тăшманпа ҫапăҫса вилĕпĕр. Пирĕн масарăмăр ҫак чечек вăрманĕнче, ҫĕмĕрт хушшинче пулĕ,— тет юлташ.

— Тăван ҫĕршывшăн кĕрешĕпĕр, вилес пек ҫапăҫăпăр. Анчах тусăм, вилмĕпĕр! Тăван ҫĕршывăн чечекĕсем

хушшинче çитмĕл çул, çĕр çул пурăнăпăр. Пурăнсан-пурăнсан, эпир те ватăлăпăр... Çĕнĕ те урăх ăрусем çуралĕç, пирĕн вырăна йышăнĕç. Вĕсем те ватăлĕç, çĕр çинчен кайĕç. Анчах халăх нихçан та пĕтмĕ. Халах, юлташсем, вилĕмсĕр. Эппин халăх ячĕпе хамăр çĕршывшăн, халăхшăн пурăнар. Çакăн пек манăн ĕмĕт!— тетĕп те, çĕмĕрт чечекне, чи лайăххине, татса юлташăма тыттаратăп.

*Июнь, 1942*

## Çаран çинче

Темиçе сехет хушши вăрман витĕр утнă хыççăн эпир виççĕн — виçĕ офицер, пурте ывăнса çитнĕскерсем, сарлака улăха тухрăмăр. Аслă, калама çук тулăх, пуян улăх. Илемĕпе куçа илĕртет. Çаран, çаран!.. Унта-кунта çўçе-хăви, пĕччен хурăн, кăтри каччă...

Инçетре те мар, пирĕн умрах, икĕ карăш пĕр харас ура тапса авăтаççĕ. Хăва хушшинче пĕчĕк чепчем — çепĕç кайăк — хăйĕн чĕвĕл юррине шăрантарать.

Эпир, ырă кайăксен юррине итле-итле, улăхри тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексем çине пăхса, малалла утатпăр. Пĕр çамрăк хурăн патне çитсен, Ильин капитан пирĕн еннелле пăхрĕ те:

— Айтăр, юлташсем, кăштах канар,— терĕ.

— Канар, çаран çинче канар!— килĕшрĕ унпала Руденко капитан.

Симĕс курăк çине пĕр плащ-палатка сартăмăр та виççĕн юнашар тăсăла-тăсăла выртрăмăр. Çерем çинче мамăк тўшек çинчи пек канлĕ. Кĕлетке те, чун та канать...

Пирĕн хыçра сип-симĕс вăрман, унта: хырсем, чăрашсем, вĕсемпе юнашар — яштака çамрăк хурăнсем, авăссем, çўçе-çирĕксем. Лăпкă çил вĕрет те йывăç çулçисем пăшăлтатса калаçаççĕ.

Турачĕсене артиллеристсем касса тикĕсленĕ чăнккама чăрăшсем вăрман урлă, улăх урлă кармашса Волхов юхан шывĕ çине пăхаççĕ, унăн хăмăр шывĕ çинче тем шыраççĕ.

Самаях каçалла сулăннă хĕвел хура вăрман хыçне пытанма хатĕрленет, ылтăн-кĕмĕл урисемпе таçти-инçетри çĕршывсем çине пусса илет. Улăхри шурă, кавак, сарă, хĕрлĕ тăраллă чечексем пуçĕсене хĕвел еннелле çаварнă та, куçĕсене мăч-мăч хупса, хуллен-хуллен варкăшса килекен çилпе хумханаççĕ, пирĕнпе сывпуллашма хатĕрленеççĕ.

Ывӑнса улӑха юлнӑ пыл хурчӗ чечек ҫинчен чечек ҫине вӗҫет.

— Ҫак пыл хурчӗн хуҫи те ҫук, килӗ те ҫук...— тет Ильин капитан.

Тӗрӗс калать вӑл. Чӑнах та, ҫав хуртсен пурнӑҫӗ такама та тӗлӗнтерет. Вӗсен хуҫи пуян колхоз пулна. Пыл хурчӗсем вӑрман уҫланкинче, колхоз утарӗнче пурӑннӑ. Ешне тӑрӑх, уй-уй тӑрӑх, улӑх тӑрӑх вӗҫнӗ вӗсем... Анчах 1941 ҫулта, вӑрҫӑ пуҫлансан, нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсем, утара кӗрсе, вӗллесене ӳпӗнтере-ӳпӗнтере, пыл ӗҫнӗ. Ҫаткӑн хырӑмӗсене пыл чыхса тултарсан вара, хӗрле йӗкехӳре пек хӗрлӗ фашистсем хурт вӗллисене пӗр ҫӗре купаланӑ та бензин сапса ҫунтарнӑ. Пыл хурчӗсем унтан ҫак вӑрмана ушкӑн-ушкӑн саланнӑ. Таҫта пурӑнаҫҫӗ вӗсем халӗ, таҫта вӗсен килӗ...

Ӗҫчен хуртсем ҫине пӑхса выртнӑ чухне:

— Фашистсем,— терӗ Руденко капитан,— совет халӑхне ҫав вӗлле хурчӗсене салатнӑ пек салатасшӑн пулчӗҫ. Анчах эпир хуртсем мар,— пире никам та салатаймӗ!

Руденко юлташӑн сӑмахӗсемпе эпир те килӗшетпӗр.

— Тӗрӗс! Пире никам та салатаймӗ!

— Ҫапла, туссем, тӗрӗс! Тӗрӗс!— тесе сиксе тӑчӗ ҫамрӑк Руденко.— Тӑшмана тӗп тусан, эпир тӑван ялсене, хуласене пухӑнӑпӑр. Нимӗҫ оккупанчӗсем пирӗн ҫынсене ылханлӑ Германие хӑваласа кайрӗҫ пулсан, эпир хамӑр ҫынсене — аннесене, йӑмӑксене, пиччесемпе шаллӑмсене тупӑпӑр, пухӑпӑр... Эпир ҫакӑн пек сарлака улӑха ушкӑн-ушкӑн тухса ҫаран ҫинче, тӗрлӗ-тӗрлӗ чечексем хушшинче, юлташсемпе, юрӑ юрласа ҫӳрӗпӗр...

— Ҫаран ҫинче туссемпе пӗрле савӑнса ӗҫкӗ ӗҫӗпӗр... Вӗлле хурчӗсем пек сӗрлӗпӗр... Совет халӑхӗ — пин-пин, темиҫе миллион... Тӑшмана хирӗҫ вӑл халӗ те, ӳлӗм те улӑп пек ҫӗкленӗ...— Хушса хурать мӑнаҫланнӑ Ильин, хӑйӗн иртнӗ кун-ҫулне аса илсе.

... Йӗри-тавра илем, аслӑ улӑх. Пирӗн чӗресенче ҫав улӑх пек пысӑк ӗмӗт. Вӑл ӗмӗт Ленинград ҫӗршывӗнчен, Волхов хӗрринчен, Совет ҫӗрӗ тӑрӑх ҫунатланса вӗҫет. Вӗҫех, вӗҫ!— теес килет пӗтӗм чун-чӗререн.

* * *

Юлташсен ырӑ сӑмахӗсене итле-итле эпӗ те ҫак чаплӑ ҫӗршывра, Волхов юханшывӗн, ватӑлса кавакаркӑ Новгородӑн, хӑйӗн паттӑрлӑхӗпе чапа тухнӑ Ленингра-

дăн вăйне чĕрене хывса, йăваш кăмăла çĕклесе, чăваш çĕрне шухăшăмпа вĕçрĕм. Эпĕ унта тăван улăха тупрăм, çичĕ юта çĕнтерне хыççăн эпĕ унта пулатăпах, терĕм.

... Ĕмĕт малаллах вĕçет. Çунатлă шухăшăмпа — эпĕ илемлĕ улăхпа савăнса пыратăп. Улăх тулли колхоз халăхĕ: ватти-вĕтти, арĕ-арăмĕ, каччи-мăччи, пике хĕрĕ.. Çава сасси, хĕрарăмсен кăкăрĕсем çинчи шўлкеме-тенкĕ сасси, арçынсен кăкăрĕсем çинчи тĕрлĕ медаль — орден сасси, хĕр кулли, каччă юрри, ача-пăча йăславĕ, ут кĕçенни, машина кĕрлевĕ,— улăх тулли шав, чĕре тулли çут кăмăл.

Çакă вăл — ĕç шавĕ, ĕç кĕрнекĕ! Çĕнтерў кăмăлĕ вăл, çĕнтерў хыççăн килнĕ хавас-çĕклев!..

Паян эпĕ тăван улăха аса илетĕп те, чун-хавалпа çĕкленсе, пĕтĕм сасăпа калатăп:

Эх, çуласчĕ!
Эх, çуласчĕ
Тăван улăх çаранне!..
Ушкăнпала,
Пин-пин саспа
Юрла-юрла юррине!..

Ильинпа Руденко манăн шухăша вĕçлеççĕ.

— Колхоз ĕçĕн юррине!— теççĕ вĕсем иккĕн харăс.

*Волхов çыранĕ, 1943*

## Воронкăра

Вăрçă хирĕ...

Эпир иккĕн пĕр воронкăра выртатпăр, питĕмĕрпе, чĕремĕрпе çĕр аннене ăшăтатпăр...

Туятăп, сисетĕп, кĕретĕнех куратăп,— инçетре мар, пуç вĕçĕнчех-и тен,— тăшман снарячĕсем çĕр çемерсе çурăлаççĕ. Вĕсен ванчăкĕсем пирĕн урлă эсрел пек ўлесе иртеççĕ. Йĕри-тавра хура тĕтĕмпе тусан вăрман евĕр çĕкленет. Инçетрен-инçетрен хуллен-хуллен хĕрелсе, сарă хĕвел пăхать...

Хăрушă, хăрушă! Вăхăчĕ-вăхăчĕпе тамăкри пек туйăнать: те арçури, те шуйттан ахăрса сикет. Пире килсе таптасшăн...

— Эх!— тет те лейтенант Лобачев, табак хутаççи туртса кăларать.— Туртар!— тет хăй.— Туртар!

— Табак туртсан, чĕре лăпланать,— тетĕп эпĕ те юлташпа килĕшсе. Чĕлĕм туртмастăп пулин те пыс-ă-áк! чыкарккă чĕркес тесе, кĕсъерен хаçат татăкĕ туртса кăларатăп.

Каллех снаряд хыççăн снаряд ӳкет. Эпир хыпаланса чикарккӑ чӗркетпӗр...

Чикарккасем пирӗн питех те, питех те тачка, хулăн, хур тукмакки пек. Эпир туртакан табак хаяр, çирӗп,— вырăс çӗрӗ çинче ӳснӗ табак! Совет çынни савăнсан та, хурлансан та çав табака пашлаттарса туртать. Туснеюлташне нихçан та манмасть, яланах асăнать:

Вспомню я пехоту
И родную роту,
И тебя за то, что дал мне закурить...

Снарядсем ӳкеççӗ, ванаççӗ...

*Ленинград фрончӗ, 1943*

## Геройсем

...Çав пăчă та шăрăх кун, иртен илсе мӗн каç пуличченех, хаяррăн, арасланса пек, çапăçнă пирӗн салтаксем. Анчах та вырăс çарӗсем, хăйсен йышӗпе сахалтарах пулнăскерсем, французсен позицийӗсене темиçе хутчен пыра-пыра тапăннă пулин те, Наполеон çарӗсем ханк та туман — çирӗп тытса тăнă хăйсем йышăннă вырăна, Могилев хули патне яман.

Вырăс генералӗ Раевский, ик-виç хут çапăçăва кӗрсе тухнă хыççăн, хăйӗн тăван ывăлӗсене аса илнӗ те:

— Ачамăрсем: Килӗр-ха хăвăртрах ман патăма,— тесе чӗннӗ.

Генерал ывăлӗсем — вунçичӗ çулти Александр прапорщик тата вунпӗр çулти Николай мӗн вăрçă пуçланнаранпах ашшӗпе пӗрле фронтра пулнă.

Ашшӗ сассине илтсен, Александрпа Николай часах ашшӗ патне чупса пынă.

— Мӗн, атте? Мӗн?!— тенӗ вӗсем.

Ашшӗ нимӗн те шарламан. Вăл икӗ аллипе икӗ ывăлне тытса, вӗсене малалла, тăшман тупписем персе тăнă вырăна, илсе кайнă. Салтаксем генерал çине пăхса тӗлӗннӗ, пӗтӗм чунтан хумханма тытăннă. Çакăн чухне хастар генерал, хăйӗн воинӗсене чӗнсе, хыттăн кăшкăрса каланă:

— Атьсемӗр! Акă эпӗ, сирӗн генералăр, кусем,— тенӗ вăл,— манăн юратнă ывăлăмсем, манпа пӗрле вӗсем çапăçăва кӗреççӗ. Малалла, атьсемӗр, малалла!

Паттăр генерал сăмахӗсем салтаксен чӗрисем патнех çитнӗ. Вырăс салтакӗсем вара кар! тăрса, харсăрланса,

çунатпа çунатланса, пĕр харăс çĕкленнĕ, генералпа унăн икĕ ывăлĕ хыççăн — «урра» кăшкăрса, тăшман çине ыткăннă. Çак хаяр атакăра, калама çук вăйлă çапăçура, вырăссем çĕнтернĕ.

— Мухтав — геройсене!— кăшкăрнă çакна курсан çар командующийĕ Багратион.— Мухтав — Раевскисене! Мухтав!

— Паянхи кун — пурте геройсем! Пурне те мухтав!— ответленĕ ывăлĕсемпе пыракан генерал.

— Мухтав салтаксене! Мухтав!— тенĕ Багратионпа Раевский.

* * *

Çак ĕç 1812 çулхи июлĕн 11-мĕшĕнче, Наполеон хăйĕн нумай йышлă çарĕсемпе Россия хирĕç вăрçнă чухне, пулса иртнĕ. Ана эпĕ Германире Шургас хули çумĕнче, Нейссе шывĕ хĕрринче, нимĕçсем урса кайсах хăйсен туписенчен пенĕ вăхăтра окопра ларнă чухне илтрĕм... Тулин капитан хăйĕн салтакĕсене каласа пачĕ çакна.

— Тата мĕн те пулин каласа парăр-ха, капитан юлташ,— ыйтрĕç вĕсем.

— Кайран каласа парăп,— терĕ капитан.

Анчах кайран нимĕн те каласа памарĕ вăл. Мĕншĕн тесен вăхăт пулмарĕ унăн: атака пуçланчĕ те, вăл хăйен салтакĕсене ертсе, урра! кăшкăрса малалла ыткăнчĕ.

— Мухтав геройсене, мухтав!

*Бреслау, 1945*

## Вăрçă турри

... Ир çинче, вунă сехет çитсен, çĕнĕ тупă «катюша» юрласа ячĕ те, Волхов шăплăхĕ хускалса, пин çĕрелле çурăлса кайрĕ.

— Плясануло!— терĕ Сизов лейтенант.

Кĕтнĕ вăхăт çитрĕ. Çак самантран пуçласа, Ленинградпа Волхов фрончĕсем хăватлă наступленине çĕкленеççĕ. Ленинградпа Новгород çĕрĕсене, Александр Невский нимĕç рыцарĕсене хăваланă вырăнсене, ирсĕр нимĕç фашисчĕсенчен тасатмалла.

«Катюша» сасси сигнал пулчĕ.

— По немецко-фашистским оккупантам огонь!— илтĕнчĕ батарейăсенче команда.

— Огонь!

— Огонь!..

Тупăсем пĕрин хыççăн тепри снарядсем ывăтма тытăнчĕç. Пĕтĕм пĕлĕт тĕтĕмпе хупланчĕ. Çĕр çĕмĕрсе тăрать совет артиллерийĕ.

Шăпах çак вăхăтра Сизов патне генерал килчĕ.

— Генерал юлташ!— терĕ Сизов, ăна хирĕç чупса тухса.— Тăшманăн оборонине аркатма дивизион артподготовка пуçларĕ.

Лейтенант тем пек хытă кăшкăрса каларĕ пулин те, хăйĕн сăмахĕсене хăй те илтеймерĕ. Генерал вара пуш-шех илтмерĕ, Сизовăн тутисем уçăлса хупăннине çеç курчĕ вăл.

— Мĕн?— ыйтрĕ генерал.

— Мĕн тетĕр, генерал юлташ?— пĕтĕм сасăпа кăшкăрчĕ Сизов.

Лейтенант патне çывхарса, генерал хуллен пăшăлтатрĕ:

— Ан кăшкăрăр, хуллен калăр...

— Дивизион перет,— пĕлтерчĕ генерала Сизов, пĕр сасă кăлармасăр.

Пăшăлтатса каласса çеç вĕсем пĕр-пĕрне ăнланчĕç. Кайран, дивизионран каяс умĕн, лейтенант аллине пăчăртарĕ те генерал:

— Вăрçă турри — хăватлă турă! Вăл калаçнă чухне кăшкăрни усăсăр, мĕншĕн тесен этем сасси ун чухне илтĕнмест,— терĕ.

*Прага, 1945*

## Ответ

— Совет Союзĕнче театрсем пур-и?— ыйтрĕ пĕр мещенле австрийка пирĕнтен.

Çамрăк вăл. Тĕнчере çирĕм çул çеç пурăнса курнă çак австрийка. Фашистла пропаганда унăн ăн-пуçне пирĕн çĕршыв çинчен тĕрлĕ суя сăмах-юмах чыхса тултарнă. Çав пропагандăна ĕненсе, унăн серепине лекнĕ çынсем Австрире темĕн чухлех.

Мĕнле те пулин лайăхрах, вирлĕрех тавăрас тесе, эпĕ кăштах вĕриленсе унăн ыйтăвне ăшăмра тепĕр хут палăртрăм:

— «Театрсем пур-и?» теместĕр-и çак эсир?— терĕм.

— Йо, йо!— терĕ вăл.

— Кăшт тăхтăр-ха, айн момент... Ку ыйтава хирĕç ответлеме йывăр мар, анчах малтан сире эпĕ хам пĕр ыйту парам,— калама тытăнтăм эпĕ.— Манăн ыйту çак-

нашкал: «Совет Союзĕн танксем, тупăсем, самолетсем пур-и?»

— Эх, ан та ыйтăр...— терĕ австрийка.

— Мĕншĕн?

— Вĕсем нумай сирĕн. Эпĕ хамах куртăм, питех те нумай вĕсем...

— Анчах, карма çăвар Геббельс сире мĕн калатчĕ: большевиксен вăрçă техники çук теместчĕ-и?.. Эпир кунта танксемпе, тупăсемпе, машинăсемпе килмен пулсан, эсир паян кун та ĕненмен пулăттăр, халĕ манран театрсем çинчен мар, танксемпе самолетсем çинчен ыйтнă пулăттăр. Вăрçă! Çавăнпа эпир танксемпе килтĕмéр. Танксем, самолетсем, тупăсем пирĕн вара калама çук нумай.

— Хамах пĕлетĕп, куртăм... Нумай...— килéшрĕ австрийка.

— Анчах пирĕн театрсем те нумай! Лайăх пулсан, мир çитсен, тепĕр чухне, эпир театрсемпе килĕпéр. Ун чухне вара хăвăрах курăр. Пирĕн пурте пур: танксем те, театрсем те...

* * *

... Тепĕр ик-виç кунран Вена хулине пирĕн чи паллă артистсем килни çинчен Австри хаçачĕсенче статьясем çырчĕç. Мĕн шутлать-ши халĕ çав мана ыйту панă австрийка? Ăна курасчĕ те каласчĕ:—«Акă манăн ответ!»—теесчĕ.

*Вена, 13.VII.46*

## Икĕ çуркунне

### 1.

1941 çул.

Нихçанхинчен те хитре пулчĕ çав çулхи çуркунне. Ун пек çуркунне эпĕ хамăн ĕмĕрте урăх курман.

Пуш уйăхăн вĕçĕнче шап-шура юр, пĕр пăнчă чухлé хуралмасăр, шуррипех—хуллен-хуллен пăчăртанса, куллен хухса, анчах сăнне çухатмасăр ирĕлме тытанчĕ. Кăнтăр енчен ăшă çил хумханса килчĕ, ăна хĕвел пулăшрĕ... Таçта, юр айĕнче, шыв шăнкăравĕн сасси илтĕнчĕ. Вăйлансах-вăйлансах пычĕ çав сас.

Йĕри-тавра вĕçĕ-хĕррисĕр тăван çĕршыв кĕрлерĕ. Унăн сассине итле-итле:

— Тулăх çул пулать кăçал!— терĕ совет çынни.

Çурхи çил лăпкăн вĕрчĕ. Ăшă çумăр çурĕ. Хур кайăксем картан-картан карталанса вĕçсе килчĕç. Ешĕрекен садсенче, вăрмансенче кайăк-кĕшĕкĕн чĕвĕл сасси илтĕнчĕ. Юрăçă-кайăк юрри чуна çĕклерĕ.

Улăхсем симĕс курăкпа витĕнчĕç. Улмуççи çеçкене ларчĕ. Чечексем çĕкленчĕç, шерпет пек тутлă шăршă сарчĕç. Тĕрлĕ-тĕрлĕ çеçке çинче хурт-хăмăр вĕçме тытăнчĕ.

Уйсем симĕсленчĕç, хитре тум тăхăнчĕç.

Совет çынни малалла пăхрĕ те каллех:

— Тулăх çул пулать кăçал!— терĕ кăмăлне хăпартса, çӳлтен çӳле çĕклесе.

Анчах тăван çĕршыва çуркунне вăйĕ сарăлса, тĕнче ăшши килсен, ылтăн хĕвел çутипе папка-çулçăсем, курăк-чечексем пурнăçа тухсан, тĕрлĕ улма-çырла чăмăртанма тытăнсан,— çутă шурăмпуçĕ тин çеç килнĕ вăхăтра,— хĕвеланăçĕнче тусан мăкăрланчĕ, хура тĕтĕм çĕкленчĕ...

— Вăрçă!— тенĕ сасă илтĕнчĕ.

Нихçанхинчен те пысăкчĕ пирĕн ĕмĕт, анчах вăл çип пек татăлчĕ...

Эпир салтак пултăмăр, алла пăшал тытрăмăр, вăрçă вăрçма тухрăмăр.

Эпир виçĕ çуркунне вăрçрăмăр.

## 2.

1945 çул.

Кăçал эпир инçетре — Германире, тăшман çĕршывĕнче. Эпĕ пĕлетĕп, чĕремпе туятăп: Чăвашра та халĕ çуркунне, унта каллех тĕнче ешĕрет, тăван çĕршыв çурхи ĕмĕтпе пурăнать.

Инçетре, ют çĕршывра пулин те, эпир Совет çĕрĕнчи çуркуннене куратпăр. Унта вăл çĕр саслăн, пин саслăн, кунĕн-çĕрĕн кĕрлет. Шап-шурă, тап-таса юр шывĕ колхозсен сарлака уйĕсенчен, сĕм-сĕм вăрмансенчен çырма-çатранаваскать, çырма-çатрасенчен, шырлансенчен Эскетен юханшывне чупать, унтан Çавала тухать, Çавал тăрăх юхса, Атăл шывĕпе пĕрлешет.

Мĕн чухлĕ юрăçă-кайăк тăван сĕршывра вĕçет! Вĕсем пурте çуркуннене киссе килнĕ, ятарласах çĕнĕ юрă-кĕвĕсем юрлама килнĕ. Вăрманта куккук, уйра тăри юрлать, ялта чĕкеç юрă тăкса вĕçет...

Эй, илемлĕ-çке пирĕн вăрмансем! Çавал пуçĕнче —

Çавал вăрманĕ, Сăрă тăрăх — Сăрă вăрманĕ, Атăл тарăх — Атăл вăрманĕ... Кашни турат, кашни йывăç çеçкере. Пĕтĕм çĕршыв çеçкере. Мĕншĕн тесен унта халĕ çуркунне.

Хĕвел тухнă чух хĕрупраçсем ĕçе каяççĕ, хĕвел аннă чух ĕçрен килеççĕ. Юрăсар вĕсем ниçта та тухмаççĕ, юрăсăр утăм утмаççĕ...

Пирĕн çĕршывра çуркунне! Нимĕçре варçă. Кунĕн-çĕрĕн кĕрлет вăл вăрçă. Хăш самантра унăн шавĕ çухалать те, эпир хамăр çĕршыври çуркуннен сассине илтетпĕр, çĕр çине выртса итлетпĕр. Çакăн чухне ĕнтĕ çĕршыв юррине чĕрене хыватпăр, çав юрăпа çунатланса, ĕмĕтшухăшпа çĕкленсе хамăр çуралса ӳснĕ çĕре вĕçетпĕр. Мĕншĕн тесен çĕршывра халĕ çуркунне, çĕнтерӳ çуркунни!..

Нихçанхинчен те хитре çуркунне вăл. Ун пек çуркуннене манăн чĕре нихçан та туйса курман. Эпир кăмăлсене хыттăн тытса, пуçсене мăнаçлăн çĕклесе, каллех малалла пăхатпăр, çитес кунсем енне чунпа, кăмăлпа, ăспа туртăнатпăр, паттăрланса хăлат пек вĕçетпĕр. Мĕншĕн тесен халĕ пирĕн чĕрере те çуркунне,— ăшă та паха çуркунне!

*Германи, I.IV.45*

## Поэт тăпри

**(Фронтри дневникрен, 1944 ç.)**

*Июлĕн 12-мĕшĕ.*

Политработниксен канашлăвĕ вуникĕ сехетре сопкăсем хушшинчи çирĕклĕхре пулчĕ. Эпир кунта çĕнĕ хыпар пĕлтĕмĕр. Пирĕн дивизи умне калама çук чаплă задача лартнă: унăн, наступление питех те хăвăрт кайса, пер паллă вырăна нимĕçсенчен тасатмалла. Çак вырăн вăл — Пушкинские горы.

— Ку задачăна,— терĕ Гуторов полковник,— кашни салтака каласа памалла. Пирĕн, çак наступление ăнăçлă туса, совет халăхĕшĕн тата тепĕр паллă ĕç тумалла. Пушкин масарĕ, унăн таса тăпри фашистсен аллинче. Аслă поэта çăлмалла пирĕн, Тăван çĕршывшăн, Пушкиншăн çапăçмалла!

Полковник, юлашкинчен, А. С. Пушкинăн патриотла сăмахĕсене аса илтерчĕ. Поэт çакăн пек каласа хăварнă:

И хоть бесчувственному телу
Равно повсюду истлевать;
Но ближе к милому пределу
Мне все б хотелось почивать.

Каç пулас умĕн, кăнтăрлахи шăрăх чаксан, кашни ротăрах калаçусем пулса иртрĕç. Политработниксем салтаксене вилĕмсĕр Пушкин çинчен тĕплĕ каласа пачĕç.

Кун пек калаçăва ирттерме политотдел мана та хушрĕ. Вăрçăччен мĕн вĕреннине аса илме, Пушкин çинчен мĕн пĕлнине аслă поэта юратакан совет воинесене каласа пама тиврĕ.

...Мускавра Бауман урамĕнче темиçе хутлă пысăк çурт пур. Ирсерен çак çурта ачасем васкаса, янăравлă сассисемпе калаçса пыраççĕ. Вĕсем çав çурта кĕреççĕ те, анлă та таса коридорсемпе утса, çутă классене çитсе чарăнаççĕ, партăсем хушшине кéрсе лараççĕ, кĕнекесем вулаççĕ.

Çĕр аллă çула яхăн ĕлĕк вăл шкул вырăнĕнче сулхăн садра пĕчĕк çурт ларнă. Çакăнта ĕнтĕ 1799 çулхи майăн 26-мĕшĕнче (çĕнĕ стильпе — июнĕн 6-мĕшĕнче) Александр Сергеевич Пушкин çуралнă.

Пушкин, çамрăклах литературăна парăнса, пĕтем чĕререн юратма пуçланă. Сакăр çулта чухнех вăл французсен тата грексен паллă писателĕсем çырна произведенисене нумайăшне вуласа тухнă, çав вăхăтрах çамрáк ачан хăйĕн те çырас кăмăлé çуралнă. 12—13 çула çитсен вара Александр Пушкин литература ĕçне пĕтемпех кӳлĕннĕ. 1814 çулта çамрăк поэтăн «К другу стихотворцу» ятлă сăвви журналта пичетленсе тухнă.

Пушкинăн пултарулăхĕ çултан çулах сарăлса, тарăнланса пынă, пысăк литература çулĕ çине тухнă, ячĕ ирхи хĕвел пек çĕкленсе пынă.

Пушкинăн чаплă произведенийĕсене кам вуламан-тăр? «Евгений Онегин», «Капитан хĕрĕ», «Дубровский», «Борис Годунов», «Полтава» тата ыттисене те пирен çынсем нихçан та манас çук.

Хăйĕн вилĕмсĕр произведенийĕсемпе вăл пирен çĕршывăн культурине пуянлатнă, унăн чапне пĕтĕм тĕнчипе çĕкленĕ. Анчах хăйсен кĕске ăспе кура мар мăнаçланнă патшапа унăн тĕрлĕ тарçи-тĕрçисем Пушкина юратман, ăна курайми пулнă. Чи малтан Николай патша ун çине ирсĕр этемсене вĕскĕртсе тăнă. Çавăн пек йытăлла этемсенчен пĕри тăван çĕршывсăр, сутăнчăк Дантес пулнă.

1837 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче (çĕнĕ стильпе — февралĕн 8-мĕшĕнче), тап-таса сывлăшлă хĕллехи сивĕ кун, Дантес пули Пушкина йывăр амантнă. Çакан çинчен пĕлсен, вырăс поэзийĕн ирхи шăпчăкĕ, паллă поэт-юрăçă Алексей Васильевич Кольцов, пĕтĕм чунтан хурланса, Пушкина асра тытса, хăйĕн пĕр çырăвĕнче: «Хĕвеле персе шăтарнă!» тесе çырнă.

Пушкин çинчен пуçланă калаçу пĕтсен, капитан Иван Загнибородa, вăрçăччен Воронеж хули театрĕнче артист пулса ĕçленĕскер, аслă поэтăн «Анчар» ятлă сăввине вуласа пачĕ.

Наркăмăш шĕвекне юхтарса ларакан йывăç çинчен калать çак сăвă. Пĕр ирсĕр патша наркăмăш шĕвекĕпе хăйĕн уххин йĕпписене йĕпетсе пенĕ, айăпсăр çынсенех вĕлерсе çӳренĕ.

Вăйлă вулать пирĕн артист ăна, чĕрене хумхантараççĕ унăн сăмахĕсем. Итлетĕн те, çурăм тăрăх сивĕ чупса, юн сăркăлтатса каять.

— Гитлер пек!— терĕ итлесе ларакансенчен пĕри, Толстихин старшина.

— Тĕрĕс!— унпала килĕшрĕç хыçалта ларакан салтаксем — чăвашла тутар — Кураковпа Нармухамедов.

> А князь тем ядом напитал
> Свои послушливые стрелы
> И с ними гибель разослал
> К соседям в чуждые пределы.

Çак сăмахсем сопкăсем хушшипе таçталлах вĕçрĕç, вĕтĕ çирĕксемпе çӳçесем витĕр кайса кӳлĕ хĕрринче çухалчĕç, унтан вара ауклатса каялла илтĕнчĕç.

Тĕттĕмленсе каç пулсан, эпир темиçен пĕр çӳлĕ сопка тăррине хăпартăмăр. Пите кăтăкласа ăшă çил вĕрет. Тӳпере пин-пин çăлтăр çиçсе тăрать. Пирĕн умра, эпир каяс çĕрте, вунă-вунпилĕк вырăнта çулăм ялкăшса тăрать. Каçхи пĕлĕт хĕп-хĕрлĕ. Унта вырăс ялĕсем çунаççĕ. Тăшман çунтарать вĕсене, фашистсем çунтараççĕ...

— Çав вутра Пушкин тăпри те çунать пулĕ?— ыйтать хăйĕнчен хăй бурят çынни Убугунов лейтенант.

— Эсрелсем, нумаях аташаймăр! Ак çитĕпĕр, çитĕпер сирĕн пата!— теççĕ тарăхнă сасăпа совет воинĕсем темиçен.

Хĕвелтухăçĕнче ирхи шурăмпуçĕ курăннă вăхăтра дивизи разведчикĕсем çĕнĕ хыпар илсе килчĕç. Пирĕн сулахай флангри чаçсем вăйлăн хĕссе пынипе тăшман тарма тытăннă. Çавăнпа вĕсем совет ялĕсене аркатса, çунтарса хăвараççĕ-мĕн. Çавăн пек вĕсен тискер йăли — пирĕн çĕре «пушă хир» туса хăварас йăла!

Кăштах вăхăт иртсен, вара пирĕн полксем те çапăçăва кĕрсе кайрĕç. Совет воинĕсем малалла ыткăнса каяççĕ те, тăшмана хуса çитсе, кантăр тыллана пек, тылаççĕ. Çĕр кисренсе тăрать!

Çул çинче çĕмрĕк машинăсем, тупăсем, миномĕтсем выртаççĕ. Гитлер салтакĕсем урлă-пирлĕ, кутан-пуçăн тăсăла-тăсăла ӳкнĕ. Шыранине ĕнтĕ вĕсем тинех тупнă,— тупнă та нимĕн те шарламаççĕ!

Пĕр вăрмана çитсен, темиçе сехетлĕхе чарăнса тăмалла пулчĕ. Шоссе çинче пирĕн штабистсем: «Пушкинские горы виçĕ километртра» тесе çырса фанера татăкĕ çакма та ĕлкĕрнĕ.

Кашни салтак пуçĕнчех пĕр шухăш: мĕнле-ши пирĕн Пушкин? Унăн вилтăприне нимĕçсем пăсман-ши? Вараламан-ши?..

Артиллеристсем хăйсен батарейисене вăрман айккинчи лапам вырăна çитсе вырнаçтарнă та тăшман çине снаряд хыççăн снаряд ярса тăраççĕ.

Кайран пире Захар Федоров парторг (Хĕрлĕ Чутай чăвашĕ) пĕр интереслĕ факт çинчен хавасланса каласа пачĕ.

Гончаренко сержант расчĕчĕ нимĕçсен виçĕ туппине персе çĕмĕрнĕ, икĕ грузовик çунтарса янă. Питех те хĕрӳллĕ вăхăтра:

— Тăван çĕршывшăн! Пушкиншăн!— тесе кăшкăрса хавхалантарнă сержант хăйĕн расчĕтĕнчи артиллеристсене.

Кун пек каласа çапăçнисем ытти батарейасенче те пулнă. Çакă вăл пирĕн воинсем вырăссен аслă поэтне юратни çинчен, ăна пĕтĕм чĕререн сума суни çинчен калать. Пушкин ятне эпир пĕчĕк чухне шкулта илтнĕ, унăн нихçан кивелме пĕлмен кĕнекисене, хума вырăн пулмасан, хĕве чиксе çӳренĕ, ăслă сăмахĕсене чĕрене хывнă. Халĕ, Пушкин вилнеренпе çĕр çул иртсен, çичĕ юта хирĕç çапăçнă чухне, эпир, унăн хисеплĕ ятне пурте илтмелле кăшкăрса, малалла каятпăр.

Ҫак шухӑшсем пире татах та савӑнтараҫҫӗ, кӑмӑлӑмӑрсене ҫӗклеҫҫӗ.

Ҫурҫӗр иртсен, иккӗмӗш сехетре, Пушкин хулине (ӗлӗк *Святые горы* пулнӑ ҫӗре) кӗрсе кайрӑмӑр.

Пӗчӗк хула. Пӳрт-ҫуртсене нимӗҫ захватчикесем ишсе антарнӑ, ҫӗмӗрсе пӗтернӗ. Ҫӗмрӗк ҫуртсем хушшинче темӗнле майпа упранса юлнӑ ҫуртсем те пур. Ҫуртсем умӗнче ватӑ ҫӑкасемпе кӑтра хурӑнсем тӗлӗрсе лараҫҫӗ. Унта-кунта хуҫӑлнӑ турачӗсем выртаҫҫӗ.

Эпир урамсене ҫитсе чарӑнтӑмӑр. Малалла кайма ҫук. Пӗтӗм урамсене, ҫуртсене фашистсем минӑсем лартса хӑварнӑ.

— Пушкин тӑприне те минӑланӑ,— тенӗ хыпар ҫитрӗ. Боецсем чун-чӗререн тарӑхаҫҫӗ, гитлеровецсене тем те пӗр каласа ятлаҫҫӗ:

— Вӑт ирсӗрсем!

— Варвӑрсем!

— Тавӑрӑпӑр-ха, тавӑрӑпӑр!..

*Июлӗн 14-мӗшӗ.*

Пушкин ҫинчен сопкӑсем хушшинче пуҫланӑ калаҫусем халӗ те пӗтмен-ха. Пур ҫӗрте те аслӑ поэт ҫинчен ыйтаҫҫӗ, унӑн ырӑ ятне асӑнаҫҫӗ, сӑввисене аса илеҫҫӗ.

— Тӑван поэт масарне курасчӗ,— тет кашниех.

Ҫакӑ вӑл Пушкинпа халӑх хушшинчи ҫыхӑну ҫинчен, поэтӑн чапӗпе халӑх юратӑвӗ ҫинчен калать.

... Пушкин, ӑна Дантес амантнӑ хыҫҫӑн, икӗ талӑк хушши асапланнӑ. Анчах Пушкина персе вӗлерекенсем те асапланнӑ, хӑраса, чӗтресе тӑнӑ. Вӗсен ыйхисем вӗҫнӗ, ҫӗр ҫывӑрайман. Халӑхран хӑранӑ вӗсем, халӑх ҫилли тулса, тӑкӑнса каясран, тӑвӑл тухасран хӑранӑ.

Ахаль халӑх поэт патне туртӑннӑ, поэт патне пына. Пушкина амантсан, асапланса вилекен поэт хваттерне, унпа сывпуллашма 50.000 ҫын ытла пынӑ, унӑн чи ҫывӑх тусӗсем — Жуковский, Вяземский, Александр Тургенев, доктор Даль тата ыттисем те поэт пӳлӗмӗнче пулнӑ.

1837 ҫулхи январӗн 29-мӗшӗнче (ҫӗнӗ стильпе февралӗн 10-мӗшӗнче) 2 сехет те 45 минутра Пушкин хӑйсн юлташӗсем ҫине, кӗнекисем ҫине юлашки хут пахса илсе, хуллен-хуллен каланӑ:

— Сывӑ пулӑр, тусӑмсем!

Поэт тӑшманӗсем унӑн вилӗ кӗлеткинчен те пулин хӑранӑ-ҫке. Патша жандармӗсем вилнӗ поэта хелле, ҫилтӑман витӗр, Петербургран Псков еннелле вӑрӑсем пек

илсе кайнă. Тепĕр пилĕк талăкран вара ăна Михайловское салине илсе пынă та, Святогорски монастирте Горско-Успенски соборăн картишне пытарнă.

...Акă эпир халĕ унта тăратпăр. Пирĕнтен инçе те мар монастирĕн чул стенисем. Каçхи тĕттĕмре çемрĕк чиркӳсем, чул çуртсем курăнса лараççĕ.

— Шăпах çак çулпа Александр Сергеевич кĕлеткине илсе килнĕ пулĕ,— тет Владимир Шушарин доктор. Вăл, литературăна юратакан çын, хăй те сăвăсем лайăх çырать. Унăн сăввисене эпир дивизи хаçатĕнче пичетлетпĕр. Шушарин мĕн килнĕренпех: «Пушкин масарĕ çине кайăпăр»,— тесе çӳрет. Вăл Пушкин вăхăтĕнче медицина кайра пулнăшăн, хирургсем пулманшăн тарăхать.

Каçхи тĕттĕм майĕпен сирĕлсе пĕтрĕ те тухăçран хĕвел çĕкленсе тухрĕ. Эх, халĕ тин куртăмăр: мĕнешкел илем кунта, мĕнешкел тĕнче!.. Йĕри-тавра садсем. Улмуççисем çинче тин çеç чăмăртаннă панулмисем. Кайăк сасси. Юрă. Каçпа çеç ăшă çумăр çуса кайрĕ те сывлама питех те çăмăл. Уçă сывлăш хăех ӳпкене кĕрет. Кăштах шăркана ларнă ыраш шăрши пур, çырла шăрши сисĕнет. Пилĕк таран курăк çумăрпа çăваннă. Курăк çинчи тумламсем симĕс кĕмĕшке шăрçасем пек курăнаççĕ. Çил ачисем чупса килсен çав шăрçасем ярамĕпех ӳксе çĕмĕрлеççĕ. Ирхи чечексем куçĕсене уçаççĕ те, хĕрупраç пек юсанса, хитреленсе лараççĕ.

Икĕ енче те пĕчĕк тăвайкки. Тăвайкки çинче çĕр палăрми çĕр çырли. Çакăн чухлĕ çĕр çырли эпĕ нихçан та, ниçта та курман...

Пушкинские горы — вăл пĕтĕмпех илем, урăх нимĕн те мар. Унăн илемне нимĕç тупписем те, бомбисем те пĕтерейменъ Пăхатăн та тĕлĕнетĕн,— вăрçăччен мĕнле хитре пулнă-ши ку вырăн, тетĕн.

Тăшман Великая юхан шывĕ урлă каçнă та унан çыранĕ çине вырнаçса ларнă. Халĕ вĕсем тупписенчен персе тăраççĕ. Çывăхрах снарядсем, минăсем кĕрĕслетсе çураласçĕ. Хушăран нимĕç самолĕчĕсем вĕçсе килеççĕ те монастир хыçне бомбăсем пăрахса хăвараççĕ. Унта пысăках мар кĕпер пур. Вĕсем çавна çĕмĕресшĕн иккен.

Хула варринче пĕчĕк площадь. Кунта вăл — чи илемлĕ вырăн. Çак площаде ĕнтĕ тăшман хăйĕн вилнĕ салтакĕсем валли масар туса хунă. Шăкăр-шăкăр хурăн хĕрес лартса тухнă. Кашнинех кăçал (1944 çулта) пытарнă. Çĕр хапсăнса килтĕр — метр çурă тупрăр, теес килет. Анчах аслă Пушкинăн çĕршывĕнче выртма сирĕн нимĕн-

ле тивĕç те çук, акă вăрçă иртсе кайсан, çак вырăна сирĕнтен вутпа çунтарса, шывпа çуса тасатĕç, тесе калас килет.

Сапĕрсене минăсем шырама хушрĕç. Пĕр талак хушшинче икĕ пин мина ытла кăларчĕç вĕсем. Пурте халиччен эпир курман, урăх йышши минăсем. «РМИ-43» теççе çак минăна. Вутă пуленки евĕрлĕ вăл: йывăрăшĕ — 10 килограмм; тăршшĕ — 80, урлăшĕ — 10 сантиметр.

Пушкин вилтăпри çинче пирĕн саперсем 17 мина кăларнă.

Поэт масарне минăсенчен тасатаканĕ — Ленинград облаçĕнче çуралса ӳснĕ çын, аслă сержант Николай Иванов. Ăна пулăшакансем—Семёнов, Кучугур, Мороз, Кудрин. Монастир таврашĕнче вĕсем нимĕçсенне 120 мина кăларнă. Çакăншăн хастар сапĕрсене пурне те «Слава» орденĕсем памалла тунă. Вĕсем çинчен паян пĕтĕм дивизи калаçать, хаçатра статьясем çырса калартамăр.

Тахăшĕ монастир стени çине пурăпа пысак саспаллисемпе: «Сывă пултăр Пушкин!» тесе çырса хунă.

*Июлĕн 15-мĕшĕ.*

1937 çулта эпĕ Ленинградра Пушкин вилнĕ çуртра (Мойка хĕрринче) пулнăччĕ. Халĕ тата унăн масарĕ çине килме тиврĕ.

Святогорски монастир ту çинче ларать. Ту айккисенче ватă йывăççем. Ту çине, Горско-Успенски собор патне, чул картлашкасем тăрăх хăпаратăп. Çӳлелле хăпарнă чухне, сылтăм енче, Пушкин сăмахĕсене курах каятăп (ăна вăрçăченех хăма татăкĕ çине çырса çапнă пулнă, вăрçă вăхăтĕнче хресченсем таçта пытарса усранă, халĕ Загнибородa капитан пĕр ялтан илсе килнĕ).

Поэт акă мĕнле сăмахсем çырнă:

И пусть у гробового входа
Младая будет жизнь играть.
И равнодушная природа
Красою вечною сиять.

Виçĕ çул хушшинче поэт масарĕ таврашне вĕлтрен шăтса ларнă. Масар çинчи мрамортан тунă палак темĕнле майпа упранса юлнă. Çапăçу вăхăтĕнче ялсенчен колхозниксем килсе ăна хăмасемпе картласа хуна, теççĕ. Хресченсем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр, поэт палăкне упраса хăварма тăрăшни пирĕн халăх культури çинчен, вĕсен ăнланулăхĕ çинчен калать.

Совет воинĕсем поэт масарне уй-хир чечекĕсемпе илемлетнĕ. Çак чечексем татах та хитрен татах та пахан курăнаççĕ. Поэт сăввисем пекех туйăнаççĕ.

Акă поэт тăпри, акă Пушкин! Çĕр çул ытла сăнтĕ выртать вăл. Çак вырăн совет халăхĕшĕн чи паха, чи таса вырăнсенчен пĕри пулса тăчĕ. Вăрçăччен кунта таçти кĕтесрен те халăх килсе тăнă. Çамрăксем çӳренĕ. Вĕсене кĕтсе, поэт сăвăсем калассăн туйăннă:

— Здравствуй, племя, младое, незнакомое!..

Александр Сергеевичпа юнашар унăн аслашшĕсем: Иосиф Абрамович Ганнибал тата Мария Александровна Ганнибал çĕр айĕнче выртаççĕ. Пурăннă чухне поэт хăйне çавсемпе юнашар пытарма хăех ыйтнă, тет.

Собора та кĕрсе пăхрăмăр. Аркатса пĕтерне ăна. Тăрри çук. Снарядпа персе антарнă. Хĕрессем, иконăсем, ванчăк кирпĕчсем, кантăк катăкĕсем саланса выртаççĕ. Пĕр пӳлĕмне гитлеровецсем лаша вити тунă. Тислексене кĕтессе купаланă. Çавăнтах тата тĕрлĕ кĕнекесемпе хутсем йăваланса выртаççĕ. Вĕсем тислĕкпе йĕпеннĕ, вараланнă.

Поэт масарĕ çинче митинг пулчĕ. Офицерсем, салтаксем тухса хĕрӳллĕ сăмахсем каларĕç.

— Аслă поэт!— терĕ Николай Иванов сапĕр.— Сирĕн масарăра тăшман минисенчен тасатнă чухне, малтанхи ывăç тăпрана эпĕ гимнастерка кĕсйине, чĕре умне, чикрĕм. Вăл тăпрана эпĕ Германие илсе кайма чикрĕм. Тăшмана çĕнтерсен, эпĕ ăна каялла хамăр çĕршыва илсе килĕп, килте ĕмĕр асăнса усрăп.

Офицера тухнă чăваш ачи те çак митингра сăмах каларĕ.

— Аслă Пушкин!— терĕ вăл.— Эсир пурăннă чухне чăвашсем тĕттĕм халăх пулнă. Çапах та эсир çав халăха лайăх пĕлнĕ, кĕрешӳре çапăçнине курнă. Çавăнпа та ăна ырă сăмахпа асăннă. Тавтапуç сире, аслă поэт, кăмăллă сăмахăршăн!..

Пирĕн халĕ хамăрăн та литература пур, поэтсем те пур. Сирĕн сăввăрсене чăваш халăхĕ тăван чĕлхепе вулать, вырăсла вуласан та ăнланать.

Эсир çырнă чаплă кĕнекесене пирĕнтен фашист туртса илсе вутта пăрахса çунтарасшăн пулчĕ. Памапăр вал кĕнекесене! Тĕп тăвăпăр ирсĕр тăшмана!

Çак кунхине кашни воин тенĕ пек тăван поэт патне пырса пуç тайрĕ:

— Тăван Пушкин, сан тăпруна ирсĕр аттипе таптанă тăшмана эпир тĕп тăвăпăр!— терĕ.

Қаç пулса çитсен, вăрмансенчен кăвак тĕтре çĕкленсен, малта каллех тупăсем кĕмсĕртеттерме пуçларĕç. Тепĕр икĕ кунтан вара вĕсен сасси аслă поэт тăпри çинчен илтĕнми пулчĕ.

Эпир малалла кайрăмăр.

*Ленинград фрончĕ, 1944*

## Вăрçă пĕтнĕ кунсенче
**(Фронтри дневникрен, 1945 ç.)**

*Апрелĕн 22-мĕшĕ.*

Çуркунне çитрĕ...

Ку ĕнтĕ вăрçăри тăваттăмĕш çуркунне. Нимĕç вăрманĕсем симĕс тум тăхăннă. Уйра ыраш калчи ӳсет. Унта та кунта тăри сасси илтĕнет. Çуртырри акма та вăхăт ĕнтĕ. Анчах кăçал Германире тыră акакансем çук. 1941 çулта пирĕн çĕршыва вăрçă илсе килнĕ нимĕçсем вăрçăран тараççĕ. Вĕсем чĕртсе янă вăрçă халĕ хăйсен хулисемпе ялĕсенче ялкăшса тăрать. Қаçсерен пĕлĕте хĕрлĕ сăн ӳкет те, тĕрĕслĕх вăрçи, эпир илсе килнĕ вăрçă Берлин алăкĕсене шаккаса, фашистсене калать:

— Ну, мĕнле?.. Ку сире килĕшет-и?— тет.

Тăшман йăви — фашистла çĕлен калта шăтăкĕ — хура Берлин паян чĕтресе ларать. Берлин çеç мар, пĕтĕм фашистла Германи вилесле чĕтрет, ниçта кайса кĕме пĕлмест,— тимĕр читлĕхе хупнă йытă пек сикет.

...Пирĕн часть çак кунсенче фашистсене тусем хушшине хăваласа кĕртрĕ те Оссих ятлă ял таврашĕнче сапаланчăк вăрмансенче чарăнчĕ.

Хĕрĕх икĕ километр каярахра, пирĕн хыçра, Бреславль (Бреслау) хули. Вăл тимĕр кăшăлта: совет çарĕсем ăна хупăрласа илнĕ те фашистсем çине вутпа тимĕр тăкса тăраççĕ. Эпир нимĕç çарĕсене хĕвеланăçĕнчен ямастпăр,— Бреслау еннелле туртăнсах, вĕсем çине пиншер снаряд тăкăнать, вутлă çумăр çăвать.

Кĕç-вĕç вăрçă пĕтессине кашни совет воинех туйса тăрать, ăнланать.

— Майăн 6-мĕшĕнче пĕтет,— тет Барно салтак.

— 15-мĕш числара,— тесе хирĕçлет ăна Каюмов сержант.

Çапăçу çапах та калама çук вăйлăн пырать: хĕвеланăçĕнчи нимĕç çарĕсем Бреслау хулинче хуптĕрлĕхе лекнĕ нимĕçсемпе пĕрлешесшĕн, çапла вара, эпир тытакан оборонăна татса, пирĕн урлă каçса каясшăн.

— Вырăнтах ўксе вилсен те вĕсене ямалла мар!— çакăн пек пирĕн сăмах.

Кашни çапăçурах çĕнĕ паттăр çуралать. Кĕçĕр акă Блинов автоматчик чапа тухрĕ.

Тĕттĕмленсен, шăпчăксем юрă шăрантарнă вăхăтра, шыв хĕрринче ик-виç мĕлкĕ курăнса кайнă. Постра тăракан Блинов нимĕн те шарламан. Фашистсем çывхарсах пынă. Вăтăр-хĕрĕх утăм юлсан вара, совет воинĕ, харсăр Блинов, нимĕçсене, Бреслау патне каяс тесе, пирĕн позицине хыпашласа пĕлме шут тытнă тăшман разведчикĕсене автомат черечĕпе сăтăрма тытăннă.

— Аллес капут!— тесе тарнă фюрер йыттисем. Анчах вунçиччĕшĕ тарайман: вĕсем çавăнтах чикеленсе ўкнĕ те юн хăсса вилнĕ.

Эпир тепĕр ик сехетренех листовка кăлартăмăр.

— Красноармеец юлташсем! Пурте Блинов пек пулăр. Тăшмана ним хĕрхенмесĕр, Блинов пекех, хытă та вăйлă хĕнĕр!— тесе çыртăмăр.

— Блинов пек паттăрсем пирĕн çĕнтерĕве çывхартаççĕ!— терĕмĕр.

Пирĕн çĕнтерў çывхарсах пырать,— эпир Германи тĕп хулинче пуласси çинчен калаçатпăр.

*Апрелĕн 23-мĕшĕ.*

Кĕçĕр, çĕрле, Мускавран юлашки хыпарсем парсан, салтаксене сводка пĕлтерме эпир траншейăсене кайрăмăр.

— Савăнтаракан хыпар! Тавтапуç сире,— теççĕ салтаксем.

— Пĕлтерекенĕ эпĕ мар, мана хама та радио тăрăх Мускав пĕлтерчĕ,— тетĕп эпĕ.

— Кам вуларĕ?— ыйтаççĕ каллех.

— Приказне Левитан вуларĕ,— ответлетĕп.

— Ну, вăйлă вуларĕ пулĕ?..

— Нихçанхинчен вăйлă вуларĕ...

Пĕтĕм чунтан савăнаççĕ совет салтакĕсем. Савăнмасăр! Пирĕн çарсем, малалла 60—100 километр кайса, нимĕçсен темиçе пысăк хулипе ялне çавăрса илнĕ, Германин тĕп хулине Берлина çитсе кĕнĕ. Унта çитсе кĕре-

кенĕсем — паллă совет маршалĕсен войскисем. Кунсăр пуçне тата Конев ертсе пыракан çарсем Эльба шывĕ çине тухнă.

— Пути победы ведут в Берлин! И мы будем в Берлине!— хĕпĕртесе калать Семенов салтак.

— Обязательно будем!..— теççĕ ыттисем.

Катара-катара шурă шурăмпуçĕ курăна пуçларĕ. Эпир Герасимов лейтенантпа, полк комсоргĕпе, иккĕн каялла таврăнтăмăр.

— Берлинăн шăпи тулать,— тет Герасимов.

— Çапла, тулать!

*Апрелĕн 24-мĕшĕ.*

Манпа калаçнă Семенов салтак çинчен Герасимов комсорг хаçат валли материал пачĕ.

Виçĕм кун ирхине ирех икĕ комсомолец — Семеновпа Астафьев — сăнамалли пункта кайнă. Çул çинче сасартăк ултă фашист вĕтĕ хăва хушшинчен сиксе тухнă.

Икĕ совет салтакĕпе ултă фашист хушшинче çапăçу пуçланса кайнă. Икĕ енĕ те парăнман. Астафьев вара майлă та лайăх позици йышăннă та автоматран пеме пуçланă. Семенов хырăмпа шуса гитлеровецсем патне çитнĕ, унтан хăюллăн сиксе тăрса:

— Хэнде хох!— тесе пĕтĕм вăйпа кăшкăрса янă.

Халĕ çеç тем пек хытă çапăçнă нимĕçсем пăшалĕсене пăрахнă та лĕнчĕр-лĕнчĕр аллисене çĕкленĕ.

Çав кунах полк командирĕ çакăн çинчен çырса Семенов амăшĕ патне çыру янă.

— Сирĕн ывăлăр, Федор Иванович Семенов — шиклenме пĕлми паттăр воин. Çавăн пек ывăл ӳстерсе çитĕнтернĕшĕн Сире пысăкран та пысăк тав!— тесе саламланă командир паттăр салтакăн амăшне.

...Паян совет лётчикĕсемпе зенитчикĕсем пĕтĕм фронтсенче тăшманăн 99 самолётне персе антарнă. Вăл шутра иккĕшĕ — пирĕн зенитчиксем персе çунтарнă самолётсем. Вăл самолётсем вут та хура тĕтĕм вĕçтерсе тусем хушшине бомбисемпех кĕрĕслетсе ӳкрĕç. Икĕ сехет ытла хура тĕтĕм мăкăрланса, çӳлелле çĕкленсе тăчĕ. Шӳт тума юратакан салтаксем: «Германин юлашки самолётне те пулин персе антарчĕç»,— тесе кулаççĕ.

*Апрелĕн 25-мĕшĕ.*

Паянхи хыпарсем те савăнăçлă. 1-мĕш Белорусси фрончĕн войскисем, Берлинран хĕвеланăçнелле каякан пĕтĕм çулсене татса, 1-мĕш Украина фрончĕн войскисемпе пĕрлешнĕ, çапла вара, Берлина пĕтĕмĕшпех çавăрса илнĕ.

— Берлинăн шалчи тулать!— терĕ çакăн çинчен илтсен, аслă лейтенант Захар Федоров юлташ — Хĕрлĕ Чутай ҫынни.

Кăнтăрла çеç çар штабĕнче пулнă Терентьев подполковник — политотдел пуçлăхĕ:

— Германин кун-çулĕ капитуляци патнелле пырать,— тесе савăнтарчĕ пире.

*Апрелĕн 26-мĕшĕ.*

Кĕçĕр пирĕн разведчиксем «чĕлхе» тытса килчĕç. Йĕпе чăх пек нимĕç вĕçĕмсĕр: «Эрзац», «Гитлер капут», тет.

Пирĕн салтаксем кула-кула:

— Гитлер эрзац?— тесе ыйтаççĕ.

— Нейн, их бин эрзац,— ответлет нимĕç.

Эпир аран-аран ăнлантăмăр. Тыткăна лекнĕ нимĕç: «эпĕ чăн-чăн салтак мар, мана халĕ çеç фронта илчĕç. Гитлерăн ĕнтĕ эрзацсем кăна юлчĕç...» тесе калать-мĕн. «Гитлерăн пĕтмелли çеç юлчĕ»,— тет вăл.

— Çапла, çапла, фюрера та часах акă тытса килетпĕр,— теççĕ те разведчиксем каллех эрзацран кулма тытăнаççĕ:

— Эрзац тесе сан пек салтака калаççĕ иккен.

— Йо!— текелет нимĕç хушăран.

— Капут!— теççĕ татах разведчиксем иккĕн-виççĕн.

— Йо, йо! Гитлер капут...— ответлет эрзац.

...Нимĕçрен разведчиксем кулнă вăхăтра Кроль лейтенант çĕнĕ хыпар илсе килчĕ:

— Пирĕн фронт войскисем Берлинра çапăçса хулан Дальси ятлă районне йышăннă. Эльба юханшывĕн хĕвеланăçри çыранĕнче пирĕн çарсем Торгау тата Стрела ятлă хуласене çавăрса илнĕ. Бреслау хулинче, пирĕн хыçра, 26 район йышăннă.

Ку хыпара эпир эрзац салтака та каласа патăмăр. Анчах унăн яланах пĕр сăмах:

— Капут!

Совет ҫарĕсем фашистла Германин йăвине — Берлина хупăрласах, хĕссех пыраҫҫĕ. Анчах хура юнлă тăшманăн тĕп хули — хура Берлин ҫаплах тапаланать-ха.

Нимĕҫ салтакĕсем кашни хуларах, кашни ялтах малтанлăха хытă вăрҫаҫҫĕ, урса кайсах ҫапăҫаҫҫĕ. Анчах та совет салтакĕсем ҫапăҫса хуласене кĕрсе каяҫҫĕ те вилес патне ҫитнĕ тăшмана чăлпар! салатса яраҫҫĕ. Гитлерăн эрзац салтакĕсем хурчкаран таракан ҫерҫисемпе пĕрех: вирлĕрех пырса ҫапсанах каялла вĕҫтереҫҫĕ.

— Пурăна-киле вĕсен тарма та вырăн юлмĕ,— тет пирĕн дивизи ветеранĕ — Пологих старшина.

— Халĕ ĕнтĕ 1941—1942 ҫулсем мар, ун чухне вĕсем: «Пирĕн алăра пĕтĕм Европа», тесе кăшкăрнă, паян вара Берлин ҫинчен сăмах пырать,— тесе ăнлантарать комсорг, Миров лейтенант. Вăл сăмаха эпир калатпăр, вăрҫа ҫĕнтерӳллĕн вĕҫлесе, Берлин ҫине ялав ҫакасси ҫинчен калатпăр.

Ҫапла калаҫҫĕ, савăнаҫҫĕ совет салтакĕсем кашни ротăрах. Никам та пирĕн салтаксенчен пуҫ усмасть. Паян-и, ыран-и тăшман персе анать,— ҫак ĕмĕт-шухăш пурне те ҫĕклет, малалла чĕнет.

Тĕттĕмленеспе политотдел секретарĕ Микола Голак:

— Хлопцы, каллех ҫĕнĕ хыпар!— тесе кăшкăрчĕ.

— Мĕн-ши?— тесе пухăнтăмăр эпир пурте радиоприемник тавра.

Радио «Тăван ҫĕршыв юррин» кĕввине калать. Ах, мĕн тери ырă кĕвĕ вăл, тăван кĕвĕ!.. Ҫак кĕвĕ хыҫҫăн эпир миҫе приказ, миҫе паха хыпар итлерĕмĕр-ши? Ҫав кĕвĕ — вăл ҫĕршыв кĕвви, ăна итлесе эпир Германие килтĕмĕр, Берлина каятпăр!..

Халĕ те акă Мускавран Главнокомандующи приказне параҫҫĕ: 1-мĕш Украина фрончĕн хастар войскисем, нимĕҫ ҫарĕсен фронтне касса татса, апрелĕн 25-мĕшĕнче, 13 сехет те 30 минутра, Торгау хули патĕнче, союзниксен ҫарĕсемпе пĕрлешнĕ.

Эльба юхан шывĕ ҫинчи тĕлпулу пурне те интереслентерет, ун пирки салтаксем те, офицерсем те калаҫҫĕ.

Америка салтакĕсемпе совет салтакĕсем пĕр-пĕрне тĕл пулсан, пĕрисем вырăсла пĕлменнипе, теприсем акăлчанла пĕлменнипе нимех те калайман, тет. Ҫапах та пĕрер сăмах каласанах вĕсем пĕр-пĕрне ăнланнă.

— Америка!— тенӗ лешӗсем.
— Москва!— тенӗ пирӗннисем.

Акӑ халӗ Мускав салют парать: виҫҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑ пӗр харӑс ҫирӗм тӑватӑ хут перет.

— Сывӑ пултӑр ирӗклӗхе юратакан халӑхсен ҫӗнтерӗвӗ!— тет Мускав.

— Сывӑ пултӑр Мускав! Сывӑ пултӑр Совет Союзӗ!— тетпӗр эпир Германире, Мускав салючӗсене илтсе, вӗсемшӗн савӑнса.

...Пирӗн ҫарсен Верховнӑй Главнокомандующийӗ Хӗрлӗ Ҫара тата союзниксен войскисене ҫапла чӗнсе каланӑ:

«Пирӗн задачӑпа пирӗн тивӗҫлӗх,— тет вӑл,— тӑшмана пуҫӗпех ҫапса аркатасси, ӑна хӑйӗн хӗҫпӑшалне пӑрахтарасси тата ӑна пӗр сӑмахсӑрах парӑнтарасси. Хамӑр халӑх умӗнчи тата ирӗклӗхе юратакан мӗнпур халӑхсем умӗнчи ҫав задачӑпа ҫав тивӗҫлӗхе Хӗрлӗ Ҫар вӗҫне ҫитиех пурӑнӑҫа кӗртӗ».

*Апрелӗн 28-мӗшӗ.*

Салтаксене Михаил Илларионович Кутузов вилнӗренпе 132 ҫул ҫитни ҫинчен каласа паратпӑр.

М. И. Кутузов фельдмаршал 1812 ҫулта Тӑван ҫӗршыва ҫӑлса хӑварнӑ.

Вӑл — пирӗн тӑван, хӑватлӑ Российӑн аслӑ ҫынӗ — нихҫан та совет халӑхӗн чӗринчен тухмасть. Унӑн сӑнарӗ пирӗн умрах.

Ҫак чаплӑ полководецӑн ӗҫне асӑнни паян та питех те вырӑнлӑ.

Ирсӗр Гитлер, урнӑ сысна пек каппайчӑк, хӑйне Наполеонпа та танлаштарма хӑтланса пӑхнӑ.

— Тепӗр виҫӗ ҫултан... эпӗ тӗнче пуҫлӑхӗ,— тенӗ Наполеон хӑй вӑхӑтӗнче.

Гитлер ефрейтор вара, тӗнче пуҫлӑхӗ пулас тесе:

— Эпӗ ӗнтӗ ҫӗр ҫинчи турӑ,— теме хӑйнӑ.

Анчах ҫак пилсӗр этемӗн кӗске ӑсӗ Наполеонӑн шӑпи ҫинчен шухӑшласа пӑхма та ҫитеймен.

Истори пире акӑ мӗн калать: Наполеон, Российӑна 600 пин ҫынран тӑракан ҫарӗсемпе килсе, пӗтӗм ҫарне ҫухатнӑ та аран-аран урисене ҫӗклесе тарнӑ.

Пирӗн Кутузов ӑна йӗрлесе пынӑ, аларан вӗҫертмесӗр, куҫран ҫухатмасӑр хӑваласа, хӗнесе пынӑ.

Темиҫе вӑрҫӑра пулса курнӑ, нихҫан та парӑнман полководец, 68 ҫулхи Кутузов, Польша урлӑ каҫса, ҫак

халĕ эпир вăрçакан вырăна çитиччен Наполеона хăваласа килнĕ. Бобĕр шывĕ çинче ларакан Бунцлау хулинче вара унăн хаклă чĕри тапма пăрахнă.

Бунцлау хулинче Кутузов чĕрине пытарнă та вырăс салтакĕсем, фельдмаршалăн чаплă ĕçĕсене асра тытса, унăн палăкĕ çине çакăн пек çырса хăварнă:

«До сих мест полководец Кутузов довел победоносные войска российские, но здесь смерть положила предел славным дням его.

Он спас Отечество свое и отверг путь освобождения Европы.

Да будет благословлена память героя».

Çакă вăл 1813 çулхи апрелĕн 28-мĕшĕнче пулнă.

Кăçалхи çул, февралĕн 12-мĕшĕнче, Конев маршал войскисем, Бунцлау хулине çавăрса илсе, Кутузов чĕрине пытарнă çĕре ирĕке кăларчĕç.

Кутузов чĕрине пытарнă вырăна эпир паян хамăр дивизирен делегатсем ятăмăр.

...1814 çулта, мартăн 1-мĕшĕнче, Кутузов çарĕсем ун чухнехи тăшманăн тĕп хулине — Парижа çитсе кĕнĕ.

Мăнкăмăллă Напоелонăн ĕçĕ-хĕлĕ пĕтнĕ,— пĕтĕм халăхсене пăхăнтарса тĕнче пуçлăхĕ пулма шутланă корсиканеца св. Елена утравĕ çине тытса янă.

— Совет салтакĕсем Кутузов ятне асăнса, унăн паттăр сăнарĕпе хавхаланса çапăçаççĕ, Тăван çĕршывшăн тенĕ сăмахпа кĕçех акă Берлина çитсе кĕрĕç!— тесе вĕçлеççĕ пирĕн политработниксем хăйсен салтаксемпе туса ирттернĕ калаçăвĕсене.

Пĕр ротăра Кутузов орденĕн кавалерĕ, гварди капитанĕ М. Н. Смирнов юлташ Бунцлау хулине совет çарĕсем мĕнле илни çинчен каласа пачĕ.

— Пирĕн кашни салтакрах Кутузов чĕрин хĕлхемĕ пулмалла!— тесе пĕтерчĕ вăл кĕске сăмахне.

*Апрелĕн 29-мĕшĕ.*

Тăшман вилес умĕн те çапăçма пăрахмасть. Кĕçĕр пирĕн пĕр ротăна нимĕçсем тапăнма хăтланса пăхрĕç. Виçĕ танк, çĕр салтак килчĕ пирĕн рота çине, анчах совет салтакĕсем пĕр шиг те чакмарĕç.

«Вилсен те, пĕтсен те — капитуляци тумастпăр!»— тесе кăшкăрать тет тытамак Гитлер.

Берлинра пулнă Соколянский капитан пире пĕр япала çинчен каласа тĕлĕнтерчĕ. Пысăк çурт çине фашистсем шултра саспаллисемпе: «1918-й год не повторится»,

тесе çырса хунӑ. Совет воинӗсенчен пӗри нимӗçсем çырнине хуратнӑ та çӳлтерехре: «Я в Берлине. Сидоров», тесе çырнӑ.

Мӗншӗн-ха гитлеровецсем 1918 çул çинчен çавӑн пек калаççӗ? «1918 çул тепӗр хут пулмасть» тени мӗне пӗлтерет-ха?

Çакна ӑнланас тесен, кӑштах историе аса илни кирлӗ.

...19-мӗш ӗмӗрӗн иккӗмӗш çур пайӗнче Германи вӑрçа хатӗрленнине тӗпчесе пӗлсе, Фридрих Энгельс çапла каланӑ:

«Çав конфликтре Пруссипе Пруссипе Прусси çарне çӗмӗрсе тӑкаççӗ, ку вара Российӑпа вӑрçнӑ чухне пулӗ,— вӑл вӑрçӑ тӑватӑ çул хушши пырӗ, Пруссие юхан-сурансем тата пӑшалпа пере-пере шӑтарнӑ шӑмӑсем çеç парӗ»,— тенӗ.

Фридрих Энгельсӑн 1914—1918 çулсенче пулнӑ вӑрçӑ çинчен каланӑ сӑмахӗсем пророкла сӑмахсемех пулчӗç, темелле.

Агресси çуратса тӑракан Пруссие 1914—1918 çулсенчи вӑрçӑра союзниксем çапса аркатнӑ, хӗсӗнсе-пӗсӗнсе çитнӗ Германи капитуляци тунӑ.

1918 çулччен Германи хӑйӗн çав вӑрçӑри вӑйсӑрлӑхне, хӑй такӑнса ӳксе парӑнассине шавлӑ пропагандӑпа витсе, пытарса пынӑ. Анчах çак тӑшманӑн 1918 çулхи çулла ӗнтӗ шавлама та вӑй çитменни сисӗне пуçланӑ.

Тӗнчери пӗрремӗш вӑрçӑ иртсен, нимӗç генералӗ Людендорф, 1914—1918 çулсенчи вӑрçӑ çинчен асаилӳсем çырса, акӑ мӗн каланӑ: «Тӗнче вӑрçин историйӗнче августӑн 8-мӗшӗ (1918 çул — В. Д.) Германи çарӗшӗн чи тӗксӗм кун пулса тӑрать... Вӑрçа пӗтермелле пулнӑ».

Августӑн 8-мӗшӗнче мӗн пулнӑ-ха?

Çавӑн чухнехи шӑрӑх кун, ирхине ирех, союзниксем нимӗç çарӗсене хирӗç пысӑк та вӑйлӑ наступлени пуçарса янӑ. Виçӗ пин тупӑ вӗçӗмсӗр персе тӑнӑ, пилӗкçӗр танк хӑватлӑн çӗкленсе кайнӑ, аэроплансем вӗçнӗ.

Союзниксен çарӗсем, малалла 12 километр кӗрсе кайса çав кунах нимӗçсен виçӗ корпусне аркатса тӑкнӑ, 15 пин çын тыткӑна илнӗ.

Августӑн 8-мӗшӗ Германи çӗнтерессине мар, вӑл путланса ларасси умӗнче тӑнине кӑтартса панӑ.

Сентябрӗн 28-мӗшӗнче вара генерал Людендорф:

— Вӑрçӑ ӑнӑçлӑ пулмарӗ,— тенӗ те союзниксене килӗшӳ тума сӗннӗ.

Çакă вăл капитуляци пулнă.

Акă мĕншĕн халĕ нимĕç фашисчĕсем: «Текех 1918 çул пулмĕ», теççĕ, урăхла калас-тăк, вăл «капитуляци тумастпăр» тенине пĕлтерет иккен.

Пирĕн çарсем кунран-кунах фашистсене хĕссе пыраççĕ, хупăрласа илеççĕ, пăшалсăрлатаççĕ. Нимĕçсем вара чĕтре-чĕтре:

— Гитлер капут!— тесе аллисене çĕклеççĕ.

Капитуляци пулĕ, анчах вăл пĕрре те 1918 çулти евĕрлĕ пулмĕ,— питех те вăйлăн çапни хыççăн пулĕ, пĕтĕм фашистла Германи çĕнтерӳçĕсен ури айĕнче выртĕ.

*Апрелĕн 30-мĕшĕ.*

Эпир çаплах Оссих ялĕнче тăратпăр. Пысăк çапăçусемех пулмаççĕ, нимĕçсем хирĕç тăма тытăнса пăхаççĕ те кашни хутрах хамăр батальонсем вĕсене шăлсенчен параççĕ. Шакалсем пек хăтланаççĕ Гитлер салтакĕсем: каçпа — перкелеççĕ те тул çутăлсанах, сопкăсем хушшине тарса кĕреççĕ, унта вара хӳрисене хĕстерсе лараççĕ.

Смирнов капитанăн пĕр роти паян кунĕпех вăрман айккинче вĕренчĕ. Унта нимĕçсен çĕмрĕк танкĕсем карăнса лараççĕ. Пирĕн салтаксем тăшман танкĕсене пĕтерме вĕренеççĕ.

— Вăрçă чарăнасси инçе мар, анчах тăшман тем те хăтланма пултарать. Унăн машинисене аркатма пĕлес пулать, чеелĕхне сисме хатĕр тăрас пулать,— тет рота парторгĕ Поздняков сержант.

Оссих ялĕнче нимĕç çурчĕсем çине пирĕннисем май лозунгĕсене çыра-çыра çапнă.

— Сывă пултăр Майăн Пĕрремĕшĕ!

— Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем, гитлерла Германие пĕтĕмĕшпех аркатса тăкма пĕрлешĕр!

— Германи империализмне çапса салатассишĕн пыракан кĕрешĕве ăнăçлăн вĕçлесе çитерĕр!

*Майăн 1-мĕшĕ.*

Кĕçĕр çĕрĕпех ротăсенче çӳрерĕмĕр. Шăпах. Пĕрре те вăрçăри пек туйăнмасть. Шурăмпуç тытăнса тул çутăлма пуçласанах, вăрмансенче шăпчăксем хăйсен çурхи юррисене шăрантара пуçларĕç. Мĕн тĕслĕ юрламасçĕ-ши вĕсем? Пĕрре шăхăрса яраççĕ, тепре сассине пĕчĕклетсе, авкалантарса, таçтах хăпартса юрлаççĕ...

Тухăçра, хамăр Тăван çĕршыв енче, хĕвел курăнсан, унран тāри сасси илтĕнсе кайрĕ. Вăл уйра: «Эпĕ хам — хуçа», тесе юрлать пулас, пĕлĕтелле çĕкленсе хăпарать те пĕр вырăнтах, пăталанă пек тăрса, шăнкăрав сасси евĕрлĕ юррине янтраттарать.

Вăрмансенче, уйсенче симĕс тĕнче ешĕрет. Çуркунне килнипе чечексем пуçĕсене çĕкленĕ те хĕвеле кĕтсе лараççĕ, çыххисене вăрахăн салтса яраççĕ.

Майăн Пĕрремĕшĕ ячĕпе кăларнă приказа политработниксем траншейăсене илсе те килчĕç. Приказа пирĕн хаçат редакцинче радиопа илнĕ. Приказра мĕн калани-не кашни офицерпа салтаках пĕлесшĕн, ăна хăвăртрах вуласа пăхасшăн.

Вунă сехетре хăшпĕр батальонсенче (май килнĕ çĕр-те) митингсем пулчĕç.

Çурхи чечексемпе хитрелетнĕ, тĕрлĕ тĕслĕ сăрăсемпе ӳкерсе çырнă плакатсем çакса тултарнă трибуна умне салтаксемпе сержантсем, офицерсем йĕркен-йĕркен пырса тăчĕç. Вĕсем хушшинче нумай-нумай çапăçусенче пулса паттăррăн кĕрешнĕ юлташсем тăраççĕ. Геройсен кăкăрĕсем çинче орденсемпе медальсем ылтăнăн-кĕмĕлĕн курăнаççĕ. Халĕ вĕсем тăшман çĕршывĕнче çапăçаççĕ, фашистла тискер кайăка тĕп тăваççĕ.

Трибуна çинче Мосолов майор, ăшă çилпе хумханса тăракан ялавсем айĕнче вăл приказ вулать:

— Кăçалхи çул Совет Союзĕнчи халăхсем Майăн Пĕрремĕшне Тăван Çĕршывăн Аслă вăрçи çĕнтерӳллĕн вĕçленсе пынă кунсенче уявлаççĕ.

Хĕрлĕ Çар Мускавпа Ленинград патĕнче, Грознăйпа ытти хуласем патĕнче тăшман çарĕсенчен хӳтĕленсе çапăçнă йывăр вăхăтсем ĕмĕрлĕхех иртсе кайрĕç, урăх вĕсем нихçан та таврăнмĕç. Халĕ вара пирĕн çĕнтерӳллĕ çарсем тăшманăн хĕçпăшаллă вăйĕсене Германи вăтаçĕрĕнче, Берлинран нумай инçетре, Эльба шывĕ çинче аркатса пыраççĕ.

Уяв ячĕпе кăларнă приказа итлекен совет воинĕсем кунта йывăр та инçе çулпа килнĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ Ленинградпа Волхов фрончĕсенчи шурлăхсенче çапăçнă, Новгород, Псков, Остров, Таллин, Рига хулисене нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларса, Пруссие çитнĕ, унтан Польша витĕр тухса, Одер урлă каçнă. Акă халĕ Бреслау хули районĕнче çапăçаççĕ, Берлина çитме ĕмĕтленеççĕ.

— Фашистла Германие тӗп тумалла!— ҫакӑн пек вӗсен шухӑшӗ.

Совет воинӗсене приказ сӑмахӗсем кӗрешӗве чӗнсе хавхалантараҫҫӗ:

— Германи империалисчӗсем пуҫласа янӑ пӗтӗм тӗнчери вӑрҫӑ пӗтсе пырать. Гитлерла Германи арканса каясси — чи ҫывӑх вӑхӑтра пулмалли япала. Хӑйсене тӗнче тытса тӑракансем вырӑнне шутланӑ гитлерла пуҫлӑхсем ҫӗмрӗк валашка умӗнче тӑраҫҫӗ. Вилмеллех аманнӑ фашистла тискер кайӑк юлашки сывлӑшпа сывлать. Халӗ ӗнтӗ задача пӗр ҫакӑнта ҫеҫ пулса тӑрать — фашистла тискер кайӑка пуҫӗпех ҫапса вӗлермелле.

Кашнинчех шанчӑк. Кашниех пулассине ӗненет: эпир ӗнтӗ ҫӗнтеретпӗрех!

Пӗлӗтре вӗҫӗмсӗр самолёт моторӗсем кӗрлеҫҫӗ. Пирӗн соколсем вӑтӑршарӑн, аллӑшарӑн, ҫӗршерӗн иртеҫҫӗ.

— Берлина каяҫҫӗ! Берлина!..— тесе савӑнатпӑр эпир.

— Лайӑхрах аркатӑр, кисрентерӗр Берлина!

*Майӑн 2-мӗшӗ.*

Редакцине полксенчен, артдивизионсенчен, медсанбатран ҫынсем килеҫҫӗ. Вӗсене пурне те пӗр ыйту интереслентерет.

— Иртенпех ырӑ хыпар ҫӳрет. Берлина илнӗ, теҫҫӗ. Тӗрӗсех-ши вӑл?— ыйтаҫҫӗ вӗсем.

— Мускав пӗлтермен-ха,— тет радиоприемник патӗнчен кайма пӗлмен Егоров.

— Ротӑна таврӑнсан, пирӗн мӗн калас?

— Приказ ҫук-ха, тейӗр.

— Каҫчен пулӗ-ши вӑл приказ?

— Кам пӗлет.

...Пӗтӗм чун-чӗререн кӗтнине каҫпа чӑнахах та пӗлтерчӗҫ. Ана Мускав сасси каларӗ: пирӗн чапа тухнӑ паттӑр ҫарсем, паян, майӑн 2-мӗшӗнче, Германи столицине — Берлина—нимӗҫ империализмӗн центрӗ тата нимӗҫ агрессийӗн вучахӗ пулса тӑракан вырӑна — туртса илчӗҫ.

— Отныне есть у нас Берлинские дивизии, армии...— тет диктор аслӑ Мускавран.

Ӗмӗр-ӗмӗрех каппайса пурӑннӑ Берлин пирӗн ура айӗнче йӑванать; фашизм, хура юнне юхтарса, вилес пек ахлатса выртать, тапаланать, сикет, ӳкет...

Берлин — нимĕç агрессийĕн чунĕ пĕрре çеç мар вăрçă чĕртсе янă, пирĕн çĕршыва хирĕç хĕç çĕкленĕ, вăрçă пуçарса вăрçăпа килнĕ.

Берлин кашни хутрах Россия çине наркăмăшпа йĕпетнĕ ухă йĕпписемпе персе тăнă. Анчах тем пек пĕтерес тесен те, вырăс халăхне пĕтерейĕмен,— паттăр халăх хăйĕн тăшманне Берлина çитсе хĕненĕ. Çакна асра тытса ĕнтĕ аслă полководец Суворов: «Вырăссем яланах пруссене хĕненĕ»,— тенĕ.

Аса илер-ха 1760 çула... Çавăн чухне сентябрĕн 10-мĕшĕнче, вырăс çарĕсем Берлина çитсе кĕнĕ. Таса пÿрт-çуртсенче пурăнакан лапăрчăк чунлă нимĕçсем, вырăс воинĕсене курсан, йăпăлтатма, çу пек чĕлхепе каласма тытăннă. Пирĕн салтаксен кашни сăмахĕпе кашни ыйтăвне хирĕç: «Гут, гут!..» тесе ответленĕ. Хĕвелтухăç Пруссире пурăнакан нимĕçсене вырăс влаçĕсем Елизавета Петровнăна присяга пама хушсан вара, пруссаксем ним туртăнмасăр, тăмасăрах присяга панă. Присяга пама хыпаланса чупакан нимĕçсем хушшинче Кенинсберг университечĕн паллă профессорĕ Кант та пулнă...

Çав çулхине вырăс çарĕсен командованийĕ Берлин хапхин уççине Российăна илсе килнĕ. Вăл уçă халĕ те Мускавра истори музейĕнче упранать.

1806 çулхи октябрь уйăхĕнче, Берлин хулине Наполеон пырса кĕрсен нимĕçсем ăна та йăпăлтатса йышăнса илнĕ. Наполеон ут çинче пулнă. Берлин советникĕсем Франци императорĕ умне чĕркуçленсе ларнă, унтан ура çине тăнă та Бонапарт аллине чуптăвас тесе сикме тытăннă, ним тăвайман пирки унăн кĕсрине чуптунă...

Ку чухне те вĕсем: «Гут! гут!..»— текелесе чупса çÿренĕ.

Тепĕрултă çултан Россия çарĕсем, фельдмаршал Кутузов ертсе пынипе, Наполеон пусмăрĕнчен Европăна хăтарса, иккĕмĕш хут Берлина çитсе кĕнĕ. Берлин хулин советникĕсем ку чухне вĕсене юрă юрласа кĕтсе илнĕ:

Ein, zwei, drei! Mit Französen ist's worbei!  
Die Deutschen haben sie fettgemacht!  
Die Rusen haben sie abgeschlagt!*

---

* Пĕрре, иккĕ, виççĕ! Французсем пĕтрĕç!  
Нимĕçсем вĕсене тăрантарчĕç, ситерчĕç!  
Вырăссем вĕсене çапрĕç те аркатрĕç!

Çакăн пек пулнă чыссăр этем чунĕ иртне кунсенче, çавăн пек пулнă вĕсен тĕп хули Берлин — çăткăн ĕмĕтсен, ирсĕр агрессин хура йăви. Вĕсем агрессие упраса хăварасшăн пулнă, çавăн пирки чупса çӳренĕ.

...Халĕ, пирĕн çарсем Берлина виççĕмĕш хут çитсен, нимĕç генералĕсем тем пек тăрăшсан та, çав империализмăн ирсĕр шăтăкне çăлса хăвараймарĕç. Пустуях тапаçланчĕç, тĕрлĕ Геббельссем пустуях радио тăрăх пыршă татăличчен çухăрса, тута-çăвартан кăпăк кăларса кăшкăрчĕç...

Капитуляци çитрĕ...

Берлинăн пĕр урамĕнче Ивановпа Стариков сержантсем чул стена çумĕпе йăпшăнса пыракан генерала курнă. Çакă вăл Вейдлинг генерал пулнă.

— Стой! Руки вверх!—хыттăн кăшкăрнă сержантсем.

Генерал чарăнса тăнă, кукăр чĕлĕм чăпăкĕ пек кĕлеткине кăштах тӳрлетнĕ те, пĕр аллипе кăкăрĕ çинчи тимĕр хĕресĕсене тытса, тепĕр аллипе шурă ялав çĕклесе:

— Капитуляци!— тенĕ.

Акă ĕнтĕ иккĕмĕш кун рейхстаг çурчĕ çинче çĕнтерӳ ялавĕ хĕвелтухăç çилĕпе вĕлкĕшсе тăрать, пирĕн кăмăлсене çĕклентерет, пĕтĕм тĕнчене Хĕрлĕ Çар паттăрлăхĕ çинчен, вăл тунă чаплă çĕнтерӳ çинчен калать.

— Капитуляци!— тет Берлин.

— Çĕнтерӳ!— тет Мускав.

Паян 20-мĕш №-лĕ Приказа уйрăм кĕнеке туса кăлартăмăр. Гимнастерка кĕсйине чикмелле пĕчĕк кĕнеке пулчĕ. Халĕ вăл кашни офицерпа салтак аллинчех,— ăна вĕсем вулаççĕ, савăнаççĕ!..

Çанталăк пăсăлса кайрĕ. Сивĕ çумăр çăвать. Çил кашлать... Сопкăсем хушшинче ларакан фашистсем хăйсем пуррине те систермеççĕ: тем çинчен шухăшласа, темскер кĕтсе, тем тăвас тесе лараççĕ...

Совет воинĕсем, çĕнтерӳпе хавхаланса, нимĕç фашисчĕсене йĕрлесе тупаççĕ те, пере-пере антараççĕ. Майăн 1-мĕшĕнче Чабан снайпер питех те паллă ĕç турĕ. Вăл хăйĕн постне тухнă та лайăхрах вырăнаçса ларнă, нимĕçсем ăçтарах, мĕнле вырăнта нумайрах çӳренине асăрхама тытăннă. Çак кунхине вăл малтан нимĕç снайперĕпе тĕл пулнă.

— Эпĕ, ăна улталас тесе, хăма татăкĕ илтĕм те пилотка тăхăнтартса бруствер айăккинчен кăшт курăнмалла лартрăм,— тет совет снайперĕ.

Чабан пилоткине курсан, нимĕç снайперĕ пеме тытăннă. Шăпах çак вăхăтра ĕнтĕ пирĕн снайпер ăна персе антарнă. Çак кунхине вăл 9 фашиста леш тĕнчене ăсатнă.

Пулемĕт расчечĕн командирĕ Варфоломеев старшина майăн 2-мĕшĕнче тăватă нимĕç курнă та тăваттăшне те пĕрре очередь панипех пĕтерсе тăкнă.

Ленинград патĕнчен тытăнса çак вырăна çитиччен Варфоломеев 150 нимĕç захватчикне çĕре кĕртнĕ.

Гараев сержант, артиллерист хăйĕн боецĕсемпе пĕрле виçĕ кун хушшинче нимĕçсенне икĕ автомашина, пĕр тупă, икĕ пулемет персе çĕмĕрнĕ.

— Фашистсем пире пĕтересшĕнччĕ,— тет Гараев сержант,— анчах совет çыннисем вăрçăпа çыхăнакансене хăйсене пĕтереççĕ.

— Александр Невский калană пек тăватпăр,— хушса хурать Нилов наводчик.

*Майăн 4-мĕшĕ.*

Совет Правительстви государствăн вăрçă вăхăтĕнчи тăваттăмĕш заёмне 25 миллиард тенкĕлĕх кăларма йышăннă. Ку хыпар часах мĕнпур подразделенисене çитрĕ. Траншейăсенче ларакан ротăсенчи совет воинĕсем заема пысăк та ырă кăмăлпа çырăнчĕç.

— Нимĕçсене хирĕç эпĕ виçĕ вăрçăра пултăм,— терĕ Семен Згода салтак,— вĕсем манăн чи курайман тăшмансем. Çав ирсĕр тăшмансене çапса аркатнă кунсенче хамăр Тăван çĕршывшăн пĕтĕм чунтан савăнса, эпĕ Совет государствине кивçен 2000 тенкĕ укçа паратăп.

Семен Згода заем укçине çавăнтах тӳлесе татрĕ.

Слава орден кавалерĕ Иван Валюжевич ефрейтор та 2000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех тӳлерĕ, Попов старшина 1500 тенкĕ тӳлесе татрĕ.

Ку заема сарас тĕлĕшпе пирĕн дивизи пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ,— çавăн пек унăн, пирĕн паттăр дивизи, традицийĕ.

*Майăн 5-мĕшĕ.*

Çанталăк кăштах ăшăтрĕ. Пĕлĕтсем хушшипе вăхăтран вăхăта хĕвел пăхса илет те, çуркунне илемĕ килет. Политотделпа редакци вырнаçнă çурт ял вĕçĕнче ларать. Урама тухсанах тăри сасси илтĕнет. Хушăран нимĕç снарячĕсем килсе ӳкеççĕ те кĕрĕслетсе çурăлса каяççĕ. Тăшман пĕрре пенине хирĕç пирĕн артиллеристсем вуншар хут переççĕ.

— Германие тиесе килнӗ снаряда каялла илсе каяс мар,— тет Кузнецов сержант.

— Вӑрҫӑ пӗтмесӗрех ун пек ан кала-ха,— пӳлет ӑна Данилин ефрейтор.

— Мӗншӗн калас мар? Эсӗ приказ вуларӑн пулӗ, вӑрҫӑ пӗтсе пырать, тенӗ.

— Вуланӑ.

— Ну, эппин, давай хытӑрах, тӳрӗрех перер. Гитлер пуҫӗ арканса кайтӑр.

— Хытӑрах та тӳрӗрех пеме килӗшетӗп. Перер!

...Темиҫе кун ӗнтӗ ҫак хыпар ҫине-ҫинех илтӗнет: Германи капитуляци тӑвать, вӑрҫӑ ӗнтӗ пӗтнӗпе пӗрех, теҫҫӗ. Анчах вӑрҫӑ ҫаплах пырать-ха, кашни кунах тытӑҫусем пулса иртеҫҫӗ. Вилес патне ҫитнӗ тӑшман тупӑкне кӗрсе выртас вӑхӑтра та пулин хирӗҫ тӑрать.

*Майӑн 6-мӗшӗ.*

Бреслау хулинчен, шӑши таппинче ларнӑ пек ҫӗртен, нимӗҫсен пӗр ушкӑнӗ темле майпа тухнӑ. Вӗсене кӗтсе илме пирӗн хыҫра тӳрӗ наводкӑпа пеме тупӑсем лартса тухрӗҫ.

Сылтӑм флангра питӗ вӑйлӑ ҫапӑҫу пуҫланса кайрӗ. «Катюшӑсем» умлӑн-хыҫлӑн кӗрлеҫҫӗ, тупӑ сасси янраса ҫеҫ тӑрать. Ҫулсем тӑрӑх танксем, тупӑсем, минометсем малалла куҫаҫҫӗ. Салтак хыҫҫӑн салтак утать.

«Вперед за Родину» хаҫатӑн машинине снаряд лексе ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Унӑн редакцийӗ хӑйсен хаҫатне пичетлеме пирӗн пата килчӗ. «Вперед за Родину» хаҫат редакторӗ Иванов майор Бреславу хулинчен татса тухнӑ нимӗҫсене уйра, тап-таса ҫӗрте, пӗр ҫын юлмиччен пӗтерсе тӑкни ҫинчен каласа пачӗ. Вӗсене нимӗҫ командованийӗ: мӗн пулсан та Бреславу хулинчен тухӑр та хӗвеланӑҫӗнчи чаҫсемпе пӗрлешӗр, тесе приказ панӑ-мӗн. Пирӗннисем ҫав приказа пӗлнӗ те ҫӑлӑнӑҫ шыракан гитлеровецсене юриех кӑларса янӑ; палӑртса хунӑ вырӑна ҫитсен вара, вӗсене хупӑрласа илнӗ те шӑшисене таптанӑ пек пӗтерсе хунӑ.

Сылтӑм фланга куҫма приказ килчӗ.

Малта ҫапӑҫу, ҫапӑҫу, унтан—эпир кӗтекен Ҫӗнтерӳ.

*Майӑн 7-мӗшӗ.*

Паян пирӗн фронтри ҫарсем Бреславль (Бреслау) хулине пӗтӗмӗшпех нимӗҫсенчен тасатнӑ. 17 сехет тӗлне вӑл хулара тӑшманӑнне 40.000 салтакпа офицер тыт-

кăна илнĕ. Вĕсемпе пĕрле крепость комендантне фон-Нигоф генерала тыткăна илнĕ.

Пирĕн дивизи сылтăм флангра çапăçăва кĕрсе кайрĕ. Çирĕм километр малалла çĕмĕрттерсе кайрăмăр. Совет воинĕсем арăслансем пек çапăçаççĕ.

— Ку вăхăтченех вăрçма пăрахман фашистсене хĕрхенсе тăмалла мар!— тесе çапăçать Яков Байдужий салтак.

— Фашизма пĕтĕмпех тĕп тумалла!— теççĕ унăн юлташĕсем.

— Тăван çĕршывшăн!— тесе рота хыççăн рота малалла ыткăнать.

«Урра!» кăшкăрнă сасăсем унта та кунта илтĕнеççĕ.

*Майăн 8-мĕшĕ.*

Çĕр çĕмĕрсе вăрçă кĕрлет...

Пирĕн дивизи Болкенхайн ятлă хулашăн мĕн каç пулса тĕттĕмленичченех çапăçрĕ. Мана тата Колодеж капитана политотдел Смирнов батальонне ячĕ. Пĕр пĕчĕк шыв хĕррине тухрăмăр. Вăрман айăккипе çул пырать. Çав çулпа вĕçĕмсĕр халăх килет. Вĕсем — нимĕç тыткăнĕнчен тухнă çынсем. Хăшĕ çуран, хăшĕ велосипедпа килет. Теприсем тата таçтан лаша тупнă та пурçук япалисене темиçен урапа çине тиесе килеççĕ.

— Сывă-и, тăвансем?— тесе кăшкăраççĕ чуралăхран килекен çамрăк арçынсемпе хĕрарăмсем — вилĕмрен хăтăлнă совет çыннисем.

Хĕвел аннă вăхăтра çапăçу татах та вăйлăрах хĕрӳленсе кайрĕ. Эпир артналета лекрĕмĕр. Ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр шыв хĕррине пырса лăпчăнтăмăр. Шыва пуля тăкăнать, снарядсем пырса ӳкеççĕ те пĕтĕм шыв çӳлелле çĕкленет. Эпир тăр пылчăк пултăмăр, арçурисем пек выртатпăр.

Ман çумра лăпчăнса выртакан Колодеж кăшкăрса ячĕ.

— Ăçтан лекрĕ?— ыйтрăм эпĕ.

— Урана тиврĕ... Ах, пĕçерет-çке!..

Колодежăн сылтăм урине пăхрăм та атă кĕлли хăйпăнса кайнине куртăм. Тĕпсĕр атăран катан пир тăла тухнă. Шурă тăла çинче юн,— хĕп-хĕрлĕ, чĕрĕ юн...

Пирĕнтен çич-сакăр утăмра казах Айтжанов выртать, унпа юнашар — Комаров сержант, отделени командирĕ, вилнĕ.

Вёсемпе эпё çул çинче çеç каласрăм. Тем çинчен те ĕмĕтленетчĕç çак юлташсем.

— Вăрçă пĕтсен, тепре Ленинграда çитесчĕ, пăхса çӳреçчĕ, хамăр çапăçнă вырăнсене курасчĕ...— тетчĕ казах.

— Эпĕ вара вăрçăра мĕн курнисене хамăн ывăлăма, ултă çулти Мишшăна каласа парасшăн...— тетчĕ Комаров.

— Тăшмана кураймасăр пурăнма вĕрент ачуна,— хутшăнчĕ рота парторгĕ Ермолаев старшина.

— Ан хăра, манăн ачам та хам пекех пулĕ, тăшмана маххă памĕ, вăрçăшăн çунакан фашистсене вара пирĕн пĕтĕм ăру ĕмĕр-ĕмĕрех чун-чĕререн кураймасăр пурăнĕ,— ответлерĕ Мишшăн ашшĕ — паттăр сержант, виçĕ орден кавалерĕ...

«Мишша çитĕнтĕр, ашшĕ ĕçĕсене вăл манмĕ, паттăр пулĕ, çĕршыва хӳтĕлĕ...»— шухăшласа илтĕм эпĕ, вилнĕ салтаксемпе юлашки хут сывпуллашса.

— Урра! кăшкăрчĕç сулахай флангра.

Ку сасă пирĕн патăмăра та çитрĕ, чунсене çĕклентерчĕ.

Пурте малалла ыткăнчĕç.

Хулана çавăрса илсен, политотделри пĕтĕм работникĕсем пĕр чул çурта пухăнчĕç. Кашниех Колодеж çинчен калаçать:

— Паян-ыран çĕнтерӳ пулмалла, ăна ак амантрĕç...

— Колодеж урасăр юлма та пултарать, осколок ура тупанне çĕмĕрнĕ,— тет Лидия Кустова врач.

— Ак инкек!— тет Иванцов маиор кулянса.— Анчах мĕн тăвас ĕнтĕ, вăрçăри пурнăç çавăн пек-çке, уйрăм çыннăн ĕмĕчĕ ыранхи çинчен шухăшланă çĕртех татăлма пултарать...

— Ан шарлăр-ха!— пӳлет ăна Бурликов майор,— юлашки хыпарсем итлĕпĕр. Кĕçĕр ĕнтĕ вăрçă пĕтни çинчен пĕлтермеллех!

— Пĕлтермеллех!— килĕшетпĕр эпир пурте.

23 сехет те 30 минут. Мускавран паракан хыпарсене итлетпĕр. Пирĕн фронтăн çарĕсем Дрезден хулине илнĕ. Ытти хыпарсем вара яланхи пекех...

— 24 сехет хыççăн вăрçă пĕтни çинчен ятарласах пĕлтереççĕ пулĕ,— тет Казачинский лейтенант.

— Кĕтер-ха, кĕçĕр çывăрас мар...

— Вăрçă пĕтни çинчен малтан каланă сăмаха итлемесĕр юлас мар...

Вăхăт темшĕн вăрахăн иртет.

Хула хыçĕнче, таçта тусем хушшинче, пăшал перкелеççĕ. Хушăран автомат шатăртатса илет те каллех чарăнать. Унтан вара тĕнче каллех шăпланса ларать, каçхи тĕттĕмре çывăрать.

24 сехет иртсен, майăн 9-мĕшĕ пуçланса кайрĕ. Политотделра никам та çывăрмасть. Казачинскипе Страшко радиоприемник патĕнчех чавсаланса лараççĕ.

Икĕ сехет.

Мускав сасси илтĕнсе кайрĕ. «Тăван çĕршыв юррин» кĕвви: «Широка страна моя родная...» савăнтарчĕ.

Пĕтĕм кăмăла ыталать те çĕклет ку кĕвĕ, атте-анне калана пек туйăнать, питех те çывăх вăл, чĕре пекех...

— Говорит Москва!— илтĕнчĕ Мускав сасси.— Говорит Москва!..

Шăпах... Кăкăрсенче чĕре тапни илтĕнет. Пурин те пĕр шухăш..:

— Акă çĕнтерӳ!

— Пирĕн Çĕнтерӳ!

— Акт о военной капитуляции,— пĕлтерчĕ Мускав.

— Урра! Урра! Урра!..— кăшкăрса ятăмăр эпир хĕпĕртенипе, савăннипе. Тӳсеймерĕмĕр, юрлас килчĕ,— юрларăмăр, мĕн вăй çитнĕ таран кăшкăрса юрларăмăр! Çĕршыв çинчен, Мускав çинчен юрларăмăр:

Кипучая,
Могучая,
Никем не победимая,
Страна моя,
Москва моя,—
Ты самая любимая!

*Майăн 9-мĕшĕ.*

Хĕвелтухăçĕ ылтăн тĕспе капăрлансан, Çĕнтерӳ кунĕ çутăлса çитрĕ.

— Ялавсене çĕклĕр, машинăсем çине çакăр!— тенĕ сасă илтĕнсе кайрĕ.

— Кам-ши кун пек калать?— шухăшларăм эпĕ. Политотделран тухрăм та шоферсем патне пытăм. Шоферсем пĕтĕм машинăсене пĕр рете йĕркелесе лартнă. Кашнин аллинче хĕрлĕ хăмач ялавсем.

— Капитан юлташ, эпĕ машинăсем çине çĕнтерӳ ялавĕсем çĕклеме хушрăм. Çакмалла-и?— илтĕнчĕ каллех пасăрхи сасă. Çапла калаканни вăл — редакци шоферĕ Давлетшин сержант пулчĕ.

— Ун пек тума кам хушрӗ?

— Ҫӗнтерӳ ячӗпе хамӑрах тӑвас терӗмӗр.

Тепӗр ҫур сехетрен Болкенхайн хулинчен пурте малалла тухса кайрӑмӑр.

Ырӑ ҫанталӑк тӑрать. Паян нихҫанхинчен те ӑшӑ, ҫутӑ...

Уйпа пыратпӑр. Пӗтӗм тавралӑх чечекпе витӗннӗ. Кун пек паха чечексене эпӗ вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа асӑрхаман. Темӗн тӗрлӗ кайӑк-кӗшӗк юрлать. Кайӑксен ун пек паха юррине эпӗ тӑватӑ ҫул хушшинче илтмен.

Шухӑшсем Тӑван ҫӗршыва вӗҫеҫҫӗ. Ҫавна май иртнӗ кунсем аса килеҫҫӗ.

...1941-мӗш ҫул. Эпир тӑвансенчен, ял-йышсенчен уйрӑлса кайрӑмӑр, вӑрҫӑ хирне ҫитрӗмӗр.

— Сывӑ килӗр!— тесе ӑсатрӗҫ тӑвансем пире.

Вӑрҫа кайнисем вара:

— Сывӑ пултӑр ҫӗршыв!— тесе ҫапӑҫрӗҫ.

— Тӑван Ҫӗршывшӑн!— тесе тӑшман ҫине ыткӑнчӗҫ.

...1942 ҫула аса илетӗп тата. Эпир Волхов юханшывӗ хӗрринче тӑратпӑр. Йӗри-тавра вӑрман, шыв-шур. Траншейӑсенче пылчӑк, сӑра тӗслӗ мӑк шывӗ чӗркуҫҫи таран. Урасем йӗп-йӗпе. Сивӗ. Вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе ревматизм урасене туртса хутлатать. Шӑлсем ыратаҫҫӗ, тӗпренсе тӑкӑнаҫҫӗ...

Пуҫ ҫӗклеме те ҫук: хӑш ҫӗрте упаленсе, тепӗр ҫӗрте пӗшкӗнсе ҫӳретпӗр.

Пӗр пӗчӗк участокра нимӗҫсем пире Волхов хӗррине хӗссе ҫитерчӗҫ. Ҫавӑн чухне эпӗ акӑ мӗн ҫинчен шухӑшларӑм:

— Хӑҫан ура ҫине тӑрса, кӗлеткене тӳп-тӳрӗ тытса, ним шикленмесӗр утмалла пулӗ-ши?

Халӗ ӗнтӗ кӗтнӗ кун ҫитрӗ. Эпир пурте ура ҫинче, кӗлеткемӗрсем — вӑрҫӑчченхи пек, тӳп-тӳрӗ, эпир— ҫӗнтерӳҫӗсем!

Пирӗн умра фашистла Германи чӗркуҫҫи ҫинче ларать.

Берлинра, рейхстаг ҫурчӗ ҫинче, совет воинӗсем ҫӗкленӗ хӗрлӗ ялав мӑнаҫлӑн вӗлкӗшсе тӑрать,— ҫакӑ вӑл Ҫӗнтерӳ Ялавӗ!

Ҫавӑнтах. вӑрҫӑ кӑшланӑ, вӑрҫӑ вучӗ ҫунтарнӑ ҫурт айӑккинче, ҫӗмрӗк чӳрече ҫинче, шурӑ пир татӑкӗ мӗскӗн анчӑк хӳри пек усӑнса тӑрать,— ҫакӑ вӑл паракнӑ тӑшман кӑларса ҫакнӑ капитуляци ялавӗ.

* * *

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çĕнтерӳпе вĕçленчĕ. Кунĕ пĕтсе çитнĕ фашистла Германи пĕтĕмĕшпех капитуляци турĕ.

Хальччен этем курман-илтмен вăрçă 1417 талăк хушши пычĕ. Çак хаяр вăрçăра пире хавхалантараканĕ, малалла илсе пыраканĕ — Коммунистсен партийĕ пулчĕ.

Çĕнтерӳ! Ĕçре те кĕрешӳре эсĕ çуралтăн. Сана совет çыннисемпе воинĕсем туптарĕç, саншăн вĕсем вăйĕсене хĕрхенмерĕç, кунĕн-çĕрĕн ĕçлерĕç, кĕрешрĕç.

Çĕнтерӳ! Эсĕ — пирĕн мухтав, пирĕн чап, пирĕн малашлăх, çутă ĕмĕт.

Мухтав Совет Çĕршывне,
Мухтав Совет Çарне!
Мухтав партие!

*Германи, 1945*

# КУЛĂШЛА КАЛАВСЕМ

## ТЕКЕНТИРЕК ЕФРЕЙТОР

Ганс Миллер хăйĕн Макс ятлă ывăлне киле илсе таврăнать. Макс Чехословакири пĕр пĕчĕк хулари госпитальтен сывалкаласа тухнă. Вăл, икĕ урине чĕркуççи таран çухатнă тата, икĕ аллине амантнă пулин те, хăйне харсăр тыткалать: ашшĕне эрехшĕн кастарса кăна пырать.

— Тупасчĕ эрех, тупасчĕ...— тет кашни станцăрах...

— Станцине çитер ĕнтĕ, унта мучусем патне кĕрĕпĕр, никамăн пулмасан та, вĕсен эрех пурах,— тесе йăпатать ашшĕ.

— Ди водка, руссиш водка ĕçеттĕмĕр ялсене пырсан...—чĕлхине çуллать ефрейтор.

— Эпĕ те ăна ĕлĕк ĕçсе курнăччĕ...

— Закуска ди малосоль... Эх, пурнăç...—аса илет ефрейтор хăйĕн иртнĕ кунĕсене. Унтан кĕсйинчен çĕтĕлсе пĕтнĕ блокнотне кăларать те:—Эпĕ ĕнтĕ вырăсла пайтах вĕрентĕм,— тесе мухтанма тытăнать.

— Я тибя любит.

— Милая, пойдем спайт...

— Дай миасо, миод, млеко, сыр...

— Кто здиесь комиссар... большевик...

— Расстреляйт...

Унтан каллех:

— Тупасчĕ эрех...— тесе илет те:— Дай водка... Малосоль...— тесе вулать блокнот çине çырни тăрăх.

Германи салтакĕсене кашнинех сакăн пек сăмахсем вĕрентнĕ. вĕсен пурин те пекех Макс Миллерăн пек «культминимум» пур. Анчах Макс вĕсенчен «водка» сăмаха çеç лайăх астăвать. Çавăнпа та вăл пĕрмаях:

— Эрех... ди водка, закуска малосоль пуласчĕ!— тесе пырать.

— Тупатпăр..,— савăнтарать ашшĕ ывăлне.

* * *

...Хайхискерсем мучăшсем патĕнче чăнах та эрех тупнă. Урисене çухатса хăварнă «харсăр» ефрейтор, ĕçсен-ĕçсен, ирĕлсех кайнă, сăмах хыççăн сăмах çаптарнă, акăш-макăш мухтаннă.

— Мана фюрер чĕнчĕ те каларĕ: Макс, кай, терĕ, большевиксемпе çапăçма. Вилмĕн — пуйса килĕн. Ну, кайрăм вара... Лайăхрах тумланса килес терĕм. Арăма валли тумтир, атă-пушмак, аттене валли тăлăп, йăмăка валли пустав...

— Вара?

— Пурне те тупнăччĕ... Укçасăрах...

— Вара?

— Аманни пĕтерчĕ... Пăрахса хăварма тиврĕ.

— Макс, санăн телей çук çав,— хĕрхенчĕ ашшĕ.

— Анчах та эпĕ героя тухрăм...— таварчĕ ывăлĕ.

— Телей пулмасан, ăçтан вăл герой пултăр,— хутшăнчĕ кинемĕшĕ.

— Тĕрĕс!— хавхаланчĕ ефрейтор, унтан хăй тĕллĕнех тепĕр черкке эрех тултарса ĕçрĕ те:

— Эпĕ ĕнтĕ, харсăрскер, ыйтса тăмастăп, эрехне те нимĕç салтакĕ пек ĕçетĕп...

— Ĕçмесĕр...

— Ĕçетĕп те, шухăшсене уçса, хам çинчен каласа паратăп... Ну, вара кайрăм... Вăрçатпăр хайхи... Эпĕ хам пĕччен икĕ дивизие хупăрласа илтĕм, ну и вăрçатăп, ну и перетĕп... Халăх тăкăнать çеç. Пĕччен вăтăр пин вĕлертĕм... Пурте большевиксем... Комиссарсем...

— Ну!— тĕлĕнчĕ ашшĕ.

— Вăт «ну!» Анчах хам та амантăм. Сылтăм урана мина татса пăрахрĕ... Çапах та хăвалатăп çавсене ну и хăвалатăп...

— Тăхта-ха, Макс, тăхта! Хăрах урапа-и?— пӳлчĕ кинемĕшĕ.

— Паллах, хăрах урапа... Хăрах урапа хăвалама пулмасть-и-мĕн? Эх чупатăп, эх чупатăп... Унччен те пулмарĕ — сулахай урама та хуçса пăрахрăм. Хам çаплах чупатăп... Ну хăвалатăп, ну хăвалатăп...

— Тăхта-ха...

— Мĕн тăхта! Урасемсĕрех чупатăп...

— Суятăн пулĕ?..

— Çук, пĕрре те суймастăп...

— Тупата?

— Тупата, суймастӑп... Эпӗ вара аллӑмсемпе чупрӑм...

— Ӗненмелле мар. Ҫын нихҫан та ун пек чупма пултараймасть,— пӳлчӗ ашшӗ те, ывӑлӗ йӗркерен тухса кайса, юмах пек сӑмахсем ҫаптара пуҫласан.

— Эпӗ ӗненместӗп!— сӑмахне татрӗ кинемӗшӗ. Хӑй вара ӑшӗнче: «Макс ӳсӗр пирки аташать пулӗ», тесе шухӑшласа илчӗ.

— Атте, Клара кинемей! Эпӗ пӗрре те суймастӑп... Итлӗр...

— Ну!

— Унтан манӑн икӗ аллӑм та аманчӗ... Хам ҫаплах чупатӑп, ну хӑвалатӑп, ну хӑвалатӑп... Икӗ дивизие хӑвӑртрах пӗтерсе тӑкас тетӗп...

— Чим-ха, чим! Халӗ ӗнтӗ суятӑн пулӗ?..

— Мӗн суясси пур. Эпӗ, кутӑн тӑрса, пуҫпа... Ну чупрӑм, ну чупрӑм...

Ашшӗ ҫак сӑмахсене илтсен, намӑса туйса, хӗрелсе кайрӗ, вӑтаннипе унӑн ҫамки ҫине пӑтӑр-пӑтӑр тар тухрӗ. Клара кинемӗшӗ ним калайман енне:

— Макс, халӗ чупса кӑтарт-ха эппин,—терӗ. Анчах Максӑн та ӑс ҫитрӗ.

— Кунта фронтра мар,— татса хучӗ вӑл,— халӗ пултараймастӑп. Эпӗ фронтра ди водка ӗҫнӗ хыҫҫӑн чупрӑм, атту чупаяс ҫукчӗ...

— Эсӗ ма малтанах ӗҫрӗм тесе каламарӑн?

— Пӗлеҫҫӗ пулӗ терӗм. Эпир эрех ӗҫмесӗр пӗрре те вӑрҫман...

— Ҫапах та, ҫапах пуҫпа чупма ҫук...—хирӗҫлерӗ кинемӗшӗ.

— Сук-и? — костылӗсене персе ячӗ Макс.

— Ҫук!

— Пӑхӑр, эппин пӑхӑр та курӑр!— Макс хӑйӗн кӗсйинчен «Фелькишер беобахтер» хаҫатӑн юлашки номерне туртса кӑларчӗ те ашшӗпе кинемӗшне пачӗ.—Мана ӗненместӗр пулсан, вулӑр! Унта пирӗн ҫар командованийӗн информацийӗ... Вулӑр! Вулӑр!..

— Э-э-э!— терӗҫ ашшӗпе кинемӗшӗ.

— Мӗн э-э-э?

— Суя! суя!.. Геббельс сӑмахӗ.

— Эпӗ суймастӑп, хам ҫинчен хаҫатра панӑ информацире мӗн ҫырнине ҫеҫ каласа патӑм. Эпӗ ӑҫтан урӑхла каласа парам ӗнтӗ. Эпӗ ун чухне ӳсӗр пулнӑ. Мӗн

пулса иртнине тупата пĕлместĕп. Информбюро çырни тăрăх çеç пĕлетĕп...— тесе пĕтерчĕ хăйĕн сăмахне кутăн-пуçлă, пуç-ураллă, тĕкĕнтирĕк ефрейтор.

*1941*

## РАШТАВ ТЕЛЕКЕ

Бутылкинпа Рюмочкина паян турăсăрсен ячейкин пуххинче питех те хытă пăсăрлантарчĕç. Саккул мучипе Петров комсомолец тӳрех, куçран каласах, критиклерĕç.

— Акă ĕнтĕ ыран раштав. Анчах ăçта сирĕн ĕçĕр? Ма эсир без ĕçсĕр çӳретĕр? Ма намăс мар сире? Хусамăра: «Турăсăрсем, турăсăрсем...»— тесе калатăр. Ман шутпа, эсир сăмах çаптарма çеç ăста,— тесе пĕтерчĕ çитмĕл çулти Саккул хĕрсе калана хаяр сăмахне.

— Тĕрĕс!— хушрĕç ытти стариксем те.

— Эпĕ те çавнах каласшăн,— пуçларĕ хăйĕн сăмахне çамрăк каччă Петров.—Вĕсем пĕр-пĕрин çине шанса пурăнаççĕ. Бутылкинĕ: «Рюмочкин ĕçлеместь»,— тет. Турăсăрсен ячейкинче миçе член пулнине те пĕлмеççĕ вĕсем. «Безбожник» хаçата чĕлĕм туртса пĕтереççĕ. Халĕ каççем вăрăм, Вуласчĕ вĕсене улахсенче...

Бутылкинпа Рюмочкин пухура мăк-мак тукаласа çеç илчĕç: вĕсем пĕр путлĕ сăмах та тупса калаймарĕç. Анчах та пуху хыççăн вара, çул çинче, киле кайнă чухне,— пĕр-пĕрне яланхи пекех ятларĕç, çапăçса илесси патнех çитрĕç.

— Мана сан пек заместитель кирлĕ мар,— терĕ Бутылкин, сассине хăпартса.

Рюмочкин та хăраса тăмарĕ:

— Мана сан пек секретарь кирлĕ мар,— тавăрчĕ вăл хаяррăн.

Малалла вара мĕн курăнми пуличченех: «Эсĕ ĕçлеместĕн... Эпĕ кăна ĕçлетĕп. Саншăн мана та сăмах лекет...» тесе хĕремесленсе тавлашрĕç.

— Эпĕ первăй безбожник...

— А эпĕ первăйсенчен первăйĕ...

Кăкăрĕсене шаккаса, мухтана-мухтана, перкелешрĕç те Бутылкинпа Рюмочкин, пĕр-пĕринпе сывпуллашмасăрах уйрăлса кайрĕç.

...Хуллен-хуллен каç пулса çитрĕ. Сурхури сиввине кура мар, лапка-лапка ăшă юр çума пуçларĕ. Ялти пӳртсенче кашнинчех лампăсем çутрĕç. Ялăн икĕ пуçĕн-

че такамсем пĕр-пĕринпе ăмăртнă пек юрлама тытăнчĕç. Çурçĕр тĕлнелле вара Бутылкинсен хапхи аран-аран уçăлчĕ те аран-аран хупăнчĕ. Кăшт вăхăт иртсен, Рюмочкинсен хапхи те çавăн пекех уçăлса хупăнмаллаччĕ. Анчах Рюмочкин алăк хăмине, вăкăр пек, хăйĕн пуçĕпе пырса тĕкрĕ те, юрла-юрла, çавăнтах тутлă ыйхăпа çывăрса кайрĕ.

— Турă!.. Турă!.. Эпĕ кăна ĕçлетĕп,— тесе илчĕ хăй.

Рюмочкин тĕлĕк курма тытăнчĕ-мĕн. Ăна темĕншĕн сивĕ те пушă çурта хупнă. Çавăнтах тата Бутылкин ларать. Урамра çил улать. Тăман вĕçет. Пушă çуртăн стенисем чĕтреççĕ. Кĕç-вĕç ишĕлсе анас пек.

— Мĕншĕн лекрĕмĕр-ши?— тесе ыйтать Рюмочкин Бутылкинран. Унччен те пулмарĕ — çĕмрĕк чӳрече витĕр кĕрекен юртан икĕ юпа пулчĕ. Çав юпасем каланçма тытăнчĕç. Çынсем пулса тăчĕç.

— Камсем-ши?— пĕлесшĕн пулчĕ Рюмочкин.

— Эпĕ — турă!— терĕ пĕри.

— Эпĕ — ывăлĕ!— каласа хучĕ тепри, çамрăкраххи.

— Чăнах турă-ши?— иккĕленчĕ Бутылкин. Пăхаççĕ... Хайхискерсем, турăпа христос, ыталанса тăра параççĕ. Турри кăн-кăвак сухаллă. Çăварĕнче чейник пысăкăш чĕлĕм. Хăрах уринче вĕр-çĕнĕ калуш, тепĕр уринче çĕтĕк çăпата. Христос çарранах. Йĕмĕ çурăлса пĕтнĕ. Кĕпи кăвапа таран çеç. Хăй тем çитменшĕн мунча милки йăтнă...

— Бутылкинпа Рюмочкин, тухăр кунта,— тет турри, хăй кĕреçе пек сухалне кашни минут хушшинче шăлса илет. Рюмочкин пăру пек чĕтрет, Бутылкин ачалла йĕрет.

— Господин турă,— тет Бутылкин,— эп сана хирĕç нихçан та ĕçлемен... Эпĕ, пĕлес килет пулсан, турăсăрсен ячейки ĕçне, чăннипех те, япăхтарса ятăм. Мана ан тив... Рюмочкин айăплă... Вăл ĕçленĕ ĕнтĕ.

— Çук, эпĕ мар, Бутылкин виноват,— тесе хурать Рюмочкинĕ.

— Ан лавкаса тăрăр янахсăр йытăсем пек,— тет турă, мăн куçĕсене вылятса.

Çав вăхăтрах, ангелсем вĕççе çитрĕç. Çĕтĕк çунаттисем çĕртен сĕтĕрĕнеççĕ.

— Çак сылăхлă чурасене айăпламалла. Вĕсем пире хирĕç турăсăрсен ячейкине организациленĕ...

Пушă çурт çутăлса кайнă пек туйăнчĕ. Çӳлтен сĕтел анса ларчĕ. Унтан пукан тухрĕ. Турă сĕтел патне пычĕ.

— Вырăнăра йышăнăр,— терĕ вăл. Унтан каллех, мăн сухалне шăла-шăла:

— Паян ик чурана тамăк тĕпне суд туса яратпăр,— тесе татса хучĕ.

Пăхать Рюмочкин — Бутылкин çук. Ăçта? Вăл, шуйттан, тарнă пулмалла, тесе шутларĕ тарăхса çитнĕ Рюмочкин.

— Бутылкин ăçта?— ыйтать турă та.

— Ана эпĕ каçартăм,— тет христосĕ.

— Юрĕ, ывăлăм, юрĕ... Суд тапраниччен чĕлĕмсене тултарса туртар... Кӳр табак, ывăлăм! Ман хутаç тĕпĕнче табак виçĕ пĕрчĕ çеç...

Хайхискерсем мĕшĕлтетсе чĕлĕмĕсене тултарчĕç. Христос сĕтел патне пычĕ те пукан çине милĕк хурса ларчĕ. Рюмочкин пуçне усса çеç тăрать, хăш чухне пĕрре турă сăмси вĕçĕнчи шĕпĕн çине, тепре христосăн çĕтĕк йĕмĕ çине пăхса илет.

...Суд пуçланчĕ.

Т у р ă. Рюмочкин, ху айăпна йышăнатăн-и?

Р ю м о ч к и н (хăраса). Ман айăп çук пулĕ, господин турă...

Х р и с т о с. Эс, Рюмочкин, пĕр пытармасăр, йĕркипе кала.

Р ю м о ч к и н. Мĕн калас ара?.. *(аллисем чĕтреççĕ)*.

Т у р ă. Çылăхусене кала... Турăсăрсен ячейкинче мĕн ĕçлени çинчен кала.

Р ю м о ч к и н. Манăн пĕр çылăх та çук... *(хăй шĕпĕн çине вăрттăн пăхать)*. Эсир пĕлместпĕр пулĕ... Эп тĕне хирĕç ĕçлекен çын мар. Бутылкинăн заместителĕ çеç... Эп ĕçлеме — пĕрре те ĕçлемен... Пĕррехинче Бутылкинпа пĕрле ӳсĕр пупа ăшăтса илтĕмĕр... Пĕтĕм ĕçĕм те çавă çеç... Урăх ман ним те çук.

Х р и с т о с *(ура çине тăчĕ, йĕмне пăявпа юсаса çыхрĕ)*. Рюмочкин пирки те калаçма кирлĕ. Тен, чăнах та Бутылкин пекех без ĕççĕр çын?..

Т у р ă. Айта, эппин, калаçар...

...Хайхискерсем куç умĕнчен çухалчĕç.

Ангелсем, тура кайсанах, кĕсйисенчен пĕрер чĕрĕк эрех кăларса ĕçрĕç. Христос хăйĕн вырăнне малтанрах анса ларчĕ те:

— Мана та пĕр стопка эрех парăрччĕ,— тесе йăлăнчĕ.

Ангелсенчен пĕри хăвăртах тултарса пачĕ. Çав хушăрах:

— Приговор вулап, тăрăр! — тенĕ сасă илтĕнчĕ.

Пурге кĕрр тăчĕç. Турă аллинчи приговора çырма вырăсла çырнă. Турă кăвак сухалне чĕтретсе илчĕ. Унтан вула пуçларĕ.

— «Аз глаголю..! Блажен сей раб Рюмочкин, ибо добился блаженств рая, он, будучи избранным заместителем секретаря ячейки безбожников, действительно не вел ни малейшей работы... он есть раб, а его душа безгрешна...»

— Аминь! — тесе хучĕ юлашкинчен турă.

— А!..— терĕ Рюмочкин та... Унтан вара шăннă пăру пек чĕтреме тытăнчĕ, хăй вара, ӳсĕрскер, те савăннипе, те хăранипе йĕрме-макăрма пуçларĕ.

— Ах-ха-ха! — тесе кулса ячĕ хайхи «турă». Пăхăсăн, — суд тăваканскер турă пулман, Саккул старик пулнă. Хăй кула-кула:

— Эк-кей, Саккул мучуна та палламастăн, турă тетĕн, эпир кĕçĕр клубра спектакль лартрăмăр, сцена çине артист пулса тухрăм, халĕ тӳрех сана хăратма тĕлĕке килтĕм, — тесе юптарчĕ.

...Рюмочкин тинех вăранса кайрĕ. Йĕри-тавра никам та çук.

Юр çаплах лапăстатса çăвать. Хапха алăкĕ умне пĕкĕрĕлсе ларнă Рюмочкин кăшт çеç юр айне пулман. Халĕ вăл тăлăп пек витĕннĕ юра силлерĕ те:

— Саккул мучи ма çав териех хăратрăн? — тесе килне кĕрсе кайрĕ.

*1928*

## САРА ХУРТ

Пĕр яра кун кунĕпе тата тепĕр çĕр çĕрĕпе пытанса çывăрнă хыççăн Якравăн мăкланса кайнă хăлхине бригадир сасси татах тепĕр хут кĕрсе кайрĕ.

— Якрав пичче, тырă вырма каятăн пулĕ? — терĕ бригадир ĕнерхи пекех уççăн. Анчах Якрав ăçтине пĕлмен пирки вăл нумаях чарăнса тăмарĕ. Якрав, пĕр вĕçĕмсĕр 24 сехет ытла çывăрнăскер, куçĕсене вăраххăн уçса пăхрĕ те, ирхи хĕвелĕн çутинче нăрлатса вĕçсе çӳрекен ватă симĕс шăнана курах кайрĕ. Унтан вара, уçăлса çитеймен мăнтăр куçĕсене йăвалакаласа, анасла-анасла:

— Манăн та çавăн пек, шăна пек, пулаечĕ. Акмасăр, вырмасăр пурăнать,—çапах тутă. Эсĕ пур тăраниччен çывăраймастăн та...—терĕ вăл хуллен. Хăй çаплах вырăнтан тапранмарĕ. Унăн нумай çывăрнипе тăртанса кайнă куçĕсем каллех хупăнчĕç, питĕрĕнсе ларнă сăмси каллех хăрăлтатма пуçларĕ. Анчах унăн хырăмĕ çатăртатса выçнă пирки урăм-сурăм пуçĕнчи пĕр тăлăх шухăшĕ хурт пек çавăрăнса илчĕ. Якрава вăл тахçан-ĕлĕк илтнĕ юмахри сăмахсене аса илтерчĕ.

«Пĕрре, иккĕ, виççĕ,
Чӳлмек, пĕçер пăтă».

Ана çавăнтах чӳлмекри пăтă тулса тăкăнса кайнă пек туйăнчĕ. Чӳлмек чарăнмасть: манна пăттине пĕçерет те пĕçерет. Вĕри пăтă урайне тăкăнать. Пăтăпа кĕлет тулса ларать. Кĕлет алăкĕ уçăлса каять те пăтă пусма картлашкисем çине юхса тухать. Унтан килкартине, килкартинчен урама юхса каять. Пĕтĕм урам вĕри пăтăпа тулса ларать. Урампа иртсе каякан çынсем, çул пӳлĕнсе ларнă пирки, пăтта çисе, хăйсене валли çул уçаççĕ...

Якрав вырăн çинченех çуллă пăтта кашăкĕ-кашăкĕпе çисе выртать. Хăй савăннипе акă мĕнле сăмахсем çаптарать:

— Вăт пурнăç, вăт савнăç! Çакăн пек пурăнсан, эпĕ хамăн савнă вырăнăм çинчен пĕрре те тăмăттăм. Канлĕ ыйхă хыççăн ăшă пăтă,— мĕнешкел лайăх, мĕнешкел савăк манăн тĕлĕнмелле пурнăçăм! Тăраниччenex çи, тăраниччenex çывăр...

Çак вăхăтра ĕнтĕ кĕтесре нăрлатса вĕçекен симĕс шăна Якравăн уçăлса кайнă çăварне кĕрех кайрĕ. Якрав, ӳсĕре-ӳсĕре, чыхăнма тытăнчĕ, вăранчĕ те унăн мăкланса ларнă хăлхи каллех сасă илтрĕ.

— Эсĕ, Якрав, мур илесшĕ, мĕншĕн паян та уя пымастăн, халăх çывăра пĕлмесĕр ĕçлет, эсĕ пур манран кĕлете пытанса çывăратăн...

Якрав, хăйĕн арăмĕ ятлаçнине итлес мар тесе, пуçне кивĕ сăхманпа хупларĕ.

— Эсĕ тата мĕн çĕтĕлсе çӳретĕн? Иккĕн ĕçлеме тата, пире нумай кирлĕ-и? — тавлашма тытăнчĕ вăл хăйĕн арăмне хирĕç.

— Сана чĕнме ячĕç. Ара, ĕç вăхăтĕнче сулхăнра пытанса выртни намăс мар-и!? Ара, уçсам ĕнтĕ алăкна!

— Ара та ара... Çывăрма та памастăн. Тĕлĕнмелле

тӗлӗк курнӑччӗ... Эх, пӑтӑ, мӗн чухлӗ пӑтӑ!— Кулянса, шӑрпӑкланса ятлаҫать Якрав ӗҫе хӑвалакан арӑмӗпе.

— Тух, часрах тух, тетӗп, ыйхӑ чӑпти, пӗр-ик кӗлте те пулин кайса ҫых хӑть.

— Пӗр-ик кӗлтепе хырӑм тӑранать-и-мӗн? Луччӑ ҫывӑратӑп...

— И-и-и!— каллех ҫывӑрасшӑн, кахал, эсрел кӗвенти!..

* * *

Якрав кӗлетрен тухмарӗ. Ҫӗтӗк сӑхман айӗнче ӑна каллех йывӑр ыйхӑ пусса илчӗ. Унӑн пӗртен-пӗр шухӑшӗ каллех паҫӑр тӗлӗкре курнӑ пӑтӑ техӗмӗпе киленме тытӑнчӗ.

— Пӑтӑ, эх, пӑтӑ!..— пуҫларӗ Якрав савӑнмашкӑн.— Вӑт телей, вӑт телей!..

— Ҫынсем ӗҫе тухнӑ. Эсӗ мӗншӗн кайман?— тенӗ пек туйӑнчӗ каллех.

— Арӑм ӗҫлет-ҫке,— ответлет Якрав,— эпӗ те ӗҫленӗ пулӑттӑм та, ӗҫкунӗ ытла сахал параҫҫӗ вӗт. Эпӗ паян ӗҫе кайнӑ пулсан, мана пӗтӗмпе те пӗр ӗҫкунӗ ҫеҫ паратчӗҫ. Мана ӗҫкунӗ пӗр кӗлет чухлӗ, пӑтӑ чухлӗ кирлӗ. Пӗр кун ӗҫлем те, ҫӗр ӗҫкунӗ илем. Унсӑрӑн тутӑ пурӑнаймастӑн. Эх, пӑтӑ, пӑтӑ!..— тӗлӗрсе выртакан Якрав тутисене чӗлхи вӗҫӗпе ҫемҫен ҫуласа илчӗ те каллех:

«Пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ.

Чӳлмек, пӗҫер пӑтӑ»,— тесе пӑшӑлтатрӗ.

Якрав хӑйӗн сассипе хӑех вӑранса кайрӗ. Тем пек ӗмӗтленнӗ пулин те, юратнӑ пӑтӑ хальхинче курӑнмарӗ. Куҫ умӗнче чӳлмек еверлӗ туйӑнса тӑракан мӗлкерен нимӗнле пӑтӑ та тухмарӗ.

Якрав, мӗн кӗркуннеччченех пӑтӑ ҫинчен ӗмӗтленсе, акмасӑр, вырмасӑр, улпутла пурӑнчӗ, чунне симӗс шӑна пурнӑҫӗпе йӑпатрӗ...

Кӗрхи кунсем ҫитсен, вӑрмансем саралса, ҫулҫӑ тӑкнӑ вӑхӑтра, пӗррехинче колхозниксен пухӑвӗ пулчӗ. Ҫак пухура, Якрав ҫинчен, арӑмӗ сӗннипе, ыйту лартрӗҫ.

Темиҫе ҫул хушши кахал упӑшки ҫине тарӑхса пурӑннӑ инке:

— Эпӗ,— терӗ хӗремесленсе кайса,— кӑҫал пӗччен 237 ӗҫкунӗ турӑм, Якрав пӗтӗмпе те 3 ӗҫкунӗ ҫеҫ турӗ. Кирлӗ мар мана ҫавӑн пек упӑшка, кирлӗ мар ҫавӑн пек кахал! Сӑрӑ вӗт вӑл!.. Сӑрӑ!..

*1936.*

## АЧАШ АЧА

Ачаш ача ашшĕн
пуçне çапса çĕмĕрнĕ, тет.

*(Ваттисен сăмахĕ).*

...Çапла çав, çапла, вĕсен ĕçĕ малтанах тĕлĕнмелле пуçланнă. Анчах Миша кăçал ашшĕпе амăшне тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерсе ячĕ: вăл тăххăрмĕш класа куçайман иккен.

— Мĕн пулсан та, вăтам шкултан вĕренсе тухас пулать, кайран вара аслă шкула та кайăн,— тенине хирĕç Миша, нимĕн чухлĕ те хумханмасăр, лăпкăн ответлерĕ:

— Вĕренес килмест!

Мишăн ашшĕ те, амăшĕ те — вĕреннĕ çынсем: ашшĕ — врач, амăшĕ — артистка. Вĕсем хăйсен ывăлне те вĕрентесшĕн, ăслă çын тăвасшăн. Ашшĕ, вĕçкĕнтерехскер, вунпилĕк çулхи ывăлĕпе пĕрре кăна мар мухтаннă, çывăх юлташĕсем хушшинче час-часах хăйĕн юратнă сăмахне питех те мăнкăмăллăн каланă.

— Метода!.. Метода!..— тенĕ вăл, хăйне ăслăн тыткаласа.

— Мухтанас марччĕ,— пÿлнĕ арăмĕ упăшкине.

Упăшки итлемен, вăл çаплах:

— Метода!.. Метода!— тесе вĕçкĕнленсе çÿренĕ.

Анчах та халĕ ашшĕпе ывăлĕн ĕçĕ йăлтах пăсăлса кайрĕ. Вĕсем халĕ пĕр-пĕринпе питех те смур. Ачаш ывăл ашшĕн сăмахĕсене хăлхана та чикмест. Ашшĕ ĕнтĕ кÿренсе çитнипе нимĕн тума та пĕлмест, тарăхнипе хăйĕн «чаплă» методине те, «ăслă» ывăлне те тем те пĕр каласа вăрçать.

— Эх, ачам, ачам! Каларăм сана, ачам, вĕрен, терĕм, тăрăш, терĕм... Анчах эсĕ темскер персе ятăн. Темскер!..

— Вĕренес килмест, терĕм!

— Вĕренес килмест, тетĕн?

— Килмест!

Ашшĕ тÿсеймерĕ, унăн куçĕсем шывланса кайрĕç, вăл йĕрсе ярас патнех çитрĕ.

«Мĕн акатăн — çавнах вырса илетĕн», тесçĕ ваттисем. Çак ачаш ачан ашшĕ те ку вăхăтчен мĕн акмаллине акса сеç пынă, паян вара, ун çинчен юптарарах каласа-тăк, вăл мăян пусса илнĕ ана сине çитсе тухрĕ. Унта вăл, иртнĕ кунсенчи пекех, хăй пирки хăех:

— Эпĕ футурист пек, утопист пек этем,— тесе çÿрет.

Çак сӑмахсене кала-кала, вӑл хӑйӗн «методине» шутласа кӑларнӑ, çак сӑмахсене кала-кала, хӑйӗн ачине вӗрентме тытӑннӑ,— анчах вӑл çынсем пек мар, урӑхла вӗрентме тытӑннӑ. Ачи мӗнле те пулин лайӑхрах ӗç тунӑ-туманах, ашшӗ ӑна мӗнпе те пулин «лайӑххине» парнеленӗ. Малтанхи вӑхӑтра тӗрлӗ-тӗрлӗ премӗксем илсе панӑ, каярахпа вара, ывӑлӗ çитӗнсе пынӑ май, укçан та пама пуçланӑ.

Пурӑна-киле «утопист» ачи Миша шкула çӳренӗшӗн те ашшӗпе амӑшӗнчен «тӳлев» илсе тӑма тытӑннӑ.

— Каймастӑп шкула,— тенӗ вӑл хӑш чухне.

— Мӗншӗн?— ыйтнӑ унран ашшӗ е амӑшӗ.

— Хӑвӑр нимскер те илсе памастӑр та...

— Лайӑх вӗренсен... çавна-çавна илсе парӑп...— тесе йӑпатнӑ вара ашшӗ.

Миша, пӗрремӗш класран вӗренсе тухнӑ,— ӑна ашшӗ авторучка илсе панӑ, амӑшӗ йӑпӑркка кӗпе парнеленӗ. Миша виççӗмӗш класа куçсан, ӑна ашшӗ сехет илсе панӑ (паллах, сехетне вӑл пӗр-ик кун хушшинчех çӗмӗрсе пӑрахнӑ); тӑваттӑмӗш класа кӗрсен, тата та хаклӑрах япала парса кӑмӑл тунӑ. Миша велосипед тытакан ача пулса тӑнӑ.

— Тата мӗн илсе паратӑр?— хистесех ыйтма тытӑннӑ хайхи ача.

Ашшӗпе амӑшӗ хӑйсем пӗрре хӑнӑхнӑ йӑлана пӑрахман: вӗсем, пысӑк шалу илекенскерсем, укçине пӗрре те хӗрхенмен. Пиллӗкмӗш класра вӗренме пуçласан, Мишӑна фотоаппарат туянса панӑ (халӗ вӑл таçта кӗтесре тусан çӑтса выртать); улттӑмӗш класра тепӗр хаклӑрах япала — капӑр тумтир, коверкот ятлӑ материалтан çӗленӗ костюм, илсе панӑ.

— Халӗ, аттем, мана канмалли çурта кайма путевка тупса пар,— ыйтнӑ Миша çиччӗмӗш класа çитсен, ашшӗ вара çак кунах путевка тупса панӑ.

Саккӑрмӗш класра Мишӑн «расходсем» пысӑкланнӑ. Куллен тыткалама ӑна укçа-тенкӗ чылаях кирлӗ пулнӑ, ырӑ кӑмӑллӑ ашшӗ вара ывӑлне кашни уйӑхра вӑтӑршар тенкӗ «хырçӑ» пама пуçланӑ. Укçа пухсан пуян ача хӑйне мӑн çынсен шутне кӗртнӗ, хӑйне кирлӗ юлташсене те часах шыраса тупнӑ.

Учительсем ӑна юсама тӑрӑшнӑ, анчах тӑрӑшса çитереймен.

— Михаил, уроксем хатĕрлесе килтĕн-и?— тесе ыйтнине хирĕç саккăрмĕш класра вĕренекен Миша кашнинчех тĕрлĕрен тĕрлĕ сăлтавсемпе ответлесе пынă.

— Ĕнер пуç ыратрĕ...

— Вăхăт пулмарĕ...

— Эпĕ вăл урока ырана валли тесе...

— Манса кайнă.

— Вĕренес килмест...— тенĕ вăл юлашкинчен.

* * *

Халĕ ĕнтĕ Миша «вĕренсе пĕтерчĕ», халĕ вăл Миша мар, Михаил кăна та мар,— пысăк çын, шукăль каччă...

Михаил ĕнтĕ ашшĕн «методи» тăрăх вĕренсе пычĕ.

Кам кĕсйинче тутлă апат-çимĕç туллиех пулнă?— Миша кĕсйинче. Камăн вĕренме вăхăт тата услови «пулман»?—Мишăн. Кам халĕ хаклă йышши пирус «Дели» туртса çӳрет?—Миша — Михаил — Михаил Васильевич.

Халĕ вăл, ашшĕ-амăшĕн сăмахĕсене итлес мар тесе, халхисене икĕ аллипе хуплать та мамăк тӳшек çинче улпут пек выртать.

Ашшĕ, Василий Тарасович, килте пулса ӳснĕ «утопист», хайне хăй вăрçса ятлаçать:

— Метода!.. Метода! йăнăш пулчĕ-и-мĕн?!.

*1940*

## НИКОТИН

Пирĕн ялта Уçăп мучи пек тĕреклĕ çын урăх пулман та теççĕ. Вăл, çитмĕл сакăр çулта пулин те, колхозра пĕр ĕçрен те юлмасть. Пуринчен ытла утă капанĕ тума юратать. Виçĕ юплĕ сенĕк ярса тытать те капан çине çĕклемĕн-çĕклемĕн утă вĕçтерет.

— Паха утă,— тет хăй.

Уйри ĕçсене пĕтерсен, пушă вăхăтсенче, Уçăп мучи хăнана çӳрет, туйсенче пулать. (Йăхĕ пысăккине кура, туй-шилĕке те час-часах кайма тивет!) Туйра вара пĕрик курка сăра ĕçсенех юрра ярать, ура хуçса ташлать.

— Хальччен яла култарманне — халь тин яла култарас çук...— тесе сăвă калать.

Анчах Осип Павлович кăçал темшĕн ӳсĕрме пуçларĕ. Пăхăр чĕлĕмне туртнă хыççăн пушшех те хытă ӳсĕрет, каççах каять. «Эххĕм, эх, эх!»— илтĕнет унăн сасси.

Ӳслĕк иртсе кайсан, Уçăп мучи: «ăш ыратать», тесе вар-хырăмне ик аллипе тытса ларать. Хăй çапах та парă-насшăн мар.

— Мĕн амакĕ пулчĕ-ши? Мĕн амакĕ-ши?..— тесе çӳрет.

Аптранă пирки Осип Павлович виçĕм кун тухтăр патĕнче пулнă. Тухтăр унăн ӳпкине, чĕрине, вар-хырăмне сăнаса пăхнă та тĕп-тĕрĕс диагноз тунă:

— Хăрамалли нимех те çук,— тенĕ вăл.

— Ма хытă ӳсĕретĕп, ма ăш çав тери ыратать?— ыйтнă старик.

— Ӳсĕрессе табак туртнă пирки ӳсĕретĕр, ăшăр та çавăнпах ыратать. Гастрит пекки пуçланнă... Хăçантан-па туртатăр?— тесе ыйтнă.

Старик мĕн астунине пĕтĕмпех каласа панă:

— Ĕлĕкренпех туртатăп, ĕлĕкренпех... Вунсаккăрта чухнех вĕреннĕ. Утмăл çул çитрĕ ĕнтĕ. Пин пăт ытла табак пĕтертĕм пулĕ...

Утмăл çул ытла табак тĕтĕмĕ çăтса пурăннă çынна тухтăр табак сиенĕ çинчен, никотин мĕн тери хăрушă наркăмăш пулни çинчен каласа панă. Уçăп мучи тĕлĕн-сех кайнă. Çав никотина çын организмне пĕр вăхăтрах 0,1—0,5 грамм кĕртсен, çын сасартăках вилсе каять. Никотин табак туртакан çыннăн пырне, ӳпкине, чĕрине, хырăмлăхне, пыршине — ӳт-пĕвĕн мĕнпур пайĕсене пăсать...

— Сывалас килет пулсан,— ăнлантарнă старике тух-тăр,— халех туртма пăрахăр. Вара ӳслĕкĕр те чарăнĕ, ăшăр та ыратма пăрахĕ...

— Чарăнмасан, ыратма пăрахмасан, мĕн тăвас?

— Каллех поликлиникăна килĕр.

— Иртсе кайсан, килмелле мар-и?

— Килмесен те юрать.

Поликлиникăран таврăнсан, тухтăр сăмахĕсене Осип Павлович колхоз конюхне Николай Семеновича, хăй пекех кĕреçе сухаллă тусне, анчах çулĕпе кĕçĕнрех ста-рике, каласа пачĕ. Юлашкинчен вара Уçăп мучи яланхи пекех сухалне шăлкаласа илчĕ те:

— Чĕлĕм ăшне канхвет хурса парсан та текех турт-мастăп, паянах пăрахатăп. Ăшăм тӳрлентĕр, гастрактă иртсе кайтăр...— терĕ.

— Эсĕ пăрахсан, эпĕ те пăрахатăп. Аллă çул наркă-măш çăтса пурăнтăм. Çитĕ! Текех хамшăн хам тăшман пулмăп...— тесе хучĕ Николай Семенович.

Икĕ ватă тус мĕн-мĕн калаçнине Уçăп ывăлин ачи— Микихвер итлесе ларнă. Микихвер вунтăватă çулта çеçха. Çапах вăл ашшĕпе амăшне те, аслашшĕне те пăхăнсах каймасть. Шкула кун сиктерсе çӳрет. Арифметикăпа яланах «виççĕ», вырăс чĕлхипе «иккĕ» илет. Микихверĕн икĕ тус пур: пĕри — Тиçук, тепри — Раман (ăна ытлашши чарусăртан ялта пĕчĕк «утаман» теççĕ). Вĕсем вĕренӳре Микихвертен иртеймеççĕ. Пĕр сăмахпа калас-тăк, вĕсем питех те япăх вĕренеççĕ. Анчах туссем виççĕшĕ те пĕр ĕçе часах вĕренсе çитнĕ: пытана-пытана пулин те кунне пĕрер пачка пирус туртса яраççĕ. Хăш чухне умлăн-хыçлăн пилĕкшер пирус туртаççĕ те:

— Тинех ăш канчĕ,— тесе çӳреççĕ.

Микихвер хăйĕн аслашшĕн сăмахĕсене итлесе ларнă хыççăн Тиçукпа Рамана тĕл пулчĕ, эххĕм-эххĕм ӳсĕркелесе:

— Ах, ача, пирĕн маçакăн гастрит,— терĕ.

— Мĕн?

— Гастрит тетĕп.

— Мĕн вăл?

— Ăш чирĕ. Вĕлерме те пултарать. Çавăнпа та тухтăрсем маçака табак туртма хушмаççĕ. Туртма пăрахсан çеç иртсе каять теççĕ. Маçак халĕ хăй çине хăй тарăхса çӳрет. Вун сакăр çулта чухнех ухмаха ертĕм те утмăл çул хушши вар-хырăма никотинпа касăлтарса пурăнтăм, тет. Ирхине вара пăхăр чĕлĕмне пуртăпа касса вакларĕ. Микулай мучи те чĕлĕмне вутта пăрахса çунтарнă,— каласа кăтартрĕ Микихвер старикçем çинчен.

Микихвер аяккалла пăхса илчĕ те каллех ӳсĕрме пуçларĕ:

— Эххĕм-эххĕм!.. Те мана та гастрит ерчĕ, те чахуткă пуçланчĕ... Пилĕк çул ĕнтĕ хама хам сиен туса пурăнатăп...

— Эпĕ ултă çул,— пăшăлтатрĕ Тиçук.

— Санăн та туртма пăрахмалла, анчах...— тем каласшăн пулчĕ Микихвер Тиçука.

...Çакăн чухне Уçăп мучи лаç хыçĕнче ларнă, çамрăк туссем мĕн-мĕн каланине пĕтĕмпех илтнĕ, мĕн тунине те курнă.

— Вăхăтра пăрахатăр, вăхăтра! Эпĕ те халĕ туртмастăп. Пуссан та туртмастăп!— тенĕ ăшĕнче Осип Павлович, савăннипе сухалне шăла-шăла илнĕ.

— Мĕн анчах?— ыйтрĕ лешĕ.
— Тухтăр патне кайма намăс.
— Намăс пулсан, ахалех пăрахăпăр. Уçăп мучипе Микулай мучи кайни те çитĕ.

Раман хăйĕн юлташĕсемпе килĕшмерĕ, вĕсене ятлама тытăнчĕ:

— Эсир иксĕр те ним ăнланаймастăр, айвансем, Уçăп мучие туртма пăрахмашкăн йывăрах мар тес пулать, вăл вунсаккăра çитсен тин туртма пуçланă. Микулай мучи çирĕмре туртма вĕреннĕ. Пирĕн пек сакăр çулта туртма вĕренсе пăхчăр-ха вĕсем... ĕмĕрте те пăрахаймĕç...

— Çапли-çаплах та...— каллех тем каласшăн пулчĕ Микихвер. Унтан вара ӳсĕркелесе:— Ах, ача, мĕнле пăрахас-ши?— тесе хучĕ.

— Манăн та гастрит ериччен пăрахасчĕ,— макăрса ярас пек пулчĕ Тиçук.

— Мана, атьсемĕр, çав тери хĕн,— хирĕçлерĕ Раман.

— Эх, утаман, эсĕ тата манăн маçака хĕн мар тетĕн-и-мĕн? Микулай мучие хĕн мар-и?— кăшкăрса ячĕ Микихвер.

— Эсĕ ун пекех ан кăшкăр-ха, мĕнле пăрахмаллине каласа пар,— хутшăнчĕ Тиçук, куçне шăлкаласа.

— Эпĕ пăрахатăп! Эсир пăрахаймастăр пулсан, Уçăппа Микулай мучирен кайса ыйтăр,— терĕ те Микихвер шăлавар кĕсйинчен пирусне кăларса аяккалла ывăтрĕ.

Тиçук та хăйĕн кĕсйине тасатрĕ:

— Никотин!— тесе ывăçĕнчи пируссене çĕре пăрахса таптаса хăварчĕ. «Утаман» итлерĕ-итлерĕ те, табак хутаççине кĕсъерен кăларса, пылчăк çине тач! тутарчĕ, ун çине лач! сурса хучĕ.

*1958*

## ÇЕНĔ ЭМЕЛ

Кĕрхи кунсем кĕскелсех пыраççĕ. Сивĕнеççĕ. Авăн уйăхĕн пуçламăшĕнче тăм ӳккелет, унтан шăнтма тытанать. Çĕр хытса каять. Пĕчĕкрех кӳлленчĕксем шăнса лараççĕ. Вăрман сарă тум тăхăнать,— ылтăнăн-кĕмĕлен курăнса ларать. Анчах çавăн пек кунсем нумаях пулмаççĕ. Йĕпе-сапа çанталăк пуçланса каять те, хĕвел таçта пытанса ларнă пекех туйăнать. Иртен илсе каçчен çумăр пĕрĕхсе тăрать. Ялсене, уй-хирсене, вăрмансене тĕтре

хупласа илет. Ăшă пӳртрен пачах та тухас килмест. Каçсерен урамра тĕттĕм. Йĕп чиксен те курăнмасть...

Çакăн пек тĕттĕм те вăрăм каçсенчен пѐринче Кушак Макçăмĕ тӳшек çинче тĕлĕркелесе выртнă чухне çапла шухăшлама тытăнчĕ:

— Эх, хе-хе, сылтăм аяк çине те, сулахай аяк çине те, месерле те выртса пăхрăм, çапах çывăраймастăп. Мĕн тул çутăличченех çавăн пек выртăп-ши?..

Нумайччен çавăрăнкаласа выртнă хыççăн Макçăм тăрса ларчĕ, унтан анаслакаларĕ те кĕрхи çумăр сассине итлеме тытăнчĕ. Сивĕ çумăр пӳрт çинчи тимĕре, чӳречесене танкăртаттарать: пин-пин пӳрнепе таккать, тейĕн. Макçăм мамăк çытар çине тайăнса выртрĕ, ним тăвайман пирки çĕр таран шутласа пăхрĕ. Пĕрре шутларе — çывăрса каяймарĕ, тепре шутларĕ — куçĕ çаплах хупанмарĕ. Шутларĕ-шутларĕ — пинтен те ирттерсе ячĕ! Анчах кунсе шут шăрçи вылятса ларнă Макçăм ниепле те çывăраймасть, куçĕ хăçан хупăннине те, хăçан уçăлнине те пĕлмест. Çитменнине тата, кун пек каçсем пĕрре çеç мар, виçшер те тăватшар умлăн-хыçлăн пулаççĕ, кĕркунне те, хĕлле те пулаççĕ... Çуркунне те...

Ирхине Кушак Макçăмĕ илĕм-тилĕмпех килхушшине тухрĕ, ик-виç пирус туртса ячĕ, унтан каллех пӳрте кĕчĕ те арăмне:

— Тăхăр сехет çитсенех тухтăр патне каятăп. Ыйхă вĕçнĕренпе виçĕ эрне çитрĕ ĕнтĕ, пачах та çывăраймастăн, чăлăм та куç хупаймастăп. Люминал е мединал ыйтса пăхас тетĕп,— терĕ салхуллăн пăхса.

— Эх, ачам,— хăраса ӳкрĕ Макçăм арăмĕ,— ыйхă вĕçни ырра мар, теççĕ.

— Люминал лайăх эмел вăл. Нервăсене лăплантарать, çывăрма пулăшать. Пĕр çур сехет иртнĕ-иртменех сăпкари ача пек çывăрса каятăн. Эпĕ ăна курсра вĕреннĕ чухне ĕçсе пăхрăм.

— Санăн, Макçăм, пĕреххут урăх ĕçе куçмалла мар-ши? Пуçна шут шăрçисемпе çĕмĕрсе ларичченех, вăйхал ĕçĕпе пурăнма тытăнмалла мар-ши? Луччĕ вармана колхоз валли вутă касма çӳре. Йывăр ĕçпе шăмшакку ĕшенсен, эмелсĕр-мĕнсĕрех çывăракан пулăн...

— Кирлĕ мара ан кала-ха, Укçине! Шут ĕçĕ те çăмăл ĕç мар. Эпĕ мĕн тери ывăнса килнине ху та аван куратăн.

— Курасси куратăп та... анчах эмел ĕçсе çывăрма

хăруша. Тем курăн таçта... Ёçĕн те вилсе кайăн, ху та сисеймĕн... вара...

— Люминал ун пек эмел мар. Ана тухтăрсем хăйсем те ĕçеççĕ. Профессорсем те ыйхă вĕçсен-тусан, люминал е мединал ĕçсе выртаççĕ.

Макçăмпа Укçине çывратакан эмелсем çинчен калаçса ларнă вăхăтра вĕсем патне колхоз конюхĕ Шеккĕр мучи пырса кĕчĕ.

Макçăм Павăлч арăмне ĕнентерес тесе, çаплах чарăнаймасть:

— Люминалах кирлĕ, люминалах!— тет.

— Людмила, Людмила... тетĕн. Арăму ятне улаштарас теместĕн пулĕ те? Укçине начар ят-и-мĕн тата?— ăнланмасăр ыйтрĕ мучи.

— Çук! Макçăм ыйхă вĕçнипе аптрать те тухтар патне кайса люминал ятлă эмел илесшĕн. Мана люминал кăна çывăратма пултарать, тет.

Шеккĕр мучи, чеен пăхса, кĕреçе сухалне аллипе якаткаларĕ. Лашасене апат панă чухне сухалне лекнĕ утă пĕрчисене иле-иле пăрахрĕ. Унтан вăл, хыткан келеткеллĕ, типшĕм санлă Макçăм çине пăхса, вăрттăн кулса, тăрăхлама тытăнчĕ:

— Э-э-э! Кин, эсĕ ăна номинал илме ярас вырăнне кĕреçе тыттар та хам патăма витене яр. Кăштах пилĕксене авкаласан, йоминалсемпе номиналсене асăнма пăрахĕ...

— Эпĕ, Петр Егорыч, темле йывăр ĕçре те пулса курнă. Ĕçлемен мар! Анчах усси çук. Тем пулсан та çывăраймастăп,— ăнлантарма тытăнчĕ Макçăм.

— Темех турăн пуль! Кăнтăрла канцеляринче хут ăшĕнче чаваланса ларатăн. Каçпа, чăннипе калам, ĕçкĕре çӳретĕн. Ĕçке ернĕ çын ăçтан çывăртăр-ха,— тарăхса кайрĕ Укçине.— Юлашки вăхăтра аншарли тĕслĕ пулса кайрăн! Аншарли хурчĕ ӳпкӳ-пĕверне, вар-хырăмна, ӳттирне, шăммусене çисе пĕтерет,— тесе аллине сулчĕ.

— Эпĕ,— терĕ Шеккĕр, кĕсйинчен пăхăр чĕлĕмне кăларса,— çывăрма пулăшакан майсенчен пĕр япала кăна пĕлетĕп.

— Мĕн-ши?— ыйтрĕ Кушак Макçăмĕ савăнса.

— Николай Степанч лекцийĕ!

— Вăл çынна мĕнле майпа çывратмалли майсем çинчен лекци тăвать-и-мĕн?— хăвăртрах пĕлме тăрăшрĕ Макçăм.

— Леш Лаптенков пек гипнозпа çывăратма вĕренмен пулĕ-çке?— ыйтрĕ Укçине.

— Çço-o-к!— терĕ Шеккĕр сӳрĕкрех сасăпа.— Ун пек майсене вăл ăçтан пĕлтĕр. Вăл гипноз тума мар, сăмахне те илтсе курман. Паллах, пакăлтатма пултарать вара!

Николай Степанович Тушканчикова ялта такам та пĕлет. Вăл — лекцисем туса çӳрекен çын, «пĕлӳсем саракан» член. Хăй п-ĕ-чĕккĕ, анчах пуçĕ пы-ы-сăк! Темиçе университет пĕтернĕ çыннăн та ун пысăкăш пуç пулас çук. Лекцисемпе доклачĕсене яланах портфелĕнче чиксе çӳрет. Унта «Мĕн вăл пӳсĕр?», «Мĕн вăл вĕри çĕлен?», «Çĕр мулкачĕ ăçта пурăнать?». «Шурă кăрăça мĕнле таварламалла?», «Пăхăр укçа историйĕ» тата ытти лекцисем те пур унăн. Анчах унăн хăй юратакан лекцийĕ — «Этемлĕх инкекĕсемпе сиенĕсем» (ку доклада вăл вырăсла: «Бедствия человечества» тет!).

Шеккĕр мучи «этемлĕх инкекĕсемпе сиенĕсем» çинчен итленĕ-мĕн.

— Виçĕмкун,— тет вăл,— мана Николай Степанович лекцине итлеме чĕнсе кайрĕç, айта та айта!— теççĕ. Эсĕ — ватă çын, лайăх конюх, теççĕ. Сана лекцисемпе докладсем итлени тем пекех кирлĕ. Кунĕн-çĕрĕн витерен тухма пĕлместĕн, кайса итле, теççĕ. Ну, карăм вара хайхискерне итлеме. Клуба кĕтĕм те тĕпелерех иртсе лартăм. Кашни сăмахĕ пуçа кĕрсе юлтăр, тетĕп. Мансăр пуçне пĕр аллă çын пынă пулĕ. Дояркăсемпе свинаркăсем. Ахаль колхозниксем... Клуб пуçлăхĕ сĕтел хушшинче савăнса ларать. Хĕвел пек. «Тушканчиков юлташ философи ыйтăвĕпе лекци вуласа парать. Питех те интереслĕ лекци. Çавăнпа та регламент пирки калаçса тăмастпăр пулĕ. Мĕн чухлĕ калас тет, çавăн чухлĕ калатăр». Эх, хайхи этем, çурăлса пĕтнĕ портфелĕнчен пĕр купа хут кăларчĕ те тытăнчĕ лекци вулама. Куçлăхне хывсан çеç чарăнать. Кашни чарăнмассерен куçлăхне кĕпи çаннипе шăлса илет, ӳсĕрет, чыхăнать... Унтан куçлăхне сăмси çине лартать те малалла вĕçтерет. Сасси вара нăрă сасси пек: нăр-нăр! нăр-нăр!.. тăвать. Итлекенсем пĕрин хыççăн тепри анаслама тытăнчĕç. Харлаттараççĕ кăна. Çичĕ çул çывăрса курман тейĕн. Эпĕ те тăватçĕр тăвата хут куça хупса илнĕ хыççăн «мамăк тӳшек» ăшне путрăм. Тĕлĕк курса çывăрма пуçларăм. Хам çумра ларакан шофер харлаттарнипе кăна вăранса кайрăм.

— Ун пекех мар пулĕ-çке ĕнтĕ!— пӳлчĕ Укçине.

— Ма пулмĕ? Вăранни те эпĕ кăна пултăм. Ыттисем пурте çывăраççĕ. Хуп турттараççĕ тейĕн, харлаттараççĕ кăна, ăмăртмаллипех ăмăртаççĕ... Николай Степанович çаплах вулать, нăрлаттарать те нăрлаттарать, никам çине те пăхмасть. Манăн пушшех те çывăрас килет. Çывăрас мар тесе, сăмса вĕçне чĕпĕтсе пăхрăм, хăлхана пăрса илтĕм, виçĕ пĕрчĕ сухал туртса кăлартăм. Çаплах ыйхă пусать...

— Петр Егорыч, анчах — эсĕ кун çинчен мĕншĕн пире каласа паран-ха?— ыйтрĕ Максăм.

— Ара, эсĕ, Максăм Палыч, çывăрайми пултăм, каçсерен ыйхă вĕçет темерĕн-и?

— Çапла, çапла! Каларĕ, çывăраймасть! Пĕлтĕртенпех асапланать!— сиксе тăчĕ Укçине.

— Ну, çывăраймастăп тейĕпĕр, каçпа ыйхă вĕçет тейĕпĕр. Вара мĕн-ха?

— Акă мĕн, Максăм Палыч! Санăн Николай Степанович доклачĕсемпе лекцийĕсене ытларах çӳреме тарăшас пулать. Тĕнчере вĕсенчен сипли ним те çук. Çĕнĕ эмел! Киввисем пĕри те çитейместĕ! Пĕр-ик лекцире пулсанах ыйху вĕçме пăрахать, ĕмĕр-ĕмĕр тав тăвăн.

Шеккĕр мучи сăмахĕсем Максăма килĕшмерĕç. Çавăнпа та Максăм Павăлч тулхăрса кайрĕ, тӳрех çапла каларĕ:

— Эсĕ, Петр Егорыч, камран кулатăн: лектортан-и е манран-и? Эсĕ кая юлнă иккен, çĕнĕ пĕлӳсене юратмастăн... Эсĕ... эсĕ... элемент! Вăт кам эсĕ!..

Анчах Шеккĕр мучи те хăраса тăмарĕ, тĕрĕс ответ пачĕ:

— Эпĕ лайăх лекторсемпе докладчиксене пачах хурламастăп. Лайăх та ăслă лекторсем, пирĕн патăмăра килсех тăччăр. Вĕсене ватти те, вĕтти те кĕтет!

Укçине инке Шеккĕр майлă çаврăнса ӳкрĕ:

— Тĕрĕс калать Петр Егорыч, тĕрĕс калать! Тушканчиковсене ура та ярса пустармалла мар!

— Лайăххисене çăкăр-тăварпа кĕтсе илмелле!

Шеккĕр мучи пăхăр чĕлĕмне табак тултарчĕ, вучахран кăвар илсе хучĕ, кăварне чĕлĕм калпаккипе хупласа хĕстерчĕ. Чĕлĕмĕ тивсе илсен, кăварне лаххана пăрахрĕ. Унтан Максăмпа Укçинене алă пачĕ те:

— Санăн, Максăм, тата ĕçме те пăрахас пулать. Симĕс кайăк этеме ĕмĕрех чирлеттерет, ыйхине пăсать, вĕстерет.— тесе, чĕлĕмне пашлаттарса, урамалла тухса кайрĕ. Пăхăр чĕлĕм тĕтĕмĕ ункăн-ункăн явăнса, хуçи

хыççăн вĕçсе пычĕ. Кушак Макçăмĕ кăвак ункăсем çине пăхса, хăйĕнчен хăй ыйтрĕ:

— Çĕнĕ эмел, тет! Çĕнĕ эмел... Çапах та тухтăр патне кайса пăхасах пуль. Пулăшĕ...

... Кушак Макçăмĕ тухтăр патĕнче те пулчĕ, лекци те итлерĕ. Ик кун витере ĕçлерĕ. Шеккĕр мучие пулăшрĕ. Пĕр эрне вăрманта вутă касрĕ. Юлашкинчен вара ĕçченçĕ Макçăм:

— Акă ăçта иккен ыйхă эмелĕ! Çĕнĕ эмел!— терĕ.

*1959*

## ШЕПЕН

Редактор кабинечĕн алăкĕ ерипен уçăлчĕ те пĕр лутра çын кĕлетки курăнса кайрĕ. Вăл ула костюмпа, сарă ботинкăпа. Хурарах çӳçĕ тăрмаланса пĕтнĕ. Куçлăх çаврашкисем хушшинчи сăмси хĕп-хĕрлĕ, редиска пек. Хăлхисем шĕшкĕ кăмпи тĕслĕ. Сап-сарă. Этем кабинета кĕнĕ-кĕменех сăран портфелĕнчен хут тĕрки туртса кăларчĕ. Куçлăхне сăмса тутрипе пĕр-ик хут шăлса илчĕ те чĕтрекен сасăпа:

— Пĕлетĕр-и, эпĕ кĕçĕр тата тепĕр статья çыртăм,— терĕ.

Редактор пĕр сăмах та шарламарĕ: çăварне шыв сыпнă тейĕн, тĕлĕнсе кăна ларать.

Портфеллĕ этем куçлăхне тепре шăлса илчĕ те сассине тата хытăрах чĕтретме тытăнчĕ:

— Пĕлместĕр пулсан, пĕлтерем... Ку статьяна эпĕ критиксене критиклесе çыртăм. Пĕрне те хăвармарăм. Кĕнеке палатинче тăватă кун ларса тăватçĕр кĕнеке пăхса тухрăм. «Ялавпа» «Тăван Атăла» ним хăварми шекĕлчерĕм. Ача, пирĕн путлĕ критика çук-çке! Аласем кĕçĕтме тытăнчĕç. Тӳсеймерĕм. Хамах çырма тивет, терĕм. Кассан—турпас пулать, çырсан—статья пулать иккен. Лартăм та çыртăм, критиксене хăйсене тăпăлтартăм. Тĕпчевлĕ статья пулчĕ, диссертаци тейĕн. Тепри пулсан, сахалтан та, кандидат ятне илмелле. Юрать, хам сăпайлă çын та, кандидатпа доктор пирки шутламастăп...

Сăпайлă çын редактор патĕнче çапах та чĕлхине чараймарĕ: пур-çук критиксене тăпăлтарчĕ, тылларĕ, вĕтрĕ, ăшаларĕ, çунтарчĕ, кĕл туса, пăрах туса вĕçтерчĕ... Никама та хăвармарĕ. Хăйне çеç тивмерĕ. Юлашкинчен вара каллех куçлăхне кăларса шăлчĕ те:

— Манăн ку статьяна тахçанах çырмаллаччĕ. Анчах кая юлса çырнă пулин те, вырăнлă статья, хаçатра пичетленмелле статья,— тесе пĕлтерчĕ.

Редактор ассăн сывласа илчĕ, пуçне кăтăрт-кăтăрт хыçса, «критиксен критикĕ» çине шикленсе пăхрĕ (каллех ĕнтĕ икĕ сехет пĕтрĕ, шухăшласа илчĕ хăй), ним тăвайман пирки:— М-м-да!— тесе хучĕ.

— Мĕн ăмда тесе-ларатăр? Манăн статьяна пичетлетĕр-и е пичетлеместĕр-и? Калăр! Каламасан, эпĕ... ăна халех вырăсла куçарса...— Тем пĕлтересшĕн пулчĕ критик, анчах редактор тепре «ăмда» терĕ те, халь çеç шăнкăртатнă телефон трубкине тытса:

— Итлетĕп!— терĕ йăваш сасăпа. Унтан:— Наум, Наум-и? Кунта, кунта...— тесе пĕлтерчĕ такама.

...Куçлăхлă этем статьисем хыçне «Наум Клыков» тесе алă пусать (тепĕр чухне «Зубов» псевдоним лартса ярать). Ал пусмассерен ячĕпе хушамачĕ айне ик-виç хутчен туртса хурать, хучĕ шăтасран та хăрамасть. Хушамачĕ çине пăхать-пăхать те, юлашкинчен, **«пысăк саспаллисемпе наборламалла!»** тесе çырса асăрхаттарать.

Клыков «критике» редакцисенче, издательствăсенче, журналистсемпе писательсем хушшинче «Шĕпĕн» тесе чĕнеççĕ. Унăн ашшĕ-амăшĕ панă ячĕ, паспорт çине çырнă хушамачĕ çук та тейĕн: никам та Наум темест, никам та Наум Наумович темест, никам та юлташ тесе чĕнмест. Ятсăр-шывсăр этем пек: Шĕпĕн те Шĕпĕн теççĕ. «Шĕпĕн» тени вара уншăн питех те вырăнлă. Ятнех килет. Вăл çуралма та сав тери çăмăл çуралнă теççĕ. Амăшĕ те сисеймен, тет. Шĕпĕн тухнă та ӳкнĕ. Тухса ӳксенех таракан пек чупса кайнă. Кăшт çеç урай çурăкне ӳксе çухалман. Амăшĕ аран-аран хуса çитсе тытнă, тет...

Клыков арăмĕ (малтанхи мар, иккĕмĕшĕ те мар,— виççĕмĕшĕ) упăшкинчен икĕ хут пысăкскер, кăмака пек кĕлеткеллĕскер, Шĕпĕн çухалсан-тусан, яланах хаçат редакцине вĕстерсе пырать.

— Пирĕн Наума курман-и?

Редакци çыннисем пĕрин хыççăн тепри Шĕпĕне курни-курманни çинчен калаççĕ:

— Курмасăр!

— Куртăмăр!

— Ирхине коридорта çӳретчĕ.

— Халĕ тухса кайнă пулас. Сасси илтĕнмест...

— Ах, мур илесшĕ! Ăçтан тупас ăна?— тарăхать арăмĕ.

— Тухса каяйман. Нумаях пулмасть редакцин иккĕмĕш хутĕнче çĕмĕрттерсе çӳретчĕ,—хутшăнать уборщицăра ĕçлекен Плаки аппа.

— Эпĕ ăна виççĕмĕш хутра куртăм,— пĕлтерет Таня машинистка.

— Эпĕ тăваттăмĕшĕнче куртăм,— тет тепри.

Упăшкине шыракан хĕрарăм Пичет çурчĕн пĕр хутĕнчен иккĕмĕшне, иккĕмĕшĕнчен виççĕмĕшне, тăваттăмĕшне çитет. Пӳлĕм хыççăн пӳлĕм уçса пăхать, анчах Шĕпĕн çук та çук. Таçта çăва тĕпне кайса кĕнĕ вăл: те пĕр-пĕр çурăка çитсе хĕсĕннĕ, те пысăкрах чернил кĕленчине кĕрсе ӳкнĕ... Чăвашгиз коридорĕ тăрăх Шĕпĕн хыççăн пĕр çухрăм танккасан тин хайхискер хĕрĕх çиччемĕш пӳлĕмре курăнса каять. Клыков урай варрине тăнă та хĕрсе кайса тавлашать. Хулĕ хушшинче çав-çавах ғачка портфель. Аллинче хут тĕрки. Хучĕсем саралса кайнă.

— Эх, ачам!— тет арăмĕ,— Эх, Шĕпĕн! Яшка тахçанах пиçрĕ, чей те вĕрерĕ. Эс çук та çук. Таçта çӳретĕн? Кĕтсе илеймерĕм... Кунта килсе пăхас, терĕм. Çĕр пӳлĕме çитрĕм. Тинех тупрăм. Мĕн пирки çĕтĕк портфельне силлесе тăратан, кама хăратас тетĕн?.. Чĕлхӳ мĕнле ывăнмасть, янахху мĕнле чăтать, сурчăк ăçтан çитет? мĕншĕн сана шăпăрпа хăваласа кăлармаççĕ?

— Эпĕ ахаль килмен, алçырăвĕ илсе килтĕм,— тӳрре тухма пăхать Шĕпĕн. Хăй çавăнтах лӳчĕркеленсе пĕтнĕ хучĕсене уçкаласа илет, пуçĕнчен çӳле çĕклесе кăтартать.— Эпĕ!— тет,— эпĕ паянах ку статьяна вырăсла куçаратăп, паянах...

Кăмака пек арăмĕ хĕрсе каять (хурăн вутти хурса сунтарнă тейĕн), упăшкине тытса хĕнес пек ятлать:

— Карçынккана пăрахмалли хут купи, кăмакана, вута пемелли тĕрке... Эсĕ пур дискертаци тесе çӳрен. Вунă çул çыратăн. Дискертац мĕнне ху та пĕлместĕн. Усси виçĕ пуслăх çук. Ут килелле, ут! Утмасан ĕнсӳне çапса хуçатăп. Тухса ут ухмаха тухиччен. Тухсан та килте тух, халăх ан култăр. Чуп килелле, чуп хытăрах, чуп!..

... Наум Наумович килте сивĕ яшка çикелерĕ те ĕçлеме ларчĕ. Яланхи пекех портфелĕнчи хучĕсене сĕтел çине кăларса купаларĕ. Арчаран виçĕ тĕслĕ кăранташ илчĕ: хура, хĕрлĕ, симĕс кăранташсем. Шĕпĕн хăйпе хăй калаçать·

— Тĕлĕнсех каятăп. Манăн критиксем çинчен çырнă статьяна хаçат редакторĕ кондицие çитерейместĕн, тет, пичетлеме май çук, тет. Анчах вăл мана тытса чараймĕ;

хаçатра пичетлемеççĕ пулсан, «Ялав» пур. Унта та пичетлемесен, «Тăван Атăл» пур. Альманах та кутăнлашсан, тытатăп та вырăсла куçаратăп. Пичетлесе кăларсан, çурçĕрте те, кăнтăрта та тĕлĕнччĕр, чăваш критикĕсем чĕтресе тăччăр. Пултарать Клыков, пултарать!..

Шĕпĕн кĕтеселле кайрĕ те виç-тăват кĕнеке туртса кăларчĕ. Пурте словарьсем. Тытăнчĕ хайхискер тем шырама. Пĕр сăмахĕ айне хура кăранташпа, теприсем айне хĕрлипе, симĕссипе паллă тăвать. Кăранташ вĕçне пĕрмаях чĕлхипе йĕпетет. Çырать, çырать, пуçне çеклемесĕр çырать...

Клыков хăй умне чăваш критикĕсен ячĕсене çырса хучĕ. Ытлашши шутласа тăмасăрах пĕрне догматик, иккĕмĕшне — ревизионист терĕ. Ыттисем валли те шыранă сăмахсене тупрĕ: идеалист, оппортунист, эклектик, махист, юмист...

«Критиксен критикĕ», çак сăмахсене çырсан, шĕвĕр пӳрнине çӳлелле тăратрĕ те хăйĕнчен хăй:— Тата кам юлчĕ-ха?— тесе ыйтрĕ. Çавăнтах ответ пачĕ:— Никам та юлман. Анчах статьяна кондицие çитерес тесен, мĕн тумалла-ха?— терĕ. Шĕпĕн шухăшларĕ-шухăшларĕ те куçлăхне редиска тĕслĕ сăмси çинчен илсе çаваркаласа пăхрĕ, шăршларĕ. Унтан редактор тиркенĕ статьяна аллине тытрĕ, ана та шăршласа пăхрĕ. «Мĕн вăл кондици?» текелесе çырма тытăнчĕ: «К. критик реализмпа натурализма пăтраштарать», «Х. критик идеализм лачакинче тапаçланать, унтан ниепле те тухаймасть», «С. критик ревизионизм урапи çинче ларса пырать» «Я. критик параппан çапма çеç пултарать», «ыттисем дуализм, мистицизм, символизм, пессимизм ялавне мухтаççĕ...»

Наум Наумович арăмĕ, тахçанах çывăрса гăраннăскер, упăшки туртса тултарнă табак тĕтĕмĕпе чыхăнса кайса, вырăн çине тăрса ларчĕ те:

— Эй, ачам, эй, Наум! Эсĕ çаплах хутпа тăрмашатăн иккен!— терĕ. Çавăнтах упăшкине ятлама тытăнчĕ:— Эсĕ çĕр каçа мĕн чухлĕ электрицă пĕтертĕн пулĕ. Çĕр тенкĕлĕх те çунтартăн пулĕ. Тур пул, парахсам, ӳкĕте кĕрсем! Вунă çул ĕнтĕ ир те, каç та калап, эсĕ çаплах ман сăмаха хăлхана та чикместĕн. Малашне мĕнле пуранăпăр-ши?.. Манăн та уйрăлса каймаллах пулать-ши?..

— Чим-ха, Сăпани, чим-ха, тепĕр сăмах тупам-ха. Леш мĕнле сăмахчĕ-ха вăл? Вăт мантăм, никак аса илейместĕп...

— Пăрах тетĕп, пăрах! Лампăна халех сӳнтер, халех!

— Эсӗ ялан куршанкӑ пек ҫыпҫӑнатӑн? Редакцинче те намӑс кӑтартрӑн, килте те тарӑхтаратӑн. Курмастӑн-и-мӗн? Эпӗ кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлетӗп, тул ҫутӑличчен чура пек асапланса ҫыратӑп... Эсӗ арӑм мар, манӑн таланта ним-мӗн вырӑнне те хумастӑн. Тахҫанах тухса кай тетӗп — каймастӑн...

Наум арӑмӗ ҫаплах чарӑнмасть, чарӑнма мар пуш-шех хӗрсе кайрӗ (юман вутти хутнӑ тейӗн!). Ним тӑвай-маннипе кӗтесрен йӗтӗр илчӗ те упӑшкине ӗнсе урлӑ тыттарчӗ.

— Эсӗ апла-и!— тарӑхса кайрӗ Шӗпӗн,— эсӗ, йӗтӗр-пе-и? Апла пулсан, эпӗ те...

Наум Наумович тӳссе лараймарӗ, ура ҫине сиксе тӑчӗ, Пичет ҫуртӗнчи пекех урса кайрӗ. Урай варрине тухрӗ те пухури пек тавлашма, хӑлаҫланма пуҫларӗ. Тем-шӗн портфельне ярса тытрӗ, хул хушшине хӗстерчӗ.

— Эсӗ те мана ӑнланасшӑн мар, эсӗ те мана выҫ-тарса вӗлересшӗн! Эсӗ те, эсӗ те...—тапӑртатрӗ Клыков.

Хӗремесленсе ҫухӑрнӑ, сикнӗ хыҫҫӑн Шӗпӗн порт-фельне ҫӗклесе ҫапрӗ, хут тӗркине вӗҫтерсе ячӗ. Пӗр хут листи ҫӳпӗ шӑтӑкне, тепри лахханри мӑшкӑлтӑк шыва, виҫҫӗмӗшӗ юлашки яшка ҫине пырса ӳкрӗ.

— Пӗтертӗн, пӗтертӗн!— кӑшкӑрать Шӗпен.— Виҫӗ кун ҫырнӑ статьяна пӗтертӗн, виҫҫӗр тенкӗлӗх статьяна мӑшкӑлтӑк шыва пӑрахтартӑн! Арӑм мар эсӗ, вир пӑтти, тӑшман!.. Э-э-э! Хайхи сӑмаха та аса илтӗм, эсӗ, эсӗ — солипсист!.. Вупӑр карчӑкки!..

Упӑшкипе арӑмӗ, Кӑмакапа Шӗпӗн, урай варрине тытӑҫса ӳкрӗҫ. Ҫӗр ҫӗмӗреҫҫӗ, тӗтӗм кӑлараҫҫӗ, ача-пӑча пек, тӗкӗнтирӗк тӑваҫҫӗ...

— Ма ҫивӗтрен туртатӑн?— ҫухӑрать арӑмӗ.

— Ма хӑлхаран ҫыртатӑн?— кӑшкӑрать упӑшки.

Тахӑшӗ туртать, тахӑшӗ ҫыртать — пӗлме ҫук. Иккӗ-шӗ те ҫухӑраҫҫӗ, иккӗшӗ те йӗреҫҫӗ, такамран пулӑшу ыйтаҫҫӗ.

Ҫапах та арӑмӗ ҫӗнтерчӗ-ҫӗнтерчех: Шӗпӗне ӗнсерен парса сивӗ коридора хӑваласа кӑларчӗ. Юлашкинчен:— Пирӗн Шӗпӗн ухмаха тухрӗ, тухрӗ, тухрӗ!— тесе алӑка питӗрсе шаккарӗ.

Наум Наумович Клыков ҫав ирхине хунӗшӗ ялне тар-чӗ. Унта унӑн пӗчӗкҫӗ пӳрт пур. «Критиксен критикӗ» ҫав пӳртре пурӑнса статьясем ҫырать. Ик-виҫ эрне пурӑн-сан, хӑй ӳсӗр пуҫпа е урӑллах пуҫарнӑ шӑв-шав иртсен,

Шупашкара таврӑнать. Редакцисенче ҫӳрет, кӑткӑ йӑви пек хускатать...

Шеремет Шӗпӗнӗ хунӗ кассине мӗнле ҫитӗ-ши? Ун ҫине пӑхатӑн та хӗрхеннипе куҫҫуль тухать. Наумӑн пичӗ-куҫӗ тӑртанса кайнӑ, сӑмси ҫунаттисем чӗрӗлсе пӗтнӗ. Пӗр хӑлхи аран-аран тирӗ ҫинче ҫакӑнса тӑрать. Мӑйне алшӑлли ҫыхса янӑ. Пӗр аллинче туя, тепринче — ҫӗтӗк портфель.

Юлташсем! Ырӑ ҫынсем! Пулӑшсамӑр Клыкова, вӗрентсемӗр! Ҫамрӑк чухне суха тума, каскалама вӗренеймен пулсан, халӗ ҫӑпата тума та пулин вӗрентсемӗр! «Критиксен критикне» тӗрӗс ҫул ҫине кӑларсамӑр, арӑмӗн патаккинчен, чукмар пек чышкинчен хӑтарсамӑр!

Кашни ҫыннӑн пурӑнмалла-ҫке, Клыков та пурӑнтӑр!

*1960*

## ЕХРЕМ ХУҪА

Сентябрӗн *-мӗшӗнче каҫ кӳлӗмпе Шупашкарти кивӗ больница умне васкавлӑ пулӑшу машини ҫитсе тӑчӗ. Ҫӑмӑл автомашинӑран темле ҫынна кӑларчӗҫ те, медицинӑ сестрисем больницӑна хуллен ҫавӑтса кӗчӗҫ. Васкавла пулӑшу машини ҫавӑнтах каялла вӗҫтерчӗ, ун хыҫҫӑн тусан ҫеҫ мӑкӑрланса юлчӗ.

Кӑштах вӑхӑт иртсен шурӑ халатлӑ сестрасем чирлӗ ҫынна виҫҫӗмӗш номерлӑ палатӑна, стена ҫумӗнчи кровать ҫине, ҫӗнӗ простынь сарса, таса ҫытар хурса, вӑраххӑн вырттарчӗҫ. Вӑтам пӳллӗ патвар ҫын кровать ҫине, пӗчӗк ача сӑпкана кӗрсе выртнӑ пек, канлӗн вырнаҫрӗ. Шап-шурӑ минтер ҫинче унӑн сарӑ ҫӳҫлӗ пуҫӗ ҫулҫисене тирпейлӗн иртсе тасатнӑ купӑста пуҫӗ пек курӑнать. Ҫӳҫне боксла кастарнӑ. Куҫ харшийӗ пиҫен мамӑкӗ тӗслӗ, ҫил ҫаврӑнса килсенех вӗҫсе каяс пек курӑнать. Куҫӗсем кӑвак чечек пек. Мӑч-мӑч хупӑнса, мӑч-мӑч уҫӑлса илеҫҫӗ. Купӑста пуҫлӑ этемӗн калаҫнӑ чух шӑлӗсем шӑкӑриех курӑнса каяҫҫӗ,— кашта ҫине ларса тухнӑ чӑхсем пек. Пӗр шӑлӗ ылтӑн. Ку вара пуринчен малтан курӑнса тӑрать. «Ылтӑн — ылтӑнах мар-и? Ман хуҫа, куратӑр-и, мӗнле пуян, хальхи уксапа вун тенкӗ тӳлесе ылтӑн шӑл ларттарчӗ», тенӗ пек туйӑнать. Чӑнах та, шӑл хуҫи такам, темле ҫын, анчах ылтӑн шӑлӗ мухтанать те мухтанать... ҫӑварӗ уҫӑлнӑ-уҫӑлманах: «Эпӗ, эпӗ, эпӗ...», тесе сикет.

Ылтăн шăллă çын сылтăм аллине хăлхи çине хурса выртрĕ. Палатăри çынсенчен пĕри, çамрăкраххи, вунпилĕк çулхи Сантăр, купăста пуç çине пăхрĕ те: «Ку çын мĕншĕн-ши шĕвĕр пӳрнине хăлхи шăтăкне чикнĕ?», тесе шухăшларĕ. Унтан вăл тĕлĕннипе чӳрече еннелле çаврăнса тăчĕ, урамалла пăхма тытăнчĕ. Сантăр шухăша кайрĕ. «Курнă çын пек туйăнать. Анчах ăна ăçта курнă-ши? Хăçан-ши? Чим-ха, чим, çулла Атăл хĕрринче, шыва кĕнĕ чух, çак çын мар-и пире чутах тытса хĕнеччĕ?». Сантăр купăста пуç çине тепĕр хут тимлĕнтерех пăхрĕ те аса илчĕ: «Çавă, çавă!..»

... Пĕррехинче, çуллахи ăшă кун, Сантăр хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле, Шупашкар пристанĕ патĕнчен çӳлелле иртсе, шыва кĕме чарăннă. Атăл хĕрринче, шывран иккӳ утăмра, такăшĕ вутă купаласа хунă (Атăлта тытнă вутă!). Вутти пĕр грузовике кĕрет пуле. Сантăрсем кĕпе-йĕмĕсене хывнă та вутă çине хурса шыва сикнĕ. Харсăр ачасем, тавлашмалла ишсе, Атăл варринех çитнĕ. Çыран хĕрринчен пуçĕсем кăна курăннă. Ишнĕ май кăштах шыв сирпĕнсе илнĕ. Туран пăрахут килнине курсан çеç ачасем каялла, çыран еннелле, ишме тытăннă, часах кимĕсем ларнă çĕре таврăннă.

Çырана тухсан, Сантăр вутă купи патне пынă та, тĕлĕнсех кайнă: кĕпе-йĕм çук! Ăçта-ха вăл?..

— Йĕп тес, йĕп мар, ăçта кайса кĕнĕ-ха кĕпесем?— тĕлĕннĕ Сантăр юлташĕсем, Кĕркурипе Ваççук.

— Киле мĕнле çитепĕр!— хăраса ӳкнĕ ачасем.

— Трусик вĕççĕн хула витĕр мĕнле тухас?

— Намăса ăçта чикес?

— Мĕн тăвас-ши?

Хуйха кайнă ачасем пĕр кимĕ çинче темскер хатланса ларакан патвар çын патне пырса ыйтнă:

— Пичче, эсир пирĕн кĕпе-йĕме кам та пулин илсе кайнине курман-и?— тенĕ.

— Эпĕ акă «курманни» парам сире!— çухăрса янă лешĕ.— Пыйтăллă кĕпĕрсене ман вутă çине хума сире кам хушнă! Марш, марш, кунтан! Халех сирĕлĕр, халех!..

Хуçи кимĕ çинчен сиксе тухнă та ачасем патне кĕсменпе хăмсарса пынă, унтан хăвалама тытăннă, кашнинех кĕсмен вĕçĕпе урисенчен тĕке-тĕке илнĕ. Сантарăн икĕ ури те пакăлчăк тĕлĕнчен шăйăрăлса кайнă, юн юхма тытăннă...

Чӳречерен пăхса тăракан Сантăр халĕ тĕлĕне-тĕлĕне хăйĕнчен тата тепĕр хут ыйтрĕ:

— Çавах-ши е урăх çын-ши?—шухăшларĕ-шухăшларĕ те лешин сылтăм хăлхи çуккине курсан, ним иккĕленмесĕрех:— Çав çынах ку! Вăрă!..— терĕ.

Тулта, чӳрече умĕнче, кĕркунне çывхарнине сиснĕ йывăççен сарă çулçисем сулхăн çилпе хуллен-хуллен силленсе тăраççĕ. Хăшĕ-пĕрисем ĕнтĕ çĕре ӳкнĕ, тăпра çинче ылтăн тенкĕсем пек куранса выртаççĕ.

Вăрман хыçне анса ларма хатĕрленнĕ хĕвелĕн юлашки пайăркисем, йывăç турачĕсем хушшипе йăпшăнса тухса, палатăна пырса кĕреççĕ. Купăста пуçăн сăмси шăтăкне шыраса тупса кăтăклаççĕ.

— Апчху! Сывва пултăр!— ӳсĕрсе каларĕ купăста пуç хăйне хăй.— Апчху!.. Ӳсĕрнипе вăл хăлхи çинчен аллине илчĕ. Хăлхи çук: кăкăнченех татнă, такам çавапа касса ывăтнă, тейĕн. Аллинче тăвата пӳрне çеç. Шĕвĕр пӳрни çук. «Ăна вăл те вăрçă вăхăтĕнче фронтра тăшманпа çапăçса татнă-ха, те ача чухне асăрхамасăр кусарпа касса ыраттарнă та хăрса ӳкнĕ,— пĕлме çук, тем пирки вăл шĕвĕр пӳрнесĕр тăрса юлнă!..»— шухăшлатăн ăна курсан.

Ирхине вунă сехетре, палатăна врач пырса кĕчĕ, чирлĕ çынсене пăхма тытăнчĕ, чере мĕнле тапнине иглерĕ, ал тымарĕсене тытса пăхрĕ. Пуринпе те калаçрĕ, ăша самах каласа хаваслантарчĕ.

— Сантăр паян киле каять. Сывалса çитрĕн ĕнтĕ, шкула çӳреме те пултаратăн,— пĕлтерчĕ врач

— Манăн та тухма вăхăт. Выртса ывăнтăм, йалăхтарчĕ,— васкаса каларĕ тепри, аллăран иртнĕ, мăнаçлана пуçланă çын.

— Сире ыран кăларăпăр. Паян анализсем илсе килмен,— ăнлантарчĕ врач.

Унтан врач купăста пуç патне пычĕ, пукан çине ларчĕ, «чир историне» çырма тытăнчĕ.

— Хушаматăр?— ыйтрĕ врач.

— Сосулькин, Ростислав Михайлович,— терĕ чирлĕ çын.

— Миçе çулта?

— Вăтăр пилĕкре.

— Мĕн ыратать?

— Кăкăр.

— Хăçантанпа?

— Тунтикунтанпа.

— Мĕнле ыратма пуçларĕ?

— Хам та пĕлместĕп...

— Тунтикун тенĕрен... вырсарникун ĕçмен-и, ӳсĕрпе нӳрĕ çĕр çинче выртса çывăрман-и?..

Сосулькин ним те шарламарĕ: айăпа кĕнĕ ача пек çĕрелле пăхса тăчĕ. Врач ăна кĕпине хывтарчĕ. Кĕлетки тĕреклĕ, ӳчĕ-тирĕ питĕ.

— Эх, атьсемĕр!— тĕлĕнчĕ врач, чирлĕ çынпăн ӳттирне курсан. Сосулькин кăкăрĕ, çурăмĕ, хулĕсем çинче тем те пĕр пур: пĕтĕмпех тĕрлесе пĕтернĕ. Çамла кăкăрĕ çинче кăнтăрти йывăççем «ашкăрса» кайнă. Весем хушшинче шыв юхса выртать. Шывĕ çинче парăс. Парăс кимминче хĕрпе каччă ыталанса ларaççĕ. Парăс пирĕ çине: *«Славик+Люся»* тата *«Любовь бессмертна»* тесе çырнă. Çурăмĕпе хулĕсем çинче вара мĕн кăна çук-ши? Унти ӳкерчĕксем çинчен калас пулсан, пĕр кунта та каласа пĕтерес çук; çырас пулсан, çĕр листа хут та çитеймĕ. Тепĕр тесен, вĕсем çинчен калама, çырма аслă-пуçлă çын нихçан та килĕшмĕ: каласан — çăвар тути пĕтĕ; çырсан — этем ывăл-хĕрĕ çилленĕ! Эппин, çырса вахата сая ярас мар, ырă çынсем хушшинче намăс курас мар!..

Палатăран тухса каяс умĕн врач Сосулькина вăл мĕнпе чирленине пĕлтерчĕ:

— Воспаление легких, ӳпке шыçнă сирĕн. Шанса пăсăлнă...— терĕ.

Обход хыççăн, нумай вăхăт иртсен, купăста пуçлă, хăрах хăлхаллă, ылтăн шăллă, татăк пӳрнеллĕ этем эхлете-эхлете вырăн çине тăрса ларчĕ, чейник патне пырса кружкине шыв тултарчĕ, шывне пĕрре сывламасар ĕçсе ячĕ (ăшĕнче пушар тейĕн!). Унтан вăл палатăри çынсем çине сиввĕн пăхса илчĕ те:

— Кунта çĕрĕк интеллигенци çук-и?— тесе ыйтрĕ темле хăрăлтатакан сасăпа.

Чирлĕ çынсем йăшăлт та тумарĕç, Сосулькина хирĕç пĕр сăмах та шарламарĕç. Купăста пуç урлă-пирлĕ пăхрĕ те ылтăн шăлне йăлтăртаттарса тепĕр хут ыйтрĕ:

— Ма чĕнместĕр? Вилсе пĕтрĕр-и-мĕн? Çĕрĕк интеллигенци çук-и тетĕп.

Каллех шарлакан-тăвакан пулмарĕ. Пĕри, кĕтесре выртаканĕ, ӳсĕре-ӳсĕре тепĕр майлă çаврăнса выртрĕ, вăраммăн сывларĕ те:

— Юлташ, эсĕ ăнланмалла мар калаçатăн,— терĕ.

— Ăнланмастăн пулсан, шăлна çыртса выртма пултаратăн. Эпĕ çĕрĕк интеллигенципе калаçасшăн... Çĕрĕк кисем ăслă пулаканччĕ...

— Ҫирлĕ-кирлĕ мара каласма парахасчĕ,— хутшăнчĕ палатăри ҫынсенчен тепри.

— Акă, шăпах ҫĕрĕк интеллигенцие тĕл пултăм. Эсир иксĕр те профессор пулас. Пăхсах паллă...— хирĕҫлеме ĕлкĕрчĕ Сосулькин. Унтан вара профессорсем пирки тем те пĕр каласа тултарчĕ, такама та асăнчĕ: «Егоров, Германов, Любимов, Михайлов, Петров...», терĕ. Анчах купăста пуҫа ку чухне те итлекен-тăвакан пулмарĕ. Купăста вара одеялпа витĕнчĕ те, кăштах йашăлтаткаласа выртнă хыҫҫăн, харлаттарса ҫывăрма тытăнчĕ. Вал харлаттарнипе пĕтĕм палатă кисренсе тарать, чӳречери кантăк чĕтрет. «Эх, этем! Ҫав тери харлаттармаллăх ыйхи ăҫтан тухать-ши? Пырĕ мĕнле тӳсет-ши? Самси мĕнле чăтать-ши? Хăлхи мĕнле ҫурăлса каймасть-ши?»,— тесе тĕлĕнчĕ кашниех.

* * *

Темиҫе сехетрен, хайхискер, купăста пуҫ вăранчĕ, ылтăн шăлне вылятса, куҫне-пуҫне чармакласа, пĕрре ҫӳлелле, тепре чӳрече еннелле пăхрĕ:

— Эх, коммунизм хăҫан пулать-ши?— тере вăл, унтан анасласа каллех ыйтрĕ:— Пулать пулсан, чатрах пултăрччĕ... Калăр-ха, калăр!.. Чатрах пулать-и, чатрах мар-и?..— Купăста тепре анасларĕ те кровать ҫинче кĕнеке вуласа выртакан ҫын еннелле пăхрĕ:— Эсе, профессор, мĕн калама пултаратăн? Хăҫан пулать теҫҫе?

— Эпĕ профессор мар!— таварчĕ кĕнеке вулакан ҫын, кĕнекине вулама чарăнса (кунта ăна «Иван Иванович» тесе чĕнеҫҫĕ).

— Ну, эппин писатель.

— Писатель те мар. Эпĕ мĕн ачаранпах рабочи пулса ĕҫлетĕп.

— Хальхи ҫынсене кам пĕлет. Нумайăшсем профессор пек те, писатель пек те туйăнаҫҫĕ. Пăхăсăн, хăй рабочи кăна! Ҫапах та кĕнекепе ҫӳрет. Акă эсĕ, чирлĕ пулин те, кĕнеке вуласа выртатăн. Унта коммунизм хăҫан пулать тесе ҫыраҫҫĕ?

— Эпĕ Тургеневăн «Ашшĕсемпе ывăлĕсем» романне вулатăп. Унта, юлташăм, коммунизм ҫинчен пер сăмах та шарламан.

— Ну, эппин хаҫатсенче мĕн ҫыраҫҫĕ, коммунизм хăҫан пулать теҫҫĕ? Чатрах-и чатрах мар-и?

— Коммунизм вăл, юлташăм, хăй тĕллĕнех пулмасть, ăна тăвас пулать. Тумасан, вăл хăй тĕллĕн пулмасть!

— Ха, профессор темерĕн-и! Тăвас пулать, тет! Вĕрентесшĕн! Пăх та кур ăна! — хирĕçлерĕ купăста пуç.

— Сана, — ыйтрĕ Иван Иванович, — коммунизм мĕн пирки халех, туса çитермесĕрех, кирлĕ пулчĕ?

— Мана-и? Мана, ачам, коммунизм, тĕрĕссипе калас-тăк, чун пекех кирлĕ. Ăнлантăн-и?.. Чун пекех...

... Коммунизм пуласса кĕтекен этем пакăлтатса кайрĕ. Ылтăн шăлĕ йăлт-ялт курăнса тăрать, чĕлхи ĕрĕхтерет кăна... «Коммунизм пулсан, эпир çакăн пек пурăнатпăр-и? Ун чухне пурнăç çакăн пек çеç пулать-и? Çук, çук, пĕрре те кун пек пулас çук! Пурте пулать, пурте! Ăнлантăн-и, хисеплĕ профессор! Ĕçлес тетĕн — ĕçле; ĕçлес килмерĕ — хăвăн ирĕк, пăрах та ларттара пар... Мĕн кирлĕ — ил те кай, аллу ĕлкĕртĕр кăна! Çиес килет — хырăму çурăлса кайиччен çи; ĕçес килет — ĕç, мĕнле эрех аллуна лекет, çавна ĕç, пехле. Ун чухне денатурат ĕçсе хальхи пек вар-хырăмна пăсмăн. Асфальт çинче выртса ӳпкӳне шыçтармăн... Пĕр сăмахпа каласан, ху — хуçа, Ехрем хуçа. Ăнлантăн-и, профессор тусăм! Кашниех Ехрем...»

Иван Иванович кĕнекине сĕтел çине хучĕ те:

— Эх, Ехрем!.. — терĕ тарăхса, — эх, хуçа! Сана халех Атăла тытса пăрахмалла... халех... Мĕншĕн тесен, эсĕ хырăмна улпут пек каçăртса çӳресшĕн!

— Мана-и? Коммунизм пуласса кĕтнĕшĕн çавăн пек калатăн-и? Эсĕ кам? Эсĕ — рабочи мар, эсĕ, паçарах каларăм, çĕрĕк интеллигенци. Вăт кам эсĕ!.. — тарăхса çитрĕ купăста пуç.

Ехрем хуçапа «профессор» тавлашнă вăхăтра коридорта ура сасси илтĕнсе кайрĕ. Палатă алăкé вăраххан уçăлчĕ те шурă халатлă хĕрача курăнчĕ.

— Вун пĕр сехет иртнĕ. Эсир çаплах çывăрмастăр. Больницăра ун пек юрамасть. Халех шăпланáр та канлĕн çывăрăр. Ырă каç пултăр, чипер тĕлĕксем курăр.

Сарă çӳçлĕ, уйăх-хĕвел питлĕ сестра-пике печĕкçĕ пӳрнипе штепсель çине пусрĕ те, электричество лампи пăч сӳнсе ларчĕ. Палатă вăхăтлăха шăпланчĕ, Ехрем хуçа та «профессорпа» калаçма пăрахрĕ. Пĕри сылтăм енне, тепри сулахай енне çаврăнса выртрĕ.

— Коммунизма кĕтнĕшĕн манпа вăрçать, — терĕ Ехрем хуçа хăйне хăй. Пăртак ахлаткаласа, çавранкаласа выртсан, хуçа харлаттарса çывăрма тытăнчĕ, тĕлĕк тĕнчине путрĕ... Тĕлĕкĕсем Сосулькинăн тĕлĕнмелле: унăн пурнăçне айĕн-çийĕн çавăрттараççĕ, чунне хăратаççĕ, сă-

сăлне вĕçтереççĕ. Ах, хăрушă-çке тĕлĕкĕсем, хăрушă-çке! Тепри пулсан, хăранипе таçта çити тармалла...

Иван Иванович шухăша кайнипе çывăраймасть. Унăн пуçне шухăш хыççăн шухăш килсе тăрать. «Ака мĕнле çынсем тĕл пулаççĕ пирĕн хушăра!— тĕлĕнет рабочи.— Аçта пурăнса ку вăхăта çитнĕ-ши вăл? Мĕн ĕçлесе пурăннă-ши? Ĕçленĕ-ши хăçан та пулин е ĕçлемен-ши?.. Коммунизма кахалла, харам пырла ăнланать, мур илесшĕ! Пирĕншĕн коммунизм — мĕнешкел ырă тĕнче, паха та илемлĕ, чаплă пуласлăх! Тем чухлĕ пурлăх. Техника нихçанхинчен нумай. Машинă, машинă! Мĕнли кăна çук! Чи лайăххисем, чи хитрисем, ылтăнран, кĕмĕлтен, хурçăран, тимĕртен тунăскерсем... Çыннисем вара тĕлĕнмелле маттурскерсем! Гагарин пек, Титов пек çынсем! Пурте ĕçлеççĕ, ĕçленипе савăнаççĕ. «Пирĕншĕн ĕç — чун савăнтармăш, ĕçлемесĕр мĕнле пурăнас, ĕç этем организмне апат пекех кирлĕ. Çын сывлăшсăр пурăнайман пекех ĕçсĕр те пурăнаймасть», теççĕ коммунарсем. Кашниех савăнса ĕçлет, обществăна мĕн те пулин туса парать, производствăра тăрăшать. Вĕсене ĕçлемесĕр пуранма кичем, йывăр. Ĕç — этем илемĕ, этем сывлăхĕ. Коммунизм çыннисем çĕр аллăшар çул пурăнаççĕ. Чирлекен-тăвакансене ĕçпе, физкультурăпа сыватаççĕ. Коммунарсем ĕç хыççăн кĕнекесем вулаççĕ, тĕрлĕ вăйăсем выляççĕ, диспутсенче пулаççĕ, пурнăça тата лайăхрах тăвасси çинчен сĕнӳ хыççăн сĕнӳ параççĕ. Марс çине кайса килнисем çамрăксене марсианецсем çинчен каласа параççĕ, фото ӳкерчĕкĕсем кăтартаççĕ. Хĕвеллĕ садсенче панулмисем, çырласем. Уйсенче çĕнĕ йышши тырăсем. Улăмĕсем хăмăш пек, кашни хăмăш çинче çич-сакăр, вунă пучах... Хăшĕсем радио итлеççĕ, телевизорпа таçти-таçти планетă çыннисене кураççĕ... Эпĕ ĕнтĕ аллă пилĕк çулта. Тен, коммунизма пурăнса çитеймĕп, анчах ывăлăмсемпе хĕрĕмсем коммунизмра пурăнаççех. Çапах та эпĕ хамшăн хурланмăп, мĕншĕн тесен манăн ĕçĕм, пирĕн ĕмĕрти ытти совет çыннисен ĕçĕ-хĕлĕ пекех, коммунизма куллен кун çывхартать, ăна пурнăça кĕртсе пырать. Пирĕн ĕмĕрте коммунизмшăн тăрăшнинчен чаплăраххи урăх ним те çук. Кам коммунизмшăн ĕçлет, вăл чăннипех те пурăнать, хăйшĕн те, обществăшăн та пурăнать. Сывă пултăр коммунизм тăвакан этем!»

... Ехрем хуçа пек пурăнма ĕмĕтленекен Сосулькин хăйĕн тĕлĕкĕнче лĕмсĕртетсе пырать, тĕлĕнмелле çынсене курать.

— Эсир камсем?— ыйтать вăл кăтра пуçне кăтăрт-кăтăрт хыçса («мĕнле-ха капла,— шухăшларĕ Сосулькин,— манăн çӳç сарăччĕ, пачах кăтра марччĕ, анчах хале кăтраланса кайнă. Э-э-э! асанне Ехрем хуçа çӳçе шут-сăр кăтра пулнă, нимле тура та илеймен, тетчĕ. Эпĕ чанахах та хуçа пулса тăтăм-ши?»— терĕ).

Ехрем хуçана хирĕç пыракансем пĕрин хыççăн тепри çапла каласа иртеççĕ:

— Эпир — коммунизма хамăр алăпа, ăспа тунă, коммунизма пурăнса çитнĕ çынсем.

Коммунизм çыннисем пурте çап-çамрăк сăнлă, илемлĕ.

Сосулькин тĕлĕннипе вăранса кайрĕ, рабочие те вăратма шут тытрĕ.

— Профессор, эсĕ çывăратăн-и, çывăрмастăн-и? Сана тĕлĕк каласа парам, тăр-ха, тăр!..

Иван Иванович чĕнмерĕ. Сосулькин анаслакаласа выртсан каллех харлаттарма тытăнчĕ. «Коммунизм хăçан пулать-ши?»— шухăшларĕ вăл куçĕ хупăннă вăхăтра.

Ехрем хуçа тĕлĕкре каллех хайхи илемлĕ çынсене курчĕ.

— А эпĕ,— тет хăй,— пĕлессĕр килет пулсан, калам: эпĕ — Ростислав Михайлович Сосулькин, арăм калана пек каласан — Славик, ĕçкĕ-çикĕри пек каласан, эпĕ — Полбанкин, аякри пек каласан — Рябă-Курябă,— пĕлтерет Ехрем хуçа.— Эпĕ, атьсемĕр, сирĕн патăра тахçанах çитесшĕнччĕ, халĕ ĕнтĕ çитрĕм-çитрĕмех. Мана, шеремете, çынсем картмаççĕ, хисеплемеççĕ, тăрантармаççĕ, тумлантармаççĕ. Ĕçме те чараççĕ. Хулиган теççĕ...

Харлаттарса çывăракан Сосулькин тĕлĕкре макăра-макăра хăйĕн инкекĕсем çинчен каласа парать.

— Леш тĕнчере чутах вилеттĕм. Пĕррехинче Сĕнтĕрвăрринче кивĕ чиркӳ патĕнче склеп уçрăмăр. Склепа революциччен темле пуян çынна пытарнă. Çи-пӳçе пустав. Çумĕнче тем чухлĕ пурлăх. Ылтăн-кĕмĕл. Ик кепçеллĕ пăшалĕ те çавăнтах. Уçрăмăр. Кăмакари пек тĕттĕм. Кĕме хăратпăр. Кам шиксĕр, çав кĕтĕр, тетпĕр. Чĕлхесĕр Тăкăрие кĕртсе ятăмăр. Тăкăри склепе кĕнĕ-кĕмен персе анчĕ. Тапаланса выртать. Эх, атьсемĕр, склепра сывлаш пулман иккен! Шуйттан çурисем пек хăраса тартăмăр. Чиркĕвĕн тимĕр карти урлă каçнă чухне сулахай хăлхам татăлса юлнă. Ирччен юн юхрĕ. Виçĕ кунтан çеç хăлхана шыраса тупрăм. Тимĕр шалча çине тăрăннă та кăмпа евĕр сарăхса кайнă. Курсан ача пек макăрса ятăм...

Курябă-Рябă хăлхи ыратнипе вăранса кайрĕ. Каллех

«профессора» вăратасшăн пулчĕ. Анчах хăранипе пуç урлă витĕнчĕ те, пашкаса выртсан-выртсан, татах тĕлленме тытăнчĕ.

...Пĕлтĕрхи кĕркунне Рябăсем Шашкар ялне хур вăрлама кайнă. Халĕ вăл тусĕсемпе вăрра çӳрет. Аташать. Акă вéсем Атăл тăрăх Шашкар тĕлне моторкăпа кéрлеттерсе çитрĕç. Çырана тухрĕç. Унта пĕр старик сулă хураллать. Çав вăхăтрах тата темиçе карта хур пăхать. Шашкар колхозĕн хурĕсем.

— Эпĕ — пулăçă,— паллаштарать Полбанкин.

— Аван, аван!— тет ырă кăмăллă старик.— Шашкар тĕлне пулăçсем таçтан та килеççĕ. Туран та, анатран та. Пулли вара нĕрсĕр нумай. Темли те пур, ылтáн пулă кăна çук...

— Нумай пулсан, тытăпăр,— савăнать Рябà.

«Тытăпăр та чике тăршшĕ лартăпăр...» шухăшлать Курябă. Çакăн чухне Рябă-Курябăсем сулă хуралçине чăнахах та улталанă. Юриех ĕçтерсе ӳсĕртнĕ. Старик вара çавăнтах каснă йывăç пек тӳнсе аннă. Пăхатыр пек çывăрнă, тул çутăличчен тăрайман. Çав каçхине хур картинчен вун çичĕ хур çухалнă. «Пулăçсем» моторкă çине ларнă та анаталла çил пек вĕçтернĕ.

Шашкар старикки виç кунтан Шупашкара персе çитнĕ. Симĕс пасара пырса тухнă. Хуралçă пăхать те аллисене шарт çапать: Полбанкин хур сутса тăрать. Мантăр та çуллă хурсем. Шашкар хурĕсем пулмасан, кам хурĕсем пулччăр?

— Мĕн чул тăраççĕ ку хурсем?— ыйтать ватă.

— Вуншар тенкĕ.

— Аван, аван...— текелет шар курнă колхозник.

Рябă-Курябă сисрĕ: ку старик хур хакне ахаль ыйтмасть! Рябă аяккалла ларттара пачĕ. Курябă вырăнне виç-тăват йĕкĕт пырса тăчĕ. Хăшин хăлхи çук. Теприн сăмса çунатти чĕрĕк. Тути катăк. Янаххи чалăш. Тин çеç темле хаяр кĕрешӳ-çапăçуран таврăннă çынсем пек...

Шашкар çынни Рябàна куçран çухатмарè. Йĕрлесе кайрĕ. Урамран урама, пĕр кил картинчен тепĕр кил картине кĕрсе пыраççĕ хайхискерсем. Герцен урамéнче пĕр çĕрĕк пӳрт патне çитсен, Курябă чарăнчĕ те:

— Эсĕ, ват супнă, мĕн пирки мана йĕрлетĕн? Çаратас теместĕн-и?— тесе çухăрса ячĕ.

— Мĕншĕн пирĕн колхоз хурĕсене вăрласа килтĕн?— кăшкăрчĕ старик те.— Халех милицие илсе каятăп!..

— Эсӗ апла иккен! Милицине илсе каясшӑн, акӑ эпӗ хам: мана ҫарататать, вӑрӑ, тесе кӑшкӑратӑп. Ним те тӑваймӑн...— чышкине чӑмӑртарӗ Полбанкин.

Сосулькин аллине ҫӗклерӗ те ҫапма тӑчӗ. Старик ним тӑвайман пирки пилӗк хушшинчен пӗчӗк пуртӑ туртса кӑларчӗ, Рябӑ алли ҫине лач лартрӗ. Курябан шевер пӳрни аяккалла ывтӑнса кайрӗ...

...Ехрем хуҫан ҫывӑрнӑ чухне татӑк пӳрни ыратнӑ мӗн. Ҫавӑнпа вӑл хӑрушӑ тӗлӗк курнӑ. Хуҫа вӑрансанах татӑк пӳрни вырӑнне хыпашласа пӑхрӗ. Шӗвӗр пӳрни ҫук. Ҫитӗнмен вӑл, шӑтман. Ҫитӗнес те ҫук, шӑтас та ҫук.

Сосулькинӑн Атӑл ҫинчи пурнӑҫӗпе ҫыхӑнса, пӑтрашӑнса курӑннӑ тӗлӗкӗ пӗтсен, куҫӗ уҫӑлса кайрӗ. Ехрем хуҫан каллех коммунизм ҫинчен ыйтас килчӗ.

— Эх, профессор, эсӗ вилнӗ пек ҫывӑратӑн! Хуйхӑ-суйхӑ курмасӑр пурӑнатӑн. Эсӗ, паллах, нихҫан та тӗрмере ларса курман. Пӗрре те чирлӗ ҫын пек мар. Кала-ха, коммунизмра эрех пулать-и? Пулать пулсан, миҫе градусли пулать?..

Иван Иванович Ехрем хуҫана тавӑрса каламасӑр тӳсеймерӗ.

— Эрех пуласса пӗлместӗп. Анчах эпӗ, рабочи, шантарсах ҫакна калатӑп: харам пырсемшӗн коммунизмра вырӑн пулмасть!— терӗ вӑл.

— Эпӗ сана ырӑ ҫын пулӗ тесе шутланӑччӗ,— кӑшкӑрса ячӗ Сосулькин.— Йӑнӑшрӑм иккен, йӑнӑшрам!.. Эпӗ хурлӑх курнӑ, асапланнӑ ҫын. Эсӗ, ҫапах та, мана кӳрентеретӗн, без сӑлтавсӑрах харам пыр тетӗн. Эпӗ сана суда паратӑп, суда!..

— Парӑр! Сире унта тахҫанах кӗтеҫҫӗ.

...Тулта ылтӑн кунсем кӗр мӑнтӑрӗпе савӑнаҫҫӗ. Садсенчи улмуҫҫисем турат йӑтайми панулмийӗсене ҫынсене парса пӗтернӗ, кӗр тумне тӑхӑнса ларнӑ. Пахчасенче тӗрлӗ ҫимӗҫсем хӑйсене кӗлет-нӳхрепсене илсе каясса кӗтсе выртаҫҫӗ. Уйра выльӑх-чӗрлӗх кӗтӗвӗ кӗрлесе ҫӳрет. Шоссепе тиевлӗ машинӑсем хулана килеҫҫӗ. Атӑл тӑрӑх пӑрахутсемпе баржасем шӑваҫҫӗ, Шупашкар телне ҫитсен — тӳсеймесӗр-чӑтаймасӑр кӑшкӑртса яраҫҫӗ.

*1961*

## ПУРНАҪ ҪУЛЕ

Эпӗ — вӑрман тӑрӑхӗнче ҫуралса ӳснӗ ҫын. Пирӗн ял Хутар ятлӑ. Вӑл Ҫӗмӗрлерен 18 километрта ларать, ӗлӗк Чӗмпӗр кӗпӗрнинчи Кӑрмӑш уездне кӗнӗ, 1920 ҫулта, Чӑваш автономи облаҫне туса хурсан, Кӑрмӑш уездӗнчи чӑваш ялӗсене Етӗрне уездне куҫарнӑ та унччен Хусан кӗпӗрнинче пулнӑ чӑваш ялӗсемпе пӗрлештернӗ.

Эпӗ ҫакна лайӑх ас тӑватӑп: атте пӳрт лартать, ӑна пулӑшма Саватер ялӗнчен кӗреҫе сухаллӑ, патвар стариксем, анне тӑванӗсем, килнӗ. Эпӗ, пӗчӗкскер, кунӗпех пӳрт лартнине пӑхса тӑратӑп, сӑнатӑп. Стариксем мана тӗрлӗ юмахсем каласа параҫҫӗ, хӑма татӑкӗсенчен теттесем тӑваҫҫӗ. Анне мана апат ҫиме чӗнет, эпӗ каймастӑп.

Кайран-кайран, хам ҫитӗнсе ҫитсен, пӗррехинче аттерен хамӑр хӑҫан пӳрт лартни ҫинчен ыйтрӑм. «1908 ҫулта лартрӑмӑр»,— терӗ вӑл. Ҫакӑн хыҫҫӑн пурнӑҫра мӗн-мӗн пулса иртнисене эпӗ тата та лайӑхрах ас тӑвакан пултӑм. 1914—1918 ҫулсенчи пӗрремӗш тӗнче вӑрҫи, 1917 ҫул февральте, Октябрьте пулса иртнӗ революцисем, граждан вӑрҫи, унтан Атӑл тӑрӑхне персе ҫитнӗ выҫлӑх. Чӑваш ӗҫ ҫыннисем патша вӑрҫине, граждан вӑрҫине кайнисем, аманса, уриаллисене ҫухатса килнисем. Выҫлӑх ҫул тӳссе ирттернӗ асапсем. Чир-чӗр. Ялти клас кӗрешӗвӗ. Шухӑшласан, пурте, пурте куҫ умне тухса тӑрать.

1916 ҫул эпӗ ялти шкула кайрӑм. Ӗлӗк пирӗн енче Хутар шкулӗ пек шкулсем сахал пулнӑ. Ӑна 1870 ҫулхи декабрӗн 18-мӗшӗнче И. Н. Ульянов — аслӑ Ленин ашшӗ — уҫнӑ. Илья Николаевича курнӑ ҫынсем Хутар салинче пӗр 10—15 ҫул ӗлӗкрех те пурччӗ. Халӗ ӗнтӗ вӗсем вилсе пӗтнӗ. Пуҫламӑш шкулта пире Н. И. Веретенкинпа В. П. Веретенкина (иккӗшӗ те Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗреннӗскерсем) вӗрентетчӗҫ. Ырӑ ҫынсемччӗ вӗсем, шкулта чунне парса ӗҫлетчӗҫ. Эпир хамӑр учительсене питӗ хисеплеттӗмӗр, вӗсенчен ӑслӑ, тӳрӗ те таса кӑмӑллӑ ҫын тӗнчере ҫук та пулӗ, теттӗмӗр. Ҫитӗнерехпе хам та учитель пулма шут тытрӑм,— пулса ҫитеймерӗм. Кам пулма кӑна ӗмӗтленмен-ши ача чухне. Атте тимӗр-

çе, платник, столяр ĕçĕпе аппаланнине кура, манăн та атте пек пулас килетчĕ. Атте пулла, сунара çӳретчĕ, вĕшле йытă усратчĕ, пăшалĕ те, капкăнĕсем те хӳхĕмччĕ. Хăш-пĕр чухне атте мана та пулă пухма, йĕрлесе мулкач хăвалама илсе каятчĕ. Çавна май эпĕ те хама пулăçă е сунарçă выранне хураттăм...

Пуçламăш шкул пĕтерсе, ултă таслă шкула куçсан, ĕмĕтсем татах çивĕчленчĕç: пуçра фельдшер, вăрман хуралçи, агроном пулас шухăшсем çуралчĕç. Сăмахран, агроном пулас тесе, эпир, ялти ачасем: Василий Жирнов, Илья Жирнов, Антон Таньков, Александр Блинов, Илья Ефатеров, Михаил, Алексей, Иван Саррăсем тата ыттисем Вăрнарти ял хуçалăх техникумне вĕренме кĕтĕмĕр. Анчах ку техникумра эпĕ пĕр хĕл çеç вĕрентĕм.

Хутарта, вулăс центрĕнче, 1918 çулхи декабрĕн 18-мĕшĕнче Коммунистсен партячейки, 1920 çулхи январĕн 23-мĕшĕнче комсомол ячейки организациленчĕ. Вун ултă çулта эпĕ комсомола кĕтĕм (çавăн чухне панă член билетне, ЧОН удостоверенине эпĕ халĕ те тирпейлĕ тытса усратăп).

1924 çулта çĕртме уйăхĕнче пире, ялти комсомолецсене, пĕррехинче, Хусанти университет студенчĕ, Семен Фомин, 1919 çултанпа парти ретĕнче тăракан юлташ, пухрĕ те: «Çитĕ сире ял тăрăх вăхăта ирттерсе çӳреме, атьăр, акă вĕренме илсе каям сире...» терĕ. Эпир вара 10—12 ача Хутартан Етĕрнене тухса утрăмăр. Хамăрпа пĕрле Коваленко çырнă «Политграмотă» кĕнекине илтĕмĕр. Етĕрнене çитиччен çав кĕнекере мĕн çырнине пĕлекен пултăмăр. Парти укомĕ мана рабфака кайма командировкă пачĕ, çакă вăл маншăн, чăннипех те, инçе çула каймалли, пурнăçа кĕмелли путевкă пулчĕ. Рабфакра мана 1926 çулта парти членĕн кандидатне илчĕç, 1928 çулта вара Мускаври государствă университетĕнче парти членне кĕтĕм.

Рабфакра вĕреннĕ чухне эпĕ тĕрĕс шухăшлă, тӳрĕ кăмăллă çынсемпе паллашрăм. Эпĕ Ефрем Астина, Иван Кузнецова, Григорий Кузнецова (Гелие), Иван Пачурана, Андрей Григорьева, Григорий Краснова тата ытти нумай юлташсене яланах ăшă сăмахпа асăнатăп. Хамăра вĕрентнĕ К. Н. Никифоров, В. О. Копец, Е. З. Захаров, П. М. Кунаев, А. С. Старостин, П. С. Ширяев тата ытти преподавательсене атте-анне пек ырă сунса вĕрентнĕшĕн, ăс панăшăн, куçа-пуçа уçнăшăн тав тăватăп.

1927—1930 çулсенче эпĕ Мускаври государствă университетĕнче вĕрентĕм. Халĕ те Мускава кайсан-тусан, тăван университет çуртне. наукăсен керменне, кĕрсе тухса, чун-чĕрене савăнтаратăп, унта вĕреннĕ çывăх юлташсене: Анатолий Тарасенкова, Муса Джалиле, Александр Воложенина, Юрий Севрука, чăвашсене — Яков Ухсая, Алексей Талвире, Григорий Краснова, Кузьма Пайраша тата ыттисене те аса илетĕп... Университетра вĕрентнĕ профессор-

сене: В. П. Волгина, Е. А. Мороховеца, Е. А. Косминские, Г. Б. Гермаидзене, И. С. Звавича тата ыттисене яланах тав туса асăнатăп.

Университетри историпе философи факультетĕнче виçĕ çул вĕреннĕ хыççăн, 1931 çулти январĕн 10-мĕшĕнче, эпĕ Шупашкара таврăнтăм. Çут ĕç халăх комиссариачĕ мана ĕлĕк хам вĕреннĕ рабфака истори вĕрентме ячĕ. Кунта эпĕ 1934 çулччен преподаватель, рабфак директорĕ пулса ĕçлерĕм. Хам вĕреннĕ чухне рабфакра 110—120 студентчĕ, вĕрентнĕ чухне, директор пулса тăрсан, пĕр çулхине 650 студента çитрĕ. Преподавательсем 30 çын ытлаччĕ. Вĕсем хушшинче нумайăшĕ хама вĕрентнисемччĕ. Рабфакра парти историне вĕренмелли кружок пурччĕ, унта çӳрекен преподавательсене, хамăн 1924—1927 çулсенчи учительсене, эпĕ тăван парти историне вĕрентрĕм, аслă юлташсене вĕрентнĕ вăхăтрах хам та вĕсенчен вĕренсе пытăм.

Çамрăк чухнех эпĕ пичетпе литературă ĕçне юрататтăм. 1934 çулта, пĕр çул хушши Наукăпа Тĕпчев институтĕнче (ЧНИИ) ĕçленĕ хыççăн, пуçĕпех пичет ĕçне куçрăм. 1941—1946 çулсенче Совет Çарĕнче пултăм, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин çулĕсенче Ленинград патĕнчен тытăнса, çуран тенĕ пек, Германие çитме тиврĕ, Польшă, Чехословаки, Австри, Венгри, Румыни хулисемпе ялĕсене курмалла пулчĕ. Вăрçă хыççăн темиçе çул хушши Чăваш государствă издательствин аслă редакторĕ, Чăваш писателĕсен Союз правленийĕн ответлă секретарĕ пултăм. Халĕ эпĕ парти ĕçĕнче.

Литературăпа пичет ĕçне эпĕ рабфакра вĕреннĕ çулсенче явăçрăм. Анчах, калас пулать, литературă ĕçне эпĕ хамăн тĕп ĕç тесе шутламан, хамăн пĕр статьяна та, пĕр сăвăпа калава та ятарласа ларса çырман, пурне те ĕç хыççăн, каннă вăхăтра, е ăçта та пулин кайсан, çул çинче çырнă. Шухăшлатăп-шухăшлатăп та çакна куратăп (тӳррине тӳррипе калам): манăн произведенисем хушшинче кăнтăрлахи çутăпа çырнисем çукпа пĕрех!

Еçлес ĕмĕт пĕтмен-ха, ĕçлес ĕмĕт ир те, каç та канлĕх памасть. Çамрăк чухнехи пекех такам та пулас килет (агроном пулăттăм, тетĕп хама хам). Çав вăхăтрах литератор та пулас килет...

...Çак кĕске биографие хамăн калаври пĕр геройăн сăмахĕсемпе вĕçлес килет:

«Эпĕ ĕнтĕ аллă пилĕк çулта. Тен, коммунизма пурăнса çитеймĕп, анчах ывăлăмсемпе хĕрĕмсем коммунизмра пурăнаççех. Çапах та эпĕ хамшăн хурланмăп, мĕншĕн тесен манăн ĕçĕм те, пирĕн ĕмĕрти ытти совет çыннисен ĕçĕ-хĕлĕ пекех, коммунизма куллен-кун çывхартать, ăна пурнăçа кĕртсе пырать».

Шупашкар, 1.XII.61. В. ДОЛГОВ

## ТУПМАЛЛИ

Тăван çĕршыв . . . . . . . . . 3

**I. Ял калавĕсем**

Турăсăрсем . . . . . . . . 5
Калмантайсем . . . . . . . 11
Мирун çилли . . . . . . . 33
Тăван вĕлле . . . . . . . . 37
Йĕрсем . . . . . . . . . 44
Мĕскĕн старик . . . . . . . 49
Призыв кунĕсем . . . . . . . 52
Çĕлен . . . . . . . . . 60

**II. Вăрçă калавĕсем**

Тăван çĕршыв юрри . . . . . . 67
Тĕлĕнмелле винтовка . . . . . . 75
Лăпкă çын . . . . . . . . 83
Снайпер . . . . . . . . . 90
Радисткăсем . . . . . . . . 94
Таркăн . . . . . . . . . 100
Пурнăçпа Вилĕм . . . . . . . 104
Пĕчĕк калавсем . . . . . . . 109
Ленинград çĕрĕ . . . . . . . —
Хăюллă сержант . . . . . . . 110
Виçĕ паттăр . . . . . . . . 111
Юлашки сывлам . . . . . . . 114
Анчар . . . . . . . . . 115
Вăрманти юрă . . . . . . . 116
Шăпчăк сасси . . . . . . . 118
Каçхи мĕлке . . . . . . . . —
Çĕмĕрт çеçки . . . . . . . 120
Çаран çинче . . . . . . . . 121
Воронкăра . . . . . . . . 123
Геройсем . . . . . . . . . 124
Вăрçă турри . . . . . . . . 125
Ответ . . . . . . . . . 126
Икĕ çуркунне . . . . . . . 127
Поэт тăпри . . . . . . . . 129
Вăрçă пĕтнĕ кунсенче . . . . . 137

### III. Кулăшла калавсем


Тĕкĕнтирĕк ефрейтор . . . . . 157
Раштав тĕлĕкĕ . . . . . . . 160
Сăрă хурт . . . . . . . . 163
Ачаш ача . . . . . . . . 166
Никотин . . . . . . . . 168
Çĕнĕ эмел . . . . . . . . 171
Шĕпĕн . . . . . . . . 176
Ехрем хуçа . . . . . . . . 181
*Пурнăç çулĕ* . . . . . . . . 191

ДОЛГОВ ВАСИЛИЙ АРХИПОВИЧ

**В РОДНОМ КРАЮ**

Рассказы

На чувашском языке

Оформление А. Макарова

Редактор А. Соколова
Худож. редактор Н. С. Кириллов
Технич. редактор Г. П. Петров
Корректор С. Л. Баранова

НТ 02323. Подписано к печати 11/II-1962 г. Тираж 3 000 экз. Изд. № 75. Формат 84×108 1/32. Объем 10,04 печ. л. Учетно-изд. л. 9,97. Заказ № 1728. Цена 45 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
Город Чебоксары, ул. Володарского, д. 5.

Цена 45 коп.